41-3/125



# В. И. ЛЕНИН

## МĔН ВĂЛ „ХАЛĂХ ТУСĔСЕМ“ ТАТА СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТСЕНЕ ХИРĔÇ ВĔСЕМ МĔНЛЕ КĔРЕШЕÇÇĔ?

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТ!
ШУПАШКАР ★ 1941

45-115

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ ПĔРЛЕШĔР!

# В. И. ЛЕНИН

## МĔН ВĂЛ „ХАЛĂХ ТУСĔСЕМ“ ТАТА СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТСЕНЕ ХИРĔҪ ВĔСЕМ МĔНЛЕ КĔРЕШЕҪҪĔ?

МАРКСИСТСЕНЕ ХИРĔҪ
„РУССКОЕ БОГАТСТВО“
ҪЫРНĂ СТАТЬЯСЕМ
ҪИНЕ ПАНĂ ОТВЕТ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

I-МЁШ
ВЫПУСК

«Русское богатство» журнал марксистсене хирӗç поход пуçласа ячӗ. Журналăн пӗлтӗрхи 10-мӗш номерӗнчех, çак журнал пуçлăхӗсенчен пӗри, г-н Н. Михайловский, «пирӗн марксистсем е социал-демократсем ятлă çынсене» хирӗç «тавлашу» пуçласа ярасси çинчен пӗлтернӗччӗ. Ун хыççăн С. Кривенко г-нăн: «По поводу культурных одиночек» ятлă статьи (12-мӗш №-те) тата г. Н. Михайловскийӗн: «Литература и жизнь» ятлă статьи («Р. Б» журналăн 1894 çулхи 1-мӗшпе 2-мӗш №-сенче) пичетленсе тухрӗç. Пирӗн экономикăллă пурăнăç çине журнал хăй мӗнле пăхни çинчен калас пулсан вара, вăл шухăшсене г. С. Южаков хăйӗн «Вопросы экономического развития России» ятлă статьинче (10-мӗшӗпе 12-мӗш №-сенче) пуринчен туллин çырса пӗлтернӗччӗ. Вӗсем, çак господасем, хăйсен журналӗнче чăн-чăн «халăх тусӗсен» идейисемпе тактикине кăтартса тăракансем пулма хапсăннăскерсем, социал-демократийӗн чи усал тăшманӗсем пулса тăраççӗ. Çавăнпа та çак «халăх тусӗсене», тата вӗсем марксизма епле критикленине, вӗсен идейисене, вӗсен тактикине çывăхрах сăнаса пăхар-ха.

Г-н Н. Михайловский пуринчен ытла марксизмăн теориллӗ никӗсӗсене тимлӗрех пăхать, çавăнпа та историе материализмла ăнланас ыйтăва уйрăмах чарăнса тӗпчет. Çак вӗрентӗве ăнлантарса паракан марксистла питех те нумай литературăн содержанине пӗтӗмӗшле кӗскен каласа кăтартнă хыççăн, г. Михайловский хăйӗн критикине çапла тирадăпа пуçлать:

«Пуринчен малтан — тесе калать вăл — хăйне-хăех çапла ыйту тухса тăрать: Маркс, историе вăл хăй материализмла ăнланнине, мӗнле сочиненире çырса пӗлтернӗ-ши? «Капиталра» вăл логика вăйне нумай пӗлнипе тата пӗтӗм экономикăллă литературăна та, кирлӗ фактсене те тӗпӗ-йӗрӗпех тимлӗн тӗпчесе пӗлессипе епле майпа пӗрлештермеллине кăтартса панă. Вăл экономикăллă наукăн тахçанах маннă е халӗ никам та пӗлеймен теоретикӗсене çут тӗнчене туртса кăларнă, тата фабрикăри йӗркесене астуса тăракан инспекторсен мӗнле те пулин отчечӗсенче е экспертсем тӗрлӗрен специальнăй комиссисем вал-

ли кăтартса панисенче пĕр-вак-тĕвекне те асăрхамасăр хăварман; пĕр сăмахпа каласан, хăйĕн экономикăллă теорийĕсене никĕс хывса çирĕплетес шутпа та, вĕсене тĕслĕхсемпе ăнлантарса кăтартас шутпа та, ытла та нумай фактсене кăтартакан материала айĕн-çийĕн çаварса пĕтерне. Вăл истори процесне «пачах çĕнĕлле» ăнланмалла тунă пулсассăн, этемлĕхĕн пĕтĕм иртнĕ пурнăçне çĕнĕлле ăнлантарса панă пулсан, унтан тата халиччен-хи философиллĕ-историллĕ теорисене пурне те тĕпчесе тухса итог тунă пулсан, вăл çак ĕçе те, паллах, çавăн пекех пĕтĕм вăйĕпе тăрăшса тунă: истори процесне ăнлантаракан мĕн чухлĕ те пулин паллă теорисене те чăнахах пăхса тухса, критиклесе анализ панă, пĕтĕм тĕнче историйĕнчи тем тери нумай фактсене тĕпченĕ. Ăна Дарвинпа танлаштарни, кун пек танлаштару марксистсен литературинче тăтăшах тĕл пулкалать, çак шухăша пушшех те çирĕплетсе парать. Мĕн-ха вăл, Дарвинăн пĕтĕм ĕçĕ? Мон-Блан тăвĕ пекех пухăнса капланнă фактсен материалне пĕтĕçтерсе, пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнса тăракан темиçе идея. Ăçта-ха ĕнтĕ Марксăн çавăн йышши ĕçĕ? Ун пек ĕç çук. Марксăн ун пек ĕçĕ çук кăна мар, хисеп тĕлĕшĕнчен йышлă пулсан та, тата чылай саралнă пулсассăн та вăл пĕтĕм марксистла литературăра та çук».

Çак мĕнпур тирада ак çак енчен питех те паллă: вĕсем «Капитала» тата Маркса халăх хушшинче мĕн тери сахал ăнланнине кăтартаççĕ. Çырни питех те ĕнентерӳллĕ пулнинчен тĕлĕнсе кайнăскерсем, вĕсем Маркса тайăлсах тавтăваççĕ, ăна мухтаççĕ, çав вăхăтрах ун вĕрентĕвĕн тĕп содержанине пачах курмасăр иртеççĕ те, ним те пулман пекех, «субъективлă социологийĕн» кивĕ юррисенех малалла тăсаççĕ. Кун пирки Каутский Марксăн экономикăллă вĕрентĕвĕ çинчен хăй çырнă кĕнеки валли суйласа илнĕ çав тери тĕрĕс эпиграфа аса илмесĕр иртме май çук:

> Wer wird nicht einen Klopstock loben?
> Doch wird ihn jeder lesen? Nein.
> Wir wollen weniger erhoben
> Und fleissiger gelesen sein!*

Шăпах çапла çав! Г-н Михайловскийĕн Маркса сахалтарах мухтасчĕ те, тăрăшарах вуласчĕ ăна, е, тĕрĕсрех каласан, хăй мĕн вулани çинчен тĕплĕнрех шухăшласа пăхасчĕ.

«Капиталра» Маркс пире нумай пĕлнине логика вăйĕпе епле майпа пĕрлештермеллине кăтартса панă» — тет г-н Михайловский. Г-н Михайловский пире çак сăмахсемпе, йăлтăркка сăмаха пушă содержанипе епле пĕрлештермеллине кăтартса пачĕ,— тесе палăртнăччĕ пĕр марксист. Питĕ тĕрĕс ĕнтĕ вăл палăртни. Чăн та, мĕнре палăрнă-ха Марксăн çак логикăллă вăйĕ? Мĕнле результатсем туса панă вăл? Г-н Михайловскийĕн асăннă тира-

* Кам мухтамасть Клопштока? Анчах вулĕç-ши ăна кашниех? Çук. Эпир хамăра сахалтарах хисеплеттересшĕн, анчах тăрăшарах вулаттарасшăн (Лессинг). *Ред.*

дине вуланă хыççăн, çапла шухăшлама пулать: çак пĕтĕм вăя «экономикăллă теорисен» çине кăна хунă, вăл сăмаха чи ансăр пĕлтерĕшпе ăнланас пулсан—урăх ним те мар. Вара—Маркс хăйĕн логика вăйне палăртса тăнă вырăн çав тери ансăр, хĕсĕк пулнине пушшех те вăйлă палăртса кăтартас шутпа, г. Михайловский «чи вак-тĕвек ĕçсем çине, вĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех тимлĕн тĕпчени çине, никам та пĕлмен теоретиксем çине» т. ыт. çавăн пекки çине тирĕнет. Вара çапла пулса тухать: çак теорисене тăвас меслетсем çумне Маркс асăнма тивĕç, çĕнĕ, кирлĕ япала нимĕн те хушса паман пек, экономикăллă наука анлăшне вăл, çак унччченхи экономистсен мĕнле пулнă, çавăн пекех — ăна пĕртте аслăлатмасăр, çак наукăна хăйне те «пачах çĕнĕлле» ăнланмалла тумасăр,—çаплипех хăварнă пек, пулса тăрать. Анчах та, тĕрĕссипе, «Капитала» кам вуланă, вĕсем пурте çак сăмахсем йăлтах суйине пĕлсе тăраççĕ. Çакна май г-н Михайловский Маркс çинчен 16 çул каярах, вакбуржуаллă г. Ю. Жуковскипе тавлашнă чухне çырни çинчен асăнмасăр иртме май çук. Те вăхăчĕ ун чухне урăх пулнă, те туйăмĕсем çивчĕрех пулнă, анчах г-н Михайловский статьин сасси те, содержанийĕ те йăлтах урăх пулнă.

— «Çак сочиненийĕн вĕçри тĕллевĕ — кучухнехи общество аталанăвĕн законне (тĕп алçырăвĕнче: Das oekonomische Bewegungsgesetz—движенийĕн экономикăллă законĕ) кăтартса парасси пулать»—тет К. Маркс хăйĕн «Капиталĕ» çинчен, вара хăй программине вăл вĕçне çитиех çирĕппĕн тытса пырать»,—çапла хак панă г. Михайловский 1877 çулта. Апла пулсан, çак—критик йышăннă тăрăх — вĕçне çити çирĕп тытса пынă программăна сăнарах пăхар-ха. Вăл—«кучухнехи общество аталанăвĕн экономикăллă законне кăтартса парасси» пулать иккен.

Çак формулировка хăех те ĕнтĕ, пире ăнлантарса пама кирлĕ темиçе ыйтусемпе тĕлме-тĕлех тăратать. Мĕн тума-ха Маркс, унччен пур экономистсем те общество çинчен пĕтĕмĕшле калаçнă пулсан та, «кучухнехи (modern)» общество çинчен калаçать? «Кучухнехи» тенĕ сăмаха мĕнле пĕлтерĕшпе илсе калать вăл, çак кучухнехи обществăна мĕнле паллăсем тăрăх уйăрса илет? Малалла тата—общество движенийĕн экономикăллă законĕ, тени, мĕне пĕлтерет-ха вăл? Экономистсенчен эпир çакна илтме вĕреннĕ: хаклăхсене тăвас производство кăна пĕр экономикăллă законсене анчах пăхăнса тăрать, çав вăхăтрах валеçесси, имĕш, политикăран килет, власть, интеллигенци обществăна хăш еннелле аталантарса пырать, çавăнтан т. ыт. те; çакă вăл сăмах май калас пулсан,—«Р. Б-во» тавралăхĕнчи публицистсемпе экономистсен чи юратнă идейисенчен пĕри. Çапла ĕнтĕ общество движенийĕн экономикăллă законĕ çинчен мĕнле шухăшпа калать-ха Маркс, çитменнине тата мĕншĕн çак закона, юнашарах, Naturgesetz—çутçанталăк законĕ тесе ят парать? Обществăллă явленисен облаçĕ естественнă-историллĕ явленисен облаçĕнчен пачах уйрăм тăрать, çавăнпа та малтанхисене тĕпчесе пĕлес тесессĕн, пачах хăйне уйрăм—«социологири субъ-

ективлă методпа» усă курмалла тесе, пирĕн çĕршыври çав тери йышлă социологсем купи-купипех хут çырса тултарнă пулсан, Марксăн çак сăмахĕсене мĕнле ăнланмалла пулать-ха?

Çак пур ăнланман ыйтусем те хăйне-хăех, кирлипе тухатуха тăраççĕ, вара паллах, нимĕн пĕлмен çын кăна «Капитал» çинчен калаçнă чухне, вĕсенчен пăрăнса иртсе кайма пултарать. Çак ыйтусене лайăхрах ăнланса илес тесен, чи малтан «Капиталăн» çав умсăмахĕнченех, тепĕр вырăна—мĕнпурĕ те виç-тăват йĕрке кăна аяларах çырнă вырăна илсе вулар:

«Экономикăллă обществăллă формаци аталанăвĕ çине эпĕ, естественнă-историллĕ процесс çине пăхнă пек, пăхатăп»,—тет Маркс.

Умсăмахран илнĕ çакă икĕ вырăна юнашар кăна лартса пăхсассăн та, «Капиталăн» тĕп идейи,—эпир илтнĕ тăрăх, вĕçне çитиех çирĕп, сайра хутра çеç тĕл пулакан логикăллă вăйпа илсе пынă тĕп идея—шăпах çакăнта пулнине курма пулать. Çак çӳлерех каланисем пирки пуринчен малтан çав икĕ обстоятельствăна палăртса хăварар: Маркс пĕр «обществăллă-экономикăллă формаци» çинчен, капитализмли çинчен кăна калаçать, урăхла каласан, пĕр çак формаци аталанăвĕн законне кăна тĕпчесе тухрăм, нихăшне те урăххине мар, тет. Ку пĕрремĕшĕнчен. Иккĕмĕшĕнчен вара, Маркс хăйĕн вывочĕсене епле меслетсемпе тунине палăртар: ку меслетсем, г. Михайловскирен тин çеç илтнĕ тăрăх—«кирлĕ пек фактсене тĕпĕ-йĕрĕпех тимлĕн тĕпчесе пĕлни» пулнă.

Халĕ ĕнтĕ «Капиталăн» пирĕн субъективлă философ çав тери чеен иртсе кайма тăрăшнă тĕп идейи патне куçар. Мĕн пулатьха вăл тĕрĕссипе экономикăллă обществăллă формаци ăнланăвĕ? тата мĕнле майпа çак формаци аталануне естественнă-историллĕ процесс тесе шутлама май тата тивĕç те пулать-ха?—акă пирĕн умра халĕ тăракан ыйтусем. Эпĕ малтанах каласа катартсаттăм ĕнтĕ, — кивĕ (Российăшăн мар) экономистсемпе социологсен шухăшĕпе обществăллă-экономикăллă формаци ăнлавăвĕ пачах ытлашши, кирлĕ мар ăнлану: вĕсем общество çинчен пĕтĕмĕшле илсе калаçаççĕ, пĕтĕмĕшпе илнĕ общество мĕнли çинчен, çак пĕтĕмĕшпе илнĕ обществăн тĕллевĕпе тупсăмĕ мĕнли çинчен Спенсерсемпе тавлашаççĕ т. ыт. те. Çакăн пек калаçнисенче, вĕсем хăйсен шухăшĕсене çакăн йышши аргументсемпе: общество тĕллевĕ —хăйĕн пур членĕсене те усă кăтартасси, çавăнпа та тĕрĕслĕх обществăна çакăн пек организацилеме хушать, çавăнпа та вара çак идеаллă организаципе килĕшмен йĕркесем (субъективлă метод авторĕсенчен пĕри, Михайловский «Социологин хăшпĕр утопирен тытăнмалла», тенĕ сăмахĕсем, вĕсен меслечĕсен тупсăмне çав тери лайăх кăтартса парать)—тивĕçлĕ мар йĕркесем, вĕсене пĕтерме тăрăшмалла, тенисемпе никĕслесе çирĕплетеççĕ. Сăмахран: «социологийĕн паллă задачи вăл—çын природи валли вăл е ку япала кирлĕ пулса тăнине пама пултаракан обществăллă условисене тĕпчесе пĕлессси пулса тăрать»,—тесе калать г. Михайловский. Куратăр-и ĕнтĕ, ку соци-

олога çын природине тивĕçлĕ общество кăна интереслентерет, темле ĕнтĕ унта обществăллă формацисем, çитменнине тата «çын природипе» çав тери килĕшмен явлени çинче, йышлăрах-хисене сахалтараххисем чуралатса пурăнни çинче тытăнса тăма пултараканнисем ăна пĕртте интереслентермеççĕ. Çавăн пекех тата, çак социолог куçĕпе пăхсан, общество аталанăвĕ çине, естественнă-историллĕ процесс çине пăхнă пек пăхасси çинчен калаçма та май çуккине куратăр эсир. («Мĕнле те пулин япалана кирлĕ е кирлĕ мар тесе йышăннă хыççăн, социолог çак кирлĕ тесе йышăннине пурнăçа кĕртме, е кирлĕ мар тесе йышăннине пĕтерме май паракан условисене», урăхла каласан—«çав та çав идеалсене пурăнăçа кĕртмелле», — тесе калаçать çав г. Михайловскиех.) Вăл та сахал-ха, аталану çинчен те нимĕнле сăмах та пулма пултараймасть, «кирлĕ тесе йышăннинчен» тĕрлĕ майлă пăрăнса кайнисем çинчен кăна, çынсем ăслă мар пулнă пирки, вĕсем çын природине мĕн кирлине лайăх ăнланма пĕлмен пирки, çак ăслă йĕркесене пурăнăçа кĕртме май паракан условисене шыраса тупма пултарайман пирки... çак сăлтавсем пирки историре пулнă «пăсăк япаласем» («дефектсем») çинчен кăна калаçма пулать. Уççăнах паллă, Марксăн, обществăллă-экономикăллă формацисен аталанăвĕ естественнă-историллĕ процесс пулни çинчен калакан тĕп идейи, çак социологи ятне илме хапсăнакан ача-пăча моральне тĕпренех çĕмĕрсе тăкать. Мĕнле майпа хатĕрленĕ ĕнтĕ Маркс хăйĕн çак тĕп идейине? Вăл ăна обществăллă пурăнăçăн тĕрлĕ облаçĕсенчен экономика областьне уйăрса илнипе, пур обществăллă отношенисенчен те — «производствăллă отношенисене» уйăрса илнипе тунă, мĕншĕн тесен вĕсем пур ытти отношенисене те хăй хыççăн ертсе пыракан тĕп, пуçламĕш отношенисем пулса тăраççĕ. Çак ыйту тĕлĕшпе хăй епле шухăшласа пынине Маркс çапла çырса пĕлтернĕ:

«Хама питех те хумхантаракан иккĕленӳсене татса парас тесе, эпĕ чи малтан Гегелĕн право философине критиклесе тĕпчеме тытăнсаттăм. Ку ĕç мана çак результат патне илсе пычĕ: шăпах политикăллă формăсем пекех, право отношенийĕсене те, вĕсем пĕр юридически тата политикăллă тымарсенчен кăна ӳссе тăнă пек ăнлантарса пама юрамасть; пушшех те вара вĕсене этем шухăшĕ (человеческий дух) текен япала пĕтĕмĕшле аталанса пынинчен çуралса тухнă пек ăнлантарса пама май çук. Вĕсен тымарĕ пĕр материальнăй, пурăнăçри отношенисенче кăна тытăнса тăрать; çак отношенисене пурне те пĕрле Гегель, Англипе Францийĕн 18-мĕш ĕмĕрти писателĕсем хыççăн, «гражданла общество», тесе каланă. Гражданла общество анатомине вара политикăлла экономире шырас пулать. Çак юлашкине тĕпчесе вĕренни мана мĕнле результатсем патне илсе пынине кĕскен çапла формулăласа калама пулать: «Материальнăй производствăра çынсен пĕр-пĕринпе пĕр-паллă отношенисене, «производствăллă отношенисене» вырнаçса тăмалла пулать». Юлашкисем яланах ĕç тухăçлăхĕ аталанăвĕн пĕр паллă

пусӑмӗпе, вӗсен экономикӑллӑ вӑйӗсен ҫав вӑхӑтри пусӑмӗпе шайлашса тӑраҫҫӗ. Ҫак производствӑллӑ отношенисем пӗтӗмпе пӗрле обществӑн экономикӑллӑ структури, реальнӑй никӗсӗ пулса тӑраҫҫӗ, ҫак никӗс ҫинче юридически тата политикӑллӑ надстройка тытӑнса тӑрать, ҫав никӗспе обществӑллӑ ӑстӑнӑн пӗр-паллӑ формисем шайлашса тӑраҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ социальнӑй политикӑллӑ тата час-часах духовнӑй пурӑнӑҫ процесӗсем производствӑллӑ йӗркесенчен килсе тӑраҫҫӗ. Ҫынсен бытийи вӗсен ӑстӑнӗнчен килмест, пачах урӑхла, вӗсен ӑстӑнӗ вӗсен обществӑллӑ бытийинчен килет. Обществӑн материальнӑй производительнӑй вӑйӗсем хӑйсен аталанӑвӗн паллӑ сыпӑкӗнче ҫынсен пӗр-пӗрин хушшинчи производствӑллӑ отношенийӗсемпе хирӗҫӗве кӗреҫҫӗ. Ҫавӑн пирки вӗсем производствӑллӑ отношенисене юридически палӑртса тӑраканнине те—пурлӑх йӗркисене те хирӗҫлеме пуҫлаҫҫӗ. Ун чухне производствӑллӑ отношенисем производительнӑҫпа шайлашӑнса тӑма пӑрахаҫҫӗ, ӑна кансӗрлеме пуҫлаҫҫӗ. Ҫавӑнтан—обществӑллӑ переворотсен эпохи пуҫланать. Экономикӑллӑ никӗс улшӑннӑ май пысӑкрах е пӗчӗкрех хӑвӑртлӑхпа ун тӳпинче тӑракан мӗнпур пысӑк надстройкӑ та улшӑнать Ҫавӑн пек переворотсене пӑхса тухнӑ чухне, производство условийӗнчи материальнӑй улшӑнусене ҫирӗп уйӑрса илмелле, ӑна чӑннипе, наука кӑтартнӑ пек палӑртмалла, тата юридически, политикӑллӑ, тӗнлӗ, художествӑллӑ е философиллӗ формӑсенчи, кӗскен каласан, идеологи формисенчи улшӑнусене уйӑрса илмелле, вӗсенче ҫак хирӗҫӳ ҫинчен калакан шухӑш этем ӑстӑнне кӗрет, вӗсенче ҫавӑншӑн вӑрттӑн мяйпа кӗрешӳ пырать. Уйрӑм ҫын ҫинчен вӑл хӑй ҫинчен «мӗн» шухӑшлани тӑрӑх калама ҫук; ҫавӑн пекех переворот эпохи ҫинчен те унӑн ӑстӑнӗ тӑрӑх калама ҫук. Йӑлтах урӑхла, вӑл ӑстӑна материальнӑй пурӑнӑҫӑн хирӗҫӗвӗсемпе, производство условийӗсемпе производительность условийӗсем пӗр-пӗрне хирӗҫ тӑнипе ӑнлантарса памалла... Обществӑн экономикӑллӑ формацийӗсен историйӗнче, азиатски, античнӑй, феодаллӑ тата ҫӗнӗ буржуаллӑ производствӑллӑ йӗркесене пӗтӗмӗшле илсе пӑхсан, прогрессивлӑ эпохӑсем пулнӑ пек шутламалла».[2]

Социологири ҫак материализм идейи пӗр хӑйне-хӑех те ӗнтӗ гениллӗ идея пулнӑ. Паллах, «халлӗхе» ку гипотеза кӑна пулнӑ, анчах историпе обществӑллӑ ыйтусене пирвайхи хут чӑнахах наука каланӑ тӑрӑх тӗпчесе пӗлме май туса панӑ гипотеза. Халиччен, социологсем, производствӑллӑ отношенисем пек ҫӑмӑл та, чи пирвайхи отношенисем патне анса курма пӗлмесӗр, тӳрех политико-юридически формӑсене тӗпчесе вӗренме тытӑннӑ, унтан ҫак формӑсем этемлӗхӗн хальхи вӑхӑтри вӑл е ку идейисенчен ҫуралса тухни ҫине пыра-пыра тӑрӑннӑ та, ҫав тӗлтех чарӑнса тӑнӑ; вара, обществӑллӑ отношенисене ҫынсем хӑйсен ӑстӑнӗ тӑрӑх тунӑ пек, пулса тухнӑ. Анчах ку вывод, Contrat Social[3] ҫинчен калакан идейӑра туп-туллин курӑнса тӑраканскер (ку идея йӗрӗсем утопиллӗ социализмӑн пур системисенче те пит палӑрса тӑраҫҫӗ), историри ӗҫсене сӑнаса пӗлнисене пурне те пачах хирӗҫ пынӑ. Общество членӗсем хӑйсем пурӑннӑ чухнехи

обществăллă отношенисем çинчен пурин çинчен те пĕрле, вăл —пĕр мĕнле те пулин паллă, пĕрлĕхлĕ, çав-çав идейăпа пĕтĕçсе тăракан япала, тесе, кихăçан та пĕлсе тăман, халĕ те пĕлмеççĕ; пачах урăхла, масса пĕртте ăнланмасăр вăл отношенисемпе майлашăнса пурăнма тăрăшать, вĕсем историре кашниййĕ хăйне уйрăм обществăллă отношенисем пулса тăнине пĕртте пĕлмест, çавăнпа та, сăмахран, çынсем тавар улшăнăвĕн отношенийĕсенче нумай ĕмĕр тăрăшшĕ пурăннă пулсан та, вăл отношенисене чи юлашки вăхăтра кăна ăнлантарса панă. Материализм, çынăн çак обществăллă идейисем хăйсем ăçтан çуралса тухнине тарăнрах тĕпчесе пĕлме тытăннипе, ку хирĕçлĕхе пĕтерчĕ; çавăнпа та унăн—идейăсен аталанăвĕ япаласен аталанăвĕнчен килсе тăни çинчен калакан вывочĕ кăна, пĕр çавă кăна научнăй психологипе килĕшсе тăрать. Малалла, çак гипотеза тата тепĕр тĕлĕшрен те, социологине пуçласа наука виçи таран çĕклесе хăпартрĕ. Обществăллă явленисем пĕр-пĕринпе питĕ кăткăс çыхăнса тăнă пирки, социологсем çакăнта халиччене кирлĕ, паха явленисемпе паха мар явленисене пĕр-пĕринчен уйăрса илес тĕлĕшпе аптраса тăнă (ку вăл—субъективизмăн социологири тымарĕ пулса тăрать), çавăнпа уйăрса илме кирлĕ объективлă виçелĕхе шыраса тупма пĕлеймен. Материализм, общество структури пулса тăракан «производствăллă отношенисене» уйăрса илсе, тата çак отношенисен тĕлĕшĕпе пур наукăсен виçелĕхĕпе—явленисем çĕнĕрен тепĕр хут пулассипе усă курма май парса, паха объективлă виçелĕх тупса панă; социологире унпа усă курма пултарассине субъективистсем йышăнман. Субъективистсем идеологиллĕ обществăллă отношенисемпе кăна (урăхла каласан, пулса тăриччен малтан çынсен ăстăнĕ витĕр тухса иртекен отношенисене кăна (урăхла каласан, паллах, сăмах пĕрех май «обществăллă отношенисен» ăстăнĕ çинчен, урăх ниmĕнлисен çинчен те мар пырать), хăтланнă чух, вĕсем тĕрлĕрен çĕршывсенчи обществăллă явленисем умлă-хыçлăн тĕрĕс пулса пынине асăрхаса курма пултарайман, çавăнпа та вĕсен науки, чи лайăх пулсан та,—çав явленисем мĕнле пулнине çырса пĕлтерни, чĕрĕ материал пухни кăна пулнă. Материальнăй обществăллă отношенисене (урăхла каласан, çынсен ăстăнĕ витĕр иртмесĕрех пулса тăракан отношенисене: продуктсене улăштарса, çынсем пĕр-пĕринпе производствăллă отношенисене вырнаçса тăраççĕ, анчах кунта обществăллă производствăллă отношенисем пулса тăнине хăйсем ăнланмаççĕ те) тĕпчесе сăнани, явленисем умлă-хыçлăн, тĕрĕс пулса пынине асăрхаса пĕлсе, тĕрлĕ çĕршывсенчи йĕркесене пĕр тĕп ăнлану —«обществăллă формаци» ăнланăвĕ туса пĕтĕçтерсе, ăнланса илме—çийĕнчех май туса панă. Çапла пĕтĕçтерни кăна обществăллă явленисене ахаль çеç çырса кăтартни вырăнне (тата вĕсене идеал енчен пăхса хаклани вырăнне) наукăна кирлĕ пек тĕпчесе сăнама май панă, çапла сăнаса тĕпчени вара, сăмахран, капитализмлă пĕр çĕршыва тепринчен «мĕн» уйăрса тăнине палăртса, вĕсемшĕн пуриншĕн те «мĕн» пĕрешкеллине тĕпчесе пĕлме май панă.

Юлашкинчен, виççĕмĕшĕнчен, çак гипотеза тата çакăн пирки те ĕнтĕ пуçласа «научнăй» социологи тума май панă: обществăллă отношенисене производствăллă отношенисем туса хуни, производствăллă отношенисене вара производство вăйĕсен виçи вырăнне хуни, çаксем кăна обществăллă формацисен аталанăвĕ естественнă-историллĕ процесс пулса тăнине ăнланса илме çирĕп никĕс туса панă. Çакăн пек ăнланнисĕр обществăллă наука та пулма пултарайманни, хăйне-хăех паллă. (Сăмахран, субъективистсем, истори явленийĕсем законсем тăрăх аталанса пынине йышăнсан та, çапах та вĕсен эволюцийĕ çине естественнă-историллĕ процесс çине пăхнă пек пăхма пултарайман, — мĕншĕн тесен çынсен обществăллă идейисемпе тĕллевĕсĕм çинчех чарăнса тăнă, çав идейăсемпе тĕллевсене материальнăй обществăллă отношенисем патне илсе çитерме пĕлмен.)

Акă ĕнтĕ Маркс, çак гипотезăна 40-мĕш çулсенче каласа кăтартнăскер, материала чăн-чăнах (ку nota bene) тĕпчесе сăнама тытăнать. Вăл обществăллă-экономикăллă формацисенчен пĕрне—таварлă хуçалăх системине илет те, тем тери йышлă фактсем тăрăх (вăл вĕсене 25 çулран кая мар тĕпчесе вĕреннĕ) çак формаци мĕнле законсем тăрăх пурăнса аталаннине тĕпĕ-йĕрĕпех анализ туса тухать. Çак анализпа общество членĕсем хушшинчи пĕр производствăллă отношенисене кăна тĕпченĕ: ĕçе ăнлантарса парас тĕлĕшпе пĕрре те çак производствăллă отношенисем тулашĕнче тăракан япаласемпе усă курмасăр, Маркс обществăн тавар тумалла организациленнĕ хуçалăхĕ епле аталанса пынине, çак организаци (производствăллă отношенисен картинчех ĕнтĕ) буржуазипе пролетариатăн антагонизмлă класĕсене çуратса пырса, хăй епле капитализмла организаци пулса пынине, вăл обществăллă ĕçĕн тухăçлăхне епле ÿстерсе пынине, вара çавăн пирки çак капитализмлă организацийĕн хăйĕн никĕсĕсемпе ниепле те килĕшме пултарайман вăй туса хунине уççăн курма май парать.

«Капитал» «кĕлетки» çакăн пек. Анчах пĕтĕм ĕç акă мĕнре: çак кĕлеткепе Марксăн кăмăлĕ тулман, вăл, кулленхи хăнăхнă ăнланупа калас пулсан, пĕр «экономикăллă теорипе» кăна чарăнса тăман: çак обществăллă формаци мĕнле пулса тăрса, мĕнле аталанса пынине вăл «пĕртен-пĕр» производствăллă отношенисемпе кăна «ăнлантарса панă» пулсассăн та,—çакăнпа пĕрлех тата çак производствăллă отношенисемпе шайлашса тăракан надстройкăсем те мĕнлине пур çĕрте те, яланах сăнаса йĕрлесе пынă, кĕлеткене ÿтпе витсе, юн кĕртсе пынă. «Нимĕç экономисчĕн» çак «Капитал» ятлă кĕнеки вулакан этеме капитализмлă пĕтĕм обществăллă формацие чĕп-чĕрĕ япала пек сăнласа кăтартнă: унăн пурăнăç йăли енĕсене те, классен производствăллă отношенийĕсенчи антагонизмĕ обществăри пурăнăçра чăннипе епле курăнса тăнине те, капиталистсен класĕ пуçпулса тăнине хÿтĕлесе тăракан буржуаллă политикăллă надстройкăна та, бур-

жуазийĕн ирĕклĕх, пĕртанлăх т. ыт. идейисене те, буржуаллă çемье отношенийĕсене те—çакăн пирки ĕнтĕ вăл вулакансем хушшинче çав тери пысăккăн сарăлнă кĕнеке пулса тăнă та. Дарвинпа танлаштарни тĕп-тĕрĕс пулни халĕ уççăнах курăнать ĕнтĕ: «Капитал» вăл шăпах «Мон-Блан тăвĕ пекех çӳлĕ пухăнса капланнă фактсен материалне пĕтĕçтерсе, тăрăласа, пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнса тăракан йышлă мар идея» пулса тăрать. Кам та кам «Капитала» вуланă чухне çак пĕтĕçтерсе тăракан идейăсене асăрхамасăр юлма пултарнă, вăл Маркс айăпĕ мар ĕнтĕ, мĕншĕн тесен çак идейăсене вăл, хамăрах курсаттăмăр, хăйĕн умсăмахĕнчех тĕллесе кăтартнă пулнă. Вăл та сахал-ха, кун пек танлаштарни тулашĕнчен кăна мар (г. Михайловские тем пирки тулашĕ пуринчен ытла интереслентернĕ), шал енчен те тĕрĕс. Дарвин мĕнле чĕрчунсемпе ӳсентăрансен тĕрлĕ тĕсĕсем çине, вĕсем ăнсăртран çех пулса тăнă пек, вĕсене «турă тунă» пек, вĕсем пĕр-пĕринпе пĕртте çыхăнмасăр тата улшăнмасăр тăнă пек пăхассине пĕтерсе хурса, тĕссем улшăнса пĕр-пĕрин хыççăн теприсем пулса пынине тĕпчесе пĕлсе, биологине пуçласа чăн наука никĕсĕ çине лартнă, Маркс та çавăн пекех общество çине, общество вăл—начальство ирĕкĕ тăрăх (е, пурĕ пĕрех, обществăри çынсемпе правительство ирĕкĕ тăрăх) хăть те мĕнле улшăнтарма та юракан, ăнсăртран çех çуралса аталанса пыракан механикăллă аггрегат пулнă пек пăхассине пĕтерсе хунă; унтан çав-çав паллă производствăллă отношенисем пурте пĕрле—обществăллă-экономикăллă формаци пулса тăнине тĕпчесе пĕлсе, çак формацисем аталанни естественнă-историллĕ процесс пулса тăнине тĕпчесе пĕлсе, социологине пуçласа наука никĕсĕ çине лартнă.

Халĕ, «Капитала» çырса кăларнăранпа, историе материализмла ăнланни гипотеза мар ĕнтĕ, наука тăрăх ĕнентерсе панă положени; çавăнпа эпир епле те пулин обществăллă формаци—мĕнле те пулин çĕршывăн, е халăхăн, е класăн та, т. ыт. те, пурнăç йăли мар, шăпах обществăллă формаци—епле пурăнса, аталанса пынине наука калană тăрăх тепĕр хут ăнлантарса пама тăрăшнисем пуличчен,—материализм пултарнă пекех «кирлĕ пек фактсене» йĕркене кӳме, çавăн пекех, пĕр пĕр формацие чăн наука тăрăх ăнлантарса панипе пĕрлех, унăн чĕрĕ сăнне те кăтартса пама пултаракан тăрăшусем пуличчен, çавăнчченех—историе материализмла ăнланни обществăллă наукăн синонимĕ пулса тăрĕ. Материализм вăл, г. Михайловский шухăшланă пек,—«пуринчен ытла историе наука каланă пек ăнланни» мар, пĕртен-пĕр наука каланă пек ăнланни пулса тăрать.

Халĕ вара—«Капитала», унра материализм шыраса тупаймасăр вуласа тухма пĕлнĕ çынсем тупăннинчен кулăшларах япала шухăшласа кăларма пултаратăр-и ĕнтĕ эсир! Ăçта вара вăл?— тесе, чăнахах пĕлмен пек пулса, ыйтать г. Михайловский.

Вăл «Коммунистсен Манифестне» вуланă та, унта кучухнехи йĕркесене—юридическисене те, политикăллисене те, çемьеллисене те, тĕнлисене те, философиллисене те материализмла ăнлан-

тарса панине, социализмла тата коммунизмла теорисене критикленӗ чухне те пулин вӗсен тымарӗсене ҫав-ҫав производствӑллӑ отношенисенче шыраса тупнине, асӑрхаймасӑрах юлнӑ.

Вӑл «Нищета философии» кӗнекене вуланӑ та, унта Маркс Прудон социологине материализмла теори енчен пӑхса тӗпченине, историри тӗрлӗрен ыйтусене Прудон епле йышӑнма сӗннине материализмла принципсен енчен пырса критикленине, автор хӑй ҫак ыйтусене татса пама фактсене ӑҫта шырамаллине кӑтартнӑ чух та производствӑллӑ отношенисем ҫине пӑхма хушнине, асӑрхаймасӑрах юлнӑ.

Вӑл «Капитала» вуланӑ та, хӑй умӗнче пӗр обществӑллӑ формацие—ҫитменнине чи кӑткӑссине —наука калапӑ тӑрӑх, материализмла методпа тӗпчесе сӑнанӑ тӗслӗх пулнине, ку ӗҫе пурте чи паха тӗслӗх вырӑнне хунине, унран никам та иртterейменнине, асӑрхаймасӑрах юлнӑ. Акӑ вара вӑл ларать те, тарӑн шухӑшлӑ ыйту ҫинчен: «Маркс, хӑй историе материализмла ӑнланнине мӗнле сочиненийӗнче ҫырса пӗлтернӗ-ши?» тесе пуҫне ҫӗмӗрсе шухӑшлать.

Маркса пӗлекен ҫын хуть те кам та, ӑна ку ыйтӑва хирӗҫ тепӗр ыйтупа тавӑрса калӗччӗ: мӗнле сочиненийӗнче Маркс историе хӑй материализмла ӑнланнине ҫырса пӗлтермен-ши?—тейӗччӗ. Анчах г. Михайловский Марксӑн материализмла тӗпчесе сӑнанӑ ӗҫӗсене—вӗсене пӗр-пӗр Кареев пӗр-пӗр историософиллӗ кӗнекере, тивӗҫлӗ номерсем лартса: акӑ ку—«экономикӑллӑ материализм», тесе ҫырса кӑтартнӑ хыҫҫӑн тин пӗлсе илет, пулас.

Анчах, кунтан та кулӑшлараххи ак ҫакӑ: г. Михайловский Маркса, вӑл «истори процесӗн пур паллӑ теорийӗсене те пӑхса тухайман» (sic!), тесе айӑплать. Ку ӗнтӗ шалтах кулӑшла. Ара ҫак теорисем, вунӑ пайӗнчен тӑххӑрӗшӗ, мӗнле теорисем пулнӑ-ха ӗнтӗ? Вӗсем: мӗн вӑл общество, мӗн вӑл прогресс? тата ытти ҫавӑн пекки ҫинчен шӑлтах априорнӑй, догмӑллӑ, абстрактлӑ калаҫусенче кӑна пулнӑ. (Юриех г. Михайловскийӗн ӑсӗпе чӗрине ҫывӑх тӗслӗхсем илсе калатӑп.) Ара кун йышши теорисем хӑйсем ҫут тӗнчере пуррипех те юрӑхсӑр вӗт ӗнтӗ, хӑйсен тӗп меслечӗсем киревсӗр пирки, хӑйсен чикӗсӗр, вӗҫӗ-хӗррисӗр метафизикӑллӑхӗ пиркиех юрӑхсӑр вӗт. Мӗн вӑл общество, мӗн вӑл прогресс?—текен ыйтусенчен пуҫлани, вӑл—ӗҫе хыҫалтан пуҫлани пулать вӗт. Хӑвӑр халиччен пӗр обществӑллӑ формацие те уйрӑмӑн тӗпчесе сӑнаман пулсассӑн, ҫак ӑнланӑва хӑйне туса хума та пултараймарӑр пулсассӑн, хӑть те хӑш обществӑллӑ отношенисене чӑнахах тӑрӑшса тӗпчесе вӗренесси, объективлӑ анализ тӑвасси патне ҫывхарма та пултараймастӑр пулсассӑн, пӗтӗм обществӑпа прогресс ӑнланӑвне ӑҫтан тупма пултарӑр-ха эсир? Кун пек туни вӑл—метафизикӑн чи уҫҫӑн курӑнса тӑракан палли, кирек хӑш наука та хӑй ӗҫне ҫавӑнтан пуҫланӑ: фактсене мӗнле тӗпчесе вӗренме тытӑнмаллине пӗлмен чухне, кирек хӑҫан та a priori*—нихӑҫан та нимӗнле усӑ та

* Малтан, опыт тӑвиччен. *Ред.*

паман, пĕтĕмĕшле теорисем шухăшла-шухăшла кăларнă. Метафизик-химик, хими процесĕсене тĕпчесе пĕлме пултарайман чухне, химиллĕ средство мĕн йышши вăй пулни çинчен калакан теори шухăшласа кăларнă. Метафизик-биолог—мĕн вăл пурăнăç, мĕн вăл пурăнăç вăйĕ?—тесе калаçнă. Метафизик-психолог—мĕн вăл чун?—тесе шухăшласа супнă. Меслечĕ хăех те ĕнтĕ кунта юрăхсăр пулнă. Психика процесĕсене малтан уйрăм ăнлантарса памасăр, чун çинчен пĕртте калаçма юрамасть; прогресс çулйĕрĕ кунта ак çакă пулмалла: чун çинчен пĕтĕмĕшле теорисемпе философиллĕ шухăшсене пăрахса, вăл е ку психика процесĕсене палăртса тăракан фактсене наука каланă тăрăх тĕпчесе вĕренме тытăнасси пулмалла. Çавăнпа та халĕ г. Михайловский Маркса айăплани шăлт ак çакăн йышшиех: пĕр-пĕр метафизик-психолог ĕмĕрĕ тăрăшшĕпех—мĕн вăл чун?—тени çинчен тĕрлĕ «тĕпчев кĕнекисем» çырса ларнăскер (хăй пĕр психика явленине те, чи çăмăллине те пулин, тĕпĕ-йĕрĕпех ăнлантарса пама пĕлменскер), наука тăрăх ĕçлекен психолога чун çинчен калакан пур паллă теорисене те пăхса тухайман вĕт тесе айăплама тытăннă пекех пулса тăрать. Вăл, çак наука тăрăх ĕçлекен психолог, чун çинчен вĕрентекен философи теорийĕсене сирсе ывăтса, тӳрех психика явленийĕсен материальнăй никĕсне—нервăллă процессене тĕпчесе вĕренме тытăнса, çав-çав психика процесне, е çав-çав процесĕсене тĕпчесе, ăнлантарса панă пулать, тейĕпĕр. Акă вара, пирĕн метафизик-психолог çак ĕçе вуласа пăхать те, процессене аван çырса кăтартнă, фактсене те лайăх тĕпчесе вĕреннĕ,—тесе ырлать, анчах çапах та кăмăлĕ тулмасть. Чимĕр-ха, чимĕр, тесе пăшăрханать вăл, çынсем йĕри-таврах çак ученăй психологине пачах çĕнĕлле май ăнланни çинчен, научнăй психологийĕн хăйне уйрăм меточĕ çинчен калаçнисене илтнĕ хыççăн,—чимĕр, ара мĕнле сочиненире çырса пĕлтернĕ-ха ку метод çинчен?—тесе ăшаланать философ.—Ара, ку кĕнекере «пĕртен-пĕр фактсем кăна» вĕт? «Чун çинчен вĕрентекен пур паллă философиллĕ теорисене те» çĕнĕрен пăхса тухасси çинчен асăнман-таçке кунта? Ку пĕртте пире кирлĕ ĕç мар!—тет.

Çавăн пекех, общество мĕн вăл тени çинчен априорнă калаçнисенчен нимĕн усси те пулас çуккине асăрхама пултарайман метафизик-социологшăн, çакăн йышши меслетсем, тĕпчесе ăнланма пулăшас выранне общество мĕн иккенне ăнланас ĕçе, е Англи суту-илӳçин буржуаллă идейине кăна е Россия демокрачĕн мещанла-социалистла идеалне кăна (урăх нимĕн те мар) чике-чике хума май панине ăнланайман социологшăн «Капитал» та, паллах, тивĕçлĕ ĕç мар. Çавăнпа та çав мĕнпур философиллĕ-историллĕ теорисем супăнь хăмписем пек хăпара-хăпара тухнă та, сӳне-сӳне ларнă, чи лайăх пулсан та вĕсем хăй вăхăтĕнчи обществăллă идейăсемпе отношенисене кăтартакан паллăсем кăна пулнă; çын хуть мĕнле те пулин уйрăм обществăллă отношенисене, анчах вара чăн пурăнăçрисене («çын природине юрăхлисене» мар) «ăнланса илес» ĕçе вĕсем пĕр чĕптĕм те малалла шутарман. Çак тĕлĕшпе Маркс, пĕтĕмĕшле обществăпа прогресс çинчен

каласма пăрахса, ун вырăнне „пĕр“ обществăпа „пĕр“ прогреса —капитализмлине «наука тăрăх» тĕпчесе пĕлни малалла улăпла утăм ярса пусни пулнă та. Çапах та г. Михайловский ăна вăл хăй ĕçне хыçалтан мар, малтан, вĕçри выводсенчен мар— фактсене тĕпчесе сăнанинчен, пĕтĕмĕшле обществăллă отношенисем мĕнсем вĕсем?—тесе вĕрентекен пĕтĕмĕшле теорисенчен мар, историри пĕр-пĕр уйрăм обществăллă отношенисене тĕпчеме пуçланинчен тытăннăшăн айăплать! Çитменнине хăех: ăçтаха тăвас тенĕ ĕçĕ?—тесе ыйтать. Эй, акăш-макăш ăслă субъективлă социолог!!

Пирĕн субъективлă философ пĕр çакăнпа çех: материализма мĕнле сочиненире никĕслесе панă? — тенĕ ыйтупа аптăраса кăна тăнă пулсан,—вăл çур инкек анчах пулнă пулĕччĕ-ха. Анчах вăл—историе материализмла ăнланассине никĕслесе çирĕплетнине кăна мар, ун çинчен каласа кăтартнине те ниçта та шыраса тупайман пулсассăн та (тен, шăпах тупайман пирки те пулĕ)— çак вĕрентӳ çумне, вăл хăй нихăçан та йышăнма шухăшламан япаласене, йышăннă пек туса хушса кăтартма тытăнать. Вăл Блос çырнинчен, Маркс историе йăлтах çĕнĕлле «ăнланмалла» тунă, текен цитатăна илет те, малалла, пĕр чăрманмасăрах, çак теори—«этемлĕхе унăн иртнĕ пурнăçне ăнлантарса патăм», «этемлĕхĕн пĕтĕм (sic!!?) иртнĕ ĕмĕрне» ăнланмалла турăм, тесе каланă пек, кăтартма тытăнать, т. ыт. те. Ара ку йăлтах, пĕр вĕçĕмсĕр суя вĕт! Теори пĕр капитализмлă обществăллă организацие кăна ăнлантарса парасшăн пулнă, урăх нихăшне те ăнлантарасшăн пулман. Материализмпа усă курни пĕр обществăллă формацие тĕпчесе ăнлантарас ĕçре те çав тери паха результатсем туса пачĕ пулсан, вара материализм историре гипотеза мар ĕнтĕ, наука тăрăх тĕрĕсленнĕ теори пулса пыни хăйне-хăех паллă вĕт; трансформизм идейи тĕрĕс пулнине çителĕклĕ нумай фактсем тĕлĕшĕпе кăтартса панă хыççăн,—чĕрчунсемпе ӳсентăрансен уйрăм тĕсĕсен трансформацийĕ çинчен (вĕсем урăхланса пыни çинчен) калакан факта халлĕхе çителĕклĕ паллăн тĕпчесе пĕлсе йышăнма май çук пулин те—çав трансформизм идейине биологийĕн пĕтĕм облаçĕ çине сармалла пулнă пекех, кунта та материализм методне ытти обществăллă формацисем çине те, ятарласа тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе, сăнаса тухма ĕлкĕрейменнисем çине те сарма кирли хăйне-хăех паллă вĕт. Çитменнине трансформизм, тĕссем пулса тăнă историе пĕрттe «пĕтĕмĕшпех» ăнлантарса пама ĕмĕтленмен пек, çак ăнлантару меслечĕсене кăна наука çӳллĕшне çити çĕклесшĕн пулнă пек, материализм та çавăн пекех нихăçан та историри пур япалана та ăнлантарса парас ĕçе хăй çине илмен, историе ăнлантарса памалли метода, Маркс каланă тăрăх («Капитал») «пĕртен-пĕр научнăй» метода çех кăтартса парасшăн пулнă. Çакăн тăрăх ĕнтĕ г. Михайловский тавлашура мĕнтери çивĕч ăслă, тарăн, тирпейлĕ меслетсемпе усă курнине пахалама пулать: историри материализм çинчен вăл малтан, айванла,—вăл «пур япалана та ăнлантарма» пулнă, «историри пур çăрасем валли

те уҫӑ» шыраса тупма пулнӑ тесе, хӑйӗнчен хушса каласа, Маркс сӑмахӗсене суйса кӑтартать («хушса каланисене Маркс, паллах, Михайловский статьисем пирки ҫырнӑ «ҫырӑвӗнчех-ха»[4], хӑйӗнчен, ҫиййӗнчех, наркӑмӑш пекех питӗ витӗмлӗ чӗлхепе, йӑлтах сирсе ывӑтнӑ пулнӑ), унтан ҫак хӑех шухӑшласа кӑларнӑ ӗмӗтсенчен мӑшкӑлласа хуҫкаланать, юлашкинчен вара, Энгельсӑн ҫак шухӑшӗсене: материалистсем пек ӑнланнӑ политикӑллӑ экономине малашне «тумалла пулать-ха», «эпир унтан илни мӗн пурӗ те» капитализмлӑ общество историне пӗлни «кӑна», тенӗ шухӑшсене тӗрӗс ҫырса илсе,—тӗрӗс, тетӗп, мӗншӗн тесен хальхинче вӑл хӑйӗн сӑмахӗпе мар, цитата илсе каласа парать те —ҫапла вывод туса хурать: «ку сӑмахсемпе экономикӑллӑ материализмпа усӑ курмалли вырӑн питех те ансӑрланса юлать» тет! Мӗн тери вӗҫӗмсӗр айван пулмалла-ха, е мӗн тери мӑнкӑмӑллӑ пулмалла-ха ҫын, хӑйӗн ҫакӑн йышши фокусӗсене ыттисем асӑрхамасӑрах иртсе кайӗҫ, тесе шухӑшлать пулсан! Малтан Маркс сӑмахӗсене суйса хурать, унтан хӑйӗн суйи пирки хуҫкаланса авкаланать, вара ҫын шухӑшӗсене тӗрӗс каласа кӑтартать те—халӗ ӗнтӗ пӗр намӑса пӗлмесӗрех: кунпа, экономикӑллӑ материализмпа усӑ курмалли вырӑн питех те ансӑрланса юлать! тет. Г-н Михайловскийӗн ҫапла хуҫкаланкалани мӗнле сортлине, унӑн пахалӑхне ҫак тӗслӗхрен курма пулать. «Вӗсене» —урӑхла каласан экономикӑллӑ материализм теори никӗсне— «Маркс ниҫта та ҫирӗплетсе паман», тет г. Михайловский. Чӑн та, Маркс Энгельспа пӗрле философиллӗ-историллӗ те историллӗ-философиллӗ характерлӑ сочинени ҫырма шутланӑ, ҫырнӑ та (1845—47 ҫулсенче), анчах ӑна нихӑҫан та пичетлесе кӑларман[5]. Энгельс ҫапла калать: «Ҫак сочиненийӗн пӗрремӗш пайӗнче историе материализмла ӑнланни ҫинчен ҫырнӑ, вӑл мӗн пурӗ те эпир экономикӑллӑ истори облаҫне мӗн тери ҫителӗксӗр пӗлнине кӑна кӑтартса тӑрать», тет. Ҫапла ӗнтӗ—тесе заключени тӑвать вара г. Михайловский—«научнӑй социализмӑн» тата «экономикӑллӑ материализм теорийӗн» тӗп пункчӗсене, ҫак теори авторӗсенчен пӗри хӑех йышӑннӑ тӑрӑх, «ҫакӑн йышши ӗҫ валли кирлӗ пӗлӳсем вӗсен ҫителӗксӗр пулнӑ» вӑхӑтра шыраса тупнӑ, каярахпа вара вӗсене «Манифестра» ҫырса та пӗлтернӗ пулнӑ.

Чӑн мар-им, мӗн тери кӑмӑллӑ кун йышши критика! Энгельс хӑйсен экономикӑллӑ «истори» тӗлӗшпе пӗлӗвӗсем вӑйсӑр пулни ҫинчен калать, ҫавӑнпа вӗсем хӑйсен «пӗтӗмӗшле» историллӗ-философиллӗ сочиненине пичетлемен те, тет. Г-н Михайловский кӑна хӑйне май ҫавӑрса хурать. Вӗсен «научнӑй социализмӑн тӗп пункчӗсене» туса хатӗрлеме, урӑхла каласан, «буржуаллӑ» йӗркене, «Манифестри» пек, наука каланӑ тӑрӑх критиклес «ӗҫ валли» пӗлӳсем вӑйсӑр пулнӑ, тет. Иккӗшӗнчен пӗри: е г. Михайловский историйӗн пӗтӗм философине ытамласа илме тӑрӑшассипе буржуаллӑ йӗркене наука каланӑ тӑрӑх ӑнлантарса пама тӑрӑшасси хушшинчи уйрӑмлӑха ӑнланса илме пӗлеймест, е вӑл Маркспа Энгельсӑн политикӑллӑ экономине критиклемешкӗн пӗлӳсем ҫителӗксӗр пулнӑ тесе шутлать. Апла пулсан

вара, вăл пире çак çителĕксĕрри çинчен хăй шухăшне, хăйĕн тӳрлетĕвĕсемпе хушăвĕсене каласа паман пирки—питĕ хытă чĕреллĕ пулса тăрать. Маркспа Энгельс, хăйсен историллĕ-философиллĕ ĕçне пичетлемесĕр, пĕтĕм вăйĕсене пĕр обществăллă организацие наука тăрăх тĕпчесе пĕлес ĕçе кăна хума йышăнни, вĕсем наука тĕлĕшĕнчен тем тери тӳрĕ кăмăллă пулнине пĕлтерсе тăрать. Г-н Михайловский вара, çак хушса каланă сăмахсем çинчен, Маркспа Энгельс, хăйсен вĕрентĕвне аталантарса çитерме пĕлӳсем çителĕксĕррине курса тăрсах, вĕсене çырса пĕлтерме тытăннă текелесе, мăшкăласа хуçкаланма йышăнни—ăса та, хăйне тытма пĕлнин сисĕмне те кăтартман тавлашу меслечĕсене кăна пĕлтерсе тăрать.

Тепĕр тĕслĕх: «Экономикăллă материализма, историллĕ теори пулса тăраканскере, никĕслесе çитерес тĕлĕшпе Маркснăн alter ego*--Энгельс ытларах ĕçленĕ,—тет г. Михайловский.—Унăн истори тĕлĕшĕпе: «Происхождение семьи, частной собственности и государства в связи (im Anschluss) с воззрениями Моргана» ятлă ятарласа çырнă кĕнеки пур», тет. Çак Anschluss çав тери тĕлĕнмелле япала. Американец Морган кĕнеки, Маркспа Энгельс экономикăллă материализм никĕсĕсем çинчен каласа пĕлтернĕ хыççăн нумай çул каярахпа, çитменнине пĕртте вĕсен ĕçĕпе çыхăнса тăмасăр, пичетленсе тухнă. «Çапла вара, имĕш, экономикăллă материалистсем» çак кĕнеке çумне «пырса хутшăннă» пулать, çитменнине тата, историчченхи вăхăтсенче классен кĕрешĕвĕ пулман пирки вĕсем историе материализмла ăнланмалли формула çумне çапла «тӳрлетӳ» хушнă, пулать: материальнăй хаклăхсем тунипе пĕрле, истори çулйĕрне этеме хăйне туни те, урăхла каласан, ача-пăча çуратса ӳстерни (детопроизводство) палăртса тăрать, ку авалхи çынсен саманинче (первобытнăй саманара), ĕç тухăçлăхĕ çав тери пĕчĕккĕ пулнă чухне, чи малти вырăн йышăнса тăнă пулать.

Энгельс çапла çырать: «Морганăн пит те хисеплĕ ĕçĕ вăл—Çурçĕр Америкăри индеецсем ăрулăн çыхăнса пурăннă йĕркере авалхи грексен, римлянсен, германецсен историйĕнчи питех те кирлĕ, халичченех тĕпчесе татман ыйтусене тĕпчесе пĕлме май паракан çăраççине шыраса тупни пулса тăрать»,—тет.

«Çапла вара — тесе каласа хурать çакăн пирки г. Михайловский — 40-мĕш çулсем вĕçĕнче историе пачах çĕнĕлле, материализмла, чăн-чăн наука кăтартнă тăрăх мĕнле ăнланмаллине тĕпчесе тупса пĕлтернĕ; Дарвин теорийĕ кучухнехи естествознанине мĕнле усă тунă, çĕнĕ ăнлану та историллĕ наукăна çавăн пекех усă туса панă». Анчах çак ăнланăва нихăçан та наука тăрăх никĕслесе çирĕплетмен,—тесе тепĕр хут калать вара г. Михайловский. «Вăл тĕрĕсси е тĕрĕс маррине фактсен йышлă материалĕ тăрăх тĕрĕслесе тухман кăна мар («Капитал»—«кун йышши» ĕç мар, иккен: унта фактсем тата тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпче-

* Маркс хăраххи, Маркс двойникĕ.

нисем кăна вĕт!), ăна ытти философиллĕ-историллĕ системăсене критиклесе пăрахăça кăларас çулпа та пулин пырса, çителĕклĕ сăлтавласа паман». Энгельсăн—Herrn E. Dührings Umwälzung der Wissenschaft* ятлă кĕнеки çинчен, вăл: ку кĕнеке—«никĕслесе çирĕплетме тăрăшса, çул май çивĕч ăслăн калакаланă сăмахсем анчах», тет; çавăнпа та г. Михайловский, çак «тăрăшса каланă çивĕч ăслă сăмахсем» «утопирен пуçлакан» социологисем нимĕнле содержанисĕр пулнине питĕ çивĕччĕн кăтартаççĕ пулин те, экономикăллă йĕркесем мĕнле пулассине политикăллă-юридически йĕркесем палăртса тăраççĕ, текен «ирĕксĕрлес теорине». «Русское Богатство» журналри гг. публицистсем çав тери тăрăшса пурнăça кĕртсе пыракансккере, çак сочиненире тĕпĕ-йĕрĕпе критикленĕ пулин те, — ку сочиненире тапратнă темĕн чухлĕ питех те кирлĕ ыйтусене тĕкĕнмесĕрех иртсе кайма пулать, тесе шутлать. Чăн та, сочиненире материализмла ăнлантарса панă пĕр ыйтăва та пулин тĕплĕн пăхса тухас выранне, сочинени çинчен пĕр-икĕ нимĕн те пĕлтермен сăмах каласа хума нумай çăмăл вĕт; çитменнине ун пирки нимĕн хăрамалли те çук, мĕншĕн тесен çак кĕнекене вырăсла куçарнине, паллах, цензура нихăçан та пичетлесе кăларттарас çук; çавăнпа та г. Михайловский ăна, хăйĕн субъективлă философийĕшĕн нимĕн шикленмесĕрех, çивĕч чĕлхепе çырнă, тесе, калама пултаратех ĕнтĕ.

Марксăн «Капиталĕ» çинчен каланă шухăш (çынна чĕлхене хăйĕн шухăшне пытарма—е пушă, нимĕн те çук япалана шухăш форми туса кăтартма панине çутатса парас тĕлĕшпе) пушшех характернăрах та, вĕрентўллĕрех те вара. «Капиталра» историне çутатса паракан питĕ паха страницăсем пур,—тет вăл,—**анчах** (ку питĕ тĕлĕнмелле «анчах»! «Анчах» та мар вăл, хайхи акăш-макăш паллă «mais», вырăсла куçарсан: «хăлхасем çамкаран çўлте ўсмеççĕ» тенине пĕлтерекенскер) вĕсене, кĕнеке задачине курах та ĕнтĕ, историн пĕр паллă тапхăрĕпе кăна килĕштерсе çырнă, çитменнине вĕсем экономикăллă материализмăн тĕп положенийĕсене çирĕплетсе пама мар, историллĕ явленисен пĕр паллă экономикăллă енне ахаль сĕртĕнсе кăна иртеççĕ», тет. Тепĕр тĕрлĕ каласан, çапла пулса тухать: «Капитал»—шăпах капитализмлă обществăна кăна тĕпчесе пĕлес тĕллевпе çырнă кĕнеке—чăннипе, çак обществăпа унăн надстройкисене материализмла тĕпчесе сăнать вĕть-ха, ***«анчах»*** г. Михайловский çапла тĕпчесе сăнанинчен сĕртĕнмесĕрех иртсессĕн лайăхрах пулĕ, тесе шутлать: ĕç кунта, куратăр ĕнтĕ, «пĕр» тапхăр çинчен кăна пырать, вăл вара, г. Михайловский, пур тапхăрсене те пĕр харăсах, çитменнине тата, уйрăмăн пĕрин çинчен те каламалла ан пултăр тесе, ытамласа илме тăрăшать. Паллах, ку тĕллев патне,—урăхла каласан, пур тапхăрсене те пĕр харăсах, кирлине пĕрин çинчен те каламасăр, ытамласа илесси патне пĕр çулпа кăна çитме пулать—«йăп-йăлтăркка» та пуш-пушă, пĕтĕмĕшле вырăнсен тата сăмахсен çулĕпе кăна. Сăмахсемпе сўпĕлтетсех ирттерсе ярас искус-

* «Наукăра г. Е. Дюринг тунă переворот» («Анти-Дюринг»). *Ред.*

ство тĕлĕшĕпе вара, г. Михайловскийпе никам та танлашас çук. Ун шухăшĕпе, Маркс тĕпченĕ ĕçсем çинчен тивĕçлипе калаçса тăма кирлĕ те мар, иккен, мĕншĕн тесен вăл, Маркс, «экономикăллă материализмăн тĕп положенийĕсене çирĕплетсе пама мар, историллĕ явленисен пĕр паллă ушкăнĕн экономикăллă енне ахаль сĕртĕнсе кăна иртет». Мĕн тери тарăн шухăш!—«Çирĕплетсе памасть», «ахаль сĕртĕнсе кăна иртет»!—Кирек мĕнле ыйтăва та, чăн та, сăмахсемпе епле çăмăллăн шăлса лартма пулать! Сăмахран, епле майпа праваллă государство гражданĕсен пĕртан правăлăхĕ никĕсĕнче, ирĕккĕн тунă договор тата çавăн пек ытти никĕссенче те тавар тăвакан çынсен (товаропроизводительсен) отношенийĕсем вырнаçса тăнине Маркс нумай хут кăтарта-кăтарта парать пулсассăн,—мĕн пулать вăл? çакăнпа вăл материализма çирĕплетсе парать-и, е «ахаль» сĕртĕнсе кăна иртет-и? Пирĕн философ, хăйĕн йăвашлăхне кура, çак ыйту çине тивĕç ответ памасăр хăварать те, тӳрех, хăйĕн илемлĕн калаçас та, нимĕн те калас мар текен «çивĕч ăслă ĕмĕтĕнчен» выводсем тума пуçлать.

«Пĕтĕм тĕнче историне çутатса пама тăрăшнă теоришĕн, вăл пулса тăни çинчен пĕлтернĕренпе 40 çул иртнĕ хыççăн та, авалхи грексен, римлянсен, германецсен историйĕ тупсăмне тупайман юмах пулса юлнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук,—тесе пĕлтерет çак вывод;—çак юмаха ăнланмалла тăвакан çăраççине вара: 1-мĕшĕнчен, экономикăлла материализмран пачах аякра тăракан, ун çинчен нимĕн те пĕлмен çын, 2-мĕшĕнчен, —экономикăллă мар фактор пулăшнипе тупса панă. «Этеме хăйне тăвас ĕç», урăхла каласан, ача çуратса ӳстересси, тенĕ термин кăштах кулăшла пек туйăнать; ку термина Энгельс, экономикăллă материализмăн тĕп формулипе çыхăнса тăнине сăмахпа та пулин çухатас мар тесе ярса илет. Çапах та унăн, этемлĕх нумай çулсем хушши ку формула тăрăх мар пурăннине ирĕксĕрех йышăнма тивет», тет. Чăн та ара, пĕртте «ăслă» тăвлашаймастăр-çке Эсир, г. Михайловский! Теори çапла пулнăччĕ: историе «çутатса парас» тесен унăн тымарне идеологиллĕ обществăллă отношенисенче мар, материальнăй обществăллă отношенисенче шырамалла. Фактсен материалĕ çитмен пирки, Европăн сĕм авалхи историйĕн хăшпĕр питĕ кирлĕ явленийĕсене, сăмахран, ăру организацине, çак методпа тĕпчесе пĕлме май пулман, çавăнпа вăл халиччenex тупсăмне тупман юмах пулса тăнă та. (Г-н Михайловский кунта та хуçкаланса хăтланмасăрирттермест: мĕнле-ха, имĕш, апла: историе наука тăрăх ăнланнипе пĕрлех—авалхи истори тупсăмне тупман юмах пулса юлма епле пултартăр-ха!—тет. Эсир, г. Михайловский, ăру организацийĕ çинчен—вăл чи йывăр та, хăйне ăнлантарса пама темĕн чухлĕ теори çуратнă ыйтусен шутне кĕни çинчен хуть те хăш учебникра та вуласа пĕлме пултаратăр.) Анчах Америкăра акă, Морган шыраса пуçтарнă питĕ пуян материал, ăна ăру организацийĕ мĕнле организаци пулни çинчен тĕпчесе пĕлме май панă та вăл çапла вывод тунă пулнă: унăн тупсăмне идеологиллĕ отношенисенче (сăмах-

ран, праваллисенче е тĕнлисенче) мар, материальнăй отношенисенче шырамалла, тенĕ. Уççăнах паллă, ку факт материализмла метода çав тери лайăх çирĕплетет—урăх нимĕн те мар. Г-н Михайловский вара çак вĕрентĕве, пĕрремĕшĕнчен, историйĕн тем тери йывăр тупсăмлă юмахĕсен уççине экономикăллă материализм теорийĕнчен «пачах аякра» тăнă çын шыраса тупнăшăн «ӳпкелет» пулсассăн,—апла пулсан вара çынсем хăйсемшĕн калакан япалана хăйсене кӳпкесе çĕмĕрсех пăрахакан япаларан мĕн тери уйăрма пултарайманнинчен тĕлĕнмелли анчах юлать. Иккĕмĕшĕнчен, пирĕн философ: ача çуратса ӳстересси—экономикăллă фактор мар, тесе калаçать. Анчах эсир Марксăнне е Энгельсăнне, вĕсем епле пулсан та экономикăллă материализм çинчен каланине, ăçта вулана-ха апла? Хăйсен миросозерцанине калăртса калана чухне, вĕсем ăна тӳрех материализм тенĕ. Вĕсен тĕп идейи (Марксран çырса илсе панă çӳлерехри цитатăрах та ĕнтĕ пит те паллă кăтартнăскер)—обществăллă отношенисем материальнăй тата идеологиллĕ отношенисем çине пайланса тăраççĕ,—тени пулнă. Малтанхисем, çыннăн хăй пурăнассишĕн ĕçленин результачĕ) формы пулнă пирки, пĕртте çын ирĕкĕпе ăстăнĕнчен килмеççĕ, кайранхисем вара малтанхисен надстройки кăна. Çӳлерех çырса кăтартнă цитатăра, Маркс: политикăллă-юридически формăсене «пурăнăçри материальнăй отношенисенче» шырамалла,—тет. Мĕнле-ха ĕнтĕ, г. Михайловский, ача çуратса ӳстерес отношенисем—идеологиллĕ отношенисем пулса тăраççĕ тесе шухăшламасть-и тата? Г-н Михайловский ку тĕлĕшпе ăнлантарса пани çав тери характерлă, çавăнпа вĕсем çинче чарăнса тăмалла пулать. «Ачапăча çуратса ӳстерес» тĕлĕшпе, ăна экономикăллă материализмпа сăмахпа та пулин çыхма тăрăшса, хуть те мĕнле хăтланса пăхсан та,—тет вăл,—обществăллă пурăнăçăн кăткăс явленийĕсем хушшинче вăл ытти явленисемпе, çав шутра экономикăллисемпе те, мĕн тери урлă-пирлĕн кăткăс çыхăнса тăрсан та, унăн пурĕ-пĕрех хăйне тивĕçлĕ физиологиллĕ тата психикăллă тымарĕсем пур. (Эсир ку япалана, ача-пăча çуратса ӳстерессин физиологиллĕ тымарĕсем пур тесе, чĕчĕ ачисем валли каласа кăтартатăр-и мĕн, г. Михайловский!? Кама улталама тăрăшатăр çак эсир?) Ку вара пире, экономикăллă материализм теоретикĕсем историпе кăна мар, психологипе те татăлса пĕтменнине астутарса тăрать. Цивилизацилле çĕршывсен историйĕнче ăру çыхăнăвĕсем хăйсен вырăнне çухатни тĕлĕшпе нимĕн иккĕленмелли те çук, анчах арлă-арăмлă, тата çемьеллĕ çыхăнусем çинчен ăна çавăн пекех ĕнентерӳллĕ калама май çук пулмалла. Пĕтĕм пурăнăç кăткăсланса пынă пирки, паллах, вĕсем пысăккăн улшăнса пынă, анчах диалектикăла çивĕчлĕх пăртаках пулсассăн, юридически отношенисем кăна мар, экономикăллă отношенисем хăйсем те арлă-арăмлă тата çемьеллĕ отношенисем çинчи «надстройка» пулнине кăтартса пама май пулатех. Эпир унпа аппаланса тăмăпăр, анчах çапах та наследство йĕрки çине тĕллесе кăтартăпăр».

Юлашкинчен аран-аран пирĕн философăн пуш-пушă сăмахсен облаçĕнчен—(чăн та, материалистсем, истори тĕрлĕ ыйтусене ну-

май хутчен материализмла ӑнлантарса панӑ пулсассӑн та, ҫапла ӑнланусенчен «шӑп пӗрне те пулин» ӑнланса пӑхма тӑрӑшмасӑрах: вӗсем историрен выводсем туса пӗтерейме, тесе, айӑпласа ӳпкелеҫҫӗ пулсан, е тата: кӑтартса пама пулатех, анчах эпир аппалансах тӑмӑпӑр унпа, текелеҫҫӗ пулсан,—ҫак меслете урӑхла мӗнле ятпа каламалла пулать-ха тата?)—пачах паллӑ, тӗрӗслесе пӑхма май пур, ӗҫӗн тӗп ыйтуне ҫав тери ҫӑмӑллӑн пытарса хӑварма май паман фактсем патне куҫма май пулчӗ. Сӑнаса пӑхар-ха апла, пирӗн Маркса критиклекен ҫын, наследство йӗрки арлӑ-арӑмлӑ тата ҫемьеллӗ отношенисем ҫинчи надстройка пулса тӑнине епле майпа кӑтартса парать. «Наследство йӗрки тӑрӑх экономикӑллӑ производство продукчӗсене халаласа хӑвараҫҫӗ,—тет г. Михайловский («Экономикӑлла производство продукчӗсене», тет!! Мӗн тери пӗлсе каланӑ сӑмах ку! мӗн тери янтравлӑ! чӗлхи-ҫӑварӗ мӗн тери хитре!)—ҫитменнине наследство йӗрки пуласси хӑй те, паллӑ виҫе таран, экономикӑлла конкуренцирен килет. Анчах та, пӗрремӗшӗнчен, «наследство йӗрки тӑрӑх материальнӑй мар хаклӑхсене те парса хӑвараҫҫӗ,—вӑл ача-пӑчана ашшӗсем пек пулмалла пӑхса ӳстерме тӑрӑшнинче курӑнать», тет. Ҫапла вара, ача-пӑчана пӑхса ӳстересси—наследство институчӗ шутне кӗрет пулать! Сӑмахран, Российӑри граждански законсенче: «ашшӗ-амӑшӗсем ачисене килте пӑхса ӳстерсе, вӗсен кӑмӑлне правительствӑна кирлӗ пек тума тӑрӑшмалла», текен статья пур. Пирӗн философ ҫакна ӗнтӗ наследство йӗрки тесе каламасть-и ҫак?—«Иккӗмӗшӗнчен вара—наследство йӗрки пӗтӗмӗшпех экономика облаҫӗнче шутланса тӑрсассӑн та, производствӑн наследство тӑрӑх парса хӑвармалли продукчӗсемсӗр пулма пултараймасть пулсассӑн, вӑл ҫавӑн пекех вара «ача-пӑча ҫуратса ӳстерессисӗр» те, тата вӗсен ҫумне таччӑн ҫыпҫӑнса тӑракан кӑткӑс, ҫивӗч психикӑсӑр та пулма пултараймасть», тет. (Ҫук ара, чӗлхи-ҫӑварне асӑрхаса пӑхӑр-ха эсир: кӑткӑс психика ача-пӑча ҫуратса ӳстерессин продукчӗсем ҫумне «ҫыпҫӑнса тӑрать», пулать! Ара ҫав тери хитре вӗт ку!). Ҫапла ӗнтӗ, наследство йӗрки вӑл—ҫемьеллӗ тата арлӑ-арӑмлӑ отношенисем ҫинче тӑракан надстройка пулать, мӗншӗн тесен наследство ача-пӑча ҫуратса ӳстерессин продукчӗсемсӗр пулма пултараймасть, иккен! Ара, ку чӑнах та Америкӑна шыраса тупни вӗт! Халиччен пурте ӗҫме-ҫиме кирлӗ пулни харпӑрлӑх йӗркине питӗ сахал ӑнлантарса панӑ пекех, ача-пӑча ҫуратса ӳстересси те ҫавӑн пекех—наследство йӗркине питӗ сахал ӑнлантарма пултарать, тесе шутланӑ. Халиччен пурте, сӑмахран: Российӑра, поместнӑй система йӗрки пуҫпулса тӑнӑ вӑхӑтра, ҫӗр (вӑл условнӑй харпӑрлӑх тесе кӑна шутланса тӑнӑ пирки) халалани тӑрӑх аларан-алла куҫса пыма пултарайман пулсассӑн, ҫакӑн ӑнланӑвне—ҫавӑн чухнехи обществӑллӑ организацин уйрӑмлӑхӗсенче шырамалла, тесе шутланӑ. Г-н Михайловский ӑна просто кӑна: вӑл—ун чухнехи помещикӑн ача-пӑча ҫуратса ӳстерессин продукчӗсем ҫумне ҫыпҫӑнса тӑнӑ психики ҫителӗклӗ кӑткӑс пулайман пирки кӑна ҫавӑн пек пулнӑ, тесе шутлать пулас.

«Халăх шухăшне» кăшт тĕпчесе пăхăр-ха, эсир вара унта буржуа тупма пултараттăр,—тесе калама пултаратпăр эпир, паллă сăмахсене кăшт урăхлатарах каласа. Чăн та, г. Михайловскийĕн наследство йĕрки —ачасене пăхса ӳстерес ĕçпе, ача-пăча çуратса ӳстерес психикипе тата ыттипе те çыхăнса тăни çинчен каланă сăмахĕсем,—наследство йĕрки, ачасене пăхса ӳстерес ĕç пекех, ĕмĕрлĕхех пыракан, чи кирлĕ, таса япала, тенинчен пуçне урăх мĕне пĕлтерме пултарччăр-ха тата! Тĕрĕс, «наследство йĕрки пуласси хăй те паллă виçе таран экономикăллă конкуренцирен килет» тенипе, г. Михайловский, паллах, хăйне валли шăвăнса кĕме вырăн хăварнах ĕнтĕ,—анчах ку вăл ыйту çине паллă ответ парассинчен йăпшăнса тарма пăхни кăна, çитменнине киревсĕр меслетпе тарма пăхни пулать вĕт. Наследство конкуренцирен мĕнле «паллă виçе таран» килни çинчен пире пĕр сăмах та каламаççĕ пулсассăн, конкуренципе наследство йĕрки хушшинчи çыхăну мĕнтен килнине пире пĕртте ăнлантарса памаççĕ пулсассăн, г. Михайловскийĕн çак сăмахĕсене мĕнле шута илме пултаратпăр-ха эпир? Чăннипе наследство йĕрки пур чухне, уйрăм харпăрлăх та пулмаллах ĕнтĕ; ку юлашки вара—улăшу (обмен) пуçлансан тин çуралса тухать. Уйрăм харпăрлăх никĕсĕнче—обществăллă ĕç халĕ ĕнтĕ специализациленме тытăнни тата рынокра продуктсене хуçинчен уйăрма пуçлани выртать. Сăмахран, индири авалхи çынсен общининче, общинăн пур членĕсем те хăйсене кирлĕ продуктсене пурĕшĕ те пĕрле ĕçлесе тупнă чухне, уйрăм харпăрлăх та пулма пултарайман. Анчах община ăшĕнче ĕç пайланма тытăнсассăн вара, тата община членĕсем пĕр мĕнле те пулин продукта кашнийĕ пĕчченшерĕн тăва-тăва, ăна рынокра сута пуçласассăн, ун чухне вара тавар тăвакан çынсем çапла материальнăй уйрăлса тăнине уйрăм харпăрлăх йĕрки палăртса тăра пуçлană. Уйрăм харпăрлăх та, наследство та, вĕсем—пĕр-пĕринчен уйрăлса саланнă, вак (моногамилле) çемьесем пулса çитнĕ хыççăнхи тата улăшу аталана пуçланă чухнехи обществăллă йĕркесен категорийĕ. Г-н Михайловский тĕслĕхĕ хăй кăтартса парасшăн пулнă шухăша мар, пачах ăна хирĕççине кăтартса парать.

Г-н Михайловскийĕн тата тепĕр факт çине кăтартса пани те пур—çав та вара каллех хăйне йышши ахах чулĕ! «Ăру çыхăнăвĕсем тĕлĕшпе калас пулсан вара—материализма малалла тӳрлетме тăрăшать вăл— вĕсем цивилизациленнĕ халăхсен историйĕнче пĕр тĕлĕшрен чăнахах та производство формисен çуттине пула шупкаланса кайнă (каллех вĕçерĕнсе тарма тăрăшни, анчах пушшех те уççăнрах паллăскер. Ара, производствăн мĕнле формисене пула-ха? Пуш-пушă фраза!), анчах тепĕр тĕлĕшрен вара хăйне-хăех тăсăлса, пĕрлешĕнсе пынăçемĕн—нациллĕ çыхăнусене кĕрсе саланса, пĕтсе ларнă». Çапла ĕнтĕ, нациллĕ çыхăнусем, вăл—ăру çыхăнăвĕсемех малалла тăсăлса, пĕрлешĕнсе пыни пулать! Г-н Михайловский хăйĕн общество историйĕ çинчен калакан шухăшĕсене—ача-пăчасен,гимназистсене вĕрентмелли халлапĕнчен йышăнса илсе калать, пулас. Общественность исто-

рийĕ çапла пулса иртнĕ—тесе вĕрентет çак стандартлă вĕрентӳ—чи малтан çемье пулнă, вăл кирек-хăш обществăшăн та ячейка (ку вăл—шăлтах буржуаллă идея: вакланса пĕтнĕ, пĕчĕкçĕ çемьесем буржуаллă йĕрке чухне тин пуçпулса тăракан пулса тăнă; историчченхи вăхăтсенче вĕсем пĕртте пулман. Буржуашăн кучухнехи йĕркесен паллă енĕсене пур вăхăтсемпе халăхсен çине те куçарнинчен пахараххи урăх нимĕн те çук), унтан—имĕш—çемье, аслăланса, ăру пулса кайнă, ăру вара, аслăланса, государство пулса тăнă. Г-н Михайловский çак ача-пăчаллă юмаха чаплăн каласа кăтартать пулсассăн, ку вара, ыттинчен пуçне, вăл вырăс историйĕ мĕнле аталанса пынине те пулин пĕртте пĕлменнине çех кăтартса тăрать. Авалхи Русьре ăру йĕрки пулни çинчен калама май пулнă пулсассăн, вара ним иккĕленмелли те çукки паллă ĕнтĕ: вăтам ĕмĕрсенчех, Мускав патшалăхĕ саманинчех те ĕнтĕ, çак ăру çыхăнăвĕсем пулман, урăхла каласан, ун чухнехи государство пĕртте ăру союзĕсем çинче мар, территориллĕ союзсем çинче никĕсленсе тăнă: помещиксемпе монастырьсем хăйсем патне тĕрлĕрен вырăнсенчен пыракан хресченсене йышăнса тăнă, çавăнпа та вара çак майпа организациленекен общинăсем пĕтĕмпех территориллĕ союзсем пулнă. Анчах чăн-чăн нациллĕ çыхăнусем çинчен калаçма май пулнă-ши вара ун чухне: государство уйрăм çĕрсем çине, хăшпĕр çĕрте, княжествăсем çине те пайланса кайнă; çак пайланса пĕтнĕ вырăнсенче, уйрăмах—управленире, ĕлĕкхи автономисен юлашкисем, хăшпĕр чухне кашнийĕн хăйсен уйрăм çарĕсем (вырăнти боярсем вăрçа хăйсен полкисемпе тухнă), уйрăм таможеннăй чиккисем т. ыт. те, чĕп-чĕррĕнех упранса тăнă. Вырăс историйĕн çĕнĕ тапхăрĕ кăна (пĕр 17-мĕш ĕмĕртен пуçласа) пур çакăн пек облаçсем те, пур çĕрсем те, пур княжествăсем те чăннипех пĕр пулса пĕрлешнипе паллă пулса тăрать. Ăру çыхăнăвĕсем пĕрлештермен вĕсене, хисеплĕ г. Михайловский, çак çыхăнусем малалла тăсăлса, пĕрлешĕнсе пыни те мар: вĕсене облаçсем хушшинчи улăшу вăйланса пыни, таварçаврăнăшĕ ерипен ӳссе пыни, вырăнти пысăках мар рыноксем концентрациленсе, пĕтĕм Российăри пĕр пысăк рынок пулса тăни пĕрлештерсе пынă. Çак процесăн руководителĕсемпе хуçисем капиталистсем-купецсем пулнă пирки, çак нациллĕ çыхăнусене туни те—буржуаллă çыхăнусемех пулнă, урăх нимĕн те мар. Хăйĕн фактсене кăтартса панисемпе, иккĕшинпе те, г. Михайловский хăйне кăна çĕмĕрчĕ, çитменнине пире буржуаллă ирсĕрлĕх тĕслĕхĕнчен пуçне урăх нимĕн те памарĕ; «ирсĕрлĕх» тетĕп,—мĕншĕн тесен, наследство йĕркине—ача-пăча çуратса ӳстерессипе тата унăн психикипе, национальноçе—ăру çыхăнăвĕсемпе ăнлантарса пачĕ; «буржуаллă» тетĕп,—мĕншĕн тесен, историри пĕр-паллă (улăшу никĕсĕ çинче тытăнса тăракан) обществăллă формаци категорийĕсемпе надстройкисене—ача-пăчана воспитани парассипе арлă-арăм хушшинчи «чи тачă» çыхăнусем пекех, çав тери яланхи те ĕмĕрлĕхех пымалли категорисем шутне хурса йышăнчĕ.

Кунта чи палли çакă: фразăсемпе лăпăртатас вырăнне кон-

яретлӑ фактсене кӑтартса пама тытӑнас тесессӗнех пирӗн субъективлӑ философ лачакана кӗрсе те ларчӗ. Ҫитменнине хӑйне ӑна, ҫак ытлашши тасах мар вырӑнта, питӗ лайӑх туйӑнать, пулас: ҫарӑлса ларнӑ та, юсанкаласа ҫех ларать, пур еннелле те пылчӑк пӗрӗхтерет. Сӑмахран, вӑл ҫак положение: истори вӑл — класс кӗрешӗвӗн пӗр вӗҫӗмсӗр умлӑн-хыҫлӑн пулса пыракан событийӗсем, текен положение тӗрӗс мара кӑларма тӑрӑшать те, хӑйне акӑш-макӑш ӑслӑн тыткаласа: ку—«ытлашши» ӗнтӗ, тет; вара ҫапла калать: «Маркс класс кӗрешӗвӗ тӗллевӗсемшӗн организациленӗ пӗтӗм тӗнчери рабочисен обществи, французсемпе нимӗҫ рабочийӗсене пӗр-пӗрне вӗлерме, юхӑнтарма чарайман», ҫавӑнпа та материализм «нациллӗ юратупа нациллӗ курайманлӑхӑн усал-тӗселне» пӗтерме пултарайманнине кӑтартса парать, тет. Ҫак сӑмахсем, курайманлӑхӑн тӗп никӗсӗнче—сутуилӳ тата промышленность буржуазийӗн пит реальнӑй интересӗсем выртнине, нациллӗ туйӑм ҫинчен—вӑл хӑйне-хӑй тытӑнса тӑракан фактор пулнӑ пек калаҫни ӗҫ тупсӑмне кӑна шӑлса хуни пулнине критик ним чухлӗ те ӑнланманнине кӑтартса тӑраҫҫӗ. Тепӗр тесен, пирӗн философ национальность ҫинчен мӗнле тарӑн ӑнланнине курсаттӑмӑр ӗнтӗ эпир. Интернациональ ҫинчен г. Михайловский Буренин пекех мӑшкӑлласа калаҫнинчен пуҫне урӑхла калаҫма та пултараймасть: «Маркс—пӗтӗм тӗнчери рабочисен обществин, чӑн та, саланса кайнӑскерӗн, анчах ҫӗнӗрен ҫуралса тӑма тивӗҫлӗскерӗн пуҫлӑхӗ», тет вӑл. Паллах ӗнтӗ, пӗтӗм тӗнчери юлташлӑхӑн чи инҫетри тӗллевне—«Русское Богатство» журналӑн 2-мӗш №-че шалти пурнӑҫ хроникерӗ мещанла ирсӗрлӗхпе шӑлса лартнӑ пек—«тивӗҫлӗ» улӑшу йӗрки туса хунинче кӑна курас пулсассӑн, тата улӑшу вӑл, тивӗҫли те, тивӗҫсӗрри те яланах буржуази пуҫпулса тӑнӑ чухне кӑна пулма пултарнине ӑнланмасассӑн, ҫак улӑшу никӗсӗ ҫинче тытӑнса тӑракан хуҫалӑх организацине пӗтермесӗр халӑхсен хушшинчи хирӗҫӳсене те пӗтерме май ҫуккине ӑнланмасассӑн, ун чухне вара Интернациональ пирки мӗншӗн шӑлне йӗрсе кӑна калаҫни уҫҫӑнах паллӑ пулать. Вара, нациллӗ курайманлӑха хирӗҫ кӗрешес тесен, пусмӑрласа тӑракан классене хирӗҫ кӗрешмешкӗн пусмӑрланакан классене кашни уйрӑм ҫӗршывра пӗтӗҫтерсе организациленинчен пуҫне, рабочисен ҫак нациллӗ организацийӗсене пӗтӗм тӗнчери капитала хирӗҫ кӗрешес тӗллевпе пӗрпӗтӗм тӗнчери рабочисен ҫарӗ туса пӗрлештерессинчен пуҫне урӑх нимӗнле меслет те ҫуккине—ҫак чи простой чӑнлӑха та г. Михайловский ӑнланманни уҫҫӑнах паллӑ пулать. Интернациональ рабочисене пӗр-пӗрне вӗлерме чарайманни ҫинчен калас пулсан вара, ку тӗлӗшпе г. Михайловскине Коммуна событийӗсене аса тутарса илтерни те ҫителӗклӗ пулать: вӑрҫӑ туса пынӑ пуҫпулса тӑракан классем ҫине организациленнӗ пролетариат чӑннипе мӗнле пӑхнине ҫак Коммуна событийӗсем уҫҫӑнах кӑтартса пачӗҫ.

Ҫак тавлашура чи ытла тарӑхтараканни вара, шӑпах г. Михайловскийӗн тавлашу меслечӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӑл Интернациональ тактикине кӑмӑлламасть пулсан, Европӑри рабочисем

мĕнле идейăсен ячĕпе организациленеççĕ, çав идейăсемпе килĕшмест пулсассăн,—ан тив вăл, пĕреххутчен, тӳррĕн те уççăн критиклетĕрччĕ вĕсене, тĕллĕрех тактика çинчен, тĕрĕсрех шухăшсем çинчен хăй мĕн шутланине çырса пĕлтертĕрччĕ. Ахальлĕн уççăн, паллăн пĕр сăмах та хирĕç каламаççĕ вĕт, ним ăссăр мăшкăлла сăмахсем кăна унта та, кунта та, тинĕс евĕр сарăлса выртакан халлапсем хушшине, сапаласа çех тăкаççĕ. Епле çакна уйрăмах та Интернациональ идейисемпе тактикине Российăра уççăн хӳтĕлеме май паманнине астуса тăнă çĕртех, пылчăк тесе калас мар-ха? Вырăс марксисчĕсемпе тавлашнă чухне те, г. Михайловскийĕн тавлашу меслечĕсем çавăн йышшиех: вĕсен вăл е ку положенийĕсене, тӳррĕн те паллăн критиклеме май пултăр тесе, тĕрĕс формулăлама пĕртте тăрăшмасăр, вăл ун вырăнне марксистсен аргументацийĕсен таçтан илтнĕ татăк-кĕсĕкĕсене ярса тытма, çийĕнчен вĕсене суйса кăтартма юрататъ. Сăмахран, унăн çак сăмахĕсем çинчен хăвăрах шутласа пăхăр-ха: «Обществăри явленисем истори тĕлĕшĕнчен кирлĕ, законлă пулни çинчен калакан идейăна Маркс хăй шăпах тĕпчесе тупнă тесе шухăшламашкăн, вăл ытлашши ăслă та, ытлашши вĕреннĕ çын пулнă...—тет вăл.—Ана («историллĕ кирлĕлĕх çинчен калакан идея вăл,—Маркс шухăшласа кăларнă е шухăшласа тупнă çĕнĕ япала мар, такçантанпах пĕлсе йышăннă чăнлăх» тенине) аялти картлашкасем çинче* (марксизм пусмин) тăракансем пĕлмеççĕ, е, сахалтан та, ĕмĕрсем тăрăшшĕнче çак чăнлăха тĕпчесе тупса йышăнма мĕн чухлĕ ăс-вăйĕпе хастарлăх хуни çинчен сĕмленкелесе кăна чухлаççĕ».

Паллах, çакăн пек каланисем марксизм çинчен пĕрремĕш хут илтекен çынсене, чăн та, тĕлĕнтерме пултараççех, вĕсен тĕлĕшпе критик хăй лартнă тĕллевĕ патне, çын шухăшне пăсас, хуçкаланса илес те, «çĕнтерес» йышшискерĕ патне (çапла хаклаççĕ, имĕш, г. Михайловский статьисене «Р. Б—во» сотрудникĕсем), çăмăллăнах çитме пултарать. Анчах Маркса кăшт çех пĕлекен кирек хăш çын та, ун йышши меслетсен ултавне, вĕсене хăмпă пек вĕрсе хăпартнине, çийĕнчех курса пĕлет. Маркспа килĕшмесĕр тăма пулать, анчах вăл хăй шухăшĕсене,—унчченхи социалистсен шухăшĕсемпе танлаштарсан «çĕнĕ хыпар» пулнăскерсене,—уççăнах паллă формулăласа пĕлтернине хирĕç пĕртте тавлашма май çук. Шухăшĕсенче акă мĕн çĕнĕ пулнă: унччеихи социалистсем хăйсен шухăшĕсене çирĕплетсе памашкăн, хăйсен вăхăтĕнчи йĕрке чухне массăсене пусмăрласа тăнине кăтарт-

* Çак ăссăр термин тĕлĕшĕпе çакна палăртса астутармалла: г. Михайловский Маркса (пирĕн критикшăн унăн çав е çак положенине тӳррĕнех, уççăнах критиклеме пултарас тĕлĕшĕнчен—ытлашши ăслă та ытлашши вĕреннĕ çынна) ыттисенчен уйăрса тăратать, унтан Маркс хыççăн Энгельса («çав териех творчествăллă мар ăс-тăна»), унтан Каутский йышши чылай хăйне кура шухăшпа пурăнакан çынсене,—вара ытти марксистсене те тăратать. Ну, мĕнле ăслă япалана пĕлтерме пултартăр-ха ĕнтĕ çак классификаци? Критик Маркс вĕрентӳне ăнлантаракан çынсене кăмăлламасть пулсан,—вĕсене Маркс вĕрентнĕ тăрăх тӳрлетме кам кансĕрлет-ха ăна? Пĕртте ун пек тумасть вăл. Ун вырăнне вăл, çивĕч сăмах каласшăн пулнă пулас та, ăссăр сăмах çех персе янă.[6]

са парсассăн, кашниййĕ хăй мĕн ĕçлесе тунă, çавна хăйнех илме май паракан йĕрке мĕн тери лайăхрах пулассине кăтартса парсассăн, çак идеальнăй йĕрке «çын природипе» килĕшсе тăнине, ăс-тăнлă нравственнăй пурăнăç мĕнле пулмаллипе т. ыт. те килĕшсе тăнине кăтартса парсассăн—вăл çителĕклĕ пулать, тесе шухăшланă. Маркс çакăн йышши социализмпа çырлахма май çук, тесе шутланă. Кучухнехи йĕркене характеристика панипе, ăна хакласа, юрăхсăр тесе шутланипе чарăнса тăмасăр, вăл унсăр пуçне çак йĕркенĕн—Европăрипе Европăри мар тĕрлĕ государствăсенче кашниййĕнчех хăйне уйрăм пулнăскерĕн,—пĕр тымарне—капитализмлă обществăллă формаци тымарне шыраса тупса, ăна наука кalанă пек ăнлантарса панă, капитализмлă обществăллă формаци мĕнле законсем тăрăх пурăнса, аталанса пынине объективлăн тĕпчесе пĕлнĕ (çак йĕрке чухне эксплуатаци «кирлине» кăтартса панă). Çакăн пекех вăл, утопиллĕ аслă социалистсемпе вĕсен вак-тĕвек эпигонĕсем, субъективлă социологсем каланипе те, пĕр социализмлă йĕрке анчах çын природипе килĕшÿллĕ тенипе те çырлахма май çук, тесе шутланă. Капитализмлă строя çавăн пекех «объективлă» тĕпчесе сăнаса, вăл çак строй социализмлă строй пулса тăма «кирлине» кăтартса панă. (Кăна вăл мĕнле майпа кăтартса пани патне, тата г. Михайловский ăна хирĕç мĕн калани патне пирĕн тепĕр хут таврăнмалла пулать-ха). Марксистсем час-часах кирлĕлĕх (необходимость) çине кăтартса панин пуçламăшĕ çакăнта ĕнтĕ. Г-н Михайловский ыйтăва епле майпа пăсса кăтартни,—уççăнах курăнать: вăл теорийĕн пĕтĕм содержанине, пĕтĕм тупсăмне кăларса пăрахать те, ĕçе çапла çутатса парать: пĕтĕм теори çак пĕр кирлĕлĕх» сăмахĕнче кăна пулса тăнă пек («практикăри каткăс ĕçсенче пĕр ун çине кăна йăвантарса сăлтавлама юрамасть»), çак теори тĕрĕссине «ĕнентерсе пани»—историллĕ кирлĕлĕх çапла тума хушнă пирки кăна пулнă пек, туса кăтартать. Тепĕр тĕрлĕ каласан, вăл вĕрентÿ содержанийĕ çинчен пĕр сăмах та чĕнмесĕр, унăн ятне çех ярса тытать те, халĕ ĕнтĕ каллех—хăйех Маркс вĕрентĕвĕнчен туса хунă «просто ниме тăман тикĕс çаврашка» çинчен мăшкăласа хуçкаланма тапратать. Эпир, паллах, вăл епле хуçкаланса айкашнине сăнаса тăмăпăр, мĕншĕн тесен вăл япалапа çителĕклех паллашнă ĕнтĕ. Ан тив, г. Буренин кăмăлне тултарса савăнтармашкăн пуçхĕрлех чикеленсе сиккелетĕр (вăл «Новое Время»[7] хаçатра г. Михайловские ахаль мар пуçĕнчен шăлнă), ан тив Маркса пуçне тайса сывлăх суннă хыççăн, ун çине вăрттăн анчăкла вĕркелетĕр: «вăл утопистсемпе идеалистсене хирĕç тавлашни—унсăр та», урăхла каласан, тавлашу сăлтавĕсене марксистсем тепĕр хут каласа кăтартмасăр та, «хăрах енлĕ тавлашу пулнă», текелетĕр. Çакăн йышши хăтланнисене эпир анчăкла вĕрни тенисĕр пуçне урăх ниепле те калаймастпăр, мĕншĕн тесен, çак тавлашăва хирĕç вăл чăнахах та «пĕртен-пĕр» фактлă, паллă, тĕрĕслесе пăхма май пур сăмах та каламан; çавăнпа та эпир, çак тавлашăва вырăссен социализмлă ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе питĕ кирлĕ тесе шутласа, çак

тема тăрăх калаçса пăхма мĕн тери çăмăллăн килĕшетпĕр пулсассăн та,—çакăн йышши анчăкла вĕрни çине эпир, мĕнле тăрăшсан та, ниепле те тавăрса калама пултараймастпăр, хулăмăрсене хĕсме çеç пултаратпăр:

Ай, моська, курнать вăл вăйлă, слон çине те вĕрет пулсан!

Г-н Михайловскийĕн историллĕ кирлĕлĕх çинчен çакăн хыççăн калаçнă сăмахĕсем те интерессĕр мар, мĕншĕн тесен вĕсем «пирĕн паллă социологăн» (çапла хисеплесе чĕнеççĕ г. Михайловские, В. В. г-па танах, пирĕн «культурăллă обществăн либераллă представителĕсем) чăн-чăн идейăлă багажне, пĕр пĕчĕк пайне те пулин, уçса кăтартаççĕ. «Историллĕ кирлĕлĕх идейипе уйрăм çын ĕçĕн пĕлтерĕшĕ хушшинчи хирĕçӳ» çинчен вăл çапла калать: общество деятелĕсем, хăйсене хăйсем деятельсем тесе шутланипе, йăнăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене тĕрĕссипе ирĕксĕрлетсе ĕçлеттереççĕ, вĕсем «пуканесем», «историллĕ кирлĕлĕхĕн шалти законĕсем вĕсене вăрттăн çĕртен унталла та, кунталла та турткаласа тăраççĕ»—çакăн пек вывод тухса тăрать имĕш, историллĕ кирлĕлĕх идейинчен, çавăнпа та ăна вăл: «усăсăр», «сапаланса каякан» идея, тет. Çак мĕнпур чепухана—пуканесене, т. ыт. те—г. Михайловский ăçтан туртса кăларнине вулакансенчен хăшпĕрисем ăнланаймаççĕ, пулас. Ĕç акă мĕнре: ку вăл—детерминизмпа нравственность хушшинчи, историллĕ кирлĕлĕхпе уйрăм çыннăн пĕлтерĕшĕ хушшинчи тавлашу çинчен калакан идея—субъективлă философăн чи юратнă шухăшĕ. Çак тавлашăва—нравственнăçа тата уйрăм çын рольне юрăхлă туса татса парас кăмăлпа, вăл ун çинчен купи-купипе хут çырса пĕтернĕ, ачашла-мещанла юрăхсăр сăмахсем вĕçĕ-хĕррисĕр каласа тултарнă. Чăннипе вара, нимĕнле тавлашу та çук кунта: г. Михайловский ăна, детерминизм унăн çав тери юратнă мещанла моралĕн никĕсне çĕмĕрсе тăкасран (нимĕн сăлтавсăр мар) хăраса ӳкнĕскер, хăй пуçĕнчен кăна шухăшласа кăларнă. Детерминизм идейи, çын хăй тăвас тенине кирлĕлĕх пирки тăвать тесе, çын хуть мĕн тума та ирĕклĕ текен юмаха пĕтерсе хурса, çыннăн ăсне те, совĕçне те, унăн ĕçхĕлне хакласси не те—нимĕн чухлĕ те пĕтермест. Пĕтĕмпех урăхла, ĕç çине детерминизмла пăхсан кăна—хуть мĕнле ĕçе те ирĕклĕ кăмăл çине йăвантарас вырăнне—ĕçе тĕп-тĕрĕс хаклама пулать. Историллĕ кирлĕлĕх идейи те çавăн пекех, уйрăм çын рольне историре пĕртте ансăрлатмасть: пĕтĕм истори, шăпах, деятельсем пулса тăракан уйрăм çынсен ĕçхĕлĕсем пĕрлешнинчен пулса пырать. Уйрăм çыннăн обществăллă ĕçне хакланă чухне акă мĕнле чăнчăн ыйту тухса тăрать: çак ĕç мĕнле условисенче ăнăçлă пулать? çак ĕç—хăйне хирĕç пыракан ĕçсен тинĕсĕнче путса пыракан пĕр пĕччен ĕç пулса юлас çуккине мĕн гарантилесе тăрать? Социал-демократсемпе вырăссен ытти социалисчĕсем тĕрлĕрен майпа татса паракан ыйту та—социализмлă йĕрке туса хурасшăн тăрăшсе ĕçлени питĕ ăнăçлă пултăр тесен, вăл массăсене епле майпа хăй çумне явăçтармалла текен ыйту та—çаках. Уççăнах

паллă, ку ыйтăва татса парасси тӳррĕнех Российйăра общест-вăллă вăйсем епле ушкăнсене пайланса тăни çинчен, вырăссен чăн пурăнăçне палăртса тăракан классен кĕрешĕвĕ çинчен мĕнле шухăшланинчен килет; анчах г. Михайловский кунта та каллех ыйту йĕри-тавра кăна çавăрăнкаласа çӳренĕ, ыйтăва тĕрĕс лартман, ăна апла-и, капла-и татса пама тăрăшса та пăхман. Ыйтăва социал-демократла татса пани, пурте пĕлеççĕ, çак шухăш çинче тытăнса тăрать: вырăссен экономикăллă йĕркисем—буржуаллă общество йĕркисем, вĕсенчен пĕр çулпа кăна—буржуаллă йĕрке тупсăмĕнчен хăйĕнчен ирĕксĕрех тухса тăракан çулпа, пролетариатăн буржуазине хирĕç пыракан класс кĕрешĕвĕ урлă кăна тухма пулать. Уççăнах паллă, тĕплĕн критиклес текен çын, е пирĕн йĕркесем—буржуаллă йĕркесем текен шухăша хирĕç, е çак йĕркесен тупсăмĕ çинчен, вĕсем мĕнле законсем тăрăх аталанса пыни çинчен шухăшланине хирĕç тухса каламалла пулнă,—анчах г. Михайловский кирлĕ ыйтусене тапратасси çинчен шухăшламасть те. Ун вырăнне вăл кирлĕлĕх—ытлашши пĕтĕмĕшле скобка т. ыт. те тесе, нимĕнле ăнлавсăр сăмахсемпе калаçкаласа ирттерсе яма юратать. Ара кирек хăш идея та, г. Михайловский, ун ăшĕнчен, типĕтнĕ пулăран пĕтĕм ăшчиккине кăларса ывăтнă пек, пĕтĕм содержанине кăларса ывăтсассăн, вара юлнă хуппипе кăна аппаланма тытăнсассăн ытлашши пĕтĕмĕшле скобка пулса тăрать вĕт! Çак, кучухнехи чăнахах та тĕплĕ, çивĕч ыйтусене пытарса тăракан хупăсен облаçĕ—г. Михайловскийăн чи юратнă облаçĕ, çавăнпа та вăл, сăмахран, уйрăмах мăнкăмăллăн: «экономикăллă материализм геройсемпе халăх, толпа çинчен тăракан ыйтăва пачах çутатмасăр хăварать, е тĕрĕс мар çутатать» тесе уйрăмах палăртса калать. Куратăр-и ĕнтĕ—вырăссен кучухнехи чăн пурăнăçĕ мĕнле никĕс çинче аталанса, тĕллĕнех мĕнле классем кĕрешнинчен пулса пыни—г. Михайловскийшĕн ытлашши пĕтĕмĕшле ыйту, пулас—çавăнпа вăл ăна тĕкĕнмесĕрех иртсе каять. Ун вырăнне, геройпа толпа хушшинчи отношенисем мĕнле отношенисем пулни,—ку вăл мĕнле толпа: рабочисен, хресченсен, фабрикантсен, помещиксен пулнă-и, пурĕ-пĕрех, — ку йышши ыйту ăна ытларах та интереслентерет вара. Тен, кусем „интереслă» ыйтусем пулĕ, анчах материалистсене, вĕсем ĕççыннисен класне ирĕке кăларассипе тӳррĕнех çыхăнса тăракан ыйтусене татса парас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйсене хурса ĕçленĕшĕн ӳпкелени,—мещансен наукине юратнине кăна пĕлтерет, урăх нимĕне те мар. Хăйĕн материализма «критикленине» (?) вĕçлес майпа, г. Михайловский фактсене тата тепĕр хут суя çутатса кăтартма та, вĕсене тепĕр хут юри арпаштарса тăратма та тăрăшать. Энгельсăн: должноçĕ тăрăх экономист пулнă çынсем (присяжнăй экономистсем) «Капитал» çинчен юри нимĕн чĕнмесĕр пурăннă, тенĕ шухăшĕ—тĕрĕс-ши, тĕрĕс мар-ши?—тесе иккĕленсе тăнă хыççăн (хăйĕн шухăшне çирĕплетсе пама вăл кунта çав тери кулăшла шухăш калать: Германире университетсем нумай! тет) г-н Михайловский çапла çырать: «Маркс пĕртте вулакансен шăпах çак йышне (рабочисене) асра

тытман, ăна-кăна каласса наука çыннисенчен те кĕтсе тăнă», тет. Пĕртте тĕрĕс мар: наукăн буржуаллă представителĕсенчен наука тăрăх критиклессине тата чăнлăха мĕн тери сахал кĕтме май пуррине Маркс питĕ лайăх пĕлсе тană, çавăнпа та вăл «Капиталăн» 2-мĕш изданийĕн кайран калана сăмахĕнче хăй шухăшне ку тĕлĕшпе татăклăнах паллă каласа панă. Вăл унта çапла калать: «Нимĕç рабочи класĕн йышлă сийĕ «Капитала» ăнланса йышăнни—мана хам ĕçшĕн панă чи лайăх награда. Г. Мейер, экономика ыйтăвĕсем çине буржуалла пăхакан çын, Франципе Пруссия хушшинчи вăрçă вăхăтĕнче тухнă пĕр брошюрăра, питĕ тĕрĕс шухăш каласа кăтартнă: теориллĕ шухăшлас пысăк пултарулăх (der grosse theoretische Sinn), нимĕçсен ăруран-ăрăва пыракан пуянлăхĕ тесе шутланаканскер, вĕреннĕ текен классен йăлтах пĕтнĕ, анчах ун вырăнне вĕсен рабочи класĕнче çĕнĕрен чĕрĕлсе пырать».

Фактсене каллех материализм тĕлĕшĕпе тата шăлт малтанхи майпах арпаштарса пĕтернĕ. «Теорине (материализмăнне) нихăçан та наука калана пек никĕс хывса тĕрĕслесе çирĕплетмен». Ку вăл—тезисĕ.—Ĕнентерсе пани çапла: «Энгельсăн, Каутскийĕн тата хăшпĕр ыттисен те çавах (Блосăн хисеплĕ ĕçĕнчи пекех), истори çинчен калакан уйрăм страницисем экономикăллă материализм ятне илмесен те пултарĕччĕç, мĕншĕн тесен (астăвăр: «мĕншĕн тесен!») чăннипе (sic!) вĕсене, çав аккордра экономикăллă хĕлĕх ытларах янтрать пулин те, пĕтĕм обществăллă пурăнăçа асра тытса çырнă». Вывочĕ...: «экономикăллă материализм наукăра хăйне тӳрре кăлараймарĕ».

Пĕлетпĕр ĕнтĕ ăна! Теорине никĕслесе çирĕплетмен тесе кăтартасшăн пулса, г. Михайловский ăна малтан обществăллă пĕтĕм пурăнăçа асра тытмалла мар тесе калакан айванла шухăш хушса пăсса хурать,—анчах тĕрĕссипе йăлтах урăхла: материалистсем (марксистсем) вĕсем—обществăллă пурăнăçăн пĕр экономикăллă енне кăна мар, пур енĕсене те тĕпчесе сăнама кирлĕ, тесе калана чи малтанхи социалистсем пулнă*,—унтан вара:

*) Ку вăл „Капиталра“ тата малтанхи социалистсемпе танлаштарса пăхсан социал-демократсен тактикинче уççăнах палăрнă. Экономикăллă енпе кăна чарăнса тăмалла мар тесе ыйтнине Маркс тӳррĕнех каласа кăтартнă. 1843 çулта кăларма йышăннă журнал программине палăртнă чухне, Маркс Руге патне янă çырура çапла çырнă: «Социализмлă принцип пĕтĕмĕшпе каллех ĕçĕн пĕр енĕ кăна пулса тăрать.. Пирĕн тепĕр енĕ çине те, этемĕн теориллĕ пурăнăçĕ çине те çавăн пекех асăрхаса пăхмалла, çавăнпа тĕне те, наукăна та ыт. те критиклемелле... Тĕн вăл—этемлĕхĕн теориллĕ çапăçăвĕсен оглавленийĕ пулса тăнă пекех, политикăллă государство—этемлĕхĕн практикăллă çапăçăвĕсен оглавленийĕ пулса тăрать. Çапла ĕнтĕ, политикăллă государство пур социальнăй çапăçусене те, потребноçсене те, интерессене те хăй формин чикки таран, sub specie rei publicae (политикăллă ăнлану енчен пăхсан)—уççăн палăртса тăрать. Çавăнпа та, чи специальнăй политикăллă ыйтăва—сăмахран, сословилле системăпа представительнăй система хушшинчи уйрăмлăха критиклени—пĕртте hauteur des principes (принцип çӳллĕшĕнчен *Ред.)* шуса аннине пĕлтермест, мĕншĕн тесен ку ыйту—çын пуçпулса тăнипе уйрăм харпăрлăх пуçпулса тăни хушшинчи уйрăмлăх çинчен «политика чĕлхипе» каласа пĕлтерет. Апла пулсан, критик çак политикăллă ыйтусене (харсăр социалиста нимĕне те тăман пек туйăнаканскерсене) тапратма пултарать кăна мар, тапратма тивĕç те».

«чӑннипе» материалистсем обществӑллӑ пӗтӗм пурӑнӑҫа экономикӑпа «лайӑх» ӑнлантарса панӑ тесе йышӑнать (ку факт, паллах, автора ҫӗмӗрсех пӑрахать пулас)—юлашкинчен вара, ҫапла ӗнтӗ, материализм хӑйне тӳрре кӑлараймарӗ текен вывод тӑвать. Ун вырӑнне сирӗн фактсене юри арпаштарса пӗтерни вара, г. Михайловский, хӑйне ҫав тери лайӑх тӳрре кӑларчӗ! Ак ҫаксем ӗнтӗ, г. Михайловскийӗн материализма «тӗрӗс мара кӑларма» тӑрӑшса каланӑ мӗнпур шухӑшӗсем. Тепӗр хут калатӑп, нимӗнле критика та ҫук кунта, мӑнкӑмӑлланса пуш-пушӑ сӳпӗлтетни ҫеҫ. Хуть те камран та: производствӑллӑ отношенисем ытти отношенисен никӗсӗнче выртни ҫинчен калакан шухӑша хирӗҫ г. Михайловский мӗн каларӗ-ха? Маркс, материализмла методпа усӑ курса, обществӑллӑ формаци ӑнланӑвне тата ҫак формацисем аталанни естественнӑ-историллӗ процесс пулни ҫинчен калакан ӑнланӑва тӗрӗс тӗпчесе тупнине—вӑл мӗнпе тӗрӗс мара кӑларма тӑрӑшрӗ-ха? хӑй асӑннӑ писательсем те пулин историри тӗрлӗ ыйтусене ӑнлантарса панисем тӗрӗс маррине епле кӑтартса пама тӑрӑшрӗ-ха?—тесе ыйтас пулсассӑн, пурте: нимӗн те каламарӗ, нимӗнпе те тӗрӗс мара кӑлармарӗ, нимӗн тӗрӗс маррине те кӑтартса параймарӗ,—тесе ответлемелле пулаҫҫӗ. Ҫӗҫӗн тупсӑмне сӑмахсемпе витсе хума тӑрӑшса, вӑл йӗри-тавра кӑна ҫавӑрӑнкаласа ҫӳрерӗ те, ҫула май тӗрлӗрен юрӑхсӑр халлапсем турта-турта кӑларчӗ.

Ҫакӑн йышши критик «Р. Б-вӑн» 2-мӗш №-че каллех марксизма тӗрӗс мара кӑларма тапаҫланать пулсассӑн, унран мӗн те пулин кирлӗ япала кӗтме йывӑр. Пӗтӗм уйрӑмлӑхӗ те ҫакӑ: фактсене ӗнтӗ хӑй меслечӗпе арпаштарма пӗлесси начарланса ҫитнӗ, вара вӑл ҫын меслечӗсемпе усӑ курма тытӑнать.

Малтанлӑха вӑл обществӑллӑ пурӑнӑҫ «кӑткӑсси» ҫинчен халлап ярса тӑрать: акӑ, гальванизма илсессӗн те хуть, вӑл экономикӑллӑ материализмпа та ҫыхӑнса тӑрать, имӗш, мӗншӗн тесен, Гальвани опычӗсем Гегеле те «тӗлӗнтернӗ». Тӗлӗнмелле ҫивӗч ӑслӑн каланӑ! Ҫакӑн пекех ӑнаҫлӑн г. Михайловские хӑйне те Китай императорӗпе ҫыхӑнтарма пулать вӗт! Хӑшпӗр ҫынсене юрӑхсӑр калани савӑнтарнинчен пуҫне—урӑх мӗн пулма пултартӑр-ха кунтан. Экономикӑллӑ материализм вӗрентӗвӗ икӗ тӗрек ҫинче: производствӑпа улӑшу форми пур япалана та ӑнлантарса пама пултараҫҫӗ тенине шыраса тупни ҫинче тата «диалектикӑллӑ процесӑн ним иккӗленме ҫук тӗрӗслӗхӗ» ҫинче тытӑнса тӑрать пулин те, япаласем историре мӗнле аталанса пынин тупсӑмне, никам та нихҫан та ӑнлантарса парайманскерне, вӑл та ӑнлантарса парайман,—тет малалла г. Михайловский.

Ҫапла ӗнтӗ, материалистсем диалектикӑллӑ процесӑн «ним иккӗленме ҫук тӗрӗслӗхӗ» ҫине таянса тӑраҫҫӗ, урӑхла каласан, хӑйсен социологиллӗ теорийӗсен никӗсне Гегель триадисене? хураҫҫӗ. Эпир хамӑр умра марксизма, яланхи пекех, Гегель диалектикишӗн айӑпланине куратпӑр; ӑна, вӑл айӑпа, Маркса критиклекен буржуаллӑ критиксем ӗнтӗ чылай тусӑнтарса ҫитернӗ пек туйӑнатчӗ. Ку господасем, вӗрентӗве хирӗҫ мӗн те пулин чӑннипе калама пултараймасӑр, Марксӑн хӑй шухӑшӗ-

сене каласа кăтартас меслечĕсенчен ярса тытнă пулнă, теори ăçтан çуралса тухни çине тапăннă, çакăнпа вара теорин тупсăмне пĕтерме ĕмĕтленнĕ пулнă. Г-н Михайловский те çак майсемпе усă курма вăтанмасть. Сăлтавĕ вырăнне уншăн Энгельсăн Дюринга хирĕç çырнă сочиненийĕнчи пĕр сыпăкĕ пулса тăнă. Унта Энгельс, Маркс диалектики çине тапăнакан Дюринга хирĕç, çапла çырать: Маркс нихăçан та хуть мĕне те пулин Гегель триадисемпе «çирĕплетсе кăтартса парасси» çинчен шухăшламан та, Маркс чăн пурăнăçри процеса кăна тĕпчесе вĕреннĕ, вăл теорийĕн пĕртен-пĕр виçи шутне—теори пурăнăçпа тĕрĕс пулнине хурса шутланă, тет. Çавăн пек вара хăшпĕр чухне, мĕнле те пулин обществăллă явлени Гегель схемипе шайлăн: положение—отрицание—отрицанийĕн отрицанийĕ тăрăх аталанса пыни курăннă пулсан вара, кунтан ним тĕлĕнмелли те çук, мĕншĕн тесен çутçанталăкра вăл сайра хутра кăна тĕл пулакан япала мар, тет. Вара Энгельс естественнă-историллĕ явленисенчен (вăрлăх шăтса ӳснине) тата обществăллă пурăнăçран тĕслĕхсем илсе кăтартма тытăнать—сăмахран, çакăн йышшине: малтан авалхи коммунизм пулнă, унтан—уйрăм харпăрлăх, унтан вара—ĕçе капитализмла пĕрлештерни пулнă, тет; е малтан—примитивлă материализм, унтан—идеализм, юлашкинчен вара—наукăллă материализм пулнă, тет т. ыт. те. Пуриншĕн те паллă, Энгельс ăнлантарнин тĕп шухăшĕ çакă пулса тăрать: материалистсен задачи историри чăн пулнă процеса тĕп-тĕрĕс сăнласа парасси, диалектика çине тĕллесе кăтартни, триада тĕрĕссине çирĕплетсе паракан тĕслĕхсем тупса кăтартни—вăл гегельянство юлашкисем, унăн шухăшсене кăтартас майсен юлашкийĕсем кăна; наукăллă социализм гегельянствăран çуралса тухнă. Чăн та вара: мĕне те пулин триадăсемпе «ĕнентерсе парасси»—ăссăр япала, ун пек тăвассине никам та шухăша та илмен тесе пĕрре татăклăнах калапă хыççăн «диалектикăллă» процесăн тĕслĕхĕсем мĕне пĕлтерме пултарччăр-ха ĕнтĕ? Ку вăл—вĕрентӳ ăçтан аталанса тухнине кăтартса тăнинчен пуçне урăх нимĕне те пĕлтерменни уççăнах паллă мар-им вара. Г-н Михайловский хăй те сисет ăна, мĕншĕн тесен, вăл хăех: теори ăçтан аталанса тухнă пирки айăплама çук ăна, тет. Анчах Энгельс сăмахĕсем—теори ăçтан аталанса тухнине пĕлтернисĕр пуçне мĕне те пулин урăххине пĕлтерет пулĕ тесен—материалистсем историри пĕр „ыйтăва“ та пулин тивĕçлĕ фактсем тăрăх мар, триадăсемпе усă курса татса панине, кăтартса памалла пулни, курăнать. Çакна кăтартса пама тăрăшнă-ши г. Михайловский? Пĕртте тăрăшман. Пачах урăхла, унăн хăйĕннех, „Маркс диалектикăн пушă схемине фактсен содержанийĕпе çав тери тăрăшса тултарнă», «çавăнпа та ку схемăна ĕнтĕ çак содержани çинчен, чейник çинчен хуппине илсе пăрахнă пекех, нимĕнне улăштармасăрах сĕвсе илме пулать» тесе йышăнмалла пулнă (г. Михайловский: вăл [пуласлăх пирки—апла мар, тени çинчен эпир каярах калăпăр-ха тата). Ку çапла пулсассăн, г. Михайловскийĕн мĕн пирки çак нимĕне те улăштарайман хупăпа çав тери тăрăшса айкашса тăмалла пулнă-ха? Мĕне

кирлӗ пулнӑ ӑна: материалистсем—диалектикӑллӑ процесӑн ним иккӗленмелле мар тӗрӗслӗхӗ ҫине «таянса тӑраҫҫӗ» тесе калама? Мӗн тума унӑн ҫак хупӑпа ҫапӑҫса: эпӗ наукӑллӑ социализм тӗрекӗсенчен пӗр «тӗрекне» хирӗҫ кӗрешетӗп тесе каламалла пулнӑ-ха, тӗрӗссипе вара ку—уҫҫӑнах курӑнакан суя вӗт?

Г-н Михайловский триада тӗслӗхӗсене епле «критикленине» эпӗ сӑнаса тӑрас ҫукки хӑйне-хӑех паллӑ, мӗншӗн тесен, тепӗр хут калатӑп, вӑл наукӑллӑ материализмпа та, вырӑс марксизмӗпе те пӗртте ҫыхӑнса тӑмасть. Анчах ҫак ыйту интереслӑ: г. Михайловскийӗн марксистсем диалектика ҫине мӗнле пӑхни ҫинчен ҫав тери суйса кӑтартма мӗнле сӑлтавсем пулнӑ-ха ҫапах та? Сӑлтавӗсем иккӗ пулнӑ: пӗрремӗшӗнчен, г. Михайловский сассине илтессе илтнӗ те, вӑл ӑҫтан тухнине пӗлеймен; иккӗмӗшӗнчен, г. Михайловский тата тепӗр йӑнӑш тунӑ (е, тӗрӗсрех, Дюрингран вӑрласа илнӗ).

Ad 1)* Марксистла литературӑна вуланӑ чухне, г. Михайловский обществӑллӑ наукӑри «диалектикӑллӑ метод» ҫине, унтан каллех обществӑллӑ ыйтусем тӗлӗшӗпе «диалектикӑллӑ шухӑшлани» ҫине, «шавах ҫавсем ҫинчен калаҫнисем» т. ыт. ҫ. п. ҫине яланах пыра-пыра тӑрӑннӑ. Хӑйӗн тӳрӗ кӑмӑлӗпе (апла пулсан кӑна—юрӗччӗ-ха), вӑл, ку метод—социологири пур ыйтусене те Гегель триади законӗсем тӑрӑх татса пани пулать тесе шухӑшланӑ. Ӗҫе кӑшт асӑрхарах сӑнаса пӑхнӑ пулсассӑн та, вӑл, ҫакӑн пек шухӑш айваннине пӗлмесӗр юлма пултарайман пулӗччӗ. Маркспа Энгельс диалектикӑллӑ метод тесе—метафизикӑллине хирӗҫ—социологири наукӑллӑ метода каланӑ, урӑх нимӗне те мар; ку метод вара общество ҫине—чӗп-чӗрӗ, пӗрех май аталанса пыракан организм ҫине пӑхнӑ пек пӑхма хушать (мӗнле те пулин япала хӑйӗн обществӑллӑ уйрӑм элеменчӗсене механикӑллӑ ҫыхса тӑнӑ пек, ҫавӑнпа та вӗсене мӗнле тӑвас тенӗ, ҫапла вырнаҫтарса тӑратма май паракан япала ҫине пӑхнӑ пек пӑхма хушмасть), ӑна тӗпчесе пӗлес тесен, ҫак обществӑллӑ формацие тӑвакан производствӑллӑ отношенисене объективлӑ анализ тумалла, вӑл епле пурӑнса, аталанса пынине кӑтартакан законсене тӗпчемелле. Диалектикӑллӑ метод метафизикӑллӑ метод тӗлӗшӗпе мӗнле вырӑнта тӑнине (метафизикӑллӑ метод шутне социологири субъективлӑ метод та кӗрет, паллах) эпир каярахпа г. Михайловскийӗн хӑйӗн шухӑшӗсен тӗслӗхӗсене илсе ӑнлантарса пама тӑрӑшӑпӑр. Халӗ ҫакна кӑна палӑртса хӑварар: диалектикӑллӑ метод мӗнле метод пулса тӑни ҫинчен Энгельс (Дюринга хирӗҫ тавлашса ҫырнӑ кӗнекере. Вырӑсла: «Развитие социализма от утопии к науке» ятлӑ кӗнекере), е Маркс («Капиталра» тата унӑн 2-мӗш изданийӗн «хыҫалта каланӑ сӑмахӗнче» тӗрлӗрен асӑрхаттарса каланисенче; тата «Нищета философии» ятлӑ кӗнекере) ҫырса пӗлтернисене вуланӑ ҫын кирек кам та, Гегель триадисем ҫинчен кунта сӑмах та ҫуккине куратех; пӗтӗм ӗҫ кунта—социальнӑй эволюци процесӗ ҫине, обществӑллӑ-эконо-

*—1-мӗш пункт патне. *Ред.*

микăллă формаци аталанăвĕн естественнă—историллĕ процесĕ ҫине пăхнă пек пăхассинче пулса тăрать. Ҫак сăмахсем тĕрĕссине кăтартса парас тесе, эпĕ диалектикăллă метод ҫинчен «Вестник Европы» [8] журналăн 1872 ҫулхи 5-мĕш №-рĕнче ҫырса кăтартнине (унти заметка: «Точка зрения политико-экономической критики К. Маркса» ятлă),[9] *in extenso** ҫырса илсе парам, ăна Маркс «Капиталăн» 2-мĕш изданийĕн «кайран каланă сăмахĕнче» цитата туса илсе кăтартса парать. Унта Маркс ҫапла калать: эпĕ «Капитала» мĕнле методпа ҫырнине ҫынсем начар ăнлансаччĕҫ, тет. «Нимĕҫ рецензенчĕсем, паллах, Гегель софистики ҫинчен кăшкăрашсаччĕҫ». Ҫавăнпа та вара, хăйĕн методне ăнланмалларах тăвас тесе, Маркс ҫак метод ҫинчен асăннă заметкăра ҫырнине илсе кăтартать. „Маркс-шăн чи кирли пĕрре ҫех пулнă—тесе ҫырнă унта:—хăй тĕпчесе сăнакан явленисен законне тупасси, шăпах ҫавă; ҫитменнине тата ăна ҫак явленисем мĕнле закон тăрăх улшăнса, аталанса пыни, вĕсем пĕр формăран тепĕр формăна, пĕр йышши обществăллă отношенисенчен тепĕр йышшисене куҫса пыни уйрăмах та кирлĕ. Ҫавăнпа та Маркс пĕр япалашăн ҫех: хăйĕн тĕпчев ĕҫĕн никĕсĕнче, пуҫламăшĕнче выртакан фактсене май пур таранах чи туллин сăнаса тухса, вĕсене наука калавă тăрăх тĕп-тĕрĕс тĕпчесе пĕлсе, обществăллă отношенисен ҫак йĕркисем кирлĕ пулнине кăтартса парасшăн тăрăшать. Кăна тăвас тесен, вăл ҫак йĕрке кирлине кăтартса панипе пĕрлех тата, унтан пурпĕрех ҫуралса тухмалли тепĕр йĕрке те—вăл ҫураласса ĕненеҫҫĕ-и ҫынсем, ĕненмеҫҫĕ-и, пĕлсе тăраҫҫĕ-и ăна, пĕлмеҫҫĕ-и—пурпĕрех кирлĕ пулса тăнине те кăтартса парсассăн, вăл хăй тĕллевĕ патне пĕтĕмпех ҫитнĕ пулать вара. Обществăллă движени ҫине Маркс, естественнă-историллĕ процесс ҫине пăхнă пек пăхать, вăл процесс ҫынсен ирĕкĕнчен, ăс-тăнĕнчен, кăмăлĕнчен килекен законсене пăхăнса тăмасть кăна мар, пачах урăхла, ку законсем хăйсем ҫынсен ирĕкне, ăс-тăнне, кăмăлĕсене, вĕсем мĕнле пулассине палăртса тăраҫҫĕ, тет. (Ку—гг. субъективистсем астуса тăмалли сăмахсем: вĕсем вĕт социальнăй эволюцие, ҫын хăй ăс-тăнĕпе хăйне валли „тĕллевсем“ лартнă пирки, хăйĕн паллă идеалĕсем хыҫҫăн пынă пирки, естественнă-историллĕ эволюцирен уйăрса пăрахаҫҫĕ). Культура историйĕнче ăс-тăн элеменчĕ ҫав тери пăхăнса тăракан вырăн йышăнса тăрать пулсассăн, вара хăйне хăех паллă: ҫак культурăна хăйне тивĕҫ критикă та ăс-тăнăн мĕнле те пулин форми ҫине е мĕнле те пулин результачĕ ҫине сахал таянса тăма пултарать. Тепĕр тĕрлĕ каласан, уншăн ҫул пуҫламăшĕ вырăнĕнче ниепле майпа та идея пулма пултараймасть, тулашри, объективлă явлени кăна пулма пултарать. Критиклесси пĕр-пĕр факта идейăпа мар, тепĕр фактпа танлаштарса, шайлаштарса пăхнинче пулмалла; уншăн фактсене иккĕшне те епле пулин те тĕрĕсрех тĕпчесе пĕлни, вĕсем иккĕшĕ те, пĕр-пĕрин тĕлĕшĕпе, аталанăвăн тĕрлĕ саманчĕсем пулса тăни кăна паха; ҫакăнпа пĕрлех тата, уйрăмах

*—Тĕп алҫырăвĕнче. Ред.

пĕр-пĕр тăрăмсене пĕтĕм йĕркипех, вĕсем пĕрин хыççăн тепри улшăнса пынине, аталанăвăн тĕрлĕ пусăмĕсем пĕр-пĕринпе епле çыхăнса тăнине, çавăн пекех тĕп-тĕрĕс тĕпчесе пĕлни кирлĕ. Маркс шăпах экономикăллă пурăнăç законĕсем иртнĕ пурăнăçшăн та, хальхишĕн те пĕр пек текен идейăна йышăнмасть. Пачах урăхла, кашни историллĕ тапхăрăн хăйне уйрăм законĕсем пур. Экономикăллă пурăнăç вăл—биологийĕн ытти облаçĕсенчи аталану историйĕпе пĕр майлă явлени. Халичченхи экономистсем экономика законĕсене физикăпа хими законĕсемпе танлаштарнă, вĕсен природине ăнланман. Тата тарăнрах тĕпчесе пăхсан, социальнăй организмсем те, чĕрчунсемпе ӳсентăран организмĕсем пекех, пĕр-пĕринчен çав тери пысăккăн уйăрăлса тăни курăнать. Маркс, капитализмлă экономикăллă организацие çак енчен пăхса тĕпчесе пĕлес задача лартса, çакăнпа пĕрлех тата экономикăллă пурăнăçа тĕрĕс тĕпчесе пĕлес тесен кирек мĕнле ĕç те хăйĕн умне лартма тивĕç тĕллеве, наука калана тăрăх тĕп-тĕрĕс формулăласа парать. Çавăн пек тĕпчесе сăнанă ĕçĕн наукăллă пĕлтерĕшĕ çакă пулса тăрать: ку ĕç çак обществăллă организм мĕнле хăйне уйрăм (историллĕ) законсем тăрăх çуралса тухнине, пурăннине, аталаннине, вилнине те, кайран вара ун хыççăн мĕнле урăхла, аслăрах организм пулса тăнине тĕпчесе пĕлет». Акă диалектикăллă метод мĕнле метод иккенне çырса пĕлтерни; Маркс ăна журналсемпе хаçатсенче «Капитал» çинчен çырнă тем териех нумай заметкăсем хушшинче шыраса тупнă та, вăл, хăй калана тăрăх, метода шăлтах тĕрĕс характеристика панă пирки, ăна нимĕçле куçарнă. Ыйтас килет—триадăсем çинчен, трихотомисем çинчен, диалектикăллă (методăн) процесăн ним иккĕленмелли çук тĕрĕслĕхĕ çинчен, тата г. Михайловские çав тери паттăрла хастар çапăçтарнă ытти чепуха çинчен те, пĕр сăмахпа та пулин асăннă-и кунта? Маркс, çапла çырнă хыççăн, тӳрех калать: манăн метод Гегель методне „пачах хире-хирĕçле» тăрать, тет. Гегель вĕрентнĕ тăрăх, идея триадăсен диалектикăллă законĕсем тăрăх аталанса пыни—чăн-пурри (действительность) мĕнле аталанассине палăртса тăрать. Çакăн пек чухне кăна, паллах, триадăсем мĕне пĕлтерни çинчен тата диалектикăллă процесăн ним иккĕленмелли çук тĕрĕслĕхĕ çинчен каласса тăма пулать. Ман шухăшпа—пачах урăхла: «идеальное вăл—материальное мĕнлине кăтартса тăраканни кăна»,—тет Маркс. Çапла вара пĕтĕм ĕç—«хальхине тата вăл аталанма кирлине позитивлă ăнланассинче» пулса тăрать: триадăсем вал ли хупăлчипе хуппи ролĕнчен пуçне урăх нимĕнле вырăн та тăрса юлмасть («эпĕ Гегель чĕлхипе вĕçкĕнлентĕм»—тет Маркс çав хыçалта калана сăмахĕнчех), унпа пĕр филистерсем кăна интересленме пултараççĕ. Мĕнле шутламалла пулать-ха ĕнтĕ пирĕн наукăллă материализмăн «тĕрекĕсенчен» пĕрне, урăхла каласан, диалектикăна критиклесшĕн пулса, тем те пĕр çинчен те, шапасемпе Наполеон çинчен те калаçма тапратнă, анчах та çак ыйтусене кăна тĕкĕнмесĕр хăварнă çын çинчен: мĕн-ха вăл диалектикă? обществă аталанăвĕ чăнахах естественнă-историллĕ процесс-и? обществăллă-экономикăллă форма-

цисене хăйне уйрăм социальнăй организмсем пулнă пек, материалистла, ăнланни тĕрĕс-и, çук-и? çак формацисене объективлă анализ тăвас меслетсем тĕрĕс-и, çук-и? чăнахах та обществăллă идейăсем хăйсем обществăллă аталанăва палăртса тăмаççĕ-и, обществăллă аталану вĕсене хăйсене палăртса тăрать-и? т. ыт. те. Çавăн пек чухне ĕçе ăнланман тесе кăна шухăшлама пулать-и?

Ad 2)*. Диалектикăна çапла «критикленĕ» хыççăн, г. Михайловский Гегель триадисемпе «усă курса», ĕнентерес меслетсене Маркс сăмахĕсем çумне хушса хурать те, паллах, вĕсене хирĕç çĕнтерӳллĕн кĕрешет. «Пуласлăх тĕлĕшĕпе обществăн имманентлă законĕсем пĕтĕмĕшпех диалактикăллă пулса пыраççĕ», тет вăл. (Çӳлерех асăннă уйрăмлăх çакă пулать те ĕнтĕ). Маркс, капитализм аталанса пынă законсем тăрăх экспроприаторсене пурĕ-пĕрех экспроприацилемелле пулать, тесе калани—«йăлтах» диалектикăллă. Марксăн çĕрпе капитал общинăллă пуласси çинчен калакан «идеалĕ»—«пурĕ-пĕрех, çав-çавах пуласси тĕлĕшĕнчен ăнланас пулсан, Гегелĕн 3-сыпăклă сăнчăрĕ вĕçĕнче кăна тытăнса тăрать».

Ку сăлтава «пĕтĕмĕшпех» Дюрингран «илнĕ», Дюринг ăна хăйĕн «Kritische Geschichte der Nationaloekonomie und des Sozialismus» ятлă кĕнекинче (3-te Aufl., 1879. S. 486—487**) кăтартса панă. Апла пулсан та г. Михайловский Дюринг ятне пĕр сăмахпа та асăнмасть. Тĕн, сăмахран каласан, Маркса çав тери суйса кăтартма вăл хăй ăссĕн шухăшласа кăларнă пулĕ?

Дюринга питĕ лайăх ответ Энгельс панă, вăл Дюринг критикленине те çырса кăтартнă пирки, эпир çак Энгельс панă ответпах çырлахăпăр. Ку ответ г. Михайловские те пĕтĕмĕшпех пырса тивнине вулакан хăйех курĕ.***

«Çак историллĕ очерк (Англире капитал пуçланса пухăнма тытăнни) Маркс кĕнекинчи ытти вырăнсемпе танлаштарсан, татах та лайăххи,—анчах вăл, наукăран пуçне тата диалектикăн йывăç урисем çине те таянса тăман пулсан, пушшех лайăх пулнă пулĕччĕ,—тет Дюринг.—Гегелĕн отрицанийĕн отрицанийĕ кунта—ытти лайăхрах та тата уççăнрах сăлтавсем çук пирки—эпи-карчăк ĕçне туса тăрать, вăл тăрăшнипе ĕнтĕ пуласлăх паянхинчен тухса тăрать, 16-мĕш ĕмĕртен пуçласа, индивидуальнăй харпăрлăха çӳлерех кăтартнă майла пĕтерсе пыни пĕрремĕш отрицани пулса тăрать. Ун хыççăн вара тепĕр отрицани пулать, вăл—отрицанийĕн отрицанийĕ тата çавăнпа пĕрлех «индивидуальнăй харпăрлăха» çĕнĕрен кăларса тăратни пулать, анчах ку—çĕрпе ĕçхатĕрĕсем пĕрлешнĕ никĕс çинче тытăнса тăракан аслăрах формăллă харпăрлăх. Çак çĕнĕ «индивидуальнăй харпăрлăха» г-н Маркс çав вăхăтрах тата «общинăллă харпăрлăх» тесе калать пулсан вара, çакă вара Гегелĕн хирĕçлĕхе пĕтернĕ аслă

* —2-мĕш пункт патне. *Ред.*

** «Критическая история политической экономии и социализма» (3-е изд. 1879. Стр. 486—487). *Ред.*

*** Малалла çырса панă цитатăсене В. И. Ленин хăй «Анти-Дюрингран», 1886 çулхи, нимĕçле 2-мĕш изданинчен илсе куçарнă (уп чухне вăл кĕнекене вырăсла куçарман пулнă). *Ред.*

пĕрлĕхĕ пулать те ĕнтĕ (aufgehoben—Гегелĕн специальнăй терминĕ), урăхла каласан, Гегелĕн сăмах вăййи тăрăх, ку аслă пĕрлхĕре хирĕçлĕх мĕн таран сыхланса юлни, ăна çав таранах пĕтерни пулать.

... Çапла вара, экспроприаторсене экспроприацилени вăл—историллĕ пурăнăçăн, хăйĕн тулашĕнчи материальнăй условийĕсенче хăйне хăех пулакан ĕç результачĕ пекех пулса тăрать... Çĕрпе капитала общинăпа тытса тăни кирлĕ пулнине—Гегелĕн отрицанийĕн отрицанийĕ йышши фокусĕсене ĕненнĕ пирки ăнланса илекен пĕр ăслă çын та пулин пур-ши. Маркс шухăшĕсем тĕтре пек пăсăкки, тепĕр тесен, Гегель диалектики йышши наукăллă материалтан мĕн тума май пуррине пĕлекен çынна, е—тĕрĕсрех каласан—унран епле тăнсăр япаласем пулса тăрассине пĕлекен çынна, пĕртте тĕлĕнтерес çук. Çак чее япаласене пĕлмен çынна вара тӳрех калам: пĕрремĕш отрицанийĕ Гегелĕн, катехизисран илнĕ, çылăха кĕнине пĕлтерекен ăнлану пекки пулать, иккĕмĕшĕ вара—çылăхран çăлăнма май паракан аслă пĕрлĕх пекки пулать. Фактсен логикине, паллах, тĕн облаçĕнчен йышăнса илнĕ çакăн йышши аналогисен фокусĕсемпе пĕртте никĕслеме юрамасть... Г-н Маркс индивидуальнăй харпăрлăх çинчен тата çавăнпа пĕрлех общинăллă харпăрлăх çинчен хăйĕн пăтранчăк идейипе килĕшсе лăпланать те, çак диалектикăллă тарăн шухăшлă юмахăн йывăр тупсăмне хăйĕн вĕрентĕвĕ хыççăн пыракан çынсене хăйсенех шухăшласа пĕлме пăрахса хаварать». Çапла калать г. Дюринг.

Энгельс вара çапла заключени тăвать:

«Çапла ĕнтĕ, Маркс, социальнăй революци пулма кирлине, çĕре тата производствăн ĕçлесе тунă хатĕрĕсене община харпăрлăхĕ туса хума кирлине, Гегелĕн отрицанийĕн отрицанийĕпе усă курмасăр кăтартса пама пултарайман, пулать; вăл, хăйĕн социализмла теорине тĕнрен йышăнса илнĕ йышши аналоги фокусĕсемпе никĕслесе — пулас обществăра харпăрлăх, пĕр вăхăтрах индивидуальнăй та, общинăлли те, Гегелĕн хирĕçлĕхе пĕтернĕ аслă пĕрлĕхĕ вырăнĕнче пулĕ текен вывод патне пырса тăрать. (Дюрингăн шухăшĕсене çакнашкал формулăлани г-н Михайловскийшĕн те пĕтĕмпех юрăхли унăн: «К. Маркс г. Ю. Жуковскийĕн сучĕ умĕнче» ятлă статьинчи çак вырăнĕ те кăтартса парать. Г-н Михайловский унта г. Жуковскийĕн, Маркс вăл—уйрăм харпăрлăха хӳтлекен çын, текен шухăшне хирĕç, Маркс çак схемине илсе кăтартать те, ăна çапла ăнлантарса парать: «Маркс хăйĕн схеми ăшне Гегель диалектикин пуриншĕн те паллă икĕ фокусне кĕртсе лартнă: пĕрремĕшĕнчен, схемăна Гегель триади законĕсем тăрăх тунă; иккĕмĕшĕнчен, синтезис хире-хиррĕçлĕхсен—индивидуальнăй тата обществăллă харпăрлăхăн пĕрлĕхĕпе (тождествипе) никĕсленсе тăрать. Çапла ĕнтĕ, «индивидуальнăй» тенĕ сăмах кунта диалектикăллă процесс членĕн хăйне уйрăм, йăлтах условнăй ăнлануне пĕлтерсе тăрать, çавăнпа та унпа нимĕне те çирĕплетсе никĕслеме юрамасть», тет. Çакна вырăс публики умĕнче «сангвиник» Маркса буржуаран, г. Жуковскирен, хӳтленĕ чух чи ырă кăмăллă çын калană. Çак ырă кăмăлпа

ёнтӗ вӑл, Маркс процесс ҫинчен хӑй шухӑшӗсене «фокуссемпе» никӗслесе ҫирӗплетет, тесе ӑнлантарса парать вӗт! Г-н Михайловский ҫакӑнтан хӑйне валли—хуть те мӗнле ӗҫ тумашкӑн та, пӗр ырӑ кӑмӑл кӑна кӑшт сахалтараххине кӑтартакан усӑллӑ мораль туянма пултарать).

«Отрицанийӗн отрицанийӗ ҫинчен вӑхӑтлӑха сӑмах тапратмӑпӑр, малтан ҫак «пӗр вӑхӑтрах индивидуальнӑй та, общиналлӑ та пулса тӑракан харпӑрлӑха» сӑнаса пӑхӑпӑр»,—тет Энгельс. Г-н Дюринг ҫакна «тӗтре» тет, ҫитменнине,—мӗн тери тӗлӗнмелле пулсан та,—кӑна вӑл чӑн та тӗрӗс калать. Анчах, инкеке кура ку «тӗтрере» пӗртте Маркс мар, каллех г. Дюринг хӑйех... Маркса Гегель вӗрентӗвӗ тӑрӑх тӳрлетсе, вӑл ун сӑмахӗсем ҫумне темле харпӑрлӑхӑн аслӑ пӗрлӗхне чиксе хурать, анчах Маркс ун ҫинчен пӗр сӑмах та каламан.

«Маркс ҫапла каланӑ: «Ку вӑл—отрицанийӗн отрицанийӗ. Вӑл каллех индивидуальнӑй харпӑрлӑх туса хурать, анчах кӑна капитализмлӑ самана вӑхӑтӗнче туяннӑ никӗс ҫинче—ирӗклӗ ӗҫлекенсен кооперацийӗ ҫинче, хӑйсем тунӑ производство хатӗрӗсемпе тата ҫӗре община йӗркипе тытса тӑнӑ никӗс ҫинче туса хурать. Уйрӑм ҫынсен хӑйсен ӗҫӗ ҫинче тытӑнса тӑракан, сапаланнӑ уйрӑм харпӑрлӑхран капитализмлӑ харпӑрлӑх пулса каясси, паллах, производствӑн обществӑллӑ процесӗ ҫинче тытӑнса тӑракан капитализмлӑ уйрӑм харпӑрлӑхран, чӑннипе обществӑллӑ харпӑрлӑх туса хурассинчен—тем нериех вӑраха тӑсӑлакан, йывӑр, тертлентерекен процесс». Урӑх ӗнтӗ нимӗн те ҫук. Ҫапла вара, экспроприаторсене экспроприацилени туса хунӑ йӗркесем—индивидуальнӑй харпӑрлӑха ҫӗнӗрен, ҫӗре тата ӗҫлекенсем хӑйсем тунӑ производство хатӗрӗсене общиналлӑ йӗркепе тытса тӑнӑ «никӗс ҫинче» туса хуни пулать. Нимӗҫ чӗлхине пӗлекен ҫынна кашнинех (вырӑс чӗлхине пӗлекенсене те ҫавах, мӗншӗн тесен г. Михайловский, куҫарасса тӗп-тӗрӗс куҫарнӑ) ку ҫакна пӗлтерет: ҫӗр тата ытти производство хатӗрӗсем общиналлӑ харпӑрлӑхра тӑрассине, индивидуальнӑй харпӑрлӑхра вара ытти продуктсем, урӑхла каласан, потреблени япалисем тӑрассине пӗлтерет. Анчах ӗҫ 6-ҫулхи ачасене те ӑнланмалла пултӑр тесе, Маркс 56-мӗш страницӑра (вырӑс изданийӗнче 30-мӗш стр.), «пӗрлехи производство хатӗрӗсемпе ӗҫлекен тата хӑйсен индивидуальнӑй ӗҫ вӑйӗсене план тӑрӑх, обществӑн пӗр ӗҫ вӑйӗ пек расходлакан ирӗклӗ ҫынсен союзӗ», урӑхла каласан, социализмла организациленнӗ община пулнӑ пек шутлать те, малалла ҫапла калать: «Ӗҫлесе тунӑ пӗтӗм продукт—обществӑллӑ продукт пулса тӑрать. Ку продуктӑн пӗр пайӗ каллех производство хатӗрӗ пулса тӑрать. Вӑл обществӑллӑ пулса юлать». Анчах тепӗр пайӗпе союз членӗсем пурӑнмалли хатӗр вырӑнне усӑ кураҫҫӗ. «Ҫавӑнпа та ӑна вӗсен хушшинче пайламалла». Ку сӑмахсене ӗнтӗ г. Дюринг та пулин уҫҫӑнах ӑнланма тивӗҫ.

«Пӗр вӑхӑтрах индивидуальнӑй та общиналлӑ та пулса тӑракан харпӑрлӑх,—ку тӗксӗм чӑлахлӑх, ку Гегель диалектикинчен ҫуралса тухакан айванлӑх, ку пӑтранчӑклӑх, ку Маркс хӑй вӗрен-

тĕвĕ хыççăн пыракан çынсене хăйсенех шухăшласа пĕлме пăрахса хăварнă тарăн шухăшлă диалектикăллă сутмалли юмах,—каллех г. Дюрингăн хăй ăсĕнченех ирĕклĕн шухăшласа кăларнă япала...

«Халĕ ĕнтĕ, Марксăн отрицанийĕн отрицанийĕ, мĕнле вырăн йышăнса тăрать-ха?—тет малалла Энгельс. 791-мĕш страницăра тата малалла та вырăсла изданире 648-мĕшĕнче тата малалла та 50 стр. тăршшĕнче (вырăсла изданире 35 стр. тăршшĕнче капиталăн малтанхи накопленине экономика тĕлĕшĕнчен тата истори тĕлĕшĕнчен тĕпчесе, вăл малалли страницăсенче вара çав тĕпчевĕн юлашки результачĕсене танлаштарса кăтартать. Капитализмлă саманаччен, чи сахалран та Англире, производство хатĕрĕсем ĕçлекен çынсен аллинче уйрăм харпăрлăхра тăнă никĕс çинче вак производство пулнă. Капиталăн малтанхи накоплениĕ тени кунта, çак, продуктсене тӳррĕмĕнех хăйсем туса тăракан çынсене экспроприациленинче, урăхла каласан, хăй ĕçленипе тытăнса тăракан уйрăм харпăрлăха пĕтернинче пулнă. Уйрăм харпăрлăха ак çакăн пирки пĕтерме май пулнă: асăннă вак производство—производствăпа общество анлăшĕ хĕсĕк, примитивнăй чухне кăна пулма пултарнă, производство пĕр-паллă пусăм таран аталанса çитсессĕн вара, вăл хăйех хăйне пĕтерекен материальнăй никĕс туса хурать. Уйрăм харпăрлăха çапла пĕтерни, производствăн индивидуальнăй, вакланса сапаланнă хатĕрĕсенчен общесtвăллă концентрациленнĕ производство хатĕрĕсем туса хуни—çакă ĕнтĕ капиталăн пуçламĕш историйĕ пулса тăрать. Ĕçлекен çынсене—пролетарисем, вĕсен производство хатĕрĕсене—капитал туса хурсассăн вара, производствăн капиталистла меслечĕ хăй урисем çине тăрса çитсессĕнех вара, ĕçе малалла пĕрлештерсе пырасси, çĕре тата ытти производство хатĕрĕсене капитал туса ярасси, апла пулсан вара, уйрăм харпăрлăх хуçисене малалла экспроприацилесе пырасси те çĕнĕ формăпа пулса пырать. «Халĕ хуçалăха хăй ĕçлесе тытса тăракан çынна мар ĕнтĕ, нумай рабочисене эксплуатацилесе тăракан капиталиста экспроприацилемелле пулать. Ку экспроприаци—капитализмлă производствăн хăйĕн шалти законĕсем вылянса тăни урлă, капиталсем концентрациленнĕ пирки пулса пырать. Пĕр капиталист теприсене пĕтермеллех çапса хуçать. Çак концентраципе е нумай капиталистсене сахаллăшсем экспроприациленипе алла-аллăнах ĕç процесĕн кооперативлă форми ытларан-ытла ӳссе аталанса пырать, наукăпа технологи тĕлĕшĕнчен пĕлсе усă курасси, çĕрпе пĕрлешсе план тăрăх усă курасси, ĕçхатĕрĕсем общинăпа кăна усă курмалла пулса каясси, тата производствăн пур хатĕрĕсемпе те, вĕсене комбинациленнĕ общесtвăллă ĕçĕн общинăллă производство хатĕрĕсем вырăнне хурса тирпейлĕн, упраса усă курасси аталанать. Капитал форми çапла улшăнса пынин пĕтĕм уссине хăйсен аллине çавăрса илсе монополизацилекен тата çаратса пурнакан шултра капиталистсен йышĕ сахалланса пынипе пĕрлех, чухăнсен, пусмăрта пурăнакансен, чуралăхра асапланакансен, деградациленсе пыракансен, эксплуатациленсе пурăнакан-

сен масси те ӳссе пырать, çавӑнпа пӗрлех тата производствӑн капиталистла процесӗн механизмӗ хӑй вӗрентсе, пӗтӗçтерсе, организацилесе, çитӗнтерсе пыракан рабочи класӑн тарӑхасси те ӳсет. Капитал вара—хӑйпе пӗрле тата хӑй пулӑшнипе чечекленсе ӳстернӗ производство меслечӗн чарса пыракан тӑлли пулса тӑрать. Производство хатӗрӗсем концентрациленнипе ӗç пӗрлешӗнсе пыни хӑйсен капитализмлӑ хуппипе урӑх килӗшсе пурӑнайми пусӑма аталанса çитеççӗ. Капитализмлӑ хупӑ ванса каять. Капитализмлӑ уйрӑм харпӑрлӑхӑн вилӗм сехечӗ персе çитет. Экспроприаторсене экспроприацилеççӗ».

«Халӗ ӗнтӗ эпӗ вулаканран çапла ыйтатӑп: ӑçта-ха ӗнтӗ диалектикӑллӑ чее тӗрӗсемпе укасем, ӑçта-ха ӗнтӗ мӗнпур уйрӑмлӑхсене те ниме пӗлтерми туса çитеричченех ӑнланусене пӑтраштарни, ӑçта-ха ӗнтӗ тӗрӗс тӗнлисемшӗн туса кӑтартакан диалектикӑллӑ хӑватсем тата Гегель логос (ӑс-тӑн) çинчен вӗрентнӗ масштаб таранах туса кӑтартнӑ фокуссем? Маркс вӗсемсӗр, Дюринг каланӑ тӑрӑх, хӑй сӑмахне вӗçне çитереймен пулӗччӗ. Тахçан малтан вак производство хӑй аталанса пынӑ маях хӑйне пӗтерес условисем çуратса хатӗрленӗ пекех, халӗ те капитализмлӑ производство, шӑлт çавӑн пекех, ӑна хӑйне пӗтерме тивӗç материальнӑй условисене хӑех çуратнине Маркс историллӗ ӗнентерсе парать те кунта кӗске вывод тӑвать. Историллӗ процесс çакӑн пек, çитменнине тата вӑл çав вӑхӑтрах, диалектикӑллӑ та пулсассӑн, ку вара—г. Дюринга вӑл епле турӑ пӳрнӗ япала пек туйӑнсассӑн та—пӗртте Маркс айӑпӗ мар.

«Халӗ кӑна ӗнтӗ, ӗç историпе-экономика тӗлӗшӗнчен епле пулса пынине кӑтартса пӗтерсен, Маркс малалла çапла çырать: «Производствӑпа присвоенин капитализмлӑ меслечӗ, апла пулсан вара, капитализмлӑ уйрӑм харпӑрлӑх та, хӑйӗн ӗçӗ çинче тытӑнса тӑракан индивидуальнӑй харпӑрлӑх тӗлӗшпе пӗрремӗш отрицани пулса тӑрать. Капитализмлӑ производство, естественнӑ историллӗ процесс кирлӗ пулнӑ пекех, хӑйӗн отрицанине хӑех тӑвать. Ку вӑл—отрицанийӗн отрицанийӗ» т. ыт. те (çӳлерех илсе кӑтартнӑ пек).

«Çапла вара, çак процеса отрицанийӗн отрицанийӗ тесе, Маркс пӗртте кунта—вӑл процесс истори тӗлӗшӗнчен кирлине çирӗплетсе пани курӑнать тесе шухӑшламасть. Пачах урӑхла: вӑл, çак процесӑн пӗр пайӗ ӗнтӗ пурӑнӑçра пулса та иртнине, пӗр пайӗ—пулса иртме тивӗççине историллӗ çирӗплетсе панӑ хыççӑн, çакӑн хыççӑн тин вӑл, ӑна—çапла-çапла процесс тата çитменнине паллӑ диалектикӑллӑ закон тӑрӑх пулса пыракан процесс тесе кӑтартса парать. Урӑх нимӗн те мар. Çапла ӗнтӗ, г. Дюринг сӑмахӗсем: отрицанийӗн отрицанийӗ кунта—эпи-карчӑк пек пулӑшса тӑрать, çав пулӑшнипе пуласлӑх иртни ӑшӗнчен çуралса тухать тенисем, е çӗрпе капитала община йӗрки тӑрӑх тытса тӑма кирлине Маркс кама та пулин отрицанийӗн отрицанийӗ законне ӗненни тӑрӑх йышӑнма хушать тенисем те каллех пӗтӗмпех суя» (стр. 125).

Энгельс Дюринга çапла питĕ лайăх ятласа тавăрни пĕтĕмпех г. Михайловские те пырса тивнине вулакан хăех курать; мĕншĕн тесен г. Михайловский те Дюринг пекех: Марксăн пуласлăхĕ Гегель сăнчăрĕ вĕçĕнче кăна тытăнса тăрать, пуласлăх пурпĕрех пулма кирлине шанни—ĕненӳ çинче кăна тытăнса тăма пултарать, тет. (Ку тĕлĕшпе çакна палăртни те ытлашши пулмĕ тетĕп: кăна Энгельс вăрлăх тĕшши çинчен, Руссо вĕрентĕвĕ çинчен тата диалектикăллă процесăн ытти тĕслĕхĕсем çинчен те калаçнă сыпăкрах ăнлантарса парать. Çак тĕслĕхсене, Энгельс мĕне те пулин триадăсемпе «çирĕплетсе парасси» çинчен, е пурăнăçри чăн процеса сăнласа кăтартнă çĕре вăрттăн çак триадăсен «условнăй членĕсене» кĕрте-кĕрте лартасси çинчен, сăмах та пулма пултараймасть тесе, уççăн, пĕр иккĕленмесĕр каланисемпе танлаштарса пăхсассăн та (Маркс каланисемпе танлаштарсан та, мĕншĕн тесен ку сочиненийĕн алçырăвне, Энгельс малтан Маркса вуласа кăтартнă пулнă) марксизма, Гегель диалектикипе тивĕççĕр усă курнă тесе айăплани ăссăр пулнине ăнланса илме çителĕклĕ пек туйăнмалла.

Дюрингпа г. Михайловский хушшинчи пĕтĕм уйрăмлăх ак çак икĕ пысăках мар тĕлте пулать: пĕрремĕшĕнчен, Дюринг ĕнтĕ—Маркс çинчен çăвартан кăпăк сирпĕтмесĕр калаçма пултарайман пулин те, çапах та хăйĕн «Историйĕн» тепĕр параграфĕнче: Маркс кайран калана сăмахĕнче хăйне гегельянствăшăн айăпланине пачах йышăнманнине палăртса хăварма кирлĕ, тесе шутланă. Г-н Михайловский вара ун çинчен (Маркс çӳлтех кăтартни çинчен) Маркс хăй диалектикăллă метода мĕнле ăнланнине, пачах татăклăн, уççăн каласа панă пулин те, ним те шарламан.

Иккĕмĕшĕнчен. Г-н Михайловскийĕн иккĕмĕш, хăйне майлă уйрăмлăхĕ çакă: вăл пĕтĕм тимлĕхĕпе глаголсенне мĕнле вăхăт формипе калани çине тăрăннă. Мĕншĕн-ха Маркс пуласлăх çинчен калана чухне хальхи вăхăт формипе усă курать?—тесе ыйтать, пирĕн философ хăйне çĕнтерӳллĕн тыткаласа. Хисеплĕ критик, эсир ун çинчен хуть те хăш грамматикăра та вуласа пĕлме пултаратăр вĕт; сире унта: пуласлăх ним иккĕленми пулма тивĕç пек туйăнсассăн, пулас форма вырăнне хальхипе усă кураççĕ, тесе ăнлантарса парĕç. Анчах г. Михайловский, хăйĕн суйине тӳрре кăларма тăрăшса çав тери хыпса ӳкнĕ пек курăнасшăн пулса,—мĕншĕн-ха çапах та, мĕншĕн ун пирки иккĕленме çук?—тесе пăшăрханса ыйтать. Ун пирки те Маркс пачах татăклă ответ панă. Вăл ответа çителĕксĕр е тĕрĕс мар теме пулать, анчах ун чухне вара, гегельянство çинчен сӳпĕлтетесси вырăнне, ку ответ «хăш енчен» тата «мĕн пирки» тĕрĕс маррине кăтартса памалла пулать.

Ку ответ мĕнлине г. Михайловский хăй те пĕлнĕ кăна мар, ыттисене те вĕрентнĕ вăхăт та пулнă. 1877 çулта вăл çапла çырнă:—Маркс пуласлăх çинчен каласа кăтартнине г. Жуковский иккĕленчĕклĕ тесе шутлама пултарнах ĕнтĕ, анчах унăн, «Маркс питĕ паха вырăна хунă» ыйтуран—ĕçе пĕрлештересси çинчен пыракан ыйтуран—пăрăнса иртсе кайма «нимĕнле нрав-

ственнӑй право та пулман», тенӗ. Ара, паллах ӗнтӗ! Жуковскийӗн 1877 ҫулта ку ыйтуран пӑрӑнса иртме нравственнӑй право пулман, г. Михайловский вара 1894 ҫулта кун пек нравственнӑй право пурах ӗнтӗ! Тен,—quod licet Jovi, non licet bovi*?!

Кунта «Отечественные Записки»[10] журнал ӗлӗкрех пӗрре ҫак ӗҫе пӗрлештерессине мӗнле ӑнланни ҫинчен ҫырнине асӑнмасӑр иртме пултараймастӑп. Унта 1883 ҫулхи 7-мӗш №-рӗнче темле г. Постороннийӗн** «Редакцине янӑ ҫыруне» пичетленӗ пулнӑ; вӑл та, шӑлт г. Михайловский пекех, Марксӑн пуласлӑх ҫинчен каланӑ шухӑшне иккӗленчӗклӗ тесе шутланӑ. «Капитализм пуҫпулса тӑнӑ чухне—тесе ҫырать ҫав господин—ӗҫӗн обществӑллӑ форми, чӑннипе, акӑ ҫакӑ ҫех пулса тӑрать: темиҫе ҫӗршер е пиншер рабочи пӗр ҫуртра савалаҫҫӗ, шаккаҫҫӗ, ҫавӑркалаҫҫӗ, ҫине те айне хурса пӑхкалаҫҫӗ, турткалаҫҫӗ тата ытти темӗн чухлӗ операци те тӑваҫҫӗ. Анчах ҫак йӗрке пӗтӗмӗшӗпе мӗнлине—«кашниӗ пӗр хӑйшӗн, пӗр турӑ кӑна пуриншӗн те тӑрӑшать», тенӗ сӑмахӗ питех те лайӑх сӑнласа парать. Анчах ӗҫӗн обществӑллӑ формин мӗн ӗҫ пултӑр-ха кунта?» тенӗ.

Акӑ ку ӗнтӗ, хай ҫын ӗҫе ӑнланса илни тӳрех курӑнать! «Ӗҫӗн обществӑллӑ форми» «пӗр ҫуртра ӗҫленинче» «пулса тӑрать» иккен!! Вырӑссен, ҫитменнине чи лайӑх журналӗсенчен пӗринче пичетленӗ ҫав тери тискер шухӑшӗсем хыҫҫӑн тата пире,—«Капиталӑн» теориллӗ пайне пӗтӗм наука йышӑннӑ тесе ӗнентерме тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫапла ҫав, «Капитала» хирӗҫ мӗн чухлӗ те пулин ҫирӗп шухӑш калама вӑй ҫитереймесӗр, «пурте йышӑннӑ наука» ӑна пуҫне тая-тая хисеплеме пуҫланӑ, хӑй ҫав вӑхӑтрах чи ҫӑмӑл ыйтусенче те тӑмсайине тата шкул экономийӗн кивӗ киревсӗрлӗхне кӑтартса тӑнӑ. Г-н Михайловскийе, хӑйӗн яланхи йӑли тӑрӑх пачах пӑрӑнса иртнӗ ӗҫӗн тупсӑмӗ мӗнре пулнине кӑтартса парас тесе, ку ыйту ҫинче пӑртак чарӑнса тӑмалла пулать.

Капитализмлӑ производство ӗҫе пӗрлештерсе пыни вӑл—пӗртте ҫынсем пӗр ҫурт-йӗрте ӗҫлесе тӑнинче пулмасть (ку вӑл—процесӑн пайӗ ҫех), вӑл чӑннипе акӑ мӗнре пулса тӑрать: капиталсем концентрациленесси—обществӑллӑ ӗҫ специализациленсе пынипе, промышленноҫӑн кашни пӗр-пӗр отраслинче капиталистсен йышӗ сахалланса пынипе, ҫав вӑхӑтрах промышленноҫӑн уйрӑм отраслисен шучӗ йышланса пынипе пӗрле пулать; производствӑн сапаланчӑклӑ йышлӑ процесӗсем производствӑн пӗр обществӑллӑ процесне пӗрлешни пулать. Сӑмахран, пир-авӑра кустарьсем тӗртнӗ саманара, вак производительсем ҫиппине хӑйсем арласа, пирне те ҫав ҫипрен хӑйсемех тӗртнӗ пулсан, ун чухне пирӗн промышленность отраслисем йышлӑ мар пулнӑ (ҫип арласси пе пир тӗртес ӗҫ пӗрле пулнӑ). Производствӑна капитализм пӗрлештерет пулсан вара, ун чухне промышленноҫӑн уйрӑм отраслисен шучӗ йышланса пырать: ҫиппине уйрӑм арлаҫҫӗ, пирне уйрӑм тӗртеҫҫӗ; производство ҫапла пайланса, концентрациленсе

* — Юпитерӑн тума юранине, вӑкӑрӑн тума юрамасть. *Ред.*

** Посторонний—Н. К. Михайловскийӑн литература псевдонимӗ. *Ред.*

пыни хăех те промышленноçăн çĕнĕ отраслисене çуратма пуç-лать—машинăсем тăвас ĕçе, çĕркăмрăкĕ кăларас ĕçе т. ыт. те. Промышленноçăн кашни отраслинче, халĕ ĕнтĕ ытларах специализациленнĕскерĕнче, капиталистсен йышĕ сахаланнăçем сахаланса пырать. Ку вара, производительсем хушшинче обществăллă çыхăну ытларан-ытла тĕрекленсе, производительсем пĕр чăмăра пĕтĕçсе пынине пĕлтерет. Уйрăм вак производительсем кашниййĕ пĕр вăхăтрах темиçе ĕç туса тăнă, çавăнпа та пĕр-пĕрне питех пăхăнса тăман: сăмахран, кустарь йĕтĕнне те хăй акнă пулсан, хăех арласа тĕртнĕ те пулсан,—вăл ыттисене пĕртте пăхăнманпа пĕрех пулнă. Çакăн йышши вак, сапаланчăк товаропроизводительсен йĕрки чухне ĕнтĕ (çавăн чухне кăна): «кашниййĕ хăйшĕн, турă кăна пуриншĕн те тăрăшать», тенĕ халлап тĕрĕс пулнă, урăхла каласан, рынокра хаксем улшăнса тăнин анархиййĕ пулнă. Ĕçе капитализма пула пĕрлештернĕ хыççăн вара, ĕç парчах урăхла пулса тăрать. Пир-авăр тăвакан фабрикант ĕçĕ çип арлаттарса хатĕрлекен фабрикант ĕçĕнчен килет; юлашкин ĕçĕ—çĕрмамăкĕ актарса тăвакан плантатор-капиталистран, машинăсем тăвакан савăт хуçинчен, çĕркăмрăкĕ кăларттаракан шахтă хуçинчен т. ыт. те, т. ыт. те. Вара пĕр капиталист та ыттисемсĕр пурăнма пултараймасть. Паллах, «кашниййĕ хăйшĕн» текен халлап ку йĕркепе пĕртте килĕшми пулса тăрать: кунта ĕнтĕ кашниййĕ пуриншĕн те, пурте кашнишĕн ĕçлеççĕ (турă валли вара—пĕлĕт çинчен калакан фантази пулса юлма та, çĕр çинчи «ылттăн пăру» пулса та юлма ниепле вырăн та çук). Пурăнăç йĕркин характерĕ йăлтах улшăнать. Вак, сапаланчăк предприятисем ĕçленĕ йĕрке вăхăтĕнче, вĕсенче хăшĕсенче те пулин ĕç чарăннă чухне—çак ĕç чарăнни обществăн йышлах мар членĕсен пурăнăçĕнче кăна палăрнă, вăл пурне те пăлхатса хускатайман, çавăнпа ун çине пурте мар çаврăнса пăхнă, обществăна ĕçе хутшăнма хистемен. Анчах ĕç промышленноçăн питех те вăйлă специализацилене çитнĕ отраслинчи шултра предприятире, çавăнпа та пĕтĕм общество валли тенĕ пекех ĕçлесе тăракан, хăй ĕçĕ те çавăн пекех пĕтĕм обществăран килекен предприятире чарăнса ларсассăн (ĕçе çăмăлрах ăнланмалла пултăр тесе, эпĕ, ĕçе пĕрлештересси чи çӳлти пусăма çитнĕ пек палăртатăп) —ун чухне вара ĕç обществăн ытти пур предприятиййĕсенче те чарăнса лармалла пулать, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсене кирлĕ продуктсене çак предприятирен кăна туянма, хăйĕн пĕтĕм таварне те ун тавар̆есем пур чухне кăна сутма пултараççĕ. Çапла майпа вара мĕнпур производствăсем те пĕр обществăллă производствăллă процеса пĕрлешсе каяççĕ; çав вăхăтрах кашни производствăна уйрăм капиталист ертсе пырать, производство унăн ирĕкĕнчен килет, производствăран тухнă обществăллă продукт унăн уйрăм харпăрлăхĕ пулса тăрать. Уççăнах курăнмасть-им ĕнтĕ производство форми присвоени формипе килĕшейми хирĕçӳллĕ пулса тăни? Юлашки малтанхине юрăхлă пулмасăр юлма пултарайманни, вăл та обществăллă, урăхла каласан, социализмла пулмасăр тăма пултарайманни уççăнах курăнмасть-и ĕнтĕ? Анчах «Отеч.

Записки» журналта çыракан ăслă филистер пĕтĕм ĕçе пĕр çурт-йĕрте ĕçлениче çеç курать. Ку ĕнтĕ чăн-чăнах пӳрнепе пĕлĕтех тĕл тивертнĕ! (Элĕ пĕртен-пĕр материальнăй процесс çинчен кăна, производствăллă отношенисем улшăнни çинчен кăна, каласа кăтартрăм, процесăн социальнăй енне, рабочисене пĕрлештерсе, пĕтĕçтерсе, организацилесе пынине тĕкĕнмерĕм, мĕншĕн тесен ку вăл,—малтанхинчен тухакан, иккĕмĕш вырăнта тăракан явлени).

Россия «демокрачĕсене» азбукари пек çав тери çăмăл чăнлăха та ăнлантарса пама тивет пулсассăн, сăлтавĕ вара кунăн ак çакăнта: вĕсем мещансен идейисем ăшне хăлхисем таранах путса ларнă пирки, мещанла йĕркесенчен пуçне урăххисем çинчен пачах шухăшласа илме пултараймаççĕ.

Анчах г. Михайловский патне таврăнар. Капитализм хăйĕн аталану законĕсем тăрăхах социализмлă строй пурпĕрех пулса тăмалла тесе Маркс тунă вывода çирĕплетсе тăракан фактсемпе шухăшсене хирĕç вăл мĕн каланă пулать-ха ĕнтĕ? Вăл чăннипех—обществăллă хуçалăха тавар туса кăлармалла организациленĕ чухне—ĕçĕн обществăллă процесĕ ытларан ытла специализациленсе пыманнине, капиталсемпе предприятисем концентрациленсе пыманнине, ĕçĕн пĕтĕм процесĕ пĕрлешсе пыманнине кăтартса пачĕ-и-ха ĕнтĕ? Çук, вăл, ку фактсем тĕрĕс маррине кăтартас тесе, пĕр сăмах та каламарĕ. Капитализмлă обществăра—ĕçе пĕрлештернипе ниепле килĕшеймен анархи пуррине кăтартакан положение вăл амантрĕ-ши? Вăл ун çинчен нимĕн те каламарĕ. Пур капиталистсен ĕç процесĕсене пĕр обществăллă ĕç процесне пĕрлештерни—уйрăм харпăрлăхпа килĕшсе пурăнма пултарать-и? хирĕçлĕхрен тухмалли çул Маркс кăтартса панинчен урăххи те пулма пултарать-и, пулĕ-и? Çук, вăл ун çинчен пĕр сăмах та каламарĕ.

Мĕн çинче тытăнса тăрать-ха унăн критики? Фактсене юри арпаштарса кăтартни çинче, çын сăмахĕсене пăсса калани çинче тата пушă янтракан фразăсем çинче тытăнса тăрать.

Чăн та, çакăн йышши меслетсене: критик малтан истори пĕр татăксăр виçшерлĕ утăмĕсем çинчен темĕн чухлĕ юрăхсăр каласа тултарнă хыççăн, Маркскран мăнкăмăллăн—«малалла мĕн вара?» тесе, урăхла каласан, процесăн вăл сăнласа кăтартнă юлашки сыпăкĕ хыççăн истори мĕнле çулпа кайнă вара?—тесе ыйтать пулсан, çакна урăхла мĕнле каламалла-ха? Курăр ĕнтĕ, Маркс хăйĕн литература тата революциллĕ ĕçне пуçланăранпах, социологиллĕ теорирен мĕн кĕтнине пĕтĕмпех татăклăн каласа кăтартнă: унăн пурăнăç процесне тĕп-тĕрĕс сăнласа памалла—урăх нимĕн те мар (сăмахран, коммунистсен теорийĕн критерийĕ çинчен «Коммунистсен Манифестĕнче» каланипе танлаштарса пăхăр). Хăйĕн «Капиталĕнче» вăл çак требование пурăнăçа тĕп-тĕрĕс кĕртнĕ: хăйĕн умне вăл капитализмлă обществăллă формацие наукă кăтартнă тăрăх тĕпчес задача лартнă та, çак организаци пирĕн куçăмăрсем умĕнче чăнахах çав-çав тенденципе аталанса пынине кăтартнă хыççăн, вăл хуть те мĕн пулсан та пĕт-

се, тепӗр, аслӑрах организаци пулса тӑма кирлине ҫирӗплетсе панӑ хыҫҫӑн точка лартнӑ. Г-н Михайловский вара, Маркс вӗрентӗвӗн пӗтӗм ӑшчиккинчен пачах пӑрӑнса иртет те, чи тӑмпайла: «малалла мӗн вара?»—тесе ыйтать. Унтан вара тарӑн шухӑшланӑ пек: «Ним пытармасӑрах калатӑп, ҫакна хирӗҫ Энгельс мӗн тавӑрса калассине уҫҫӑнах пӗлейместӗп эпӗ», тесе хурать. Ун вырӑнне эпир вара, г. Михайловский, ҫакӑн йышши «критикӑн» тӗллевӗпе меслечӗсене пачах уҫҫӑн курса тӑнине ним пытармасӑр калатпӑр!

Е тата ҫапла каланӑ сӑмахсене илер: «Вӑтам ӗмӗрсенче Маркскӑн индивидуальнӑй харпӑрлӑхӗ, хуҫин хӑйӗн ӗҫӗ ҫинче тытӑнса тӑнӑ харпӑрлӑхӗ, экономикӑллӑ отношенисенче те пулин пӗртен-пӗр е пуҫпулса тӑракан фактор пулман. Унпа пӗрлех ытти факторсем те нумай пулнӑ, анчах Маркс ӑнлантарса панӑ (г. Михайловский суйса кӑтартни мар-и?) диалектикӑллӑ метод, вӗсем патне калле таврӑнма шутламасть... Ҫавӑнпа та, ҫак мӗн пур схемӑсем историре чӑн-пуррине е унӑн пропорцийӗсене те пулин тӗрӗс сӑнласа кӑтартаймаҫҫӗ пулсан, этем ӑсӗ пур япалана та, иртнӗ вӑхӑтри, хальхи тата пулас вӑхӑтри состоянисенче шухӑшлама кӑмӑлланине кӑна килӗштереҫҫӗ». Ҫын сӑмахӗсене суйса кӑтартас меслетӗр те вӗт сирӗн, г. Михайловский, хӑстарасса ҫитиех пӗр сӑнлӑ! Малтан Марксӑн капитализм аталанӑвӗн чӑн-чӑн процесне кӑна, урӑх нимӗне те мар формулӑласа каласа пама тӑрӑшнӑ схеми ҫинчен: Маркс хуть те мӗнле шухӑша та триадӑсемпе усӑ курса ҫирӗплетме тӑрӑшнӑ тесе суйса кӑтартать (Маркс вӑтам ӗмӗрсенчи экономикӑллӑ йӗркесен ытти енӗсене шӑпах ҫакӑн пирки ӗнтӗ, вӗсем феодаллӑ общество формаци енӗсем пулнӑ пирки тӗпчемесӗр хӑварнӑ та, мӗншӗн тесен Маркс пӗр формацие, «капитализмлӑ» обществӑллӑ формацие кӑна тӗпченӗ. Тап-таса сӑнлӑн аталанма тытӑннӑ чухне, капитализм чӑн та (сӑмахран, Англире) вак, сапаланчӑк товаропроизводительсен йӗркинчен тата вӗсен хӑйсем ӗҫлесе тунӑ индивидуальнӑй харпӑрлӑхӗнчен аталана пуҫланӑ); унтан вара Маркс схеми — г. Михайловскийӗн ирӗксӗрлетсе сӗнекен планӗпе (3-мӗш сыпӑкӗ малтанхи сыпӑкӗн „пӗр" енне кӑна чӗртсе тӑратать, ыттисене пурне те пӑрахса хӑварать, текенскерӗпе) килӗшмест, тет; юлашкинчен вара, пӗр намӑсланмасӑр: «схема, паллах, историре чӑн-пуррине тӗрӗссипе сӑнласа кӑтартаймасть», текен вывод тӑвать!

Ара ҫакӑн йышши ҫынпа, ҫын сӑмахӗсенчен (Энгельс Дюринг ҫинчен каланӑ сӑмахсемпе кӑтартас пулсан) пӗрре те пулин тӗрӗс цитата илсе кӑтартма пултарайманскерпе, ӑҫтан тӗплӗн тавлашма май пултӑр ӗнтӗ? Схема хӑш енчен те пулин тӗрӗс маррине нимӗнпе те кӑтартса пама тӑрӑшмасӑрах, публикӑна: вӑл «паллах» чӑн пурӑнӑҫпа килӗшмест, тесе ӗнентерме тӑрӑшаҫҫӗ пулсан, мӗн те пулин «хирӗҫ калама» май пур-и ӗнтӗ кунта? Марксистла шухӑшсен чӑн-чӑн содержанине критиклес вырӑнне, г. Михайловский хӑйӗн ҫивӗч ӑсне иртнӗ вӑхӑтсен, хальхи тата пулас вӑхӑтсен категорийӗсем ҫинчен кӑна калаҫса аппаланта-

рать. Сăмахран, Энгельс, Дюрингăн «ĕмĕрлĕхе пыракан чăнлăхĕсене» хирĕç çапла таварса калать: «пирĕн хушăмăрта халĕ виçĕ тĕслĕ мораль—христианла-феодаллă, буржуаллă тата пролетариллĕ моральсене сараççĕ, çапла вара иртни, хальхи тата пулас вăхăтсен хăйсен мораль теорийĕ пур». Г-н Михайловский вара кун пирки çапла калаçать: «историе çапла виçĕ майлă тĕрлĕрен тапхăра пайланнин никĕсĕнче шăпах ĕнтĕ çак иртнипе хальхи тата пулас вăхăт категорийĕсем выртаççĕ пулĕ тетĕп эпĕ», тет. Мĕн тери тарăн шухăш! Ара, хуть те мĕнле общеcтвăллă явление те, хăй аталанса пынă процесра сăнаса пăхас пулсан, ун ăшĕнче кирек хăçан та — иртнин юлашкисем, хальхин тымарĕсем, пуласлăх тĕввисем пулнине кам пĕлмест-ха ĕнтĕ? Анчах, Энгельс çакăн пек, сăмахран, мораль историйĕн çак енĕсенчен пуçне (вăл «хальхи вăхăт» çинчен кăна каланă вĕт) урăххисем çук тесшĕн пулнă-им вара? феодальнăй моральччен малтан, сăмахран, чуралăх саманинчи мораль, унччен тата маларах—авалхи коммунизм общининчи мораль пулман тесе каласшăн пулнă-шим вара? Энгельс мораль идейисен кучухнехи юхăмĕсене материализмла ăнлантарса пама хăтланнине тĕплĕн критиклес вырăнне, г. Михайловский пире пуш-пушă фразăсемпе хăналать!

Г-н Михайловскийĕн, историе материализмла ăнланни çинчен мĕнле сочиненире çырнине эпĕ пĕлместĕп, текен сăмахсемпе пуçланакан «критикин» çак çӳлерех кăтартнă йышши меслечĕсем тĕлĕшĕпе—тен, автор çак сочиненисенчен пĕрне пĕлнĕ тата ăна тĕрĕсрех хаклама пултарнă вăхăт та пулни çинчен астутарни усăсăр пулмĕ. 1877 çулта г. Михайловский «Капитала» çапла хакласа çырнă пулнă: «Капитал» çинчен Гегель диалектикин, йывăр, çавăрăнусăр, кирлĕ мар хуппине сĕвсе пăрахсассăн (ку мĕнле тĕлĕнтермĕш япала-ха капла? Мĕншĕн-ха «Гегель диалектики» 1877 çулта «кирлĕ мар» пулнă, 1894 çулта вара материализм «диалектикăллă процесăн ним иккĕленми чăнлăхĕ» çинче тытăнса тăрать, пулать), вара эпир, çак сочиненийĕн ытти паха енĕсене шута илмесĕр те, унта — формăсем хăйсен пурăнăçĕн материальнăй условийĕсемпе епле шайлашăнса тăни çинчен калакан пĕтĕмĕшле ыйтăва татса пама кирлĕ пит те лайăх тĕпчесе тухнă материал пуррине тата çак ыйтăва паллă облаçшăн питĕ лайăх çутатнине куратпăр».—«Формăсем хăйсен пурăнăçĕн материальнăй условийĕсемпе шайлашăнса тăни» —ара ку хай обществăллă пурăнăçăн тĕрлĕ енĕсем пĕр-пĕринпе епле шайлашăнса тăни çинчен, идеологиллĕ обществăллă отношенисем материальнăй отношенисен надстройки пулни çинчен калакан ыйту пулать те вĕт ĕнтĕ, материализм вĕрентĕвĕ çак ыйтăва пĕр-пĕр майлă татса панинче пулса тăрать те вĕт. Малалла каяр.

«Тĕрĕссипе каласан, *пĕтĕм «Капитал»* тăрăшшĕпе (курсивĕ манăн) автор çакна тĕпчесе сăнать: пĕрре çуралса тухнă обществăллă форма епле пĕр вĕçĕмсĕр аталанса пынине, вăл çĕнĕрен шухăшласа тупнă япаласене, изобретенисене, производство

меслечĕсене лайăхлатнисене, çĕнĕ рыноксене тата наукăна та епле хăйне пăхăнтарса, хăйĕншĕн ĕçлеттерсе, ассимиляцилесе пырса, хăйĕн сăнарлă енĕсене вайлатса пынине; юлашкинчен вара, çак форма материальнăй условисем малалла урăхланса пынине епле урăх чăтса тăма пултарайманнине тĕпчет».

Тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ! 1877 çулта автор пĕтĕм „Капиталра" пĕр паллă обществăллă формăна материализмла тĕпченĕ пулать (обществăллă формăсене материальнăй условисемпе ăнлантарса панинчен пуçне, материализм урăх мĕн пултăр-ха тата?), — 1894 çулта вара, çак материализм çинчен çырса кăтартнине ăçта, хăш сочиненире шырамаллине те пĕлмелле мар пулса тăнă!

1877 çулта «Капиталра» «çак форма (урăхла каласан, капитализмли? çапла вĕт?) материальнăй условисем малалла улшăнса пынине епле урăх чăтайми пулса çитнине» «тĕпчесе сăнанă» пулать (кăна астăвăр), — 1894 çулта вара, нимĕнле тĕпчени те пĕртте çук, çитменнине тата капитализмлă форма производительнăй вăйсем малалла аталанса пынине урăх чăтма пултарас çуккине ĕненни—«пĕртен-пĕр Гегель триади вĕçĕнче кăна» тытăнса тăрать, иккен! 1877 çулта г. Михайловский çапла çырнă пулнă: «çак обществăллă форма хăйĕн пурăнăçĕн материальнăй условийĕсемпе епле шайлашăнса пынине тĕпчени—авторăн логикăллă вăйне тата пит те пысăк пĕлӳне *ĕмĕрлĕхех* (курсивĕ манăн) астутарса тăрĕ»,—1894 çулта вара вăл: материализм вĕрентӳне нихăçан та, ниçта та тĕрĕслесе тухса, наука тăрăх çирĕплетсе паман, тесе пĕлтерет!

Тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ! Ара мĕне пĕлтерет-ха ку, чăн та? Мĕн пулса тăнă?

Икĕ обстоятельство пулса тăнă: пĕрремĕшĕнчен, «вырăссен» 70-мĕш çулсенчи хресченле социализмĕ, ирĕклĕх çине—вăл буржуаллă пулнă пирки «тулхăрса тăнăскер», вырăссен пурăнăçĕ *антагонизмлă* пулнине çине тăрса пытарма тăрăшнă «çут çамкаллă либералсене» хирĕç кĕрешнĕскер, тата хресченсен революцине тума ĕмĕтленнĕскер, — пачах çĕрсе пăсăлса кайнă та, хăй ăшĕнчен çав мещанла киревсĕр либерализма çуратнă; çак либерализм, хресчен хуçалăхĕнчи прогрессивлă юхăмсем хресченсене массăллăн экспроприациленипе пĕрлех пулса пыраççĕ пулин те (çитменнине çак условирен килеççĕ пулин те), «кăмăла çĕклеççĕ» тесе шутлать. Иккĕмĕшĕнчен, 1877 çулта г. Михайловский, «сангвиник» (урăхла каласан, социалист-революционер) Маркса либераллă критикисенчен хӳтĕлес задачине çав тери хĕрсе тума тытăннă пирки, Маркс меточĕ унăн хăйĕн меточĕпе пĕртте килĕшме пултарайманнине те асăрхайман. Акă ăна, диалектикăллă материализмпа субъективлă социологи пĕр-пĕринпе килĕшейми хирĕçӳллĕ пулнине ăнлантарса параççĕ — Энгельс статьисемпе кĕнекисем ăнлантарса параççĕ, вырăс социал-демократĕсем ăнлантарса параççĕ (Плеханов кĕнекисенче г. Михайловский адресĕпе питех те тĕл тивертсе каланă сăмахсем пĕрре кăна мар тĕл пулаççĕ) — вара г. Михайловский ыйтăва çĕнĕрен тĕплĕн тĕрĕслесе тухма тытăнас вырăнне, шăлĕсене шарт çырт-

нӑ. Маркса (1872-мӗшпе 1877-мӗш ҫулсенчи пек)[11] саламлас вырӑнне халӗ вӑл ун ҫине, мухтас тӗлӗшпе иккӗлентерекен алӑк айӗнчен сиксе вӗрет, ҫитменнине тата вырӑс марксисчӗсене хирӗҫ, «экономика тӗлӗшӗнчен чи вӑйсӑррине хӯтӗленипе», ялсенче тавар склачӗсем тунипе, тата ӗҫе ытти енчен те лайӑхлатнипе, музейсемпе, кустарьсемшӗн организацилекен артельсемпе, мещанла чыслӑ ытти прогрессемпе те хӑйсен кӑмӑлӗсене тултарасшӑн мар, ун вырӑнне социальнӑй революцишӗн тӑракан «сӑнгвиниксемех» пулса юлса, обществӑри чӑн-чӑн революцилӗ элементсене вӗрентме, организацилесе ертсе пыма тӑрӑшакан ҫынсене хирӗҫ сурчӑкне пӗрӗхтерсех ятлаҫать.

Тахҫанах иртнӗ ӗҫсен облаҫне ҫапла ытлашши шала кӗмесӗрех калаҫнӑ хыҫҫӑн г. Михайловский Маркс теорине «критикленине» тӗпчесе пӗтерме те юрать пулӗ ӗнтӗ. Критик «сӑлтавланисене» итог тума тата вывод тума хӑтланса пӑхар.

Вӑл ҫӗмӗрме шут тытнӑ вӗрентӳ, пӗрремӗшӗнчен, историе материализмла ӑнланни ҫине тата иккӗмӗшӗнчен, диалектикӑллӑ метод ҫине таянса тӑрать.

Пӗрремӗшӗ тӗлӗшӗпе, критик чи малтанах материализм ҫинчен мӗнле сочиненире ҫырнине пӗлместӗп эпӗ тесе пӗлтерсеччӗ. Ҫырнине ниҫта та тупаймасӑр, вӑл материализм мӗн иккенне хӑй шухӑшласа кӑларма тытӑннӑ. Ҫак материализм ытлашши нумай ӗмӗтленни ҫинчен кӑтартса парасшӑн пулса, вӑл материалистсем этемлӗхӗн мӗнпур иртнӗ, хальхи тата пулас пурӑнӑҫне ӑнлантарса панӑ тесе ӗмӗтленеҫҫӗ пек туса кӑтартать; анчах кайран, марксистсен чӑн сӑмахӗсене илсе справка панӑ хыҫҫӑн, вӗсем пӗр обществӑллӑ формацие кӑна ӑнлантарса пани курӑнсассӑн, — ун чухне вара критик: материалистсем материализм ӗҫӗн анлӑшне чакараҫҫӗ, ҫакӑнпа вара вӗсем хӑйсене хӑйсемех тӗрӗс мара кӑлараҫҫӗ, тесе хурать. Ҫак материализма мӗнле меслетсемпе хатӗрленине кӑтартса парасшӑн пулса, вӑл — Маркспа Энгельс хӑйсен пӗлӗвӗсем наукӑллӑ социализма туса ҫитерме мар, пӗтӗм экономикӑллӑ историе тӗпчесе сӑнама ҫителӗксӗртереххи ҫинчен каласа йышӑннӑ пулсан та (1845—47 ҫулсенче) тата ҫитменнине вӗсем ҫак, хӑйсен пӗлӗвӗсем ҫитейменнине палӑртса тӑнӑ сочинение, нихӑҫан та пичетлесе кӑларман пулсан та, — г. Михайловский: наукӑллӑ социализма туса ҫитерме пӗлӗвӗсем ҫитейменнине материалистсем хӑйсемех йышӑннӑ, тенине шухӑшласа кӑларать. Ӗҫе пуҫлас май ҫапла каланӑ хыҫҫӑн вара, пире критикӑпа та парнелерӗҫ; «Капитала» вӗсем ҫакӑнпа пӗтерсе хучӗҫ: вӑл пӗр тапхӑра ҫех тӗпчет, иккен, критика вара пур тапхӑрсене те тӗпчени кирлӗ, ҫитменнине тата «Капитал» экономикӑллӑ материализма ҫирӗплетмест, ӑна сӗртӗнсе ҫеҫ иртет, пулать, — аргументсем ҫав тери тӗплӗ те, ӗненмеллискерсем пулчӗҫ пулас, ҫавӑнпа ирӗксӗрех, материализма нихӑҫан та наука тӑрӑх никӗслесе ҫирӗплетменнине йышӑнмалла пулчӗ. Унтан вара материализма хирӗҫ ҫак факта, материализмла выводсенех — вӑл вӗрентӳрен пачах аякра тӑнӑ ҫын, историчченхи вӑхӑтсене шӑлтах урӑх ҫӗршывра тӗпчесе вӗреннӗ ҫын тунӑ

текен факта тăратрĕç. Малалла вара, ача-пăча çуратса ӳстерес ĕçе (детопроизводствăна) материализм шутне пĕртте тĕрĕс кĕртмен, ку вăл — чеен хăтланса калаçни кăна, тесе кăтартассăн пулса, критик: экономикăллă отношенисем вĕсем — арлăарăмпа çемьеллĕ отношенисем çинче тăракан надстройка тесе ĕнентерме тытăнчĕ. Ăслă критикăн çакна май ăнлантарса калана сăмахĕсем пире çакăн йышши тем тери пысăк чăнлăхпа пуйтарчĕç: наследство ача-пăча çуратса ӳстермесĕр пулма пултараймасть, ача-пăча çуратса ӳстерес ĕç çумне питĕ кăткăс психика «çыпçăнса тăрать», ача-пăча ашшĕсен шухăш-кăмăлĕсене май вĕренсе çитĕнет иккен. Çул май эпир, тата, нациллĕ çыхăнусем вĕсем—ăру çыхăнăвĕсене малалла тăсса, пĕтĕçтерсе пыракан çыхăнусем пулнине пĕлтĕмĕр.

Материализм тĕлĕшпе теори хăйĕн тĕпчевне малалла туса пырса, критик çакна асăрхаттарнă: марксистсен нумай аргуменчĕсен содержанийĕ массăсене пусмăрласа тата эксплуататцилесе тăни буржуаллă йĕрке вăхăтĕнче «пур-пĕрех кирлĕ» тата çак йĕрке пурпĕрех социализмлă йĕрке пулса тăма «тивĕç» тени пулса тăрать, — çавăнпа вара нимĕн тăхтамасăрах: кирлĕлĕх (необходимость) вăл (çынсем кирлĕ, тесе, шăпах мĕне шутланине каламасан)—ытлашши пĕтĕмĕшле ăнлану пулать, çавăнпа та марксистсем вĕсем—мистиксемпе метафизиксем. Çавăн пекех тата критик: Маркс идеалистсене хирĕç ĕç çине «пĕр енчен кăна пăхса» тавлашать, çак идеалистсем субъективлă метод çине мĕнле пăхни çинчен тата вĕсем çине Марксăн диалектикăллă материализмĕ мĕнле пăхни çинчен пĕр сăмах та каламасть, тесе пĕлтерчĕ.

Марксизмăн иккĕмĕш тĕрекне—диалектикăллă метода вара—харсăр критик пĕрехçех пырса тĕртет те, йăвантарса та ярать. Çитменнине питĕ тĕл пырса тĕртет: триадăсемпе мĕне те пулин çирĕплетсе пама пулĕ текен шухăша, критик çав тери вăй хурса суяна кăларма тăрăшать, хăй çав вăхăтрах: диалектикăллă метод пĕртте триадăсем маррине, вăл шăпах социологири идеализмпа субъективизм меслечĕсене пăрахăçа кăларакан метод пулса тăнине пытарса хăварать. Тепре пырса тĕртни ятарласах Маркса хирĕç пулнă: сатур г. Дюринг пулăшнипе критик, Маркс сăмахĕсем çумне, капитализм пĕтме тивĕççине Маркс триадăсемпе çирĕплетсе каланă пек туса, никам ĕненме май çук юрăхсăр сăмахсем хушса хунă та — вара çав юрăхсăр сăмахсене хирĕç çĕнтерӳллĕ çапăçнă.

Акă — «пирĕн паллă социологăн» вĕçĕмсĕр чаплă «çĕнтерĕвĕсем!» Тĕрĕс мар-им, çак çĕнтерӳсене курса тăни мĕн тери «усăллă» (Буренин)?

Кунта тата тепĕр обстоятельствăна та асăнмасăр иртме май çук, вăл Маркс вĕрентӳне критиклес ĕçпе тӳррĕнех çыхăнса тămасть пулин те, идеалсене тата критик чăнлăха епле ăнланнине пĕлес тесен, питĕ кирлĕ пулса тăрать. Ку обстоятельство вăл— критик Хĕвеланăçĕнчи рабочисен движенийĕ çине епле пăхни.

Çӳлерех эпир г. Михайловскийĕн: материализм «наукăра» (тен, нимĕç «халăх тусĕсен» наукинче пулĕ?) хăйне тӳрре кă-

ларăймарĕ, тенĕ сăмахĕсене илсе кăтартсаттăмăр, анчах çак материализм,—тет малалла г. Михайловский, — «рабочи класс хушшинче чăн та питĕ хăвăрт сарăлса пырать». Çак факта мĕнле ăнлантарса парать-ха ĕнтĕ г. Михайловский? «Экономикăллă материализмăн йĕри-тавралла, тейĕпĕр, критиклесе тĕрĕсленмесĕрех сарăлса пынин ăнăçлăхĕ çинчен калас пулсан вара, ку ăнăçлăхăн тĕп сăлтавĕ—наукăра мар, пуласлăх еннелли перспективăсем «тунă» пурăнăç практикинче выртать», тет вăл. Çак, пуласлăх еннелли перспективăсем «тунă практика çинчен калакан çавăрнусăр фраза — материализм чăнлăха тĕрĕс ăнлантарса панă пирки мар, çак чăнлăхран перспектива енне пăрăнса кайнă пирки, вăйлăн сарăлса пырать тенине пĕлтернинчен пуçне урăх мĕне пĕлтерме пултартăр-ха тата? Малалла вара çапла калать: «Çак перспективăсем, вĕсене ăнланса илекен нимĕç рабочи класĕнчен тата унăн пурăнăçĕшĕн хĕрсех çунакан çынсенчен пĕлӳ те, критикле шухăша ĕçлеттерме те ыйтмаççĕ. Вĕсем ĕненме кăна хушаççĕ». Тепĕр тĕрлĕ каласан материализм тата наукăллă социализм йĕри-тавралла сарăлни—çак вĕрентӳ рабочисене малалла лайăх пурăнăç пама пулнинчен килет! Ара çакăн пек ăнлантарни пĕтĕмĕшпех юрăхсăррине, суйине пĕлес тесен, Хĕвеланăçĕнчи рабочи движени историйĕпе тата социализм историйĕпе çиелтен кăна паллашни те çителĕклĕ вĕт. Наукăллă социализм уйрăмăнах пуласлăх перспективисене нихăçан та сăнласа кăтартманнине пурте пĕлеççĕ: вăл кучухнехи буржуаллă йĕркене кăна тĕпчесе сăнанă, капитализмлă обществăллă организаци ăçталла аталанса пынине кăна тĕпченĕ—урăх ним те мар. «Эпир тĕнчене: кĕрешме пăрах, санăн пĕтĕм кĕрешĕвӳ ахаль аппаланни кăна», теместпĕр, эпир ăна кĕрешĕвĕн чăн лозунгне паратпăр,— тесе çырнă Маркс 1843 çултах, вара вăл çак программăна пурăнăçа та питĕ тĕрĕс кĕртнĕ.—«Эпир тĕнчене вăл чăннипе мĕншĕн кĕрешнине кăна кăтартса паратпăр; ăстăн вара—çакăн йышши япала: тĕнче ăна — хăйĕн кăмăлĕ пур-и, çук-и, çавна пăхмасăрах, пурĕпĕрех туянма тивĕç». Сăмахран, «Капитал» — çак наукăллă социализм çинчен çырса пĕлтерекен тĕп сочинени—пуласлăх çинчен чи пĕтĕмĕшле астутатарса кăна иртнипех çырлахнине, пулас строй çуралса тухассине кăтартакан элементсенчен халех куç умĕнче тăраканнисене çеç йĕрлесе тухнине пурте пĕлеççĕ. Пуласлăх перспективи тĕлĕшпе ĕлĕкхи социалистсем вĕçĕмсĕр ытларах ăнлантарса панине пурте пĕлеççĕ; çынсене кĕрешӳсĕрех пурăнма май паракан йĕркесен, обществăллă отношенийĕсем эксплуатаци çинче мар, прогресăн çын природине юрăхлă чăн-чăн никĕсĕсем çинче тытăнса тăракан йĕркесен картинĕсемпе этемлĕхе хăйсен енне çавăрас тесе, вĕсем пулас обществăна пур енчен те тĕпĕ-йĕрĕпе сăнла-сăнла кăтартнă. Çавах та, çак идейăсене çутатса паракан тем тери талантлă çынсем, хăйсен ĕçне вĕçне çитиех ĕненнĕ социалистсем питĕ йышлă пулнă пулсан та, машинăллă шултра индустри рабочи пролетарисен массисене политикăллă пурăнăç авăрне явăçтарса кĕртсе хутшăнтариччен тата унăн кĕрешĕвĕн чăн лозунгне шыраса

тупиччен — вĕсен теорийĕсем пурăнăçран аякра тăнă, вĕсен программисем халăхăн политикăллă движенийĕнчен аякра тăнă. Ку лозунга Маркс тупнă, (г. Михайловский хăех тахçанах иртнĕ вăхăтсенче — 1872 çулта каланă тăрăх)— «утопист мар, сăмах ваклама юратман, хăшпĕр чух пурăнăçпа сахал çыхăннă ученăй шыраса тупнă, çитменнине вăл ăна темле перспективăсене пула мар, кучухнехи буржуаллă йĕркене наука тăрăх тĕпчесе сăнани урлă, çак йĕрке чухне эксплуатаци «пурĕпĕрех пулма кирлине» тĕпчесе пĕлни урлă, вăл мĕнле законсем тăрăх аталанса пынине тĕпчени урлă шыраса тупнă. Г-н Михайловский, паллах, «Русское Богатство» журнала вулакансене: çак тĕпчесе сăнанă ĕçе ăнланса илмешкĕн нимĕнле пĕлӳ те, шухăш ĕçĕ те кирлĕ мар тесе ĕнентерме пултаратех, анчах эпир унăн хăйĕн ĕçĕнче, Маркс тĕпчесе тупнă азбукăллă чăнлăхсене пачах ăнланманнине курсаттăмăрччĕ ĕнтĕ (унăн сотрудникĕн экономистăн ĕçĕнче те унтан кая мар курăпăр-ха), çавăнпа ун йышши сăмахсем, паллах, çынна култарма кăна пултараççĕ. Капитализмлă машинăллă шултра индустри ăçта тата мĕн тери аталанса пырать, рабочи движени çавăнта тата çав таранах аталанса, сарăлса пырать; — социализмлă вĕрентӳ этем природине тивĕç обществăллă условисем çинчен каласма пăрахса, кучухнехи обществăллă отношенисене материализмлă тĕпчесе сăнама пуçласан, эксплуатацийĕн хальхи йĕрки пурĕпĕрех пулмаллине тĕпчесе пĕлме тытăнсан, тин ăнăçлăхсем тăвать; çаксем тавлашмалла мар фактсем пулса юлаççĕ.

Материализм перспективăсем çине епле пăхнине çапла тӳрĕнех суйса кăтартса, çак майпа вара материализм рабочисен хушшинче ăнăçлă сарăлса пынин чăн сăлтавĕсенчен пăрăнса иртме тăрăшса пăхнă хыççăн, халĕ ĕнтĕ г. Михайловский Хĕвеланăç Европăри рабочисен движенийĕн тактикипе идейисенчен пит те ирсĕрле, мещанла мăшкăлама тытăнать. Эпир курсаттăмăр ĕнтĕ, вăл Маркс сăмахĕсене хирĕç, капитализмлă строй ĕçе пĕрлештерсе пынă пирки пурĕпĕрех социализмлă строй пулса тăма кирлине кăтартса панине хирĕç, чат пĕр сăмах та калама пултараймарĕ, — çапах та, имĕш, «пролетарисен çарĕ» капиталистсене экспроприацилессине хатĕрлет, «ун хыççăн вара хуть те мĕнле класс кĕрешĕвĕ те пĕтет, çĕр çинче мир, çынсем хушшинче ырă килĕшӳ пулать» текелесе, нимĕн чарусăр кулать, Вăл, г. Михайловский, социализм тумалли çулсене çак, Маркс кăтартнă çулсенчен тем териех тĕрĕсреххисене, çăмăлтараххисене пĕлет вĕт: ăна тăвас тесен, «халăх тусĕсен» «экономикăна кирлĕ май эволюцилентерсе пымалли» çулсене, «уççăн паллă, ним иккĕленмелле мар тĕрĕс» çулсене, тĕплĕнрех кăтартса пани кăна кирлĕ — ун чухне вара, паллах, çак халăх тусĕсене «экономикăн практикăллă ыйтăвĕсене пурăнăçра татса пама» «чĕнсе илеççех» (г. Южаковăн «Р. Б.» 10-мĕш №-рĕнчи «Вопросы экономического развития России» ятлă статьине пăхăр), халлĕхе-ха вара... халлĕхе рабочисен тăхтаса тăмалла, халăх тусĕсем çине шанмалла, «хăйсем çине тивĕççĕр ытлашши шаннă пирки» эксплу-

ататорсене хирĕç хăйсен вăйĕпе кĕрешме тытăнмалла мар, иккен. Çак «хăйсем çине тивĕççĕр ытлашши шаннине» ним юлмичченех пĕтерсе тăкас тесе, пирĕн автор «çак, кĕсъене чиксе çӳремелли словарь ăшне те кăшт çеç вырнаçайман наукăна» хирĕç хĕрсе кайсах ятлаçать. Мĕн тери хăрушă, чăн та: наука— тата социал-демократсен кĕсъене вырнаçакан çуршар пуслăх брошюрисем!! Наукăна, вăл эксплуатацилесе пурăнакан çынсене хăйсене ирĕке кăларасшăн хăйхаллĕн кĕрешме вĕрентнĕшĕн, вĕсене классен антагонизмне шăлса лартакан тата пĕтĕм ĕçе хăйсем çине кăна илме тăрăшакан пур йышши халăх тусĕсенчен те пăрăнса çӳреме вĕрентнĕшĕн кăна хаклакан, çавăнпа та çак наукăна филистерсене питех те вăтантаракан çур пуслăх изданисенче пичетлесе кăларакан çынсем, чăн та, хăйсем çине мĕн тери тивĕççĕр ытлашши шанни çакăнтан уççăнах курăнмасть-им ĕнтĕ! Ун пек пулĕччĕ-и ĕç рабочисем хăйсен кунçулне халăх тусĕсене шанса парсассăн; ун чухне вара вĕсем рабочисене университетри филистерсен чăнчăн, нумай томлă наукине кăтартĕччĕç, çын природине тивĕç обществăллă организаципе те тĕпĕ-йĕрĕпех паллаштарĕччĕç, анчах... рабочисем кĕтсе тăма килĕшсе, хăйсем çине çав тери тивĕççĕр ытлашши шанса кĕрешĕве тытăнмасан çеç.

* * *

Г-н Михайловский «критикин» иккĕмĕш пайĕ çине, Марксăн теорине пĕтĕмĕшпе мар ĕнтĕ, уйрăмăн илсен вырăс социал-демокрачĕсене хирĕç тĕллесе каланă пайĕ çине куçиччен малтан, пирĕн кăштах урăх ыйту çинче чарăнса тăмалла пулать. Ĕç акă мĕнре: г. Михайловский, Маркса критиклenĕ чухне, унăн теорине тĕрĕс каласа кăтартасси çинчен шухăшлама кăна мар, ăна йăлтах суйса кăтартнă пекех, кунта та вырăс социал-демокрачĕсен идейисене пĕр намăса пĕлмесĕр пĕтĕмпех суйса кăтартать. Çавăнпа та, чăннипе ĕç мĕнле пулнине кăтартса парас пулать. Кăна халичченхи вырăс социалисчĕсен идейисене социал-демократсен идейисемпе танаштарнă тăрăх тума пуринчен те меллĕрех. Малтанхисен идейисене г.Михайловскийĕн„Русская мысль"[12] журналăн 1892çулхи 6-мĕш №-рĕнче пичетленнĕ статьинчен çырса илетĕп, унта та вăл марксизм çинченех калаçнă (çитменнине—намăслантарса каланă пултăр—чылай йĕркелĕн калаçнă пулнă, цензура тĕрĕслекен пичетре Буренинла кăна калаçма май пур ыйтусене тĕкĕнмен,—марксистсене тĕрлĕрен пылчăкпа пăтраштарман пулнă), ăна хирĕç вара—е, хирĕç мар пулсан, сахалтан та унпа тан, хăйĕн шухăшĕсене çырса кăтартнă. Эпĕ г. Михайловскийне те—социалистсен шутне кĕртсе, вырăс социалисĕсене те — г. Михайловскийпе танлаштарса, пĕртте тарăхтарасшăн мар: лешсен те, кунăн та «сăлтавлас меслечĕсем», чăннипе каласан, пĕр пек тесе кăна шухăшлатăп эпĕ, уйрăмлăхĕ вара—вĕсем хăйсем ĕненекен шухăшĕсене мĕн тери вĕçне çитиех çирĕп, тӳрĕ тытса пынинче пулать.

«От. Записки» журнал идейисене каласа кăтартнă май г. Михайловский çапла çырнă: «Нравственно-политикăллă идеалсен

шутне эпир çĕр çĕрĕçлекен аллинче, ĕçхатĕрĕсем—производитель аллинче тăнине кĕртсе шутлатпăр». Эпир куратпăр ĕнтĕ, пуçламăшĕ пит те лайăх ĕмĕтлĕ, чи ырă шанчăксем туп туллиех... «Ĕçĕн пирĕн патăмарта халĕ те пур вăтам емĕрхи формисене чылаях пысăккăн вăйсăрлатса хавшатнă, анчах çапах та, хуть те мĕнле, либераллă е либераллă мар вĕрентўсен кăмăлне пула, вĕсене йăлтах пĕтермелле тесе шутламастпăр эпир» («Ĕçĕн вăтам ĕмĕрхи формисен шутне çĕре общинăпа тытса тăнине, кустарнăй промышленнăçа тата артель организацийĕсене кăна кĕртмелле мар,—тесе ăнлантарать автор тепĕр тĕлте.—Кусем, паллах, пурте вăтам ĕмĕрхи формăсем, анчах вĕсен çумне тата çĕр е производство орудийĕсем ĕçлекен çын аллинче тĕрлĕ тĕслĕ майпа тăнине те хушмалла»), тет.

Тĕлĕнмелле калаçни! Хуть те мĕнле «ĕç формисене» те, мĕнле те пулин урăх формăсемпе улăштарсан кăна хавшатса вăйсăрлатма пулать вĕт; анчах апла пулсан та, пирĕн автор сăмахĕсенче (çавăн пекех, унпа пĕр шухăшлисен пĕрин те) çак çĕнĕ формăсене тĕпчесе ăнлантарса панине, çавăн пекех тата çак çĕнĕ формăсем мĕнле сăлтавпа киввисене ирĕксĕрлесех улăштарнине те тĕпчесе пĕлме тăрăшнине эпир пĕртте курмастпăр. Пуплевĕн иккĕмĕш пайĕ вара: «вĕрентўсен кăмăлне пула çак формăсене пĕтермелле тесе шутламастпăр эпир», тени пушшех те тĕлĕнтерет. Ĕç формисене «пĕтерме», урăхла каласан, общество членĕсем хушшинчи пĕр-пĕр производствăллă отношенисене урăхлатса çĕнетме пирĕн (урăхла каласан, социалистсен — вĕсен çинчен çўлерех асăрхаттарнине пăхăр) мĕнле средствăсем пур-ха? Çак отношенисене мĕнле те пулин вĕрентў тăрăх урăхлатса çĕнетес тенĕ шухăш чăн та ăссăр шухăш мар-им вара? Малалла каланине итлер: «пирĕн задача—хамăр наци хушшинчен хăйне евĕрлĕ цивилизацие мĕн пулсан та пурĕпĕрех аталантарса çитĕнтересси мар, анчах хамăр пата Хĕвеланăçĕнчи хирĕçлĕхсемпе туртса çуркаланакан цивилизацине те пĕтĕмĕшпех илсе кўресси мар: лайăххине, илме май пур тĕлтен пур çĕртен те илмелле, хамăрăнни пулать-и вăл, ютсен-и, вăл ĕнтĕ принцип ыйтăвĕ мар, практикăра меллĕ пултăр тенĕ ыйту. Ку ĕнтĕ çав тери çăмăл, уçă ăнланмалла ыйту, пулас, ун пирки калаçса тăмалли те çук», тет. Чăн та, мĕн тери просто! Лайăххине пур çĕртен те «илмелле те»—ĕçĕ те пĕтет! Вăтам ĕмĕрхи формăсенчен—производство хатĕрĕсем ĕçлекен çын харпăрлăхĕ пулса тăнине «илмелле», çĕнĕ (урăхла каласан капитализмлă) формăсенчен вара—ирĕклĕхе, пĕртанлăха, çутта кăларас ĕçе, культурăна «илмелле». Нимĕн çинчен калаçмалли те çук! Социологири субъективлă метод кунта алă тупанĕ çинчи пекех курăнса тăрать: социологи утопирен — çĕр ĕçлекен çын харпăрлăхĕ пулса тăнинчен пуçлать те,—унтан вара ĕмĕте мĕнле майпа пурăнăçа кĕртмелли условисене кăтартса парать: лайăххисене лерен тата çавăнтан «илмелле», тет. Обществăллă отношенисем çине ку философ—вăл е ку йĕркенен ахаль механически агрегачĕ çине пăхнă пек кăна, вăл е ку явленисем пĕр-пĕринпе ахаль

механически çыхăнса тăнă пек кăна пăхать. Вăл çавăн йышши явленисенчен пĕрне—ĕçлекен аллинче çĕр вăтам ĕмĕрхи формăпа тăнине илет те, ăна ытти пур тĕрлĕ формăсем ăшне те, кирпĕче пĕр çуртран тепĕр çурта куçарса хума юрană пекех, куçарса лартма май пур тесе шухăшлать. Анчах ку обществăллă отношенисене тĕпчесе вĕренессине мар, тĕпчемелли материала пăсса тăкнине кăна пĕлтерет вĕт, мĕншĕн тесен пурăнăçра çĕрĕçлекен аллинче çĕр, эсир кăтартса пана пек, уйрăм хăйне ăссĕн тăмасть вĕт: ку вăл—ун чухнехи производствăллă отношенисен сыпăкĕсенчен пĕри кăна вĕт; вăл производствăллă отношенисем çапла пулнă: çĕре шултра çĕр хуçисем, помещиксем хушшинче валеçсе пĕтернĕ пулнă, помещиксем, хресченсене эксплуатацилес ĕмĕтпе, вăл çĕре хресченсене пайла-пайла панă; çапла вара çĕр—натурăпа тӳлекен ĕç укçи пек пулса тăнă: вăл хресчене пурăнма кирлĕ продукт парса тăнă, çавăнпа вара хресчен помещике валли прибавочнăй продукт туса тăма пултарнă; вăл—хресченсем помещиксемшĕн туса тăмалли повиннăçсен фончĕ пулнă. Çак производствăллă отношенисен системине автор мĕншĕн сăнаса тухман-ха, мĕншĕн вăл пĕр явление ыттисен хушшинчен туртса кăларса, пачах суйса çутатса кăтартнă-ха? Мĕншĕн тесен автор обществăллă ыйтусене мĕнле тĕпчемеллине пĕртте пĕлмест: вăл хăй умне (тепĕр хут калатăп: выръссен «пĕтĕм» социализмне критиклес ĕçре, эпĕ г. Михайловский шухăшĕсене тĕслĕх шучĕпе кăна илсе усă куратăп) ун чухнехи «ĕç формисене» ăнлантарса парас тĕллев, вĕсене производствăллă отношенисен пĕрпаллă системи пек, пĕр паллă обществăллă формаци пек çутатса кăтартас тĕллев лартмасть те. Маркс сăмахĕсемпе калас пулсан, общество çине ĕçлесе, аталанса пыракан чĕрĕ организм çине пăхнă пек пăхма хушакан диалектикăллă метод—уншăн ют.

Ĕçĕн çĕнĕ формисем киввисене мĕн пирки хĕссе кăларса пынин сăлтавĕ çинчен пĕртте шухăшламасăрах, вăл, çав çĕнĕ формăсем çинчен калаçнă чухне те, çакăн йышши йăнăшах тăвать. Уншăн пулсан çак формăсем çĕр çĕрĕçлекен аллинче тăрассине «хавшатнине», тепĕр тĕрлĕ, пĕтĕмĕшле калас пулсан, çак формăсем — производитĕле производство хатĕрĕсенчен уйăрнипе палăрса тăнине кăтартса парса, вара ăна идеалпа килĕшсе тăмасть тесе айăпласа тăксан та çителĕклĕ. Кунта та вара шухăшĕсем каллех пачах ăссăр: вăл пĕр явление (хресченсем çĕрсĕрленсе пынине) ыттисем хушшинчен туртса кăларать те, ăна, тавар тăвакансем хушшинче конкуренци, пĕртанмарлăх, пĕрисем юхăнассине, теприсем пуяссине пурпĕрех кăларса яракан «таварлă хуçалăх» никĕсĕ çинче тытăнса тăракан производствăллă отношенисен урăх системин членĕ пек кăтартма та тăрăшмасть. Вăл пĕр явление — массăсем тусăннипе палăртса, теприне — сахаллăшĕсем пуйса кайнине аяккарах тĕртсе хăварать,—çакăнпа вара хăйне хăй лешне те, кăна та ăнланма пултарайми туса хурать.

Çитменнине çак меслетсене тата вăл—«пурăнăçăн ӳтпе те юнпа витĕннĕ формисенчи ыйтăвĕсем çине ответсем шырани», тет

(«Р. Б.», 94 çулхи 1-мĕш №-рĕ), чăннипе вара хăй пачах урăхла тăвать: чăн-пуррине тӳррĕнех пăхса ăнлантарса пама кăмăлламасăр, ку ĕçе тума та пĕлмесĕр,—пурлăхли пурлăхсăррине хирĕç кĕрешсе пынă пурăнăçри çак ыйтусенчен, сиенсĕр утописен облаçне намăслăн тарнă: çакна вара вăл—«пурăнăç ыйтăвĕсем çине, ыйтусене кăткăс реальнă чăн-пурри питĕ кирлине шута илсе, ответсем шырани», тет («Р. Б.» 1-мĕш №-рĕ), хăй вара, чăннипе, çак реально чăн-пуррине тĕпчесе ăнлантарса парасси çинчен шухăшласа та пăхмасть.

Çакăн вырăнне вăл пире тĕрлĕ обществăллă формацисенчен чи ăссăр турта-турта кăларнă, уйрăм элементсенчен шухăшласа кăларнă утопи парать: вăтам ĕмĕрхинчен çавна та çавна, «çĕннинчен» çавна та çавна илнĕ т. ыт. те. Паллах, çакăн çинче никĕслесе çирĕплетнĕ теори чăн-чăн обществăллă эволюцирен аякра тăрса юлмасăр пултарайман, мĕншĕн тесен пирĕн утопистсен хăйсен çавăнтан та лерен иле-иле пухнă элементсенчен шухăшласа кăларнă обществăллă отношенисенче мар, хресчен хăйне кулак тĕлĕшĕпе, кустарь скупщик тĕлĕшĕпе, рабочи фабрикант тĕлĕшĕпе хăйсене епле тытассине палăртса тăракан обществăллă отношенисенче пурăнса ĕçлемелле пулнă, çитменнине утопистсем хăйсем вĕсене пĕртте ăнланса илеймен. Çак хăйсем ăнланман отношенисене хăйсен идеалĕ тăрăх урăхлатса пыма тăрăшни вĕсен ăнăçсăр пулса юлнă, урăхла пулма та пултарайман.

Ака социализм ыйтăвĕ Российăра, «вырăс марксисчĕсем ĕçлеме тытăннă чухне», пĕтĕмĕшле каласан, епле тăнă.

Вырăс марксисчĕсем хăйсен ĕçне шăпах çакăнтан, хăйсенчченхи социалистсен субъективлă меточĕсене критикленинчен пуçланă; эксплуатаци пуррине кăтартнипе тата ăна айăпланипе лăпланмасăр, вĕсем ăна «ăнлантарса парасшăн» пулнă. Российăн реформă хыççăнхи пĕтĕм историйĕ тăршшĕнче массăсен хуçалăхĕсем тусăнса пынине, сахаллăшĕсем пуйса пынине курса тăрса, техника пур çĕрте те прогресланса пынипе пĕрлех вак производительсене тем тери вăйлăн экспроприациленине сăнаса тăрса, тавар хуçалăхĕ ăçта тата мĕн тери аталанса, вăйланса пынă, çак тĕлме-хирĕç юхăмсем те çавăнтах тата çав териех çуралса, вăйланса пынине асăрхаса тăрса,—вĕсем обществăллă хуçалăх буржуаллă (капитализмлă) йĕрке тăрăх, массăсене пурĕпĕрех экспроприацилесе пусмăрлама «тивĕç» йĕрке тăрăх организацилениие кăтартса памасăр иртме пултарайман. Вĕсен практикăллă программи мĕнле пулассине те вара тӳррĕнех çав шухăшах палăртса панă: ку программа вĕсене пролетариатăн буржуазине хирĕç пыракан кĕрешӳне, пурлăхсăр классен пурлăхлă классене хирĕç пыракан кĕрешӳне хутшăнма хушнă; çак кĕрешӳ, Российăри экономикăллă пурăнăçăн тĕп содержанийĕ пулса тăнă. Мĕнле хутшăнмалла?—ответне каллех пурăнăç хăйех каласа кăтартнă. Капитализм промышленноçăн тĕп отраслисене машинăллă шултра индустри тапхăрĕ таран аталантарса çитернĕ; производствăна çапла пĕрлештернипе, вăл çĕнĕ йĕркесен мате-

риальнӑй условийӗсене, ҫав вӑхӑтрах тата ҫӗнӗ социальнӑй вӑйне, фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисен класне, хулари пролетариат класне, ҫуратнӑ. Российӑри пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ экономика тӗлӗшӗнчен эксплуатаципе мӗнле пусмӑрланса пурӑнать, ку класс та ҫавӑн пекех буржуаллӑ эксплуатаци тӳссе пурӑнать, анчах та, хӑйне ирӗке кӑларас тӗлӗшпе, вӑл, ҫапах та, уйрӑмах лайӑх условисенче тӑрать: вӑл кивӗ, пӗтӗмӗшпех эксплуатаци никӗсӗ ҫинче тытӑнса тӑракан обществӑпа халӗ ӗнтӗ нимӗнле те ҫыхӑнса тӑмасть; пурӑнӑҫ обстановкипе ӗҫӗн условийӗсем ӑна хӑйсемех организацилесе пыраҫҫӗ, ирӗксӗрех шухӑшлаттараҫҫӗ, политикӑллӑ кӗрешӳ ҫулӗ ҫине тухма май параҫҫӗ. Хӑйне-хӑйех паллӑ, социал-демократсем хӑйсен пӗтӗм тимлӗхне тата пӗтӗм шанчӑкне ҫак класс ҫине хучӗҫ, хӑйсен программине вӗсем рабочисем хӑйсен класӗн задачисене ӑнланса илес ӗҫе пӑхӑнтарнӑ, ӑна кучухнехи йӗркене хирӗҫ тӳррӗнех политикӑллӑ кӗрешӗве тытӑнма пулӑшас тесе, ҫак кӗрешӗве пӗтӗм вырӑс пролетариатне хутшӑнтарас тесе, пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшса ӗҫле пуҫланӑ.

* * *

Халӗ ӗнтӗ, г. Михайловский социал-демократсене хирӗҫ епле ҫапӑҫнине сӑнаса пӑхар. Мӗн калать-ха вӑл вӗсен теориллӗ шухӑшӗсене хирӗҫ? вӗсен социализмла политикӑллӑ ӗҫне хирӗҫ?

Марксистсен теориллӗ шухӑшӗсене критик ҫапла каласа кӑтартать:

«Чӑнлӑх—имӗш, марксистсен сӑмахӗ тӑрӑх,—акӑ мӗнре: Россия, историллӗ кирлӗлӗхӗн имманентлӑ законӗсем тӑрӑх хӑйӗн капитализмлӑ производствине мӗнпур шалти хирӗҫлӗхӗсемпе пӗрле, вак капиталсене шултӑрисем ҫӑтса янипе пӗрле аталантарӗ, ҫав вӑхӑтра ҫӗртен уйӑрнӑ мужик—пролетари пулса тӑрӗ, пӗрлешӗ, «пӗтӗҫӗ», вара ӗҫӗ те шлепкере пулӗ, телейленсе ҫитнӗ этемлӗхӗн пуҫӗ ҫине ҫав шлепкене лартасси кӑна юлӗ».

Куратӑр-и ӗнтӗ,—чӑн пурӑнӑҫа, ӑна пуласлӑх тӗлӗшпе ӑнланас енчен марксистсем халӑх тусӗсенчен нимӗнпе те уйрӑм мар иккен: вӗсем хальхи пурӑнӑҫ тӗлӗшӗпе ним те тумаҫҫӗ, «перспективӑсемпе» кӑна интересленеҫҫӗ, пулас. Г-н Михайловскийӗн шухӑшӗ шӑпах ҫакӑн йышши пулнӑ пирки ним иккӗленмелли те ҫук: марксистсем—тет вӑл—«хӑйсем пуласлӑха курса тӑрассинче нимӗнле утопиллӗ япала та ҫук, ӑна чӑн наука каланӑ тӑрӑх йӑлтах шутласа, виҫсе хунӑ тесе ҫирӗппӗн ӗненсе тӑраҫҫӗ», унтан, юлашкинчен, тата уҫҫӑнрах ҫапла калать: марксистсем «историйӗн абстракциллӗ схеми тӗрӗссине иккӗленмесӗрех ӗненсе тӑраҫҫӗ», тет.

Пӗр сӑмахпа каласан, тахҫантанпах марксистсене айӑплама тӑрӑшса, вӗсен шухӑшӗсене хирӗҫ чӑннипе нимӗн кирлине те калама пултарайманнипе, чи ухмахла, йӗрӗнмелле айӑплама тӑрӑшнинех куратпӑр. «Марксистсем историйӗн абстракциллӗ схеми тӗрӗссине иккӗленмесӗрех ӗненсе тӑраҫҫӗ» иккен!!

Ара ку пӗр вӗҫӗмсӗр суя та ултав вӗт!

Ниҫта та, нихӑҫан та, марксистсенчен пӗр ҫын та хӑй шухӑ-

шĕсене: Российăра капитализм «пулмаллах», «мĕншĕн тесен» вăл Хĕвеланăçĕнче те пулнă т. ыт. те тенĕ меслетсемпе сăлтавламан. Нихăçан та, марксистсенчен пĕр çын та Маркс теорине, вăл — çак паллă обществăллă-экономикăллă формацие ăнлантарса панисĕр пуçне, тата пурте пăхăнма тивĕç философиллĕ-историллĕ схема пулса тăрать тесе шутламан. Пĕртен пĕр субъективлă философ г. Михайловский кăна Маркса çав тери ăнланманнине кăтартса пама пултарнă, ун вĕрентӳне—пĕтĕмĕшлĕ-философиллĕ теори тесе шутланă та, хăй сăмахĕсене хирĕç Маркcран: адресна тĕрĕс çырайман эсĕ тесе, пач татăклăн ăнлантарса ответленĕ сăмахсем илтнĕ. Нихăçан та, пĕр марксист та хăйĕн социал-демократла шухăшĕсене — вĕсем пурăнăçпа килĕшсе тăнинчен пуçне тата çак паллă, урăхла каласан, вырăссен, обществăллă-экономикăллă отношенийĕсен историйĕпе тĕп-тĕрĕс килĕшсе тăнинчен пуçне, урăх нимĕнпе те çирĕплетсе паман, çитменнине çирĕплетме те урăх нимĕнпе те пултарайман, мĕншĕн тесен, «марксизм» вĕрентӳне пуçласа тунă çын, Маркс хăйех, çак требовани çинчен уççăнах, татăклăнах каласа пĕлтернĕ те ăна хăй вĕрентĕвĕн никĕсне хунă.

Паллах, г. Михайловский çак заявленисене хирĕç: шăпах историйĕн абстракциллĕ схемине ĕненни çинчен каланисене эпĕ «хам хăлхапа хам илтрĕм» тесе темĕн чухлех калама пултаратех. Анчах мĕн ĕç пур-ха пире, социал-демократсене, е кама та пулин урăх çынна—г. Михайловскийĕн хăйĕнпе калаçакан çынсенчен тĕрлĕрен юрăхсăр халлапсем итлемелле пулнинче? Ку çакна кăна, урăх ниме те мар: хăйĕнпе калаçакан çынсене вăл питĕ телейлĕ суйласа тупма пĕлнине кăна кăтартса тăмасть-и вара? Çак çивĕч ăслă философпа калаçакан çивĕч ăслă çынсем, паллах, хăйсене марксистсем, социал-демократсем тесе тата ытти çавăн пекки калана пулĕ—анчах хальхи вăхăтра (ăна тахçанах асăрханă ĕнтĕ) хуть те мĕнле прохвост та «хĕрлĕ» тум тăхăнма юратнине кам пĕлмест-ха? (Çакна пурне историйĕн абстрактлă схемисене ĕненсе пурăнни çинчен каланă сăмахсене г. Михайловский чăнахах илтнĕ те, нимĕн те суйса кăтартман пулĕ тесе çырнă. Анчах ку тĕлĕшпе эпĕ халех çакна асăрхаттарса каламалла тесе шутлатăп: хам мĕн хака илнĕ, çав хакпах сутатăп.) Г-н Михайловский кунта та вара çав тери çивĕч куçлă пулса, «тумланнă çынсене» марксистсенчен уйăрма пĕлеймест пулсассăн, е, Маркса çав тери тарăн ăнланса, вăл хăйĕн пĕтĕм вĕрентӳне («пирĕн куç умĕнче мĕн пулса пырать, çавсене» кăна формулăласа каланине) мĕнпе тĕрĕслемелли критерие çав тери çине тăрса кăтартса панă пулин те, ăна асăрхаймарĕ пулсассăн,— ку та каллех г. Михайловский ăслă маррине çех кăтартса парать, урăх ниме те мар.

Кирек мĕнле пулсассăн та, вăл, «социал-демократсене» хирĕç пичет урлă тавлашма тытăннă чухне, хăй куçĕ умĕнче социалистсен ушкăнне, çак ята хăйсен çине тахçанах, çитменнине тата пĕр пĕччен илнĕ ушкăна шутра тытмалла пулнă, çавăнпа та ăна ытти пĕр ушкăнпа та пăтраштарма юрамасть, унăн литературăра

хăйĕн представителĕсем—Плехановпа унăн кружокĕ пур*. Çапла тунă пулсан вара,—кирек мĕнле кăшт та пулин йĕркеллĕ çын та çапла тумалла пулни, пăллах,—тата социал-демократсен чи малтанхи сочиненине те пулин, Плехановăн «Наши разногласия» ятлă кĕнекине, аллине тытса пăхнă пулсассăн — ун чухне вара вăл унта, малтанхи страницăсенчех, автор, кружокăн пур членĕсен ячĕпе, татăклăнах çапла каласа çырнине вулама пултарнă пулĕччĕ:

«Эпир хамăр программăна пĕртте аслă ят авторитечĕпе» (урăхла каласан, Маркс авторитечĕпе) витсе тăрасшăн мар». Вырăс чĕлхине ăнланатăр-и эсир, г. Михайловский? Ăнланатăр-и эсир абстрактлă схемăсене ĕненни тата вырăс ĕçĕсем çинчен калаçнă чухне Маркс авторитетне йышăнманни хушшинчи уйрăмлăха?

Хăвăрпа калаçнă çынсенчен илтнĕ малтанхи сăмахсенех, эсир марксистла шухăшсем тесе сарса, çав вăхăтрах социал-демократсен паллă çыннисенчен пĕри пичет урлă пĕтĕм ушкăн ячĕпе каланă заявленине астутармасăр хăварса, хăвăр тӳрĕ мар хăтланнине ăнланатăр-и эсир, çук-и? .

Тата маларах вара Плеханов пушшех те татăклăн калать:

«Тепĕр хут калатăп: вырăссен кучухнехи пурăнăçне хаклас тĕлĕшпе Маркс вĕрентӳне чи хыттăн тытса пыракан çынсем хушшинче те разногласи пулма пултарать»; пирĕн вĕрентӳ— «питĕ кăткăс, пăтрашса пĕтнĕ обществăллă отношенисене çак наукăллă теорипе уса курса тĕпчеме тăрăшнă малтанхи опыт», тет.

Кунтан та уççăнрах калама йывăр пек: марксистсем Маркс теорийĕнчен, паллах хаклă меслечĕсене кăна йышăнса илеççĕ, вĕсемсĕр обществăллă отношенисене тĕпчесе пĕлме май çук, çавăнпа та вара, çак отношенисем тĕрĕссипе-тĕрĕс маррине тĕрĕслемелли виçе пĕртте абстрактлă схемăсенче е ытти тĕрлĕ юрăхсăр япаласенче мар, вăл тĕрĕслĕхре тата пурнăçпа килĕшсе тăнинче пулать.

Е тата эсир çакăн пек пĕлтернисемпе пĕрлех, автор чăннипе урăхла шухăшланă, теместĕр-и? Анчах вăл пĕртте тĕрĕс мар. Автор «Россия капитализмлă тапхăр урлă аталанса иртме тивĕç-и, çук-и?»—тенĕ ыйту тĕлĕшпе ĕçленĕ. Çапла ĕнтĕ, ку ыйтăва пĕртте марксистла формулăламан, тăван çĕршывăмăрти тĕрлĕ философсен субъективлă меточĕсем тăрăх формулăланă пулнă; вĕсем вĕт çак тивĕçлĕх критерийĕ шутне те начальство политикине, те «общество» ĕçне, те обществăн «çын природипе килĕшекен» идеалне тата çавăн йышши ытти пăтранчăка кĕртнĕ. Халĕ ĕнтĕ çапла ыйтса пăхар: çавăн йышши ыйтăва хирĕç абстрактлă схемăсене ĕненекен çын епле тавăрса ответлемелле пулнă-ха? Куç-кĕретĕнех паллă, ун пек çын диалектикăллă процесăн тавлашса çĕнейми чăнлăхĕ çинчен, Маркс теорийĕн пĕтĕмĕшле-философиллĕ пĕлтерĕшĕ çинчен, çĕршывсем кашниех

* Урăхла каласан, «Освобождение Труда» ятлă группа. *Ред.*

пĕр-пĕр фаза урлă аталанса иртме тивĕççи çинчен... тата ыт. çинчен те, т. ыт. те калаçма тапратнă пулĕччĕ.

Мĕнле ответленĕ-ха вара Плеханов?

Марксист мĕнле ответ пама пултарнă, çавăн пек кăна:

Пулма тивĕçли çинчен калакан ыйтăва вăл, ку пустуй ыйту пирки, тата субъективистсене кăна интереслентерме пултарнă пирки, пачах аякка сирсе хăварнă та, пĕрех май чăннипе пур обществăллă-экономикăллă отношенисем çинчен, вĕсен чăн-чăн эволюцийĕ çинчен анчах каланă. Çавăнпа та вара вăл çакăн пек тĕрĕс мар лартнă ыйту çине тӳрĕ ответ та паман, ун вырăнне вăл çапла тавăрса каланă: «Россия капитализмлă çул çине *тухса тăнă*», тенĕ.

Г-н Михайловский вара çапах та, пĕлнĕ çын пек пулса историйĕн абстракциллĕ схемисене ĕненни çинчен, кирлĕлĕхĕн имманентлă законĕсем çинчен тата ытти çавăн майлă ерунда çинчен те калаçать. Çавна вара вăл «социал-демократсене хирĕç тавлашни» тет!!!

Пĕртте ăнланмастăп: çакăн йышши çынна—полемист теççĕ пулсан, мĕнле çынна ĕнтĕ кăлăхах вĕрекен анчăк теççĕ вара?!

Г-н Михайловскийĕн эпир çӳлерех кăтартса панă сăмахĕсем пирки тата çакна та палăртмасăр иртме май çук: социал-демократсен шухăшĕсене вăл—«Россия хăйĕн капитализмлă производствине аталантарма тытăнĕ», тенĕ пек туса кăтартать. Çак философ шухăшĕ тăрăх, Российăра халĕ «хăйĕн капитализмлă производстви» çук пек пулса тухать. Автор, вырăс капитализмĕ пĕр миллион çурă рабочие çитерсен çырлахать текен шухăшпа килĕшет пулас,—пирĕн «халăх тусĕсен» çак ачалла идейипе эпир малалла тата та тĕл пулатпăр-ха, ирĕк ĕçе мĕнпур ытти меслетсемпе эксплуатациленине вĕсем ăçта кĕртни паллă мар вара. «Россия хăйĕн капитализмлă производствине—мĕнпур «шалти хирĕçлĕхĕсемпе пĕрле—аталантарма тытăнĕ, çав вăхăтрах çĕртен уйăрнă мужик—пролетари пулса тăрĕ», тет. Вăрмана шалалла кĕнĕ-çемĕн вут-шанкă ытларах! Çапла ĕнтĕ, Российăра «шалти хирĕçлĕхсем» çук пулать иккен? урăхла, тӳррĕнех калас пулсан, капиталистсен пысăк мар ушкăнĕ халăх массине эксплуатацилесе пурăнмасть? халăхăн питех те пысăк нумайрахăшĕ тусăнса пыни тата пĕчĕк ушкăн пуйса пыни çук? Мужикăн малашне тин çĕртен уйăрăлмалла пулать-ха апла? Российăн реформа хыççăнхи историйĕ вăл—хресченсене халиччен ниçта та курман пек хăвăрт, массăллăн экспроприацилесе пынине пĕлтермест пулсан, урăх мĕн пулать-ха тата? Кун йышши сăмахсене пурте илтмелле хыттăн калас тесен, нимрен хăрами хастар пулмалла. Г-н Михайловский вара шăпах çакăн йышши хастар çын: «Маркс пролетариат ӳссе çитнĕ, капитализм ӳссе çитнĕ вăхăтра ĕçленĕ, пирĕн вара вĕсене малтан туса хумалла-ха», тет вăл. Российăра пролетариат туса хумалла-ха иккен?! Российăра—массăсем çав тери чухăнлăхра пурăннине, ĕççыннине çав тери намăссăр эксплуатацилесе тăнине курма май пур пĕртен-пĕр çĕршывра, чухăнсен

йывăр пурăнăçĕ тĕлĕшĕнчен Англипе танлаштарнă (питĕ законлă танлаштарнă) çĕршывра, нумай миллион халăх выçăпа аптăраса пурăнни, сăмахран, тырпула ют çĕрсене ытларан-ытла кăларнипе пĕрлех, пĕр вĕçĕмсĕр пыракан явлени пулса тăнă çĕршывра,— çакăн пек Российăра пролетариат çук пулать!!

Ман шутпа г. Михайловскийне çак классикла сăмахсемшĕн чĕрĕ чухнех памятник лартмалла пулнă!

(Тепĕр тесен, г. Михайловский, теп, кунта та тарса пытанма пăхĕ: эпир пĕртте Российăра пролетариат пачах çук тесе калас-шăн пулман, унта капитализмлă пролетариат çук тесе кăна каласшăн пулнă? теме пăхĕ. Çапла-и? Анчах, апла пулсан вара, мĕншĕн ун çинчен каламан-ха эсир? «Пĕтĕм ыйту» та çакă çех пулса тăрать те вĕт: вырăс пролетариачĕ вăл — обществăллă хуçалăха буржуаллă йĕркепе организациленĕ хуçалăхри пролетариат-и, е мĕнле те пулин урăх йышши-и? Эсир икĕ статья тăршшĕнче те çак пĕртен-пĕр серьезнăй та кирлĕ ыйту çинчен «пĕр сăмах та» калайман пулсан, ун вырăнне тĕрлĕрен юрăхсăра лапăртатса, çитменнине тем амак таранах суятăр пулсан, кам айăплă-ха ĕнтĕ уншăн?)

Тепĕр тесен, Российăра ĕççыннисен пурăнăçĕ чăтма çук йывăр пулса тăнине «халăх тусĕсем» фарисейле курмасăр иртме тă-рăшни, ĕççыннине «кăштах тайăлнă» пек кăна туса кăтартма тăрăшни, çавăнпа та ĕнтĕ, пĕтĕм ĕçе тĕрĕс çул çине кăларас тесен, «культурăллă обществăпа» правительство тăрăшкалани те çителĕклĕ пек туса кăтартни, çаксем вĕсем — халăх тусĕсен яланхи те, пĕр вĕçĕмсĕр çине тăрсах тытса пыракан тактики пулса тăнине, каярах эпир тата та курăпăр-ха. Ку рыцарьсем вĕсем,—ĕçлекен халăх пурăнăçĕ «ура çинчен тайăлнă» пирки мар, вĕсене пĕр пĕчĕк ушкăн эксплуататорсем ним намăса пĕл-месĕр çаратса пурăннă пирки начар пулнине курасшăн мар пулса куçĕсене хупсассăн, çак эксплуататорсене курасшăн мар пулса, страуссем майлă пуçĕсене чиксе пытарсассăн,—çак эксплуататор-сем пачах пĕтсе çухалĕç тесе шухăшлаççĕ. Анчах та, социал-демократсем вĕсене—ку вăл, чăн пурăнăç çине тӳррĕн пăхма хăрани—чи намăссăр шиклĕх тесен, социал-демократсем, ĕçха-лăхĕ эксплуатациленсе пурăннинчен тĕпчеме тытăнса, çак экс-плуатаци—вырăс обществи халăх массине пролетариатпа бур-жуази çине пайласа тăракан буржуаллă йĕркепе организацилен-нинчен, тата буржуазине пуçпулса пурăнма май паракан органтан—вырăс государствин креслă характерĕнчен кăна килет тесе каласассăн, çавăнпа та вара пурăнăçа лайăхлатмалли «пĕр-тен-пĕр çулйĕр» вăл—пролетариат буржуазине хирĕç класлă кĕрешни пулса тăрать тесе каласассăн,—ун чухне вара çак «халăх тусĕсем»: социал-демократсем халăха çĕрсĕр тăратса хăварасшăн!! пирĕн халăхăн экономикăллă организацине çĕмĕрсе ватасшăн!!—тесе çухăрма тытăнаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ эпир çак, сахалтан та йĕркесĕр «тавлашăвăн» чи тарăхтаракан тĕлне—г. Михайловский социал-демократсен поли-тикăллă ĕçне «критиклени»(?) тĕлне çитетпĕр. Социалистсемпе

агитаторсем рабочисен хушшинче ĕçлени çинчен пирĕн легальнăй пичетре тӳрĕ кăмăллăн сӳтсе-явма май çуккине тата цензура тĕрĕслесе тăракан йĕркеллĕ пичет ку тĕлĕшпе тума пултарни пĕртен пĕри вăл—«йĕркеллĕн чĕнмесĕр тăни» пулнине пурте ăнланаççĕ. Г-н Михайловский çак чи çăмăл правилăна маннă та, вулакансене хăй çеç калама пултарнă правăпа усă курса, социалистсене пылчăкпа варламашкăн вăтанман.

Анчах та, çак нимĕн умĕнче те именсе тăман критика хирĕç кĕрешмелли майсем легальнăй пичетрен пуçне урăх та тупăнĕç-ха.

«Хам ăнланнă тăрăх—тет г. Михайловский, айван пек пулса—вырăс марксисчĕсене виçĕ разряда пайлама пулать: ахаль çех пăхса тăракан марксистсем (ĕçе хутшăнмасăр пăхса тăракансем), пассивлă марксистсем («çуралнă чухнехи хĕнлĕхе кăна çăмăллатаççĕ». Вĕсем çĕр ĕçлесе пурăнакан халăхпа «интересленмеççĕ, производство хатĕрĕсенчен уйăрнисем çине кăна хăйсен шанăçĕпе тинкерӳне хураççĕ») тата активлă марксистсем (яла тата малалла та тусăнтарса пыма тӳррĕнех тăрăшакансксрсем)».

Мĕн ĕнтĕ ку? Вырăс марксисчĕсем вĕсем—хальхи пурăнăç вăл капитализмлă общество, унтан çăлăнса тухмалли пĕртен-пĕр çул—пролетариатăн буржуазине хирĕç пыракан креслă кĕрешĕвĕ пулса тăрать текен социалистсем пулса тăнине г. критик пĕлмесĕр тăма пултарайман ĕнтĕ? Апла пулсан вăл мĕнле майпа-ха, тата мĕн пирки вĕсене темле ăссăр ирсĕрлĕхпе пĕрле пăтраштарса пĕтерет-ха? Марксизмăн чи ăнланмалли тĕп положенийĕсене куçкĕретĕнех пĕртте йышăнман çынсене, хăйсене нихăçан та, ниçта та уйрăм ушкăн шучĕпе тухса палăртман çынсене, хăйсен мĕнле те пулин уйрăм программи çинчен нихăçан та, ниçта та каласа пĕлтермен çынсене марксистсен ятне пама мĕнле (нравственнăй, паллах ĕнтĕ) право пулнă-ха унăн?

Хăйĕн çакăн йышши нимĕне юрăхсăр меслечĕсене тӳрре кăларасшăн пулса, г. Михайловский хăйне валли пытанмашкăн хушăксем темĕн чухлех хăварнă.

«Тен кусем чăн марксистсем те мар пулĕ—тет вăл вĕçкĕнленсе çăмăллăн, çивĕч чĕлхеллĕ пулма тăрăшса—анчах хăйсене хăйсем вĕсем—марксистсем тесе шутлаççĕ, çынсене те çапла каласа пĕлтереççĕ», тет. Ăçта пĕлтернĕ, хăçан? Питĕрти либеральнăй тата радикальнăй салонсенче-и? Уйрăм çырусенче-и? Çапла тейĕпĕр. Апла пулсан, калаçăрах вĕсемпе хăвăр салонăрсемпе хăвăрăн уйрăм çырăвăрсенче! Анчах эсир—публика умĕнче нихăçан та, ниçта та (марксизм ялавне çĕклесе) тухса калаçман çынсене хирĕç пичетре, публика умĕнче тухса калаçатăр вĕт! Çитменнине тата хăвăр, çак вăхăтрах, социал-революционерсен[13] «пĕр» ушкăнĕ çеç «социал-демократсен» ятне илтсе тăнине, вĕсене урăх никампа та пăтраштарма май çуккине пĕлсе тăнă çĕртех, эпир социал-демократсене хирĕç тавлашатпăр тесе калама хăятăр!

(Г-н Михайловскийĕн тĕл пулнă пĕр «факт çинче» те пулин чарăнса тăрам. Унăн статьине вуласа тухнă кирек-хăш çынăн та, вăл г. Скворцова та («Экон. причины голодовок» ятлă статья

авторне) «марксистсен» шутне кĕртнипе килĕшмелле пулать. Çав вăхăтрах ку господин хăйне пĕртте марксист тесе шутламасть; çитменнине, ун çине социал-демократсен шухăшĕ енчен пăхас пулсан, вăл—чи ирсĕр буржуйран пуçне урăх никам та мар пулнине курма, социал-демократсен литературипе чи çиелтен кăна паллашсан та çителĕклĕ пулĕччĕ. Вăл прогрессем валли тесе тунă проектсен обществăллă тавралăхĕ буржуаллă тавралăх пулнине, чăннипех хресчен хуçалăхĕнче палăракан мĕнпур «культура лайăхлатнисем», сахалăшсен пурнăçне кăна лайăхлатса, массăсене пролетаризацилесе пыракан буржуаллă прогреса пĕлтернине ăнланмасть пулсан,—мĕнле марксист пултăр-ха ĕнтĕ вăл? Хăйĕн проекчĕсене пурнăça кĕрттерме ыйтнă государство—буржуазине кăна пулăшма, пролетариата пусарма çех пултаракан класлă государство пулнине ăнланмасть пулсассăн, мĕнле марксист пултăр ĕнтĕ вăл!) Г-н Михайловский, айăпа лекнĕ гимназист пек хуçкаланса çаврăнкалать: эпĕ пĕртте айăплă мар унта—тесе кăтартма тăрăшать вăл вулакана—эпĕ «хам хăлхасемпе илтрĕм, хам куçăмсемпе куртăм». Питĕ лайăх ара! Куçăр умăрта сирĕн ирсĕр çынсемпе киревсĕр çынсенчен пуçне урăх никам та çуккине çăмăллăнах ĕненетпĕр эпир, анчах пирĕн, социал-демократсен мĕн ĕç пултăр-ха ĕнтĕ унта? «Хальхи вăхăтра», социализмла кăна мар, кăшт та пулин хăйхаллĕн тата тӳррĕн обществăллă ĕçшĕн те государство органĕсем хĕсĕрленĕ «чухне»,—вăл е ку парти ялавĕ—народовольчество, марксизм е, хуть калăпăр, конституционализм ялавĕ айĕнче чăннипех ĕçлекен пĕр çын пуçне темиçе теçеткешер çын пуш сăмах çаптаракансем, çак ятпа хăйсен либеральнăй шиклĕхне витсе пытараканскерсем, тата, тен, темиçе тӳррĕмĕнех ĕнтĕ подлецсем, хăйсен ĕçĕсемшĕн кăна тăрăшаканскерсем тивнине кам пĕлмест-ха ĕнтĕ? Çак çулйĕрсенчен хăшне те пулин пĕрне, унăн ялавне хуть те мĕнле пăрахăç этем те (çитменнине çынсем умĕнче мар, вăрттăн) пылчăкласа вараланăшăн, чи ирсĕр çын кăна ӳпкелешме пултарни, уççăнах паллă мар-и? Г-н Михайловскийĕн пĕтĕм çырăвĕ—пĕр вĕçĕмсĕр суя, фактсене юри пăсса пĕтерни, юри арпаштарса кăна кăтартни. Социал-демократсем хăйсен ĕçне мĕнле «чăнлăхсенчен» пуçласа тытăнаççĕ, вăл вĕсене пачах суйса кăтартнине, вĕсене марксистсенчен никам та, ниçта та, нихăçан та каламан пулин те, каланă пек туса кăтартнине эпир çӳлерех курсаттăмăр ĕнтĕ. Вырăс пурнăçне социал-демократсем мĕнле ăнланнине тĕптĕрĕс каласа кăтартнă пулсассăн, вăл, çак шухăшсемпе «пĕр майпа кăна»—пролетариатăн хăйĕн класлă задачине аталантарма пулăшса тата ăна кучухнехи йĕркене хирĕç политикăллă кĕрешме пĕтĕçтерсе кăна «килĕшме» май пуррине курмасăр иртме пултараймĕччĕ. Анчах унăн тата тепĕр чее меслет те юлнă-ха. Хăйне, имĕш, айăпсăрах тарăхтарнă пек кăтартса вăл куçĕсемпе фарисейле çӳлелле тĕллесе пăхать те, пылаклăн каласа хурать: «Кăна илтнĕшĕн питĕ саванатăп эпĕ, анчах çапах та, эсир мĕне хирĕç протестленине пĕртте ăнланмастăп» (çаплах калать вăл «Р. Б.» журналăн 2-мĕш №-че). «Эпĕ пассивлă марксистсем

ҫинчен мӗн шутланине вуласа пӑхӑр-ха, вара эсир эпӗ мӗн каланине курӑр: этика енчен пӑхсассӑн, вӗсене хирӗҫ нимӗн те калама май ҫук», тет.

Ку ӗнтӗ, паллах. малтанхи мӗскӗн меслетсенех тепӗр хут чӑмлани пулать.

Калӑрсам тархасшӑн: пӗр-пӗр ҫын социальнӑ-революциллӗ народничествӑна критиклетӗп тесе пӗлтернӗ хыҫҫӑн (урӑх народничество ун чухне пулман та-ха,—ҫав тапхӑра илетӗп), хӑй ҫавӑнтах, сӑмахран, ак ҫакӑн йышши япаласем ҫинчен калаҫма тытӑнсан—ун пек ҫынӑн ӗҫне мӗнле ят парӑр-ши эсир:

«Народниксем, эпӗ ӑнланнӑ тӑрӑх, ҫак виҫӗ разряда пайланса тӑраҫҫӗ: хӑйсем йышӑннӑ ҫулпа вӗҫне ҫитиех тӳрӗ пыракан народниксем, вӗсем мужик идейне хапӑлах туса йышӑнаҫҫӗ, ҫавӑнпа та унӑн кӑмӑлне кура, розгӑпа ҫаптарас йӗркесене, арӑмсене хӗнес йӑласене ырлаҫҫӗ, пӗр сӑмахпа каласан—ытти пур тӗлӗшрен те вӗсем чӑпӑрккапа патак правительствин чи ирсӗр политикине пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ, мӗншӗн тесен ку ирсӗр политикӑна та — халӑх политики теҫҫӗ вӗт; унтан хӑравҫӑ-народниксем пур, имӗш; вӗсем мужик шухӑш-кӑмӑлӗпе интересленмеҫҫӗ, тӗрлӗрен ассоциацисем т. ыт. те организацилесе, ытти ҫӗршывсенчен Российӑна, уншӑн ют революциллӗ движени илсе килсе йышӑнтарма тӑрӑшаҫҫӗ т. ыт. те— хӑравҫӑ народнике ҫӑмӑллӑнах вӗҫне ҫити тӳрӗ пыракан е, тепӗр тӗрлӗ каласан харсӑр народниксен ушкӑнне илсе ҫитерме пултаракан яка ҫул пулмасан, ӑна хирӗҫ этика тӗлӗшӗнчен нимӗн те калама ҫук; юлашкинчен вара—харсӑр народниксем пур, вӗсем ҫирӗп хуҫалӑхлӑ мужикӗн халӑх идеалне пӗтӗмӗшпех туллин пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа та ҫине тӑрсах кулакланма тӑрӑшса, вӗсем ҫӗр ӗҫне тытӑнаҫҫӗ», — ҫакӑн йышши сӑмахсене, паллах, тӳрӗ ҫынсем пурте ултавлӑн тата ирсӗрӗн мӑшкӑлани темелле. Ҫитменнине ҫакӑн йышши сӑмахсем каланӑ ҫынна хирӗҫ народниксем ҫав пичетрех тавӑрса калама пултарас ҫук пулсассӑн; ҫитменнине тата ҫак народниксен идейисене ку таранччен варттӑн кӑна сарса тӑнӑ пулсан, ҫавӑнпа та нумайӑшӗ вӗсем ҫинчен тӗрӗссипе пӗлеймесӗр, вӗсене народниксем ҫинчен мӗн каланӑ, ӑна пурне те ҫӑмӑллӑнах ӗненме пултарнӑ пулсан,—ун чухне вара, пурте килӗшмелле, ун йышши ҫын...

Тен, ҫапах та, г. Михайловский хӑй те, кунта мӗнле сӑмах каламаллине йӑлтах манма ӗлкӗреймен пулӗ.

* * *

Анчах ҫитӗ! Ҫакӑн йышши суйса лапӑртатнӑ сӑмахсем г. Михайловскийӗн тата та темӗн чухлех; анчах эпӗ—ҫак пылчӑкра чакалтаннисӗр пуҫне, унта та кунта систерсе ҫеҫ каласа сапаланӑ сӑмахсене пуҫтарнисӗр пуҫне, вӗсене танлаштара-танлаштара пӑхнисӗр пуҫне, тӗплӗн каланӑ сӑмахсене пӗрне те пулин хирӗҫленине хуть пӗрре мӗнлескерне те пулсан тупас тесе шыранисӗр пуҫне—урӑх тата ытларах йӑлӑхтаракан тивӗҫсӗртерех, хурарах ӗҫ пуррине пӗртте пӗлместӗп.

Ҫитӗ! *Апрель 1894.*

## *Издательсенчен*[14]

Вулакан çын статья текстĕнче—хăшпĕр ыйтусене малалла тата тĕпчесе пĕлтересси çинчен палăртса каланисене курма пултарать, анчах тĕрĕссипе статьяра ун пек тĕпчесе кăтартни çук.

Сăлтавĕ кунăн çакă: ку статья—«Русское Богатство» журналăн марксизм çинчен çырнă статьисене хирĕç тавăрса каланă ответăн малтанхи пайĕ кăна. Вăхăт питех те сахал пулнă пирки, ку статья вăхăтра пичетленсе тухаймарĕ, çавăнпа та эпир тата та кĕтсе тăма май çук тесе шутлатпăр: эпир ахаль те 2 уйăх кая юлнă. Акă ĕнтĕ мĕн пирки эпир, статьяна пĕтĕмĕшпе пичетлесе пĕтерессе кĕтмесĕрех, г. Михайловский «критикине» тĕпчесе тухнă пайне пичетлесе кăларма йышăнатпăр.

Пичетлесе кăларма хатĕрленекен 2-мĕшпе 3-мĕш[15] изданисенче, вулакан асăннă тĕпчеврен пуçне тата, «Русское Богатство» журналăн ытти пуçлăхĕсен Южаковпа С. Кривенко господасен обществăллă-экономикăллă шухăшĕсене тĕпчесе кăтартнине, вĕсемпе пĕрлех тата Российăн экономикăллă пурăнăçĕ çинчен çырнă очерка, унтан тата «социал-демократсен» çакăнтан тухса тăракан «идейисемпе тактики» çинчен çырса пĕлтернине тупма пултарĕ.

## *Çак издани пирки*[16]

Кĕнекен çак изданийĕ шăпах пĕрремĕш изданийĕ пекех пулса тăрать. Эпир статья текстне çырас ĕçе пĕртте хутшăнманскерсем, текста мĕнле те пулин улăштарма тивĕçлĕ мар тесе шутларăмăр, çавăнпа та пичетлесе кăларас тĕлĕшпе кăна ĕçлерĕмĕр. Ку ĕçе эпир, çак сочинени пирĕн социал-демократла пропаганда ĕçне мĕн чухлĕ те пулин чĕртсе яма пулăшассине шанăç пулнипе тытăнтăмăр.

Çын социал-демократла идейăсене ĕненсе пурăнать пулсассăн, вăл çак идейăсене епле те пулин пропагандăласа сарма тăрăшмалла тесе шутланă пирки, эпир çак кĕнеке авторĕпе пĕр пек шухăшлакан çынсене пурне те,—çак сочинение те, марксизмла пропагандăн ытти органĕсене пурне те мĕнпур майсемпе (пуринчен малтан, паллах, вĕсене пичетлесе кăларса) епле те пулин ытларах сармашкăн пулăшма ыйтатпăр. Вăл ĕçе сарма хальхи вăхăт уйрăмах аван. «Русское Богатство» журнал ĕçхĕлĕ пирĕн тĕлĕшпе ытларан-ытла чăркăшланса пырать. Обществăра социал-демократла идейăсене сарассине пĕтерсе хума тăрăшса, журнал пире пролетариат интересĕсемшĕн тăрăшманнинче, массăсене тусăнтарасшăн тăрăшнинче айăпласси патнех çитрĕ. Кун йышши меслетсемпе журнал хăйне кăна сиенлесе, пирĕн малашнехи çĕнтерĕве хатĕрлет тесе шутлама пултаратпăр эпир. Анчах çакна та манмалла мар: элекçĕсен аллинче, хăйсен элекĕсене чи анлăн пропагандăлама материальнăй хатĕрсем темĕнли те пур. Вĕсен аллинче темиçе пин экземпляр журнал, читальнăсемпе библиотекăсем те вĕсене пулăшаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ суяна ăнăçлăн сарма хăшпĕр чухне привилегиллĕ вырăн та çителĕклĕ маррине хамăр тăшмансене кăтартса парас тесен, пирĕн мĕнпур вăйсене хурса ĕçлемелле. Çак вăйсем тупăнĕç тесе, эпир çирĕппĕнех шанса тăратпăр.

***Июль 1894.***

III-мёш выпуск.

Юлашкинчен тата тепĕр «халăх тусĕпе», г. Кривенкопа, паллашар, вăл та социал-демократсене хирĕç тӳррĕнех вăрçăпа тухрĕ.

Анчах эпир, г. Кривенко статьисене («По поводу культурных одиночек» 1893 çулхи 12-мĕш №-те тата 1894 çулхи 1-мĕш №-те «Письма с дороги»), г. Михайловский тата г. Южаков статьисене тĕпченĕ пек, тĕпчесе тăмăпăр. Лере вĕсен статьисене тĕпчени пĕтĕмĕшпех кирлĕ пулнă: малтанхинче—вĕсен пĕтĕмĕшпе материализмпа марксизма хирĕç каланă шухăшĕсене уççăнах пĕлсе çитес шутпа; иккĕмĕшĕнче—вĕсен политикăллă-экономикăллă теорийĕсене пĕлес шутпа. Халĕ ĕнтĕ, «халăх тусĕсем» çинчен пур енчен те туллин пĕлес тесе, пирĕн вĕсен тактикипе, вĕсен практикăллă сĕнĕвĕсемпе, вĕсен политикăллă программипе паллашмалла пулать. Ку программăна вĕсем, теориллĕ шухăшĕсене каласа кăтартнă пек, ниçта та тӳррĕнех, вĕçне çитиех, туллин каласа кăтартман. Çавăнпа та манăн ку программăна журналăн тĕрлĕ статьисенчен илмелле пулать; журнал сотрудникĕсем чылай пĕр шухăшлă пулнă пирки, вĕсен статьисенче ытлашши хирĕçле шухăшсем тĕл пулмаççĕ. Манăн Кривенко г-нăн асăннă статьисемпе унăн ытти статьисенчен ытларах усă курмалла пулать, мĕншĕн тесен материалĕ те вĕсенче ыттисенчен ытларах, вĕсен авторĕ те журналшăн, г. Михайловский уйрăмăнах палла социолог, г. Южаков — уйрăмăнах паллă экономист пулнă пек, уйрăмăнах паллă практик, политик пулса тăрать.

Анчах çапах та, вĕсен программи çинчен калаçма тытăниччен малтан тата тепĕр теориллĕ ыйту çинче чарăнса тăмалла пулать. Çӳлерех эпир г. Южаков, пирĕн çĕрĕçлекенсен экономикине хăй пĕртте ăнланманнине витсе пытарма тăрăшса, халăх хуçалăхне пулăшса тăракан халăх аренди çинчен, т. ыт. çавăн пекки çинчен те, ним пĕлтермен фразăсемпе ирттерсе яма тăрăшнине куртăмăр. Промысласене вăл пырса та тĕкĕнмерĕ, фабрика-заводсен шултăра промышленноçĕ ӳссе пынине кăтартакан цифрăсем çинчен кăна калаçкаларĕ. Халĕ ĕнтĕ г. Кривенко та кустарнăй промысласем çинчен шăлт çавăн пекех калаçать. Вăл

«пирĕн халăх промышленноçне», урăхла каласан, кустарнăй промышленноçа—тӳррĕнех капитализмлă промышленноçа хирĕç тăратать (№ 12, стр. 180—181). «Халăх производстви (sic!)—тет вăл—пуринчен ытла хăйне-хăех çуралса тухать», капитализмлă промышленноçа вара—«яланах, тенĕ пек, питĕ нумай чухне искусственнă тăваççĕ». Тепĕр тĕлте вăл «халăхăн вак промышленноçне»—«шултăра, капитализмлă промышленноçа» хирĕç тăратать. Мĕнле уйрăмлăх пур-ха вара малтанхин, кустарнăй промышленноçăн,—тесе ыйтас пулсассăн, эсир—вăл «вак»* иккенни çинчен тата ĕç хатĕрĕсем унта ĕçлекен çынпа (производительпе) çыхăнса тăни çинчен кăна пĕлме пултаратăр (юлашки определенине г. Михайловскийĕн çӳлерех асăннă статьинчен илсе калатăп). Анчах ку определени кустарнăй промышленноçăн экономикăллă организацине пĕртте палăртса паманпа пĕрех вĕт-ха, çитменнине тата—вăл пĕртте тĕрĕс мар. Г-н Кривенко, сăмахран, çапла калать: «халăхăн вак промышленноçĕ халичченех пĕтĕм производство суммине шултăринчен, капитализмлă промышленноçран нумай ытларах туса кăларать-ха, ĕçлекенсен шучĕ те унăн ытларах», тет. Автор кустарьсен шутне асра тытса калать пулмалла; пĕрисем шутланă тăрăх вĕсен йышĕ 4 миллиона, теприсен шучĕпе—7 миллиона çитет. Анчах, пирĕн кустарнăй промысласен экономикин чи сарăлнă форми вăл—шултăра производствăн килти системи пулса тăнине, кустарьсен масси производствăра пĕртте никама пăхăнман вырăн мар, йăлтах хуçана пăхăнса ĕçлекен вырăн йышăнса тăнине, вăл хăй хатĕрĕсенчен мар, купец материалĕнчен ĕçлесе пурăннине, купец ăна ĕçукçи кăна тӳлесе тăнине кам пĕлмест-ха? Çак форма пуçпулса тăни çинчен калакан сведенисене легальнăй литературăра та пичетлесе пĕлтернĕ вĕт. Сăмахран, С. Харизоменов ятлă паллă статистикăн «Юрид. Вестник» [17] ятлă журналта (1883 çулхи 11-мĕшпе 12-мĕш №-сенче) пичетленнĕ çав тери паха ĕçне илсе кăтартам. Тĕп кĕпĕрнесенчи пирĕн кустарнăй промысласем çинчен (вĕсем унта чи ытларах аталаннă) литературăри мĕнпур даннăйсене пĕрле пухса, вăл, С. Харизоменов, шултра производствăн килти системи, урăхла каласан, промышленноçăн ним иккĕленме çук капитализмлă форми пуçпулса тăнине кăтартакан вывод тăвать. «Хăй-халлĕн вак промышленноçăн экономикăллă рольне—тет вăл—палăртса парас пулсан, эпир çапла вывод патне пыратпăр: Мускав кĕпĕрнинче, кустарнăй промышленноçăн çулталăк хушшинчи пĕтĕм оборотĕнче шултăра производствăн килти системи 86,5% йышăнса тăрать, вак хăй-халлĕн промышленность вара—13,5% анчах йышăнать. Владимир кĕпĕрнинчи Александровскпа Покровский уездсенче кустарнăй промышленноçăн çулталăк хушшинчи оборотĕнче шултăра производствăн килти

* Кунсăр пуçне тата çакна кăна пĕлме пултаратăр: «ун ăшĕнчен чăн-чăн (sic!) халăх промышленноçĕ аталанса тухма пултарать»,—тет г. Кривенко. Ку вăл «халăх тусĕсен»—пурăнăçа тӳп-тӳррĕн те тĕп-тĕрĕс характеристика парас вырăнне, ăссăр та ниме пĕлтермен фразăсемпе çех калаçас кулленхи меслечĕ.

системипе мануфактура 96% йышӑнса тӑраҫҫӗ, хӑй-халлӗн ӗҫлекен вак промышленность вара—4 процент анчах парать».

Ҫак кӑтартса панисене эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, никам та тӗрӗс мар тесе шутлама тӑрӑшман, вӗсене тӗрӗс мар тесе шутлама май та ҫук. Апла пулсассӑн, ҫак фактсенчен пӑрӑнса иртме, вӗсем ҫинчен чӗнмесӗр тӑма, ҫакӑн йышши промышленноҫа, капитализмлине хирӗҫ тӑратса, «халӑх» промышленноҫӗ тесе калама, унран чӑн-чӑн промышленность аталанса тухасси ҫинчен калаҫма мӗнле юратӑр-ха?

Фактсене ҫапла пачах ним хака та хумасӑр иртнине пӗртенпӗр япалапа кӑна ӑнлантарса пама пулать: «халӑх тусӗсем», Россиӑри ытти пӗтӗм либералсем пекех, Россиӑра классен антагонизмне тата ӗҫҫыннине эксплуататацилесе пурӑннине шӑлса пытарса, ҫаксене пурне те ахаль «дефектсем» пек кӑна туса кӑтартма тӑрӑшнипе анчах ӑнлантарма пулать. Тен, тепӗр тесен, сӑлтавӗ тата г. Кривенко япалана питӗ тарӑн ӑнланнинче пулӗ; вӑл тӗслӗхрен «Павловӑри ҫӗҫӗсем тӑвакан производствӑна» та «ҫурма-ремеслаллӑ производство», тет. Ку пит те тӗлӗнтермелле, ӗҫе мӗн тери пӑсса, суйса кӑтартаҫҫӗ «халӑх тусӗсем»! Павловӑри ҫӗҫӗ тӑвакансем хӑйсен ӗҫне заказ тӑрӑх мар, рынока валли тӑваҫҫӗ пулсан, унта мӗнле ремесла ҫинчен калаҫма май пултӑр ӗнтӗ? Тен г. Кривенко, куллен Чулхула ярмаркине кайса сутас тесе кустаре пӗр-пӗр япала тума заказ панӑ йышши йӗркесене те ремесла шутне кӗртмест-и тата? Ку ытлашшипех кулӑшла та, анчах, чӑн та ҫаплах пулмалла ҫав. Чӑннипе вара ҫӗҫӗ производствинче (Павловӑри ытти производствӑсемпе танлаштарса пӑхсан) производитель хӑйхаллӗн пурӑннӑ пек (курӑнакан) кустарнӑй вак форма—чи сахал упранса юнлӑ: «Столовой тата ремесла ҫӗҫҫисем тӑвакан производство*—халӗ ӗнтӗ чылай таран—фабрикӑри пек производство, е, тӗрӗсрех каласан, мануфактурӑллӑ производство пулса тӑраҫҫӗ», —тет Н. Ф. Анненский. Чулхула кӗпӗрнинче столовӑй ҫӗҫҫи тунипе пурӑнакан 396 кустарьтен—62 ҫын (16%) кӑна пасара кӑларса сутаҫҫӗ, хуҫа валли** 273 ҫын (69%) ӗҫлет, тара кӗрӗшсе ӗҫлекен рабочи—61 ҫын (15%). Ҫапла ӗнтӗ, мӗнпур кустарьсенчен 6-мӗш пайне кӑна предприниматель тӳррӗмех чуралантарса тӑмасть. Ҫӗҫӗ производствин тепӗр пайӗ ҫинчен—хуҫмалла ҫӗҫӗ (пекӗ) тӑвакан пайӗ ҫинчен калас пулсан вара, вӑл, ҫав авторах каланӑ тӑрӑх,—«столовой ҫӗҫҫи производствипе ҫӑраҫҫи производстви хушшинче вӑтам ҫӗрте тӑрать: мастерсенчен йышларах пайӗ кунта хуҫа валли ӗҫлет ӗнтӗ, анчах вӗсемпе юнашарах тата рынок валли ӗҫлесе, хӑйсен вӑйӗпе пурӑнакан кустарьсем те чылаях-ха».

Ҫавӑн йышши ҫӗҫҫе Чулхула кӗпӗрнинче пурӗ 2.552 кустарь тӑвать, вӗсенчен хӑйсен таварне пасара кӑларса сутакансем 48%

---

* Ку вӑл—мӗнпур ытти производствӑсенчен чи шултри: Павловӑри производствӑсем мӗн пурӗ 2.750 пин тенкӗлӗх тавар туса кӑлараҫҫӗ пулсан, ку вара хӑй кӑна 900 пин тенкӗлӗх туса кӑларать.

** Урӑхла каласан, купец валли ӗҫлет; вӑл кустарьсене чӗртавар парать те, ӗҫленӗшӗн вӗсене, ытти чухнехи пекех, ӗҫ укҫи тӳлесе тӑрать.

(1.236 çын), хуçа валли—42% (1058 çын) ĕçлет, тара кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисем 10% (258 çын). Апла пулсан, кунта та хăйхаллĕн ĕçлекен (?) кустарьсем сахалтарах, иккен. Пасарта сутма хăйсен вăйĕпе ĕçлекенсем те, паллах, çиелтен пăхсан çеç хăйхаллĕн ĕçлекенсем пек курăнаççĕ, чăннипе вĕсем те скупщиксен *капиталне* ыттисенчен кая мар пăхăнса тăраççĕ. Чулхула кĕпĕрнинчи пĕтĕм Горбатовски уездри промысласем çинчен кăтартакан сведенисене илсе пăхас пулсан, —унти промысласенче пурĕ 21.983 çын ĕçлет, урăхла каласан, уездри пĕтĕм ĕçлекен çын йышĕнчен 84,5 *% ĕçлет, унчухне вара çакăн пек даннăйсем пулаççĕ (промысла экономики çинчен тĕрĕс даннăйсем — металл промыслинче, тир тăвакан промыслара, хăмăт тавраш ĕçлекеннинче, кăçатă йăвалаканнинче, вĕрен-пăяв явакан промысласенче ĕçлекен 10.808 рабочи тĕлĕшĕпе çеç пур): кустарьсенчен 35,6% хăйсем тунă таварĕсене пасара кăларса сутаççĕ, 46,7%—хуçа валли ĕçлеççĕ, тата 17,7%—тара кĕрĕшсе ĕçлеççĕ. Çапла ĕнтĕ, *эпир кунта та шултăра производствăн килти системи пысăк вырăн йышăнса тăнине, ĕçе капитал чуралатса тăракан йышши отношенисем пысăк вырăн йышăнса тăнине куратпăр.*

«Халăх тусĕсем» çакăн йышши фактсенчен çав тери çăмăллăн иртсе каяççĕ пулсан, ку вăл ыттинчен пуçне çакăнтан та килет: капитализма ăнланас тĕлĕшĕпе вĕсем,—капиталист вăл машинăллă шултăра хуçалăх тытса тăракан пуян тата нумай пĕлекен предприниматель пулать текен кулленхи айванла шухăшсенчен те иртмен; çак ăнланăвăн наукăллă тупсăмне вĕсем пĕлесшĕн те мар. Г-н Южаков, простой коопераципе мануфактурăна асăрхамасăрах иртсе, капитализма тӳрех машинăллă индустрирен пуçланине эпир çакăн умĕнхи сыпăкрах курсаттăмăр ĕнтĕ. Ку вăл— питĕ сарăлнă йăнăш, сăмах май калас пулсан пирĕн кустарнăй промысласем капитализмлă организациленнине асăрхамасăр, ăна тивĕçлĕ хака хуманни патне те илсе пырать.

Паллах, шултăра производствăн килти системи вăл—промышленноçăн капитализмла форми: кунта эпир унăн мĕнпур паллисене те куратпăр — таварлă хуçалăх ĕнтĕ чылай çӳлĕ пусăма аталанса çитнине, производство хатĕрĕсем уйрăм çынсен аллинче концентрациленсе тăнине, рабочисен массине экспроприацилленине, вĕсен хăйсен производство хатĕрĕсем çук пирки ют хатĕрсемпе тата хăйсемшĕн мар, капиталистшăн ĕçленине куратпăр. Уççăнах паллă: промыслана епле организацилени енчен пăхсан, вăл—чăннипех капитализм; машинăллă шултăра индустрипе танлаштарса пăхсан, уйрăмлăхĕ унăн техника тĕлĕшĕнчен аталанса çитменни (ку вăл, пуринчен ытла — ĕçлекенсене ĕç укçи чăтма çук сахал тӳленинчен килет) тата рабочисем хăйсен

---

* Вырăссен хăйсене евĕрлĕ экономисчĕсем, вырăс капитализмĕ мĕнтери аталаннине фабрикăсенчи рабочисен (sic!) шучĕпе виççе, çакăн йышши промысласенче ĕçлекен çынсене тата вĕсен йышши питех те нумай ытти работниксене те, ним чăрманмасăрах—ялхуçалăхĕнче ĕçлекен халăх шутне, çавăнпа та капитал пусмăрланă пирки мар, «халăх стройĕ» çине искусственно пусарса тăнă пирки (???!!) тертленсе пурăнакан, халăх шутне кĕртеççĕ.

аллинче пĕчĕк çĕр хуçалăхĕсем тытса тăни пулать. Çак юлашки уйрăмлăх «халăх тусĕсене» пушшех те иккĕлентерсе тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем—чăн-чăн метафизиксем çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ—çакăн йышши татăклă хирĕçўсем тăрăх çеç шухăшлама вĕреннĕ: «çапла, çапла—çук, çук, кунтан урăххи вара, усалтан килет».

Çерсĕр рабочисем пулсан, вăл—капитализм; çĕр тытса тăраççĕ пулсассăн—капитализм çук; вĕсем çакăн йышши лăплантаракан философипех çырлахаççĕ, хуçалăхăн пĕтĕм обществăллă организацине курмасăрах юлаççĕ; çак çĕр хуçисен аллинче çĕр пурри вăл—вĕсем выльăх пек кĕлмĕçленсе пурăннине, вĕсене хăйсен йышши ытти çĕр хуçисемех—«хресченсем» чи намăса пĕлмесĕр çаратса пурăннине пĕтерме пултарайманни çинчен кăтартакан пуриншĕн те паллă факт çинчен манса каяççĕ.

Капитализм вăл, хăйĕн аталанăвĕн аяларахри пусăмĕсем çинче пулнă чух, нихăш çĕршывра та рабочие çĕртен пачах уйăрса пăрахма пултарайманнине пĕлмеççĕ те пулас вĕсем. Хĕвеланăç Европа тĕлĕшĕпе, Маркс, рабочие машинăллă шултăра индустри кăна экспроприацилесе çитерме пултарнине тĕпчесе тупнă. Çавăнпа та, паллах,—пирĕн патăмăрта капитализм çук, мĕншĕн тесен пирĕн «халăх хăй аллинче çĕр тытса тăрать»,—текен сарăлнă халлапсем пачах ăссăр пулни уççăнах курăнать, мĕншĕн тесен простой кооперациллĕ тата мануфактурăллă капитализм ниçта та, нихăçан та ĕçлекенсене çĕртен пачах уйăрнипе çыхăнса тăман, анчах ун пирки вăл, паллах, капитализм пулма пĕртте пăрахман.

Российăри машинăллă шултăра индустри тĕлĕшĕпе пулсан пирĕн промышленноçăн шултăрарах та кирлĕрех отраслисем вара çак формăна хăвăрт йышăнса пыраççĕ, — апла пулсан пирĕн те çакна палăртмалла: пирĕн хамăр евĕрлĕх пулсан та, вăл пирĕн те пурĕ пĕр, капитализмлă Хĕвеланăçĕнчи ытти çĕршывсенчи пекех, рабочи çĕрпе çыхăнса тăнипе пĕртте килĕшмест. Çак факта Дементьев, сăмах май калас пулсан, статистикăн тĕп-тĕрĕс сведенийĕсем тăрăх çирĕплетсе кăтартрĕ, вĕсенчен вара вăл (Маркс вĕрентĕвне пĕртте пĕлмен пулсан та) çапла вывод тунă: механически производство работнике çĕртен шăлтах уйăрассипе таччăн çыхăнса тăрать, тенĕ. Çак тĕпчев ĕнтĕ Россия вăл — капитализмлă çĕршыв иккенне, ĕççынни унта çĕрпе çав тери аран-аран, курăнмаллăх çеç çыхăнса тăнине, пурлăхлă çынсем (укçа хуçи, скупщик, хресчен хушшинчи пуян, мануфактурист т. ыт. те) çав тери хăватланса çитнине—çавăнпа та техника тата пĕр утăм малалла ярса пуссассăнах, вара «хресчен» (?? тахçантанпах ĕнтĕ хăйĕн ĕç вăйне сутнипе пурăнаканскер) тап-таса рабочи пулса тăрассине* тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ. «Халăх тусĕсем» пирĕн кустарнăй промысла-

* Шултăра производствăн килги системи зăл—капитализмлă система кăна мар, çитменнине тата капитализмăн чи начар системи: ĕçлекене чи вăйлăн эксплуатациленипе пĕрлех, вăл рабочисене хăйсене ирĕке кăларасшăн кĕрешме чи сахал майсем парать.

сен экономикӑлла органнзацине кӑна ӑнланмаҫҫӗ анчах мар-ха. «Хуҫа валли» ӗҫлени ҫук промысласем ҫинчен те вӗсем, ҫӗрӗҫлекен ҫинчен шухӑшланӑ пекех (ун ҫинчен мӗнле шухӑшланине ҫӳлерех курсаттӑмӑр ӗнтӗ эпир), ҫав тери ҫиелтен шухӑшлаҫҫӗ. Анчах ку вӑл, тепӗр тесен, политикӑллӑ-экономикӑллӑ ыйтусем ҫинчен, ҫут тӗнчере—ӗҫлекенпе пӗрлештерме «юранӑ» ӗҫ хатӗрӗсем кӑна пуррине пӗлекен, ку вӑл, имӗш, питӗ аван,—тата ӗҫлекенрен уйӑрма та «юранӑ» ӗҫхатӗрӗсем кӑна пуррине пӗлекен, тесе калас пулать, ку вара питӗ начар,—ҫаксене ҫеҫ пӗлекен господасем сӳтсе-явма тытӑнсан, ҫакӑн пек пуласси хӑйне-хӑех паллӑ та. Ӑна пӗлнипех ытлашши инҫе каяс ҫук.

Капитализациленекен промысласемпе капитализациленмен («вак производство ирӗккӗнех пурӑнма пултарнӑ») промысласем ҫинчен калаҫнипе пӗрлех, г. Кривенко, сӑмах май каласан, ҫакӑн ҫине тӗллесе кӑтартать: хӑшпӗр производствӑсенче, «производствӑна хывнӑ тӗп расходсем» питӗ сахал, ҫавӑнпа та вӗсенче вак производство пулма пултарать, тет. Тӗслӗх шучӗпе вӑл кирпӗч производствине илсе кӑтартать, вӑл ӗҫе хывнӑ расходсен хакӗ, имӗш, заводсен ҫулталӑк хушшинчи оборотӗнчен 15 хут та пӗчӗккӗрех пулма пултарать.

Ку вӑл авторӑн факт ҫине кӑтартса панисенчен пӗртен-пӗри пекех пулнӑ пирки (тепӗр хут калатӑп: пурнӑҫ ҫине тӳп-тӳррӗн пӑхма, ӑна тӗп-тӗрӗс анализ тума хӑраса, нимрен ытларах мещансен... «идеалӗсен» сфери ҫине вӗҫе-вӗҫе хӑпарни, субъективлӑ социологсен чи характерлӑ енӗ),—«халӑх тусӗсен» пурнӑҫ ҫинчен шухӑшлани мӗн тери тӗрӗс мар пулнине кӑтартса парас тесе ҫак фактпа усӑ курӑпӑр.

Кирпӗч тӑвакан промысла (кирпӗче шурӑ тӑмран туни) ҫинчен Мускав земствин хуҫалӑх статистикинче ҫырса пӗлтернӗ («Сборник», т. VII, вып. 1, 2-мӗш пайӗ т. ыт. те). Ку промысла пуринчен ытла Богородск уездӗнчи 3 вулӑсра сарӑлнӑ, унта 233 заведенире 1.402 рабочи ӗҫлет (вӗсенчен 567 рабочи=41%—семьеллӗ*, 835 рабочи — 59% — тара кӗрӗшнисем), ҫулталӑк хушшинче вӗсем 357.000 тенкӗлӗх тавар туса кӑлараҫҫӗ. Промысла кунта тахҫантанпах пуҫланса кайнӑ, анчах юлашки 15 ҫул хушшинче, чугун ҫул хывнӑ хыҫҫӑн тавар сутма ҫӑмӑлланнӑ пирки, вӑл пушшех аталаннӑ. Чугун ҫул хывиччен малтан кунти производствӑра хуҫасем хӑйсен семьипе ӗҫленӗ форма тӗп вырӑн йышӑнса тӑнӑ, халӗ ӗнтӗ ун вырӑнне тара кӗрӗшнӗ ӗҫе эксплуатацилени тӗп вырӑн йышӑнса пырать. Ку промыслара та таварӗсене сутас тӗлӗшпе вак промышленниксем шултӑрисене пӑхӑнса тӑни ҫук мар: «укҫа-тенкӗ ҫитмен» пирки, кирпӗче вак промышленниксем шултӑрисене вырӑнтах (хӑшпӗр чухне «чӗрӗ кирпӗчӗнех», хӗртмесӗрех) ҫав тери йӳнӗ хакпа сутаҫҫӗ.

Анчах, очерк ҫумне тата кустарьсене килсерен ҫырса тухнӑ сведенисене хушса панӑ пирки,—ку сведенисенче кашни заведенирех миҫе рабочи ӗҫленине тата ҫулталӑк хушшинче мӗн

* «Ҫемьеллӗ» рабочисем тесе, вӗсене тара кӗрӗшсе ӗҫлекеннисенчен уйӑрас шутпа, хуҫасен ҫемьисенчи ӗҫлекенсене каланӑ.

хаклăх тавар туса кăларнине шутласа кăтартнă,—эпир промысласене епле организациленине вак промышленниксем шултăрисене пăхăнса тăнисĕр пуçне те пĕлме пултаратпăр.

Таварлă хуçалăх вăл—капитализмлă хуçалăх текен закон, урăхла каласан, таварлă хуçалăх паллă пусăма аталанса çитсен пур-пĕрех капитализмлă хуçалăх пулса тăрать текен закон çак кирпĕч промысли тĕлĕшĕпе тĕрĕсси-тĕрĕс маррине тĕпчесе пĕлес тесессĕн, заведенисене пирĕн пысăкăшĕ енчен танлаштарса пăхмалла: ыйту шăпах, производствăри вырăн тĕлĕшпе, тара кĕрĕшнĕ ĕçе эксплуатацилес тĕлĕшпе вак заведенисемпе шултăрисем пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнса тăнинче пулать. Рабочисен хисепне тĕпе хурса, эпир кустарьсен заведенийĕсене çак виçĕ ушкăна пайлатпăр: 1) 5 рабочи таран (çемьеллĕ рабочисем те, тара кĕрĕшнисем те пĕрле) ĕçлекен заведенисем; 2) 6 рабочирен пуçласа 10 рабочие таран ĕçлекен заведенисем тата 3) 10 рабочи ытла ĕçлекен заведенисем.

Кашни ушкăн тăрăх заведенисен пысăкăшне, рабочисен йышне тата мĕн хаклăх тавар туса кăларнине тĕпчесе пырас пулсан, пирĕн çакăн пек сведенисем пулса тăраççĕ:

| Кустарьсене рабочисен хисепĕ тăрăх пайланă ушкăнсем | 1 заведенире ĕçлекен рабочисен вăтам йышĕ | Процентпа | | 1 рабочи çулталăкра мĕн чухлĕ тавар туса кăларать | Процентпа пайлани | | | Абсолютнăй цифрăпа шутласан | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Тара кĕрĕшнĕ рабочисем пур заведенисем | Тара кĕрĕшнĕ рабочисем | | Заведенисен йышне | Рабочисен йышне | Туса кăларнă тавара | Заведенисен йышĕ* | Рабочисен йышĕ | Туса кăларнă тавар (тенкĕпе) |
| I. — 5 рабочи таран | 2,8 | 25 | 19 | 251 | 72 | 34 | 34 т. | 167/43 | 467/92 | 119.500 |
| II. 6—10 рабочи —„— | 7,3 | 90 | 58 | 249 | 18 | 23 | 22 т. | 43/39 | 317/186 | 79.000 |
| III. 10 рабочи ытла ĕçлекен заведенисем | 26,4 | 100 | 91 | 260 | 10 | 43 | 44 т. | 23/23 | 609/557 | 158.500 |
| Мĕн пурĕ . . | 6 | 45 | 59 | 254 | 100 | 100 | 100 | 233/105 | 1.402/835 | 357.000 |

Çак пĕчĕк таблицăна сăнарах пăхăр-ха, вара эсир промыслана буржуаллă е, вăл çавах, капитализмлă организациленине хăварах курăр: мĕншĕн тесен заведенисем шултраланнăçемĕн ĕç тухăçлăхĕ вĕсенче ÿссе пырать** (вăтам ушкăн ку тĕлĕшрен

* Знаменатель тара кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисем пур заведенисен хисепне тата тара кĕрĕшнĕ рабочисен хисепне пĕлтерет. - Малалли таблицăра та çавах.

** Пĕр рабочи çулталăкра çакăн чухлĕ тавар туса кăларать: I-мĕш ушкăнри—251 тенкĕлĕх; II-мĕшĕнчи—249 тенкĕлĕх; III-мĕшĕнчи—260 тенкĕлĕх.

йĕркерен тухса ӳкет), тара кĕрĕшнĕ ĕçе эксплуатацилени вăйланать *, производство ытларах концентрациленет**.

Виççĕмĕш ушкăн, хăйĕн хуçалăхне пĕтĕмпех тенĕ пек тара кĕрĕшнĕ ĕç çинче тытса тăраканскер, аллинче пурĕ те заведенисен 10 проценчĕ кăна пулсан та пĕтĕм продукцин 44 процентне туса кăларать.

Производство хатĕрĕсем çапла сахалтарахăшсен аллинче концентрациленсе пыни, нумайтарахăшсене (тара кĕрĕшнĕ рабочисене) экспроприациленипе çыхăнса тăраканскер, шăпах пире вак производительсем скупщиксене пăхăнса тănине те (шултăра промышленниксем скупщиксем пулаççĕ те ĕнтĕ) тата çак промыслара ĕçе пусмăрласа тănине те ăнлантарса парать. Çапла ĕнтĕ, эпир—ĕççыннине экспроприациленипе эксплуатациленин *сăлтавĕ* производствăллă отношенисенче хăйсенчех выртнине куратпăр.

Вырăссен социалист-народникĕсем, пурте пĕлеççĕ, пачах урăхла шухăшланă: кустарнăй промысласенче ĕçе пусмăрланин сăлтавне вĕсем—производствăллă отношенинче мар (производствăллă отношенисене вĕсем эксплоатацилеме май паман никĕс çинче пулса тănă тесе шутланă), вĕсен тулашĕнче—политикăра курнă, тĕллĕнех аграрнăй политикăра, тӳлев политикинче т. ыт. те. Çакăн пек ыйту тухса тăрать: çак халĕ ĕнтĕ суя ĕненӳ пекех, темелле, çирĕпленсе çитнĕ шухăш мĕн çинче тытăнса тăрать-ха? Кустарнăй промысласенчи производствăллă отношенисем çинчен *урăхла* май шухăшлани ытларах пулнă пирки мар-и? Пĕртте апла мар. Вăл, *экономикăллă организацин çак пайлă, чăн пурăнăçри формисене тĕп-тĕрĕс те татăклăн характеристика* пама пĕртте, ниепле те тăрăшман пирки кăна тытăнса тăрать; вăл, производствăллă отношенисене ыттисенчен уйăрса илсе вĕсене хăйсене уйрăм анализ туман пирки кăна тытăнса тăрать. Пĕр сăмахпа каласан, вăл обществăллă наукăн пĕртен-пĕр наукăллă методне, тĕллĕнех—материализмлă метода ăнланман пирки кăна тытăнса тăрать. Çавăнпа та халĕ ĕнтĕ хамăрăн кивĕ социалистсем мĕнле шухăшласа пынине те ăнланса илме çăмăл. Кустарнăй промысласем тĕлĕшĕпе эксплоатаци сăлтавне вĕсем производствăллă отношенисен *тулашĕнче* тăракан явленисем çине хураççĕ; фабрикăсемпе заводлă, шултăра капитализм тĕлĕшĕпе вара вĕсем *унта* эксплуатаци сăлтавĕ—шăпах производствăллă отношенисенче пулнине курмасăр иртме пултарайман. Çавăнпа та вара килĕштерме май çук хире-хирĕçлĕх, пĕр-пĕринчен пачах уйрам япала пулса тănă: кустарнăй промысласен производствăллă отношенийĕсенче (чăннипе, вĕсене тĕпчесе те курман пулнă!) капитализмли нимĕн те пулман пулсассăн, апла çак шултăра капитализм ăçтан çуралса тухнине пĕртте ăнланма май

---

* Тара тытнă рабочисем пур заведенисен проценчĕ I-мĕш ушкăнра—25; II-мĕшĕнче—90; III-мĕшĕнче вара—100%; тара тытнă рабочисен проценчĕ—19—58—91%

** I-мĕш ушкăнра 72% заведенисен производстви 34%; II-мĕш ушкăнра 18%—производстви 22%; III-мĕшĕнче—10%—производстви 44%.

çук пулса тăнă. Вывăчĕ хăйне-хăех тухса тăрать: кустарнăй промышленноçпа капитализмлă промышленность хушшинчи çыхăнăва ăнланмасăр, вĕсем, малтанхине — «халăх» промышленноçĕ шутне кĕртсе, кайранхине—«искусственнăй» тесе шутланине хирĕç тăратнă. Çакăнтан вара, капитализм пирĕн «халăх стройне» хирĕç пыни çинчен идея çуралса тухать,—ку идея çав тери вăйлă сарăлнă, нумаях та пулмасть г. Николай—он ăна, кăштах çĕнетнĕ тата лайăхлатнă изданипе вырăс публикине тыттарчĕ. Ку идея, çав тери тĕлĕнмелле логикăсăр пулин те, çĕрнĕ йăла вăйĕпе кăна тытăнса тăрать, фабрика-завод капитализмĕ çинчен—вăл чăннипе мĕнле, çавăн тăрăх пĕлсе тăраççĕ, кустарнăй промышленность çинчен вара вăл «мĕн пулма пултарать», çавăн тăрăх; малтанхи çинчен—производствăллă отношенисене анализленĕ тăрăх, иккĕмĕшĕсем çинчен вара—производствăллă отношенисене уйрăмăн тĕпчеме те тăрăшмасăр, ĕçе тӳрех политика облаçне куçарни тăрăх. Çак производствăллă отношенисене анализлама тытăнас пулсанах, вара эпир çак «халăх стройĕ» вăл, тин çех шăтнă вăрлăх пек, аталанса çитмен пулсан та, çав капитализмлă производствăллă отношенисемех пулнине; пур кустарьсем те пĕр-пĕринпе тан тесе айванла шухăшлама пăрахса, вĕсен хушшинчи уйрăмлăха тĕп-тĕрĕс палăртсассăн, вара фабрикăпа завод «капиталисчĕпе» «кустарь» хушшинчи уйрăмлăх хăшпĕр чухне пĕр «кустарьпе» тепĕр «кустарь» хушшинчи уйрăмлăхран та пĕчĕкрех пулнине; *капитализм вăл—«халăх стройне» хирĕçле маррине, ăна тӳррĕнех, чи çывăхăн хăйне-хăех малалла илсе пыни тата аталантарса пыни пулнине* уççăнах курăттăмăр.

Анчах, тен, илсе кăтартнă тĕслĕхе юрăхсăр тесе шутлĕç? тара кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисен проценчĕ ку тĕслĕхре ытлашши пысăк*, тесе калĕç? Анчах ĕç кунта *пĕртте* абсолютнăй цифрăсенче мар, пуринчен кирли кунта—çав цифрăсем уçса кăтартакан *отношенисем*, хăйсен ăшчиккипе буржуаллă отношенисем; вĕсем вара—буржуаллăх вăйлă палăрса тăрать-и, вăйлă мар палăрса тăрать-и пурĕпĕр, ун пирки вĕсем пĕртте буржуаллă пулма пăрахмаççĕ.

Кирлĕ пулсан, тепĕр тĕслĕх илсе кăтартам—юриех буржуаллăх вăйсăр палăрнине—чӳлмек тăвакан промыслана (г. Исаевăн Мускав кĕпĕрнинчи промысласем çинчен çырнă кĕнекинчен илетĕп), ку промысла, г-н профессор сăмахĕ тăрăх,—«тап-таса килти промысла». Паллах, ку промысла хресченсен вак промыслисене питĕ тĕрĕс сăнласа кăтартма пултарать, мĕншĕн тесен, техники унăн чи простой, ĕçхатĕр-таврашĕ пит сахал, вăл пурне те пур çĕрте те кирлĕ тавар туса кăларать. Çак кустарьсене иртнĕ тĕслĕхри пек сведенисем тăрăхах килсерен перепись тунă тăрăх, эпир çак промыслан экономикăллă организацине те тĕпчесе пĕлме пултаратпăр, ку промысла вырăссен темтериех йышлă, «халăхăн», вак промысласен сăнарне, ĕнтĕ ним иккĕленме

* Мускав кĕпĕрнинчи промысласем тĕлĕшпе ку тĕрĕсех мар пулас, анчах Российăри ытти вырăнсенчи сахалтарах аталаннă промысласем тĕлĕшпе тĕрĕс те пулма пултарать.

çук, тĕрĕс палăртса тăрать. Кустарьсене виçĕ ушкăна пайлатпăр ) 3 рабочи таран тытакан (çемьеллĕ рабочисем те, тара тытнисем те пĕрле) кустарьсем; II) 4—5 рабочи тытакансем; III) 5 рабочирен ытла тытакансем,—унтан вара сведенисене леш таблицăри пекех шутласа тухатпăр:

| Кустарьсене рабочисен хисепĕ тăрăх пайланă ушкăнсем | 1 заведенире ĕçлекен рабочисен вăтам йышĕ | Процентсем | | 1 рабочи çулталăкра мĕн чухлĕ тавар туса кăларать | Процентпа пайлани | | | Абсолютнăй цифрăпа шутласан | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Тара кĕрĕшнĕ рабочисем пур заведенисем | Тара кĕрĕшнĕ рабочисем | | Заведенисен йышĕ | Рабочисен йышĕ | Производство хисепĕ | Заведенисен йышĕ * | Рабочисен йышĕ | Производство хаклăхĕ (тенкĕпе) |
| I. 3 рабочи таран тытакансем . . . | 2,4 | 39 | 19 | 461 | 60 | 38 | 36 | 72/28 | 174/33 | 81.500 |
| II. 4—5 рабочи таран тытакансем . . . | 4,3 | 48 | 20 | 498 | 27 | 32 | 32 | 33/16 | 144/29 | 71.800 |
| III. 5 рабочирен ытла тытакансем . . . | 8,4 | 100 | 65 | 533 | 13 | 30 | 32 | 16/16 | 134/87 | 71.500 |
| Мĕн пурĕ . | 3,7 | 49 | 33 | 497 | 100 | 1 00 | 100 | 121/60 | 452/149 | 224800 |

Уççăнах курăнать ĕнтĕ, *отношенисем* ку промыслара та буржуаллă иккен—кун пек тĕслĕхсене вара вĕçĕмсĕрех кăтартса пама пулать: кунта та эпир кустарьсем таварлă хуçалăх никĕсĕ çинче тĕрлĕрен ушкăна пайланса пынине, çитменнине шăпах капитализмлă пайланса пынине куратпăр; çапла пайланни тара тытнă ĕçе эксплуатацилесси патне илсе пырать: эксплуатаци вара çӳлти ушкăнра тĕп вырăн йышăнать; çак ушкăн мĕнпур заведенисенчен $^1/_8$-мĕш пайне, мĕнпур рабочисенчен 30 процентне тытса тăрса, пĕтĕм производствăн $^1/_3$ пайне хăй аллинче пĕтĕçтерсе тăрать, ĕç тухăçлăхĕ те кунта вăтамминчен чылай пысăк. Çак производствăллă отношенисем пĕр хăйсемех те ĕнтĕ пире скупщиксем çуралса тухнине тата вĕсен вăйне ăнлантарса параççĕ. Кунта эпир çакна куратпăр: хăйсен аллинче шултăрарах та тупăшлăрах заведенисем тытса тăрса ют çын ĕçĕнчен «тап-таса» тупăш илекен чӳлмекçĕсен çӳлти ушкăнĕнче 1 заведени пуçне вăтамран 5,5 тара тытнă рабочи тивет, сахал йышлă хуçасем чылай «перекетсем» пухса пыраççĕ, çав вăхăтрах ытларахăшĕсем тусăнса пыраççĕ, вак хуçасем те пулин (тара кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисем çинчен калаçмалли те çук ĕнтĕ) хăйсен пурăнăçне вĕçне-вĕçĕпе сыпăнтармаççĕ. Малтанхисем кайранхисен аллинче чуралăхра пулса тăрасси, паллах, пурпĕрех пулмалла,—тĕллĕнех, çак производствăллă отношенисен характерĕ капитализмлă пирки пурпĕрех пулмалла. Ку отношенисен палли çакă: таварлă хуçалăх организаци-

ленӗ обществӑллӑ ӗҫӗн продукчӗ уйрӑм ҫынсен аллине кӗрсе ӳкет, вӗсен аллинче вара ӗҫҫыннине пусмӑрласа чуралантармалли хатӗр тата массӑсене эксплуатациленипе уйрӑм ҫынсене пуйтармалли май пулса тӑрать. Отношенисем ҫакӑн пек пулни халлӗхе начар аталаннӑ пирки, *капитал* пухӑнасси, производительсене тусӑнтарнипе пӗрле пулса пыраканскер, пит те сахал пирки эксплуатаципе пусмӑрлӑх ытлашши вӑйлӑн палӑраймаҫҫӗ-ха тесе, ан та шухӑшлӑр. Пӗтӗмпех урӑхла. Ку вӑл эксплуатацие — пушшех тискер, крепостной формӑллӑ ҫех туса хурать; капитал халлӗхе рабочи ӗҫ вӑйне стоимость тӑрӑх сутӑн ҫеҫ илнипе рабочие тӳррӗнех пӑхӑнтарма пултарайман пирки, ӗҫҫыннине ростовщикле темӗн тӗрлӗ меслетсен танатипе тӑллантарса пӑрахать, ӑна тӗрлӗрен кулакла меслетсемпе хӑй ҫумне ҫыхӑнтарать, ҫапла вара унӑн сверхстоимоҫне (ӗҫ вӑйӗ стоимоҫӗнчен ытлашшине) кӑна мар, ӗҫукҫин темтери пысӑк пайне те ҫаратса пурӑнать, ҫитменнине тата рабочие хӑй «хуҫине» улӑштарайми тунипе пусарса лартать, вӑл рабочие ӗҫ «панине» (sic!) ырлӑх туни, тесе шутлама хушса, мӑшкӑллать.—Паллах, пӗр рабочи те хӑй вырӑнне вырӑссен «хӑйхаллӗн» кустарӗн ҫак «чӑн-чӑн», «халӑх» промышленноҫӗнчи вырӑнӗпе улӑштарма нихӑҫан та килӗшес ҫук. Ҫавӑн пекех ҫакӑ та паллӑ: Российӑри радикалсен мӗнпур юратнӑ меслечӗсем, е ӗҫҫыннине эксплуатациленипе ӑна капитала пӑхӑнтарнине пӗртте тӗкӗнмесӗр уйрӑмӑн тунӑ опытсем кӑна пулса юлӗҫ (артельсем) е, ӗҫҫыннин пурнӑҫне пушшех начарлатӗҫ (ҫӗрӗсене ӗҫҫыннинчен уйӑрмалла мар туни), е тата, юлашкинчен, ҫак капитализмлӑ отношенисене пушшех тасатса, аталантарса, ҫирӗплетсе кӑна ярӗҫ (техникӑна лайӑхлатни, кредитсем т. ыт. те).

Тепӗр тесен, хресчен промыслинче, вӑл пӗтӗмӗшпе илсен, ниме тӑми пӗчӗкҫӗ пирки, заведенийӗсем ҫав тери вак тата ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те ытла пӗчӗккӗ пирки, техника авалхи пек тата тара тытнӑ рабочисен йышӗ сахал пирки, унта *капитализм* пуррине «халӑх тусӗсем» нихӑҫан та ӑнланса илес ҫук. *Капитал* вӑл — ҫынсем хушшинчи пӗр-пӗр паллӑ отношени иккенне, танлашакан категорисем вӑйлӑн аталаннӑ-и, сахал кӑна аталаннӑ-и, пурӗпӗр ҫав отношениех пулса юлнине, ниепле те ӑнланса илеймеҫҫӗ. Буржуаллӑ экономистсем ӑна нихӑҫан та ӑнланайман: вӗсем кирек-хӑҫан та — капитала ҫавӑн пек определени парассине хирӗҫ тӑнӑ. Астӑватӑп: вӗсенчен пӗри «Р. Мысль» ятлӑ журналта, Зиберӑн (Маркс теорийӗ пирки) ҫырнӑ кӗнеки ҫинчен калаҫнӑ май (капитал вӑл — отношени текен), ҫак определенине илсе кӑтартса кӑшкӑру паллисем лартсах ятлаҫсаччӗ[18].

Ку вӑл, буржуаллӑ йӗркери категорисене ҫутҫанталӑкри пекех ӗмӗрлӗхе пыракан категорисем вырӑнне хурса шутлас йӑла — буржуаллӑ философсен чи характерлӑ енӗ; ҫавӑнпа вара вӗсем капитал валли те ак ҫакӑн йышши определенисем суйласа илеҫҫӗ, сӑмахран: капитал вӑл — перекетлесе пухнӑ ӗҫ, малашнехи производство валли кирлӗскер, теҫҫӗ,—урӑхла каласан,

ӑна, вӑл этем обществинче ӗмӗр-ӗмӗрех пулма тивӗç категори пек, палӑртса калаççӗ; çавӑнпа вара историри пӗр хӑйне çех уйрӑм палӑртса тӑракан экономикӑллӑ формацие ытти формацисемпе пӑтраштарса яраççӗ те, çак формаци саманинче çеç таварлӑ хуçалӑх организациленипе «перекетлесе пухӑнакан ӗç» ӗçлемен çын аллине çакланса, çын ӗçне эксплуатацилемелли май пулса тӑнине шӑлса пытарса лартаççӗ. Çавӑнпа вара вӗсен производствӑллӑ отношенисен пӗр паллӑ системине анализласа вӗренесси вырӑнне,—пур тӗрлӗ йӗркесене те юрӑхлӑ ирсӗрлӗхсемпе ылмаштарнӑ мещанла моралӗн чӗрене чӗпӗтекен шывак сӑмахӗсем çех пулса тӑраççӗ те.

Акӑ халӗ,—«халӑх тусӗсем» мӗншӗн çак промышленноçа «халӑх» промышленноçӗ тесе каланине, мӗншӗн ӑна капитализмлӑ промышленноçа хирӗç тӑратнине курӑр ӗнтӗ. Çакӑн пирки кӑна: ку господасем, мещанлӑх идеологӗсем,—çак вак производительсем таварлӑ хуçалӑх системи вӑхӑтӗнче пурӑнса ӗçленине тата вӗсем, рынокпа çыхӑнса тӑнӑ пирки, пурпӗрех, хуть те мӗн пулсан та е буржуазие, е пролетариата тухса пайланса пырассине шухӑшласа та илме пултараймаççӗ (çавӑнпа вӗсене мещансем тетӗп те эпӗ). Пирӗн «халӑх» промыслисенчен мӗн тухма пултарасси çинчен пуш параппан çапас вырӑнне, сирӗн вӗсем чӑннипе епле организациленнине тӗпчесе пӗлме тӑрӑшса пӑхасчӗ,—ун чухне вара—*Российӑра эсир кустарнӑй промышленноçӑн кӑшт та пулин аталанса çитӗннӗ отраслине—капитализмлӑ мар, урӑхла йӗркепе организацилене тупма* пултараттӑрччӗ-ши, çук-ши,—курӑттӑмӑр эпир ӑна.

Эсир тата производство хатӗрӗсем сахалрахӑшӗсен аллинче монополизациленсе пыни ытларахӑшӗсене производство хатӗрӗсемсӗр тӑратса хӑварни, тата кӗрӗшекен ӗçе эксплуатацилесе пурӑнни çак ӑнланӑва пӗлтернӗ чух кирлипе тата çителӗклӗ пулнипе килӗшместӗр пулсан (пӗтӗмӗшлӗрех калас пулсан, капитализмӑн тупсӑмӗ вӑл—таварлӑ хуçалӑх организациленӗ обществӑллӑ ӗçӗн продуктне уйрӑм çынсем хӑйсен аллине тытса илни пулать те ӗнтӗ), апла пулсан вара, эсир капитализм мӗн иккенне тата унӑн историне те «хӑвӑр» кӑтартса пама тӑрӑшӑр.

Чӑннипе вара, пирӗн «халӑхӑн» кустарнӑй промысласен организацийӗ капитализм аталанӑвӗн пӗтӗмӗшле историне акӑш-макӑш лайӑх сӑнласа кӑтартать. Вӑл пире уççӑнах, сӑмахран, простой кооперации форми урлӑ (чӳлмек тӑвакан промыслари çӳлти ушкӑн) капитализм епле çуралса тухнине, унӑн пуçламӑшне кӑтартса парать, малаллӑ вара—таварлӑ хуçалӑха пула уйрӑм çынсен аллинче пухӑнса пыракан «перекетсем» епле майпа *капитал* пулса тӑнине, тавара йышлӑн илсе сутма укçа çак «перекетсене» тытса тӑракан хуçасен аллинче кӑна пур пирки, çавӑнпа та вӗсем тавара инçетри рыноксенче сутассине те кӗтсе тӑма пултарнӑ пирки, вӗсем хӑйсен аллине малтанлӑха тавар сутас ӗçе епле монополизацилесе пынине («скупщиксемпе суту-илӳçӗсем») кӑтартса парать; вара çак суту-илӳ капиталӗ, производительсен массине хӑйне пӑхӑнтарса епле майпа шултӑра производствӑн

капитализмлă килти системине, капитализмлă мануфактурăна организациленине кăтартать; юлашкинчен вара, рынок сарăлса пыни, конкуренци вăйланни техникăна ӳстересси патне илсе пырса, суту-илӳ капиталĕ, индустриллĕ капитал пулса тăрса, машинăллă шултăра производство организациленине кăтартса парать. Çак капитал тĕрекленсе çитсе, ĕççыннисене миллионĕ-миллионĕпе, районсене пĕтĕмĕшпе чуралантарса çитернĕ хыççăн,— правительство çине те тӳррĕнех, пĕр именмесĕр тапăнма тытăнать, ăна хăйĕн тарçи туса хурать,—ун чухне вара пирĕн çивĕч ăслă «халăх тусĕсем» «капитализма ирĕксĕрлетсе ӳстерни» çинчен, ăна «искусственнă туни» çинчен кăшкăрма тапратаççĕ!

Каламалли те çук, питĕ вăхăтра туйса илчĕç!

Çапла ĕнтĕ г. Кривенко, чăн-чăн, халăхăн, тĕрĕс т. ыт. ç. п. промышленность çинчен сӳпĕлтеткелесе, пирĕн кустарнăй промысласем тĕрлĕ пусăма аталанса çитнĕ капитализмах пулнă факта шăлса лартасшăн кăна пулнă. Ун йышши меслетсемпе эпир г. Южаков статьисене тĕпченĕ чухнех çителĕклĕ паллашсаттăмăр ĕнтĕ, вăл та вĕт хресчен реформине тĕпчесе вĕренес вырăнне—паллă манифестăн тĕп тĕллевĕ çинчен калаçсаччĕ, т. ыт. те; арендăна тĕпчесе вĕренес вырăнне—ăна халăх аренди тесе ят парсаччĕ; капитализмăн шалти рынокĕ епле пулса пынине тĕпчесе пĕлес вырăнне—рынок çук пирки унăн пурĕпĕрех пĕтмелле пуласси çинчен лапăртатсаччĕ, т. ыт. те.

Гг. «халăх тусĕсем» фактсене мĕн тери суйса арпаштарнине кăтартса парас тесе тата тепĕр тĕслĕх çинче чарăнса тăрам*: пирĕн субъективлă философсем фактсем çине пире çав тери сахал тĕллесе кăтартаççĕ, çавăнпа та вĕсенчен пĕрин çинчен, чи тĕрĕсси çинчен—г. Кривенко (журналăн 94-мĕш çулхи 1-мĕш №-че) Воронеж кĕпĕрнинчи хресчен бюджечĕ çине кăтартса пани çинчен—калаçмасăрах иртсессĕн, тивĕççĕр пулĕччĕ. Кунта, хăйсемех суйласа илнĕ сведенисен тĕслĕхĕ тăрăх, эпир, пурнăç çинчен вырăс радикалĕсемпе «халăх тусĕсем» шухăшлани-и, е вырăс социал-демокрачĕсем шухăшлани тĕрĕсрех-и, çавна уççăнах курса пĕлме пултаратпăр.

Воронежри земствăра ĕçлекен статистик г. Щербина хăйĕн Острогожск уездĕнчи хресченсен хуçалăхĕ çинчен çырса пĕлтерекен кĕнеки çумне 24 хресченĕн сăнарлă хуçалăхĕсен бюджечĕсене хушса парать, кĕнекен текстĕнче вара вĕсене тĕпчесе сăнать**.

---

* Ку тĕслĕх хресченсем сийленсе пыни çинчен. Ун çинчен темĕн чухлех калаçнă. Эпĕ çавах та *вĕсен хăйсен сведенийĕсене* сăнаса пахни кирлех тетĕп; унчухне вара социал-демократсем чăн-пуррипе интереслерmeççĕ, «пуласлăха пĕлессишĕн» тăрăшаççĕ тенисем, мĕн тери чăтма çук суя пулни, тата тавлашнă чухне çак «халăх тусĕсем» пирĕн шухăшсен тупсăмĕ çинчен калаçмасăр, киревсĕр фразăсемпе сӳпĕлтетсех ирттерсе яма тăрăшса, мĕн тери шарлатанла хăтланни уççăнах курăнĕç.—

** Сборник статистических сведений по Ворон. губ. Т. II. в. II. Крестьянское хозяйство по Острогожскому уезду. Воронеж. 1887—Бюджечĕсене хăйсене 42—49 страницăсенче приложенипе панă. Тĕпчени «Хресчен хуçалăхĕсен йышĕпе бюджечĕ» ятлă XVIII главара.

Г-н Кривенко хăйĕн статьинче çак тĕпчев çинчен çырса пĕлтерет, анчах пирĕн çĕрĕçлекен хресченсен экономикине тĕрĕс пĕлес тесессĕн, ку сăнав меслечĕсем пачах юрăхсăррине курмасть, е, тĕрĕсрех каласан, пĕртте курасшăн мар. Ĕç акă мĕнре: çак 24 бюджет пачах тĕрлĕ тĕслĕ хуçалăхсене сăнласа кăтартать — пуян хуçалăхсене, те, вăтаммисене те, чухăннисене те; ун çинчен г. Кривенко хăй те кăтартса парать (159 стр.), анчах хăй, çакăнпа пĕрлех, г. Щербина пекех, тĕрлĕрен сăнарлă хуçасене пĕр купа туса пĕрлештерекен *вăтам* цифрăсене çех палăртать, çавăнпа та вара çак хуçалăхсем сийленсе пынине шăлтах пытарса хăварать. Чăннипе вара, пирĕн вак производитель тĕрлĕ сие пайланса пыни вăл—çав тери пысăк, çав тери вăйлă факт, çакăн пирки вăл, г. Кривенко суйласа илнĕ йышши питĕ сахал сведенисем тăрăх та, пачах уççăн курăнса тăрать. (Ку факт çине социал-демократсем вырăс социалисчĕсене тахçантанпах кăтартса тăраççĕ ĕнтĕ. Плеханов произведенийĕсене пăхăр). Анчах г. Кривенко, хресченсен *хуçалăхĕ* çинчен калаçнă чухне, вĕсен пысăкăшне пăхса, хуçалăха мĕнле йĕркепе тытса ĕçленине пăхса тĕрлĕрен разряда пайлас вырăнне, г. Щербина пекех,—ĕлĕк государственнăй хресченсем пулнисем çине тата ĕлĕк помещик хресченĕсем пулнисем çине, юридически разрядсене пайласа, малтанхисем кайранхисенчен пуянрах пулни çине кăна асăрхаса пăхать, çавăнпа та вара çак уйрăм разрядсенчи хресченсем хушшинчи уйрăмлăх, разрядсем хушшинчи уйрăмлăхран нумай пысăккине курмасăрах юлать*. Çак тĕрĕссине кăтартса парас тесе, асăннă 24 бюджета 3 ушкăна пайлатăп: а) 6 пуян хресчене уйрăммăн илетĕп, унтан б) вăтам пурăнакан 11 хресчене (ку бюджетсене Щербина хăй кĕнекинче 7—10-мĕш, тата 16—22-мĕш № - семпе паллă тунă), юлашкинчен вара в) 7 чухăн хресчене илетĕп (Щербина таблицинче 11—15-мĕш, тата 23—24-мĕш №-лĕ бюджетсем). Г-н Кривенко, сăмахран, çапла калать: ĕлĕк государственнăй пулнă хресченсен расход пĕр хуçалăх пуçне 541,3 тенкĕ тивет, помещиксен пулнисен—417,7 тенкĕ, тет. Çак вăхăтрах вăл, тĕрлĕ хресченсен расхочĕсем чылаях пĕр пек мар пулнине, асăрхамасть; сăмахран, государственнăй пулнă хресченсем хушшинче 84,7 тенкĕ расход тăвакан хресчен пур, унтах *вунă хут ытла*—887,4 тенкĕ тăваканни те пур (ку вăл—1.456,2 тенкĕ расход тăвакан нимĕç-колониста шутламасан). Çакăн йышши цифрăсене пĕрле хушса тупнă вăтам цифрă мĕн пĕлтерме пултартăр-ха ĕнтĕ? Çак хресченсенех, эпĕ разрядсене пайланă тăрăх илсе пăхсан вара, çакăн йышши цифрăсем пулаççĕ: пуян хресченсен пĕр хуçалăх пуçне вăтамран 855,86 тенкĕ расход

* Ним иккĕленми паллă: пĕртен-пĕр çĕрĕçĕпе кăна тата тарçă тытса пурăнакан хресченĕн хуçалăхĕ хăйĕн сăн-сăпачĕпе—тарçăра пурăнса, çак ĕçрен пĕтĕм тупăшăн $^{3}/_{5}$ пайне илсе тăракан хресчен хуçалăхĕнчен уйрăм тăрать. Çак 24 хуçа хушшинче вара лешсем йышши те, теприсем пекки те пур. Хăварах шутлăр ĕнтĕ: тарçăсемпе тарçă тытакан хуçасене пĕрле купаласа шыраса тупнă вăтам цифрăна кăтартса хăтланнинчен мĕнле наука тухма пултартăр-ха.

пулать, вăтаммисен—471,61 тенкĕ, чухăннисен—223,78 тенкĕ*.
Уйрăмлăхĕ çак отношени майлă пулать: 4:2:1.

Малалла каяр. Г-н Кривенко, Щербина меслетне йышăнса, хресченсен тĕрлĕ юридически разрядĕнче хăйĕн потреблени валли мĕн чухлĕ расход тунине кăтартса парать: сăмахран, ĕлĕк государственнăй пулнă хресченсен çулталăк хушшинче 1 çын пуçне ўсен-тăран апат-çимĕçĕпе—13,4 тенкĕ расход тухать, помещик хресченĕсем пулнисен вара—12,2 тенкĕ. Çав вăхăтрах экономикăллă разрядсем тăрăх цифрăсем çапла пулса тăраççĕ: а) 17,7; б) 14,5 тата в) 13,1. Аш-пăшпа сĕт-çу апачĕ тĕлĕшĕнчен ĕлĕк помещик хресченĕсем пулнисен 1 çын пуçне—5,2 тенкĕ, государственнăй хресченсем пулнисен—7,7 тенкĕ тухать. Экономикăллă разрядсем тăрăх вара: 11,7—5,8—3,6. Уççăнах курăнать: юридически разрядсем тăрăх шутлани тем тери пысăк уйрăмлăха кăна витсе тăрать, урăх нимĕне те мар. Çавăнпа, вăл нимĕне юрăхсăрри те уççăнах курăнать. Дохочĕсем государственнăй хресченсем пулнисен помещиксен пулнисеннинчен 53,7% чухлĕ ытла, тет г. Кривенко; пĕтĕмĕшпе вăтамран (24 бюджет тăрăх)—539 тенкĕ; разрядсем тăрăх вара—600 тенкĕ ытла тата 400 тенке яхăн пулать. Çав вăхăтрах, пурлăх тăрăх шутлас пулсан, доход çакăн пек пулать: а) 1.053,2 тенкĕ; б) 473,8 тенкĕ; в) 202,4 тенкĕ—урăхла каласан, уйрăмлăхĕ—3:2 хушшинчи пек мар, 10:2 хушшинчи пек.

«Государственнăй хресчен пулнисен хуçалăхĕсен капитальнăй стоимоçĕ—1.060 тенкĕлĕх, помещиксен пулнисен—635 тенкĕлĕх», тет г. Кривенко. Разрядсем тăрăх вара çапла**: а) 1.737,91 т.; б) 786,42 т. тата в) 363,38 тен.—уйрăмлăхĕ каллех—3:2 хушшинчи пек мар, 10:2 хушшинчи пек. «Хресченсене» юридически разрядсем çине пайланипе автор хăйне-хăех çак «хресченсен» экономики çинчен тĕрĕс шухăшлассине пĕтерсе хунă.

Хресченсен тĕрлĕ сăнарлă хуçалăхĕ çине пурлăх тĕлĕшĕнчен пăхсан, вара пуян çемьесен дохочĕ вăтамран 1.053,2 т., расхочĕ 855,86 т. пулнине куратпăр, урăхла каласан таса дохочĕ 197,34 т. Вăтам пурăнакан çемьесен дохочĕ, пĕр хуçалăх пуçне—473,8 т., расхочĕ 471,61 т., урăхла каласан таса дохочĕ—2,19 т. (ку вăл—кивçен илнĕ укçасемпе недоимкăсене шутламасăр)—паллах, вăл хăйĕн пурнăçне вĕçне-вĕçĕн аран-аран çыхăнтарса пырать: 11 хуçалăхран пиллĕкĕшĕ дефицитлă хуçалăхсем. Аялти, чухăн ушкăн хăйĕн хуçалăхĕнче тўррĕнех убытокпа ĕçлет: дохочĕ 202,4 т., расхочĕ—223,78 т., урăхла каласан 21,38 т. дефицит**. Уççăнах курăнать, çак мĕнпур хуçалăхсене пĕрлештерсе пĕтĕмĕшле

---

* Вăтам çемьесен пысăкăшĕ тĕлĕшĕнчен уйрăмлăх чылай пĕчĕккĕрех: 1 çемье пуçне вăтамран а) 7,83, б) 8,36, в) 5,28 çын тивет.

** Уйрăмлăхсем пуринчен ытла инвентарь тытса тăрас тĕлĕшĕнчен пысăк: вăтамран шутласан 1 хуçалăх 54,83 тенкĕлĕх инвентарь тытса тăрать. Анчах пуяннисен икĕ хут ытларах—111,80 тенкĕлĕх, чухăннисен вара виçĕ хут сахал—16,04 тенкĕлĕх. Вăтам пурăнаканнисен 48,44 тенкĕлĕх.

*** Çакна палăртни интереслă: 7 чухăн хуçа хушшинчи 2 тарçăн бюджечĕсем дефицитсăр: çемье пуçне 99 т. доход тата, 93,45т. расход. Тарçăсенчен пĕри хуçа апачĕпе, тумĕпе пурăнать.

вӑтам цифра шыраса тупсан (таса дохочӗ—44,11 т. пулать) эпир чӑнлӑха йӑлтах пӑсса пӑрахӑттӑмӑр. Ун чухне вара эпир (г. Кривенко пекех) ҫак факта: таса доход илекен пуян хресченсем улттӑшӗ те тарҫӑ (8 ҫын) тытнине курмасӑрах иртӗттӗмӗр, чӑннипе вара ку факт пире вӗсен ҫӗрӗҫлӗ хуҫалӑхӗн характерне (хуҫа фермер пулса пынине) ӑнлантарса парать; ку хуҫалӑх, таса доход парса, хӑй хуҫисене «промысласемпе» пӗртте хӑтланмасӑрах пурӑнма май парать. Ку хуҫасем (пурӗшӗ те пӗрле) хӑйсен бюджечӗн 6,5 процентне кӑна (6.319,5 тенкӗрен 412 тенкине) промысласемпе витеҫҫӗ; ҫитменнине г. Щербина пӗр тӗлте каланӑ тӑрӑх, промысласем те вӗсен «лава ҫӳресси е тата—сурӑхсем сутӑн илесси» йышши промысласем, урӑхла каласан, хӑйсем ҫынсене пӑхӑнса тӑманнине палӑртма кӑна мар, унтан та ытларах, ытти ҫынсене те эксплуатациленине пӗлтерсе тӑракан промысласем («сурӑхсем пухас ӗҫре», шӑпах ҫакӑнта ӗнтӗ—пухнӑ «перекетсем» суту-илӳ *капиталӗ* пулса тӑраҫҫӗ). Ку хуҫасем хӑйсен аллинче промышленноҫлӑ заведенисем тӑваттӑ тытса тӑраҫҫӗ, вӗсем хуҫисене 320 т. (5%) доход парса тӑраҫҫӗ*.

Вӑтам пурӑнакан хресченсен хуҫалӑхӗ урӑх сӑнарлӑ: вӗсем, эпир куртӑмӑр ӗнтӗ, хӑйсен пурнӑҫне вӗҫне-вӗҫӗн ҫыхӑнтарса та пыраймаҫҫӗ пулас. Ҫӗрӗҫӗ вӗсен нушисене витме ҫитерейместь, ҫавӑнпа та доходӑн 19 процентне промысласем текен ӗҫ парса тӑрать. Ку мӗнле йышши промысласем иккенне, эпир г. Щербина статьи тӑрӑх вуласа пӗлетпӗр. Вӗсем мӗнлине 7 хуҫалӑх тӑрӑх кӑтартса панӑ: 7 хуҫаран иккӗшӗ кӑна хӑй-халлӗн промыслара хӑйсен вӑйӗпе ӗҫлеҫҫӗ (ҫӗвӗ ҫӗлеҫҫӗ те кӑмрӑк ҫунтараҫҫӗ), юлашки пиллӗкӗшӗ—ӗҫ вӑйне сутса пурӑнаҫҫӗ («анаталла утӑ ҫулма кайсаттӑм», «ерех савӑтне ӗҫлеме ҫӳретӗп», «тырӑ вырса пуҫтарнӑ вӑхӑтра кунӑн кӗрӗшсе ӗҫлетӗп», «сурӑх кӗтӳҫӗнче ҫӳретӗп», «помещик патӗнче ӗҫлетӗп», теҫҫӗ вӗсем). Кусем ӗнтӗ—ҫурма-хресченсем, ҫурма-рабочисем. Ют ҫӗрте ӗҫлени, вӗсене хӑйсен хуҫалӑхӗнчен уйӑрса, ӑна пачах пӗтерсе лартать.

Чухӑн хресченсем тӗлӗшӗпе калас пулсан, вӗсен ҫӗрӗҫӗ вара тӳррӗнех убыток парать; вӗсен бюджечӗсенче «промысласен» вырӑнӗ пушшех те ӳссе каять (доходӑн 24 процентне йышӑнса тӑрать), ҫийӗнчен тата ку промысласем (пӗр хуҫаннинчен пуҫне) пӗтӗмӗшпех ӗҫ вӑйне сутни пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсенчен иккӗшин «промыслисем» (тарҫа кӗрӗшсе ӗҫлени) ҫӗрӗҫӗнчен ирттереҫҫӗ, доходӑн $^{2}/_{3}$ пайне параҫҫӗ.

Ҫакӑнтан ӗнтӗ, вак производитель йӑлтах сийленсе пыни, унӑн ҫӳлти ушкӑнӗсем—буржуази пулса, аялтисем—пролетариат пулса кайни курӑнса тӑрать. Паллах, эпир пӗтӗмӗшле вӑтам цифрӑсене илсен ҫакна пӗртте курас ҫук, ял экономики ҫинчен те ним чухлӗ те ӑнланса илес ҫук.

Ҫак суя вӑтам цифрӑсемпе айкашни кӑна автора ҫакӑн йышши меслет шухӑшласа тупма май панӑ. Ҫак паллӑ сӑнарлӑ ху-

* 1-мӗш приложение вула (ку изданире... 155 стр. *Ред.*).

ҫалӑхсем, уездсенчи хресчен хуҫалӑхӗсен пӗтӗмӗшле сӑнарӗ хушшинче мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине пӗлес тесе, г. Щербина ят ҫӗрӗ тытни тӑрӑх хресченсен ушкӑнне илет те, вара асӑннӑ 24 хуҫалӑх (пӗтӗмӗшпе вӑтамран) хайсен пурӑнӑҫӗпе уездри вӑтам хуҫалӑхран $^1/_3$ чухлӗ ҫӳлерех вырӑнта тӑни курӑнать. Кун пек шутланине пӗртте ҫителӗклӗ тесе йышӑнма юрамасть, мӗншӗн тесен, пӗр енчен, ҫак 24 хуҫалӑх хушшинче питӗ пысӑк уйрӑмлӑх пурри палӑрать, тепӗр енчен, хресченсене ҫӗрӗсем тӑрӑх уйӑрни—вӗсем сийленсе пынине пытарса тӑрать: авторӑн хресченсен «пурнӑҫ танлӑхӗн тӗп сӑлтавӗ ят ҫӗрӗ пулса тӑрать» тенӗ положенийӗ—пачах тӗрӗс мар. Ҫӗре община ӑшӗнче «танлаштарса» валеҫсе тухни вӑл—общинӑн лашасӑр членӗсене хӑйсен ят ҫӗрне пӑрахма, вӗсене тара пама, урӑх ҫӗре кайса, пролетари пулса тӑма та пӗртте кансӗрлеменнине, нумай лашаллисене вара—темӗн чухлӗ ҫӗрсем тара илсе, пысӑк тупӑш паракан шултӑра хуҫалӑх тытса тӑма та пӗртте чарманнине пурте пӗлеҫҫӗ. Сӑмахран, эпир хамӑрӑн 24 бюджета илсе пӑхсассӑн, ҫакна куратпӑр: пӗр пуян хресчен, хӑй аллинче 6 теҫетин ят ҫӗрӗ тытса тӑнӑ чухне, доход мӗн пурӗ 758,5 т. илет, вӑтам хресчен—ят ҫӗрӗ 7,1 тес. чухне—391,5 т., чухӑнни вара—ят ҫӗрӗ 6,9 тес. чухне—109,5 т. Ытти пӗтӗм доходсем тӗлӗшӗпе те тӗрлӗ ушкӑнсенче отношени 4:2:1 пек пулнине, курсаттӑмӑр эпир; ҫав вӑхӑтрах ят ҫӗрӗ тӗлӗшӗнчен вара отношенийӗ ҫавӑн пек: 22,1 : 9,2 : 8,5 =2,6:1,0,8:1. Кӑна ӑнланма пит те ҫӑмӑл, мӗншӗн тесен, сӑмахран, эпир ҫакна куратпӑр: пуян хресченсем, кашни кил пуҫне 22,1 тес. ят ҫӗрӗ тытса тӑнипе пӗрлех, тата 8,8 теҫетиншер тара илеҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах вӑтамсен ят ҫӗрӗ сахалтарах (9,2 тес.), вӗсем тара та сахалтарах—7,7 тес. илеҫҫӗ, чухӑнсен вара ят ҫӗрӗ татах та сахалтарах (8,5 тес. кӑна), тара та мӗн пурӗ те 2,8 тес. анчах илеҫҫӗ*. Ҫавӑнпа та г. Кривенко: «Шел, г. Щербина илсе кӑтартнӑ сведенисем пӗтӗм кӗпӗрнери кӑна мар, уездри пӗтӗмӗшле положенишӗн те тӗрӗс виҫе пулма пултараймаҫҫӗ», тенӗ сӑмахсене хирӗҫ, ҫапла ҫеҫ калама пулать: ку сведенисем—пӗтӗмӗшле вӑтам цифрӑсене шутласа каларнӑ чух тӗрӗс мар меслетпе усӑ курсан ҫеҫ тивӗҫ виҫе пулма пултараймаҫҫӗ (ҫавӑнпа г. Кривенкон ку меслетпе усӑ курмалла та пулман), анчах ҫапах та, пӗтӗмӗшпе илсен, г. Щербина сведенийӗсем тем тери пуян та паха, ҫавӑн пирки вӗсем тӗрӗс выводсем тума май параҫҫӗ—г. Кривенко ҫак выводсене хӑй туман пулсан, вара уншӑн пӗртте г. Щербинӑна айӑпламалла мар.

Сӑмахран, кӗнекен 197-мӗш страницинче г. Щербина хресченсене ят ҫӗрӗ тӑрӑх мар, ӗҫ выльӑхӗ тӑрӑх, урӑхла каласан, юридически паллӑ тӑрӑх мар, хуҫалӑх палли тӑрӑх пайласа кӑтартать, ку вара уҫҫӑнах акӑ ҫапла калама ирӗк парать: асӑннӑ,

---

* Паллах, ку ӗҫре ят ҫӗрӗ тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать текен шухӑш суйине кӑтартса пама *пӗртен-пӗр 24* хуҫалӑх ҫинчен калакан сведенисем ҫителӗклӗ тесе калаҫшӑн мар эпӗ. Анчах ҫӳлерех темиҫе уезд тӑрӑх та сведенисене кӑтартса патӑмӑр, вӗсем вара ку шухӑша пӗтӗмпех суяна кӑлараҫҫӗ.

24 хуçалăхăн тĕрлĕрен разрячĕсем хушшинчи отношенисем пĕтĕм уездри тĕрлĕ экономикăллă ушкăнсем хушшинчи отношенисемпе пĕр пекех.

Ку ушкăнсем çакăн пек*:

**Воронеж кĕпĕрнинчи Острогожск уезчĕ.**

| Кил хуçи ушкăнĕсем ĕç выльăхĕ тăрăх шутласан | Хисепĕ | | Пĕр кил пуçне тивекен хисеп | | | Çемьесен вăтам йышĕ (чунпа) | Килсен процентĕ | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Кил хуçисем | Вĕсен % | Майракаллă шултăра выльăх | Ят çĕрĕ (теçетинпа) | Тара илнĕ çĕр (теçетинпа) | | Тарçă тытаканнисем | Суту-илӳ тата промышленность заведениллисем | Çурт-йĕрсĕррисем | Ĕçлекен çуккисем | Çĕрне ĕçлемесĕр вырттараканнисем | Инвентарь çуккисем |
| I. Ĕç выльăхĕсĕр . | 8.728 | 26,0 | 0,7 | 6,2 | 0,2 | 4,6 | 0,6 | 4,0 | 9,5 | 16,6 | 41,6 | 98,5 |
| II. 1 пуç ĕç выльăхĕ тытакан . . . | 10.510 | 31,3 | 3,0 | 9,4 | 1,3 | 5,7 | 1,4 | 5,4 | 1,4 | 4,9 | 2,9 | 2,5 |
| III. 2—3 пуç ĕç выльăхĕ тытакан . | 11.191 | 33,3 | 6,8 | 13,8 | 3,6 | 7,7 | 8,3 | 12,3 | 0,4 | 1,3 | 0,4 | — |
| IV. 4 пуç е ытларах ĕç выльăхĕ тытакан . | 3.152 | 9,4 | 14,3 | 21,3 | 12,3 | 11,2 | 25,3 | 34,2 | 0,1 | 0,4 | 0,3 | — |
| Мĕн пурĕ . . | 33.581 | 100,0 | 4,4 | 11,2 | 2,5 | 6,7 | 5,7 | 10,0 | 3,0 | 6,3 | 11,9 | 23,4 |

| 24 сăнарлă хуçалăхран** | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | батраксем . . | 0,5 | 7,2 | 0 | 4,5 ***|
| | чухăнсем . . . | 2,8 | 8,7 | 3,9 | 5,6 |
| | вăтамсем . . . | 8,1 | 9,2 | 7,7 | 8,3 |
| | пуянсем . . . | 13,5 | 22,1 | 8,8 | 7,8 |
| | Мĕн пурĕ . . | 7,2 | 12,2 | 6,6 | 7,3 |

* 24 хуçалăхăн вăтам цифрине ят çĕрĕ тăрăх уйăрнă разрядсемпе г. Щербина епле танлаштарнă, 24 сăнарлă хуçалăха пĕтĕм уездри хуçалăх ушкăнĕсемпе те çав меслетсемпех танлаштарнă.

** Кунта чухăнсен хушшинчен 2 тарçа (Щербина таблицинче 14—15-мĕш №-лĕ бюджетсене) уйăрнă, çавăнпа чухăнсем пиллĕкĕн çеç тăрса юлнă.

*** Çак таблица пирки çакна та палăртмасăр хăварма юрамасть: кунта та эпир, пуянлăх ӳсе пынăçем, ят çĕрĕ ӳсе пырать *пулин те* тара илнĕ çĕр те пĕрехмай ӳсе пынипе куратпăр. Çапла ĕнтĕ, тата тепĕр уезд сведенийĕсем тăрăх та, хресчен пурăнăçĕн шайĕнче ят çĕрĕ тĕп вырăн йышăнса тăрать тенĕ шухăш тĕрĕсмарри çирĕпленет. Пачах урăхла, эпир çакна куратпăр: ушкăн пуянлăхĕ ӳсе пынăçем, ят çĕрĕн пайĕ, паллă ушкăнăн аллинчи пĕтĕм çĕр шутĕнче, чакнăçем чакса пырать. Ят çĕрĕпе тара илнĕ çĕре пĕрле хушса, çак хисепрен ят çĕрĕн процентне шутласа кăларсан, тĕрлĕ ушкăн тăрăх çакăн йышши сведенисем пулса тăраççĕ: I) 96,8%; II) 85,0%; III) 79,3%; IV) 63,3%. Çакăн пек япала мĕн пирки пулнине ăнланма пит çăмăл. Ирĕке кăларакан реформа хыççăн ĕнтĕ çĕр Российăра тавар пулса тăнине пĕлетпĕр эпир. Камăн укçа пур, вăл çĕре кирек хăçан та илме пултарать: халĕ ят çĕрне те укçалла илмелле. Çавăнпа та, пуян хресченсем çĕре хăйсен аллине концентрацилениие те, тата, вăтам ĕмĕрхи йĕркесем ят çĕрне алăран алла куçма кансĕрленĕ пирки, çак çĕр пуринчен ытла тара илнĕ формăпа концентрациленсе пынине те ăнланма çăмăл. Çав кансĕрлĕхсемшĕн тăракан «халăх тусĕсем», çĕре алăран алла куçма чаракан çак ăссăр, реакциллĕ меслетсем чухăнсен пурăнăçне начарлатнине кăна, пĕртте ăнланмаççĕ: хуçалăхсем тусăннă, инвентарсĕр тăрса юлнă хресченсем пал-

Çапла ĕнтĕ 24 сăнарлă хуçалăх, пĕтĕмĕшпе тата вăтам цифрăпа илсе пăхсан, пĕтĕм уездри хресчен хуçалăхĕсен сăнарĕнчен çӳлерех тăни тĕлĕшпе нимĕн иккĕленмелли те çук. Анчах эпир çак суя вăтам цифрăсем вырăнне экономикăллă разрядсене илсен, вара вĕсене танлаштарса пăхма та май пулать.

Эпир çакна куратпăр: сăнарлă хуçалăхсенчи батраксем ĕç выльăхĕсĕр хуçасенчен кăшт аяларах, анчах çавах та вĕсемпе питĕ çывăх тăраççĕ. Чухăн хуçасем пĕр пуç ĕç выльăхĕ тытакан хуçасене питĕ çывăх (пĕтĕм выльăх—чухăнсен 2,8 пуç, пĕр лашаллисен—3 пуç пулсан, урăхла каласан чухăнсен пĕр лашаллисеннинчен 0,2 пуç сахалтарах пулсан, ун вырăнне вара вĕсен пĕтĕм çĕрĕ, ят çĕрĕпе тара илнĕ çĕр пĕрле кăшт ытларах: 10,7 тес. вырăнне 12,6 тес.). Вăтам хуçасем 2—3 пуç ĕç выльăх тытаканнисенчен кăшт çӳлерех тăраççĕ (пĕтĕм выльăхĕ вĕсен кăшт ытларах; çĕрĕ кăшт сахалтарах), пуян хуçасем вара 4 пуç е ытларах ĕç выльăхĕ тытакан хуçасем патнех пыраççĕ, вĕсенчен кăшт çех *аяларах*. Çапла ĕнтĕ, пирĕн çакăн пек вывод тума право пур: доходлă, тĕрĕс çĕрĕç хуçалăхĕ тытакан, çавăнпа аякка кайса тупнă ĕçукçисемсĕрех пурăнма пултаракан хуçасем, пĕтĕм уездчĕпе шутласан, 0,1 кая мар. (Ку дохочĕ вĕсен—кăна палăртни кирлех—укçаллă доход, апла пулсан, вăл, çĕрĕçĕ сутӳ-илӳ характерлă пулнине пĕлтерет). Вĕсен хуçалăхĕнче тара тытнă рабочисем чылаях ĕçлеççĕ: пĕтĕм килсенчен $^1/_4$-мĕш пайĕнчен кая мар яланах тар-

---

лах, çĕрĕсене мĕн пулсан та тара пама тивĕç пулса тăраççĕ; çĕрĕсене тара пама (е сутма) чарсассăн вĕсен вара ăна е вăрттăн памалла пулать, апла пулсан вара, тара парас условисем вĕсен пушшех начарланса юлаççĕ, е чухăнсем хăйсен çĕрĕсене «обществăна», урăхла каласан, çав кулаках, пĕр пуссăрах парса хăвармалла пулать.

«Яг çĕрне сутмалла тума юрамасть» тесе, йăлăхтарса çитериччен каласса пĕтернĕ япаласем çинчен Гурвичăн питĕ тĕрĕс каланă шухăшĕсене асăнмасăр иртме пултараймастăп:

«Ку ыйтăва ăнланса илес тесен, пирĕн хресчен çĕрне кам илнине пăхмалла. Помещиксен четвертной çĕр участкисен сахал пайне кăна купецсем илнине эпир курсаттăмăр ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшпе каласан, дворянсем сутакан вак участоксене хресченсем кăна илеççĕ. Апла пулсан, ку ыйту хресченсен отношенийĕсене кăна пырса тивет, дворянсен интересне те, капиталистсен класне те пĕртте тĕкĕнмест. Тен, ĕçсем çакăн пек пулнă чухне, вырăс правительствин народниксене, ыйткалакансене панă пек, пĕр татăк-кĕсĕк парас кăмăлĕ те пулĕ. Хĕвелтухăçĕнчи патриархаллă опекăна (oriental paternalism) государственно-социализмлă темлеуксах-чăлах прогибиционизмĕпе (усă кăтартас кăмăлĕпе) çапла тĕлĕнтермелле пĕрлештерни, (mesalliance) кама усă кăтартасшăн чăрманаççĕ, шăпах çавсенчен оппозици туса хумасăр иртме пултарĕ-ши вара. Уççăнах курăнать ĕнтĕ ял тулашĕнчен мар, шалтан пуçăнса сиенлесе пынă пирки, хресчен çĕрне сутмалла мар тăвас тени, чăннипе, чухăнсене общинăн пуян членĕсене усă тăвасшăн пĕр пус тӳлемесĕрех экспроприацилени кăна пулса тăрать.

«Четвертной çĕрсем çинчи, хăйсен çĕрĕсене сутма пултаракан хресченсем хушшинче—çĕрĕсене община йĕркипе тытса тăнă государственный хресченсемпе танлаштарсан, çĕнĕ çĕре куçакансен проценчĕ ытларах пулни курăнать; сăмахран: Раненбург уездĕнче (Рязань кĕпĕрни) çĕнĕ çĕре куçакансем малтанхисен хушшинче 17% пулнă, иккĕмĕшсен хушшинче—9%; Данковски уездра малтанхисем хушшинче 12%, иккĕмĕшсен хушшинче—5%. Мĕнрен килет-ха çак уйрăмлăх? Ăна пĕр конкретлă тĕслĕх ăнлантарса парĕ:

çăсем тытаççĕ, вĕсемсĕр пуçне тата кунăн ĕçлекен тарçă миçе тытни—паллă мар вара. Кунсăр пуçне уездра пĕтĕм кил хуçисенчен çурри ытла чухăн (0,6-мĕш пайĕ таран: лашасăррисемпе пĕр лашаллисем, 26%+31,3%=57,3%), вĕсен хуçалăхĕ убыток çеç парать, апла пулсан ĕнтĕ вĕсене пĕрехмай, пĕр вĕçĕмсĕр экспроприацилесе тăраççĕ, вĕсен хуçалăхĕ тусăнса пырать. Вĕсен ирĕксĕрех хăйсен ĕç вăйне сутмалла пулать, çапла вара пĕтĕм хресченсенчен $^1/_4$-мĕш пайĕ яхăн, çĕрĕçĕнчен ытларах тара кĕрĕшсе ĕçленипе пурăнаççĕ. Ыттисем—вăтам хресченсем, хăйсен çĕрĕç хуçалăхне вĕсем, урăх çĕртен ĕçлесе тупнă укçине хушса, аран-аран тытса тăраççĕ, унтан пĕрехмай дефицит илеççĕ, çапла вара вĕсен хуçалăхĕ ура çинче пачах çирĕп тăраймасть.

Г-н Кривенко чăн пурнăçа тем пекех пăсса сăнланине кăтартса парас тесе, эпĕ çак сведенисем çинче юриех çав тери тĕпĕйĕрĕпе чарăнса тăтăм. Чипер шухăшламасăр-мĕнсĕрех, вăл вăтам цифрăсене илет те, вĕсемпе аппаланать: паллах, унтан вара пурнăçра çук япала кăна мар, чăн суя çех пулса тухать. Сăмахран, эпир çакна курсаттăмăр: сăнарлă бюджетсем тăрăх кăтартса панă пĕр пуян хресченĕн таса дохочĕ (+197,34) *тăхăр* чухăн кил дефицичĕсенчен (—21,38×9 = —192,42) ытларах; çавăнпа та уездри хресченсем хушшинче 10% йышăнса тăракан пуян хресченсем, 57% йышăнса тăракан чухăнсен дефицичĕсене витеççĕ кăна мар тата ытлашши те юлать. Г-н Кривенко вара, 24 хуçалăхăн вăтам бюджечĕсенчен çакăн йышши ытлашши укçана—44,14 тенкĕ, кредитсĕр тата недоимкăсемсĕр 15,97 т. шыраса тупса, вăтам хуçасем тата вăтамран каярах хуçасем ахаль çех «начарланни» çинчен кăна калать. Чăннипе вара, начарланни çинчен вăтам

---

«1881-мĕш çулта, Грегоров помещикĕн крепостной хресченĕсем пулнă 5 кил хуçинчен тăракан пĕр пĕчĕкçеç община, Данковски уездри Бигильдино ятлă ялтан куçса кайнă. Хăйсен 30 теçетин çĕрне вĕсем пĕр пуян хресчене 1.500 тенке сутса хăварнă. Куçса кайнă хресченсен килĕсенче тăранса пурăнмалли нимĕн те пулман, çавăнпа та нумайăшĕ вĕсенчен çулталăкĕпех ĕçлекен рабочисем пулнă». (Сб. ст. св., ч. II, с. 115, 247). Г-н Григорьев каланă тăрăх («*Переселения крестьян Ряз. губ.*»), 300 тенкĕ—хресчен аллинче 6 теçетинлă вăтам çĕр участки хакĕ—хресчен çемьине кăнтăрти Çĕпĕре куçса çĕнĕ хуçалăх çавăрма çителĕклĕ пулать. Çапла ĕнтĕ кун пек пулсан, хуçалăхне йăлтах тусăнтарса çитернĕ хресчен, хăйĕн общинăри ят çĕрне сутса хăварса, çĕнĕ çĕрте каллех çĕрĕçлекен пулма пултарĕччĕ. Пуриншĕн ырă кăмăллă бюрократи çакна хирĕç тăмасть пулсан, аслашшĕ йăлисене хисеплес таса йĕрке çакăн пек ĕмĕте татма пултарĕччĕ-ши вара.

«Нумаях пулмасть мана çĕнĕ çĕре куçакан хресченсем çинчен каласа кăтартнă шухăшсемшĕн айăпланă пек, халĕ те паллах, пессимизмшăн айăплĕç («Сев. Вестн». 1892, № 5, Богдановский статьи). Йышăннă йăлапа яланах çакăн пекрех калаççĕ: ĕçе, вăл чăн пурнăçра мĕнле пулса пырать, çавăн пек тĕп-тĕрĕс сăнласа кăтартнă тейĕпĕр, анчах çĕнĕ çĕре куçнинчен тухса тăракан сиенлĕ енсем хресченсем йĕркесĕр условисенче пурăннинчен килет, йĕркеллĕ условире—çĕнĕ çĕре куçассине хирĕç каланă сăмахсем «вăй илеймĕччĕç», теççĕ. Анчах та, телейсĕрлĕхе, çак чăн та «йĕркесĕр» условисем хăйсене хăйсемех аталанса пыраççĕ, «йĕркеллĕ условисем тăвасси вара пĕртте хресченсене ырă сунакансен ирĕкĕнчен килмест» (Асăннă ст., 137 стр.).

хресченсем тӗлӗшпе кӑна калама пулать-и, тен*; чухӑнсен масси тӗлӗшпе вара, вӗсене чӑннипех *экспроприацилениие* куратпӑр эпир, ҫавӑнпа пӗрлех производство хатӗрӗсем сахалтарахӑшӗсен аллинче концентрациленсе пыраҫҫӗ, кусем вара чылай шултӑра та тӗреклӗ хуҫалӑхсем тытса тӑраҫҫӗ.

Ҫак юлашки обстоятельствӑна курасшӑн мар пулни вӑл, автора ку бюджетсен тата тепӗр питӗ интереслӗ енне те асӑрхама кансӗрленӗ: чухӑнсене экспроприацилениие кӑтартнипе пӗрлех, вӗсем тата *хресченсем сиилени шалти рынок туса хунине* кӑтартса параҫҫӗ. Пӗр енчен, ҫӳлти ушкӑнран пуҫласа аялалла пынӑҫем промысласенчен илекен доход пӗлтерӗшӗ, урӑхла каласан, ӗҫ вӑйне сутнинчен илекен доход пӗлтерӗшӗ ӳссе пырать (пуянсен, вӑтамсен тата чухӑнсен пӗтӗм бюджечӗн—6,5%; 18,8%; 23,6%). Тепӗр енчен, аялти ушкӑнсенчен пуҫласа ҫӳлтисем енне пынӑҫем ҫӗрӗҫӗн таварлӑ характерӗ (унтан та ытларах: хамӑр курнӑ тӑрӑх—ҫӗрӗҫӗн *буржуаллӑ* характерӗ) ӳссе пырать, тырӑ сутнӑ процент ӳсет: пур хуҫасен те ҫӗрӗҫӗнчен илнӗ дохочӗ разрядсем тӑрӑх ҫакӑн пек: *а)* $\frac{3861,7}{1774,4}$; *б)* $\frac{3163,8}{898,9}$; *в)* $\frac{689,9}{175,24}$

Знаменателӗ доходӑн укҫалӑ пайне кӑтартать**, вӑл ҫӳлти разрядран пуҫласа аялти еннелле ҫакӑн пек: 45,9%—28,3%—25,4%.

Кунта та экспроприацилене пирки, эпир каллех хресченсенчен уйӑрӑлса каякан производство хатӗрӗсем *капитал* пулса тӑнине уҫҫӑнах куратпӑр.

Паллах, г. Кривенко материалпа ҫапла усӑ курнинчен—е, тӗрӗсрех каласан, материала ҫапла пӑсса пӑрахнинчен тӗрӗс выводсем тума пултарайман. Чугун ҫул вагонӗнче хӑйпе пӗрле пынӑ пӗр Новгород кӗпӗрнинчи хресчен сӑмахӗ тӑрӑх, ҫав вырӑнсенчи хресченсен хуҫалӑхӗ укҫалла характерлӗ пулни ҫинчен каласа кӑтартнӑ хыҫҫӑн, унӑн ирӗксӗрех ҫакӑн йышши тӗрӗс вывод тумалла пулнӑ: шӑпах ӗнтӗ ҫак обстановка, таварлӑ хуҫалӑх обстановки ҫынсен кӑмӑлӗнче «хӑйне уйрӑм пултарулӑхӗсемпе» пӗртен-пӗр «епле те пулин йӳнӗрех илес», (улӑх-ҫарансене),

---

* Вӗсем тӗлӗшпе те ку тӗрӗсех мар пулмалла, мӗншӗн тесен хуҫалӑх начарланса пыни вӑл вӑхӑтлӑха, ӑнсӑртран ҫех тӗреклӗхне ҫухатнине пӗлтерет, вӑтам хресчен хуҫалӑхӗсем вара, эпир ӑна куртӑмӑр, яланах ура ҫинче тӗрексӗр, тусӑнса каяс чикӗрех тӑраҫҫӗ.

** Ҫӗрӗҫӗнчен илекен доходӑн укҫаллӑ пайне шутласа кӑларас тесе (Щербина ӑна кӑтартман), чылай кӑткӑс меслетсемпе хӑтланмалла пулчӗ. Тырӑ-пулӑран илекен пӗтӗм доходран улӑмпа арпа доходне кӑларса пӑрахмалла пулчӗ, мӗншӗн тесен, улӑмпа арпа, автор каланӑ тӑрӑх, выльӑха тӑрантарма каять. XVIII-мӗш сыпӑкра, 24 хуҫалӑх сведенийӗсене итог тунӑ чухне мар, пӗтӗм уезчӗпе итог тунӑ чухне, автор вӗсене хӑй те кӑларса пӑрахать. Унӑн итоглӑ сведенийӗсем тӑрӑх эпӗ тӗштырӑран илекен доход процентне шутласа кӑлартӑм (ӑна тырӑран илекен пӗтӗм доходпа—тӗштырринчен, улӑмӗнчен, арпаран илекен доходпа танлаштартӑм), вара ҫавӑн тӑрӑх улӑмпа арпа доходне кӑларса пӑрахрӑм. Ку процент ыраш валли—78,98%, тулӑ валли—72,67%, сӗлӗпе урпа валли—73,32%, вирпе хуратул валли—77,78% пулчӗ.—Ҫакӑн хыҫҫӑн вара, тӗштырӑ мӗн чухлӗ сутнине пӗлес тесе, пӗтӗм тырӑран хӑйӗн хуҫалӑхӗнче пӗтерне пайне кӑлармалла пулчӗ.

«хаклăрах сутас» (156-мĕш стр.)* ĕмĕт çуратать. Çак обстановка ĕнтĕ суту-илӳ тума пултаракан çынсене вăратса (тĕрĕс!) пиçĕхтерекен «шкул» пулса тăрать. «Талантсем курăна пуçлаççĕ, вĕсенчен Колупаевсем, Деруновсем тата тĕрлĕрен ытти çăткăн пырсем** çуралса тухаççĕ, йăваш чĕреллисем, айвантараххисем вара кая юлаççĕ, путса анаççĕ, хуçалăхне тусăнтараççĕ те батрак пулса юлаççĕ» (156-мĕш стр.).

Пачах урăх условисенчи—çĕрĕçлĕ (Воронеж) кĕпĕрнинчи сведенисем те çав выводсем патнех илсе пыраççĕ. Ĕç ĕнтĕ чылаях уççăн курăнать пек: пĕтĕм çĕршыв экономики, уйрăмăн—«общинăллă» «хресченсен» тĕп палăрăмĕ пулса тăракан таварлă хуçалăх системи уççăнах курăнса тăрать; унсăр пуçне тата çак таварлă хуçалăх, *шăпах çав ĕнтĕ,* «халăха» тата «хресченсене» пролетариат çине (хуçалăхне тусăнтарса, тарçăсем пулса тăраççĕ) тата буржуази (çăткăн пырсем) çине пайласа пыни, урăхла каласан капитализмла хуçалăх пулса кайни уççăнах палăрса тăрать. «Анчах халăх тусĕсем» нихăçан та *чăн пурăнăç* çине тӳррĕн пăхса, япалана хăй ячĕпе калама хăяймаççĕ (вăл ытлашши „хаяр" вĕт)! Çавăнпа та г. Кривенко çапла калаçать:

«Хăшпĕрисем çакăн йышши йĕркене—çапла пулмалла та теççĕ (кун çумне тата: вăл — производствăллă отношенисен капитализмлă характерĕнчен хăйне хăех тухакан следстви тесе хушмалла пулнă. Ун чухне вара ку сăмахсем «хăшпĕрисен» шухăшĕсене тĕрĕс каласа кăтартни пулĕччĕ, ун чухне çак шухăшсенчен пушă фразăсемпе лапăртатса иртсе кайма май пулмĕччĕ, ĕçе кирлĕ пек тĕпчемелле пулнă пулĕччĕ. Автор хăй умне «хăшпĕрисене» хирĕç ятарласах кĕрешес тĕллев лартман чухне, унăн хăйĕн те: укçалă хуçалăх вăл—шăпах «талантлă» çăткăн пырсемпе «йăваш чунлă» тарçăсене вĕрентсе кăларакан «шкул» пулнине йышăнмалла пулнă), çавăнпа та ăна капитализмăн çĕнтерме çук миссийĕ тесе шутлаççĕ. (Ну, паллах ĕнтĕ! Шăпах çав «шкула» хирĕç тата унта хуçасем пулса тăракан «çăткăн пырсемпе» вĕсен административлă та интеллигентлă тарçисене хирĕç кĕрешмелле тесе шутлани вăл—капитализма çĕнтерме çук тесе шутлани пулать те ĕнтĕ. Ун вырăнне вара çак капитализмлă «шкулпа» çăткăн пырсене ним тивмесĕрех хăварса, унăн капитализмлă продукчĕсене кăна либераллă çурма-меслетсемпе сирме тăрăшни—вăл вара чăн-чăн «халăх тусĕ» пулнине пĕлтерет!) Эпир ку ĕç çине кăшт урăхларах пăхатпăр. Капитализм кунта чăн та чылай пысăк вырăн йышăнать, çӳлерех ăна кăтартсаттăмăр та эпир (вăл шăпах ĕнтĕ çӳлерех çăткăн пырсемпе тарçăсен шкулĕ çине тĕллесе кăтартни пулать те), анчах çапах та вăл çав тери пысăк, пур ĕçе те татса пама пултаракан вырăн йы-

* «Тарçа йӳнерех тытмалла, унтан усă курма пĕлмелле», тесе тĕп-тĕрĕс калать çавăнтах г. Кривенко.

** Г-н. Южаков! Мĕнле-ха ĕнтĕ апла: сирĕн юлташăр, «талантсенчен» кăна «çăткăн пырсем» пулаççĕ тет, эсир вара,—«ăсĕсем критикăллă мар» пирки кăна çынсем çавăн пек пулаççĕ тесе ĕнентерме тăрăшсатăр? Ку, пĕрне-пĕри пĕр журналтах çĕмĕрни, пĕргте лайăх мар-çке ĕнтĕ, господасем!

кăнса тăрать, халăх хуçалăхĕнче пулакан улшăнусенче урăх факторсем çук тата малашне те урăхла нимĕнле те пулма пултараймасть тесе шухăшлама юрамасть», тет (160-мĕш стр).

Акă курăр ĕнтĕ! Кучухнехи йĕркене тĕп-тĕрĕс те тӳррĕн характеристика парас вырăнне, «хресченсем» мĕншĕн çăткăн пырсемпе тарçăсем çине пайланса пыраççĕ тенĕ ыйтăва хирĕç татăклă ответ парас вырăнне,—г. Кривенко нимĕн те пĕлтермен фразăсемпе калаçса ирттерет. «Капитализма, ĕçе татса паракан вăй тесе шутлама май çук».—Анчах пĕтĕм ыйту та çавăнта, çапла калама юрать-и, е юрамасть-и?

Хăвăр шухăшăра хӳтĕлесе тӳрре кăларас тесен, Сирĕн социал-демократсем кăтартса панă çулйĕртен пуçне—çăткăн пырсене хирĕç пролетариат туса пыракан класла кĕрешӳсĕр пуçне тата мĕнле урăх çулйĕр пулма пултарнине, ĕçе тата мĕнле урăх сăлтавсем «татса панине» кăтартса памалла пулнă*. Анчах нимĕнле урăх кăтарту та çук Сирĕн. Тен, автор хăйĕн çак малалли сăмахĕсене кăтарту тесе шутлать пулĕ тата? Вăл мĕн тери кулăшла пулас пулсан та, «халăх тусĕсенчен» пурне те кĕтмелле.

«Пуринчен малтан вăйсăр, çĕр сахал хуçалăхсем»—тĕллĕнех ят çĕрĕ 5 теçетинран кая хуçалăхсем «начарланаççĕ, ăна эпир курсаттăмăр». «Государственнăй хресченсен 15,7 теçетиншер ят çĕрĕ тытса тăракан сăнарлă хуçалăхсем вара, çирĕп тăраççĕ... Чăннипе çакăн чухлĕ (80 тенкĕ таса) доход илес тесе, вĕсем тата 5-шер теçетин тара илеççĕ, анчах ку факт вĕсене мĕн кирлĕ пулнине çеç кăтартса тăрать».

«Çак тӳрлетӳ» капитализм çумне йăлăхтармĕш «çĕр çитменнине» кăна хушса параканскер, тĕрĕссипе мĕнле тӳрлетӳ пулатьха ĕнтĕ? Вăл: камăн сахал, вĕсем унсăрах тăрса юлаççĕ, камăн нумай (15,7-шер теçетин) вĕсем тата ытларах туянаççĕ тесе сӳпĕлтетни çех пулса тăрать**. Ара ку—пĕрисем хуçалăхĕсене тусăнтараççĕ, теприсем пуйса каяççĕ тенĕ шухăша, пустуй хăтланса, кăшт урăхларах майлă каласа пани кăна пулать вĕт-ха ĕнтĕ!! Çĕр çитменни çинчен çапла нимĕн тупсăмсăр сӳпĕлтетме пăрахма та вăхăт ĕнтĕ, вĕсем нимĕне ăнлантармаççĕ (мĕншĕн тесен ят çĕрне хресченсене пĕр пуссăр памаççĕ, сутаççĕ ăна), процесс çинчен ахаль каласа кăна кăтартаççĕ, çитменнине каласса та тĕрĕс каласа кăна кăтартаймаççĕ, мĕншĕн тĕсен пĕр çĕр çинчен кăна мар, пĕтĕм производство хатĕрĕсем çинчен калаçмалла, çийĕнчен тата хресченсен çĕр «сахалли» çинчен мар, хресченсене çĕрсĕр

---

* Пролетариатăн буржуазие хирĕç класла кĕрешĕвĕ çинчен калакан шухăша халлĕхе ялти «йăваш чунлă та айвантарах» тарçăсем мар, хуларн фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекен рабочисем кăна, урăхла каласан, шăпах тарçăсен çак, «ĕмĕрхи тĕрексемпе» тата «община йăли-шухăшĕсемпе» çав тери таччăн çыхăнса тăракан ырă пахалăхĕсене çухатса пĕтернĕ çынсем кăна ăнланса илме пултараççĕ пулсан,—вăл вара социал-демократсем—вырăс капитализмĕн прогрессивлă, революциллĕ ĕçĕ çинчен калакан теорийĕ тĕрĕссине кăна ĕнентерсе парать.

**Ят çĕрĕ пĕр тан тытакан хресченсем пĕр-пĕринпе танах, вĕсем «çăткăн пырсемпе» «батраксем» çине пайланса тăмаççĕ, тени юрăхсăрри çинчен эпĕ каламастăп та ĕнтĕ.

*тăратса хăварни* çинчен, аталанса пыракан капитализм хресченсене *экспроприацилени* çинчен каламалла. Юлашкинчен вара г. Кривенко хăйĕн философине çапла сăмахсем каласа вĕçлет: «ялхуçалăхĕ хуть те мĕнле условисенче те обрабатывающăй промышленноçран уйрăм пулма, «натурльнăй» пулса юлма пултарать, çапла юлма тивĕç те, тесе пĕртте каласшăн мар эпир» (Каллех фразăсем! ара паян куна та ĕнтĕ укçаллă хуçалăх шкулĕ пуррине, вăл улăшусăр пулма пултарайманнине, апла пулсан çĕрĕçĕ те обрабатывающăй промышленноçран уйăрăлмасăр тăма пултарайманнине—хăвăрăннах тин çеç йышăнмалла пулманччĕ-и-ха вара Сирĕн? Мĕне кирлĕ-ха ĕнтĕ каллех пулма пултарассипе пулма тивĕççисем çинчен сĕлеке юхтарни?), хăйне уйрăм промышленноçа юриех тума усăллă мар тесе çех (кимряксемпе павловецсен промышленноçĕ «уйрăм ĕçлекенскер-ши», çук-ши? кам, мĕнле майпа, хăçан ăна «юриех туса хунă-ши» апла: çавсене пĕлесчĕ?), ĕçлекенсене, çĕртен тата производство хатĕрĕсенчен уйăрасси пĕр капитализм влиянийĕ пирки кăна пулман, вĕсене, капитализмран малтан аталаннă, ăна пулăшса тăнă ытти факторсен влиянийĕ пирки те уйăрса пынă тесе çех каласшăн эпир».

Кунта ĕнтĕ автор каллех тарăн шухăшласа: çăткăн пыр аллине куçакан çĕр ĕçлекен çынран уйăрлать пулсан, вăл вара пĕрин çĕрĕ «сахал», теприн—«нумай» пирки пулать, тесшĕн пулнă пулмалла.

Çитменнине, çакăн йышши философи —социал-демократсем, кунăн тĕп сăлтавĕ капитализмра хăйĕнче теççĕ пулин те, вĕсене ĕç çине «ансăрăн» пăхаççĕ тесе айăплать-ха тата!.. Социал-демократсем ĕçе хăйсем епле ăнланса ăна епле ăнлантарса панине уççăнах сăнласа кăтартса памалла пулнă пирки, эпĕ хресченсемпе кустарьсем сийленсе пыни çинчен тепĕр хут çакăн пек тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм. Субъективлă социологшăн—хресченсем «чухăнланса юлнă», «çăткăн пырсемпе» «сунарçăсем» «усламсене хăйсене илнĕ» пек курăнакан фактсем, материалист енчен пăхсан,—тавар туса кăларакансем буржуаллă сийленни пулса тăнине, таварлă хуçалăхăн хăйĕн вăйне пула пурпĕрех сийленни пулса тănине кăтартса памалла пулнă. Россиăра пуянсем чухăн çынсене хирĕç фабрикăсемпе савăтсенче кăна мар, чи тĕттĕм ялта та, пур çĕрте те кĕрешеççĕ, çитменнине ку кĕрешӳ вăл пур çĕрте те таварлă хуçалăх никĕсĕ çинче аталанса пыракан буржуазипе пролетариат кĕрешĕвĕ пулса тăрать текен положени (çӳлерех, I-мĕш выпускра каласа кăтартнă) мĕнле фактсем çинче тытăнса тăнине кăтартса памалла пулнă. Пирĕн хресченсемпе кустарьсем сийленсе, хресченсĕрленсе пыни (земство статистики йышши тем тери паха материала пула ăна тĕп-тĕрĕс сăнласа кăтартма пулать) вăл,—вырăс пурăнăçне шăпах социал-демократсем пек ăнланни тĕрĕссине *фактсем тăрăх* ĕнентерсе парать; ку ăнлану тăрăх, хресченпе кустарь вăл, сăмаха «чи татăклă» пĕлтерĕшпе калас пулсан, *вак производительсем*, ур. каласан, *вак буржуасем* пулса тăраççĕ. Çак положение—вак производитель пурăннă таварлă хуçалăхăн обстановкине те, çак

никĕсе пула вак производитель капитализмлă сийленсе пынине те пĕртте ăнланман кивĕ, хресченле социализмпа танлаштарсан, **рабочисен социализм** теорийĕн тĕп пункчĕ тесе калама пулать. Çавăнпа та, социал-демократизма кам тĕплĕн критиклес тет, вăл хăйĕн аргументацийĕсене шăпах çакăнта пĕтĕçтермелле пулнă; Россия политикăпа экономика тĕлĕшĕнчен таварлă хуçалăх системи маррине, хресченсем ку никĕс çинче мар, урăххи çинче сийленсе пынине, халăхсен массине экспроприациленине тата ĕççыннине эксплуатациленине пирĕн обществăллă хуçалăх (вăл шутра хресченсен хуçалăхне те) буржуаллă, капитализмлă йĕрке тăрăх организациленнипе мар, мĕнле те пулин урăх сăлтавпа ăнлантарса пама май пуррине кăтартса памалла пулнă.

Çапла тума тăрăшса пăхăр-ха, господасем!

Унтан, социал-демократла теорине кăтартса парас тесе, эпĕ шăпах хресченсен тата кустарьсен хуçалăхĕсем çинчен калакан сведенисене тата ак çак сăлтав пирки те малти вырăна тăратрăм. «Халăх тусĕсен» шухăшĕсене критикленĕ май, эпĕ вĕсен идейисене марксизмла идейăсемпе танлаштарса пăхнинчен пуçне урăх нимĕн те туман пулсан, вăл материализмла методран чакни пулĕччĕ. Кунсăр пуçне тата «народниксен» идейисене ăнлантарса памалла, вăл идейăсен пирĕн кучухнехи обществăллă-экономикăллă отношенисенчи **материальнăй** никĕсĕсене кăтартса памалла. Пирĕн хресченсемпе кустарьсен экономикин картинисемпе тĕслĕхĕсем, çак «халăх тусĕсем»унăн идеологĕ пулма тăрăшакан «хресчен» мĕнлине кăтартаççĕ. Вĕсем пирĕн ял экономики буржуаллă пулнине ĕнентереççĕ, çавăнпа та вара «халăх тусĕсене» тĕрĕссипех мещансен идеологĕсен шутне кĕртнине çирĕплетсе тăраççĕ. Ку та сахал: вĕсем пирĕн радикалсен идейисемпе программисем тата вак буржуази интересĕсем хушшинче чи тачă çыхăну пуррине кăтартаççĕ. Вĕсен программине тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпченĕ хыççăн ку çыхăну татах та уççăнрах курăнакан пулать-те пирĕн «обществăра» çак радикаллă идейăсем мĕн пирки çав тери вăйлă сарăлнине ăнлантарса парать; вăлах тата «халăх тусĕсем» политика тĕлĕшĕнчен тарçăланнине, вĕсем компромиссем тума хатĕр тăнине те питĕ лайăх ăнлантарса парать.

Пирĕн обществăллă пурăнăç экономикин шăпах çак енĕсем, капитализм чи сахал аталаннă енĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăма (народниксем хăйсен теорийĕсем валли материалсем шăпах çакăнтан илсе тăраççĕ), юлашкинчен, тата тепĕр сăлтав пулчĕ. Çак экономикăна тĕпчесе тата сăнласа кăтартни урлă, пирĕн публика хушшинче социал-демократсене хирĕçлекен питĕ сарăлнă шухăшсенчен пĕрне хирĕç тĕрĕссипе ответлеме чи çăмăлччĕ. Пирĕн радикалсем вĕсем, капитализм «халăх стройне» хирĕç пырать текен яланхи идейăран шухăшлама пуçласа, социал-демократсем шултăра капитализма прогрессивлă явлени тесе шутланине тата ку чухнехи вăрă-хурахла йĕркене хирĕç кĕрешес ĕçре вĕсем шăпах ун çине таянасшăн пулнине курса, урăх вара нимĕн шухăшласа тăмасăрах, социал-демократсене хресченсен

массин интересĕсене шута илмеççĕ, «кашни мужике фабрика хуранĕнче пиçĕхтерсе» кăларасшăн, тесе айăплаççĕ т. ыт. те.

Çак мĕнпур шухăшсем шăпах ак çак тĕлĕнмелле логикăсăр, тĕлĕнтермелле меслет çинче тытăнса тăраççĕ: капитализм çинчен—вăл пурăнăçра чăннипе епле, çавăн пек шухăшлаççĕ; ял çинчен вара—вăл мĕн «пулма пултарать», çавăн тăрăх шухăшлаççĕ. Паллах, çак шухăшсене хирĕç, вĕсене *чăн-чăн* яла, унăн *чăн* экономикине кăтартнисĕр пуçне, урăхла ниепле те лайăхрах ответ пама çук.

Çак экономикăна кам наука калană тăрăх, никам майлă та пулмасăр пăхса илет, вĕсен пурин те, ялсемлĕ Россия вăл—пайланса пĕтнĕ вак рыноксен системи (е тĕп рынокăн пĕчĕк уйрăмĕсен системи) пулса тăнине, вĕсем уйрăм пĕчĕк районсен обществăлла-экономикăлла пурăнăçне хăйсене пăхăнтарса тăнине йышăнмалла пулать. Вара çакăн йышши кашни районрах эпир, рынок регулятор пулса тăракан мĕнпур обществăлла-экономикăлла организацисенче мĕнле явленисем пулаççĕ, çавсене пурне те курма пултаратпăр: унта эпир, тахçан малтан пĕр-пĕринпе тан пулнă патриархальнăй производительсем пуянсемпе чухăнсем çине сийленсе пынине куратпăр, эпир *капитал* çуралса тухнине, уйрăмах суту-илӳ капиталĕ çуралнине, вăл ĕççыннине хăй танатипе тăллантарса, унран пĕтĕм сĕткенне ĕмсе тăнине куратпăр. Хресченсен экономикине пирĕн радикалсем епле сăнласа кăтартнине, ялăн хуçалăх пурăнăçĕ çинчен калакан тĕп-тĕрĕс сведенисемпе танлаштарса пăхсассăн, эсир критиклекен шухăшсен системинче тĕрлĕрен вак суту-илӳçĕсен масси валли вырăн пĕртте çуккинчен тĕлĕнетĕр; чăннипе вара тĕрлĕрен усламçăсем, е вырăнти хресченсем калană тăрăх, тĕрлĕ шибайсем, ивашсем т. ыт. вак эксплуататорсем те çакăн йышши кашни рынокра лăк-туллиех, çавсем ĕнтĕ рыноксенче хуçа пулса тăрса, ĕççыннине ним шеллемесĕр пусмăрласа пурăнаççĕ. Вĕсене: «эй, кусем хресченсем мар ĕнтĕ, суту-илӳçĕсем» тесе яланах аякка сирсе хăвараççĕ. Ара питĕ чăн калатăр эсир: вĕсем чăн та—«хресченсем мар ĕнтĕ». Анчах, çак мĕнпур «суту-илӳçĕсене»,—урăхла тĕп-тĕрĕс политикăлла - экономикăлла чĕлхепе калас пулсан, кам суту-илӳ туса пурăнать, кам мĕн чухлĕ те пулин çын вăйĕпе усă курать, çавсене пурне те уйрăм ушкăна уйăрса, унăн экономикăлла вăйне тата районри пĕтĕм хуçалăхри рольне тĕп-тĕрĕс даннăйсемпе кăтартса пама тăрăшса пăхăр-ха: унтан тата тепĕр ушкăна хăйсен ĕç вăйне рынока кăларса сутнă пирки, хăй валли мар, теприсем валли ĕçленĕ пирки «ĕнтĕ хресчен мар», пулса тăнă çынсене уйăрса тăратăр—никам майлă та пулмасăр, тĕплĕн тĕпчесе ĕçĕн çак чи çăмăл, элементарлă требованисене тума тăрăшса пăхăр-ха, вара эсир ял буржуаллă сийленсе пынине çав тери уççăн кăтартакан картинăна курса пĕлĕр те, вара «халăх стройĕ» çинчен калакан мифран ячĕ çех тăрса юлĕ. Ялти çак вак эксплуататорсен масси вăл тем тери хăрушă вăй пулса тăрать; хăрушă, мĕншĕн тесен ĕççыннине вĕсем пĕчченшерĕн, кашнийĕ хăйне уйрăм пусмăрлаççĕ, ăна хăйсен çумне чуралатса

хураççĕ те ирĕке тухас пĕтĕм шанчăкне пĕтереççĕ; хăрушă вăй пулса тăрать, мĕншĕн тесен ĕçтухăçлăхĕ çак система чухне питĕ пĕчĕккĕ тата ялсем пĕр-пĕринпе питĕ сахал хутшăннă пирки пулса тăракан ял тискерлĕхĕ чухнехи эксплуатаци, ĕçе çаратни кăна мар тата этеме азиатла меслетсемпе мăшкăлласа хур туни те пулса тăрать, ун пек хăтланни ялта куллен-кунах тĕл пулать. Акă ĕнтĕ, эсир çак *чăн* яла пирĕн капитализмпа танлаштарса пăхсан, ун чухне вара эсир, социал-демократсем мĕншĕн пирĕн капитализм ĕçне прогрессивлă тесе шутланине ăнланăттăрччĕ: мĕншĕн тесен вăл çак пайланса пĕтнĕ вак рыноксене пĕтĕм Российăри пĕр шултăра рынок туса пĕрлештерет, ырă ĕмĕтлĕ. шутсăр йышлă вак çăткăн пырсем вырăнне, «çĕршыв тĕрекĕсен» шултăра йышлах мар ушкăнне туса хурать, ĕçе пĕрлештерет те, унăн тухăçлăхне ӳстерет, ĕççыннисем çав вырăнти юнĕмен сĕлĕхĕсене пăхăнса тăнине пĕтерет те, шултăра *капитала* пăхăнтарать. Çапла шултăра капитала пăхăнтарни, вăл ĕçе тем тери тискер пусмăрлать пулин те, хĕрарăмпа ача-пăча организмĕсене чăлахлатать, пĕтерсе пырать, тискерлетет т. ыт. те пулин те—çапах та вырăнти сĕлĕхсене пăхăнса тăнинчен прогрессивлăрах; мĕншĕн тесен вăл **рабочийĕн шухăшне вăратать,** уççăн пĕлмелле мар, вăрттăн кăмăлсăрланнинчен лайăх ăнланса протест парассине туса хурать, сапаланчăк, вак, ăссăр бунтсене пĕтĕм ĕçхалăхне ирĕке кăларассишĕн организациленнĕ класс кĕрешĕвĕ туса ярать; ку кĕрешӳ вара вăйне çак шултăра капитализмăн условийĕсенченех илсе тăрать, çавăнпа та вăл, мĕнле пулсан та, **пурпĕрех çĕнтерессине** шанса тăма пултарать.

Хресченсен массине шута илмеççĕ тесе айăпланине хирĕç социал-демократсем пĕтĕмĕшпех Карл Марксăн çак сăмахĕсене илсе калама пултараççĕ:

«*Критика сăнчăрсем çинчен, вĕсене хитрелетсе тăракан пуçран шухăшласа кăларнă чечексене—этемлĕх малашне те çак сăнчăрсемпех, анчах нимĕнле илемлетнĕ шухăшсăр, нимĕнле савăнăçсăр тăлланса тăтăр тесе татса ывăтман, вăл вĕсене «этемлĕх çак сăнчăрсене сирсе пăрахса, чĕрĕ чечек илме аллине тăстăр тесе татса ывăтнă*».

Вырăс социал-демократсем те çавах пирĕн ял çинчен яла хитрелетсе тăракан, пуçран шухăшласа кăларнă чечексене татса ывăтаççĕ, илемлетнĕ шухăшсемпе фантазисене хирĕç кĕрешеççĕ; «халăх тусĕсем» вĕсене çакăншăн çав тери, вĕлерес пекех курайманççĕ пулин те, вĕсем çак кирлĕ мар, сиенлĕ ялаласене илсе ыватаççĕ; анчах ку ĕçе вĕсем—хресченсен масси хальхи пекех пусмăрпа чуралăхра пурăнтăр, пĕтсе пытăр тесе тумаççĕ; ĕççыннине пур çĕрте те мĕнле сăнчăрсем тăллантарса тăнине, ку сăнчăрсене мĕнле меслетпе туса хатĕрленине пролетариат ăнлантăр тесе, вăл çак сăнчăрсене таткаласа ывăтма çĕклентĕр те аллине чăн чечек илме тăстăр тенĕ ĕмĕтпе тăваççĕ.

Акă вара, ĕçлекенсен класĕн класла сэмосознанине пĕртенпĕр вĕсем кăна ăнланса илсе, ирĕклĕхшĕн класлă кĕрешĕве пуçлама пултаракан представителĕсене ăнлантарса парасшăн тăрăшса

ĕçleççĕ пулсан, вĕсене мужике хуранта пиçĕхтерсе кăларма тăрăшнăшăн айăплаççĕ.

Çитменнине кам айăплать-ха?—

Ĕççыннисене ирĕке кăларас тĕлĕшпе «правительство» çине тата «общество» çине, урăхла каласан, буржуазийĕн ĕççыннисене пур çĕрте те сăнчăрланă органĕсем çинех шанакан çынсем!

Çакăн йышши сĕлеке юхтаракансем ĕнтĕ социал-демократсем идеалсăрри çинчен сӳпĕлтетме тапаçланаççĕ!

* * *

«Халăх тусĕсен» политикăллă программи патне куçар, вĕсен теориллĕ шухăшĕсене эпир ытлашшипех нумай тĕпчесе пăхрăмăр пулас ĕнтĕ. «Пушара» мĕнле меслетсемпе «сӳнтересшĕн» вĕсем? Йывăрлăхран тухмалли çулйĕре, социал-демократсем, имĕш, тĕрĕс мар кăтартса паракан çулйĕре, мĕнре кураççĕ вĕсем?

Г-н Южаков хăйĕн «Çĕрĕç министерстви» ятлă статьинче («Р. Б-вăн» 10-мĕш №-рĕ): «хресчен банкне реорганизацилесси, колонизаци управленийĕ тăвасси, хысна çĕрĕсене арендăлас ĕçе халăх хуçалăхĕн интересне кура йĕркене кĕртесси... аренда ытуне тĕпчесе пĕлсе тивĕçлĕн илсе пырасси,—акă халăх хуçалăхне ура çине тăратса, ăна çуралса пыракан плутократийĕн экономикăлла пусмăрĕнчен (sic!) хӳтĕлесе тăрас программа мĕнле», тет. «Экономикăллă аталану ыйтăвĕсем» ятлă статьинче вара вăл çак, «халăх хуçалăхне ура çине тăратас» программа çумне çакăн пек «малтанхи, анчах питĕ кирлĕ утăмсене» хушать:—«ял общинине халлĕхе тăллантарса тăракан пур кансĕрлĕхсене те пĕтерессине; ăна опекăран хăтарассине, акана пĕрлешсе тума тытăнассине (çĕрĕç промыслине пĕрлештерессине) тата çĕр айĕнчен тупнă чĕртавара общинăпа ĕçлеттерес ĕçе аталантарассине» хушать. Кривенкопа Карышев господасем вара çак меслетсене: «йӳнĕ кредита, хуçалăхăн артеллĕ формине, таварсене сутăнса тăмалла тăвас меслете, предпринимательсен усламĕсĕр ĕçлеттерсе пурăнмалла тăвас меслете (ун çинчен уйрăмăн каярах калăпăр), йӳнерех двигательсем шухăшласа кăларас тата техникăна урăх енчен те лайăхлатас ĕçе», юлашкинчен вара,—«музейсем, складсем, комиссионер кантурĕсем тăвас ĕçе» хушаççĕ.

Çак программăна лайăхрах сăнаса пăхăр-ха, вара эсир çак господасем пĕтĕмĕшпех, пуçĕпех хальхи общество никĕсĕ çинче (урăхла каласан, хăйсем ăнланмасăр—капитализмлă йĕркесен никĕсĕ çинче) тăнине хăвăрах курăр; вĕсем ăна саплăксем ларткаласа, юсакаласа муталаннипе çырлахасшăн, анчах хăйсен мĕн пур прогресĕсем—йӳнĕ кредит, техникăна лайăхлатни, банксем т. ыт. те—буржуазие кăна вăйлăлатса аталантарма пултарассине ăнланмаççĕ.

Хальхи йĕркесем çинче тăрса, ĕçе нимĕнле реформăсемпе те пулăшма май çук; кредит та, çĕнĕ çĕре куçарни те, куланай тӳлес ĕçе реформăлани те, пĕтĕм çĕр хресченсен аллине куçни те,—нимĕне те çителĕклĕ паллăн улăштарас çук, пачах урăхла—вĕсем капитализмлă хуçалăха (халĕ ун ӳсĕмне ытлашши «опека»,

крепостной тӳлевсен юлашкийӗсем, хресченсене ҫӗр ҫумне ҫыхни т. ыт. те чарса тăрать) пушшех ӳстерсе аталантарса яма тивӗҫ,—тенипе Ник.—он пур енчен те тӗрӗс калать; ку унăн хаклă положенийӗсенчен пӗри, ăна хирӗҫ «халăх тусӗсем» те протеслемесӗр тăма пултарайман. Кивҫенлӗх (кредит) йӗркине вайлăн сарасшăн тăрăшакан экономистсем, князь Васильчиков пеккисем (хăйӗн идейисемпе, нимӗн иккӗленмели те ҫук «халăх тусӗ» пулса тăракан пеккисем), «либераллă», урăхла каласан, буржуаллă экономистсем мӗн тăвас тенинех тăвасшăн, «капитализмлă отношенисене аталантарса ҫирӗплетесшӗн тăрăшаҫҫӗ», тет вăл. Вӗсем пирӗн производствăллă отношенисем («хресченсем» хушшинче те, ытти сословисенчи пекех) антагонизмлине ăнланмаҫҫӗ, вара ҫак антагонизма уҫă ҫул ҫине илсе тухма тăрăшас выранне, ҫак антагонизм пирки чуралăхра тăракан ҫынсем ҫумне тӳрренех хутшăнса, вӗсене кӗрешӗве ҫӗкленме пулăшассишӗн тăрăшас выранне,—пурне те юрăхлă пулма пултаракан меслетсемпе, килӗштерсе пӗрлештернипе кӗрешӗве пӗтерме ӗмӗтленеҫҫӗ. Ҫак мӗнпур меслетсенчен мӗнле результат пулма пултарассине ăнланма ҫăмăл; ăна пӗлес тесен, ҫӳлерех кăтартнă сийленнин примерӗсене ҫех астуса илмелле; вара ҫак мӗнпур—кредитсемпе*, лайăхлатнисемпе, банксемпе, т. ыт. «прогрессемпе» те—кам хăй хуҫалăхне тӗрӗс, ҫирӗп тытса тăрать тата ҫийӗнчен камăн паллă «перекетсем» пур, ҫав кăна, урăхла каласан, питех те пӗчӗк сахалтарахăшӗн—вак буржуазийӗн представителӗсем кăна уса курма вăй ҫитерессине пӗлме ҫăмăл пулать. Ҫавăнпа та эсир хресченсен банкне тата ытти ҫавăн йышши учрежденисене хуть те мӗнле реорганизацилесен те унпа ҫакă, никӗсре тăракан тӗп факта, халăх массине экспроприацилениме, вăл малалла та экспроприациленсе пынине, унăн тӗрӗс хуҫалăх ҫавăрма кăна мар, хăйне тăрантса пурăнма та укҫи ҫуккине—нимӗн чухлӗ те пырса тӗкӗнес ҫук.

«Артельсем» ҫинчен, «пӗрле ака тăвасси» ҫинчен те ҫавнах каламалла. Г-н Южаков вӗсене «ҫӗрӗҫ промыслине пӗрлештерни», тет. Паллах, ун пек калани—кулăшла кăна, мӗншӗн тесен ҫӗрӗҫне пӗрлештерес тесен, производствăна пӗр мӗнле те пулин пӗчӗк ял хушшинче кăна пӗрлештермелле мар, мӗншӗн тесен ăна тăвас тесен производство хатӗрӗсене монополизацилесе, вырăссен хальхи обществăллă хуҫалăхӗнче пуҫпулса тăракан «харампырсене» экспроприацилени кирлӗ. Кăна тăвас тесен вара мещансен ниме юрăхсăр моралӗ мар, кӗрешни, кӗрешни тата кӗрешни кирлӗ.

Ҫавăнпа та вӗсен ҫавăн йышши меслечӗсем—филантропиллӗ буржуасен ырлăхне пула аран-аран тытăнса тăракан либераллă

---

* Ҫак идея—«халăх хуҫалăхне», урăхла каласан вак производительсен хуҫалăхне, капитализмлă отношенисем пур чухне (вӗсене «халăх тусӗсем» те ӗнтӗ ҫук теме пултарайманнине куртăмăр эпир) кредитпа пулăшмалла текен ăссăр идея, теорире политикăллă экономийӗн азбукăллă чăнлăхӗсене те ăнланманнине кăтартакан идея, ҫак икӗ пулан хушшинче ларма хăтланакан господасен теорийӗ мӗн тери йӗрӗнчӗклине уҫҫăнах кăтартса парать.

йăваш çурма-меслетсем кăна пулса юлаççĕ; çитменнине вăл меслетсем, эксплуатациленекенсене кĕрешӳрен пăрса янă пирки, уйрăм çынсен пурăнăçне лайăхлатма пултаракан усăран ытла темиçе хут пысăк сиен кӳреççĕ; çынсен пурăнăçĕ вара паллах, капитализмлă отношенисен пĕтĕмĕшлĕ никĕсĕ çинче, мĕскĕн те тĕрексĕр пулнинчен пуçне урăхла пулма та пултараймасть. Çак господасем вырăс пурăнăçĕнчи антагонизма мĕнле киревсĕрлĕхе çити шăла-шăла лартнине,—вĕсем кăна, паллах, чи ырă кăмăлпа, чăн-чăн кĕрешĕве пĕтерес тесе, урăхла каласан, тамăк çинчен сарнă юмаха тунă пекех тăваççĕ,—ăна Кривенко г-нăн çапла каласни кăтартса парать:

«фабрикантсен предприятийĕсене интеллигенци ертсе пырать, халăх промышленноçне те вăлах ертсе пыма пултарать», тет вăл.

Пĕтĕм философийĕ вĕсен çак тема тăрăх нăйкăшни пулса тăрать: кĕрешӳ тата эксплуатаци пур, çавă пĕтерет, анчах эксплуататăрсем пулмасассăн... вĕсем пулмасассăн, пурнăç эксплуатацисĕрех «пулма пултарĕччĕ», тесе нăйкăшни. Чăн та, мĕн каласшăн пулнă-ха автор хăйĕн ăссăр фразипе? Чăнах та, Российăри университетсем тата ытти шкулсем те çулсерен—хăйсене тăрантарса пурăнас çынсене кăна шыракан «интеллигенцие»(??) хатĕрлесе кăларнине йышăнмасăр тăма пулать-ши вара? Чăнах та, çав «интеллигенцие» тăрантарса усрама кирлĕ укçа-тенкĕ Российăра халъхи вăхăтра буржуаллă сахалтарахăшсен аллинче кăна пуррине йышăнмасăр тăма пулать-ши вара? Чăнах та, «халăх тусĕсем»: вăл интеллигенци буржуазишĕн ĕçлемесĕр пурăнма «пултарĕччĕ» тесессĕнех, Российăра буржуаллă интеллигенци пĕтĕччĕ-шим вара? Çапла çав, «пултарĕччĕ» вăл, хăй буржуаллă мар пулсассăн. Буржуаллă мар пулма та «пултарĕччĕ», Российăра буржуазипе капитализм пулман «пулсассăн»! Йăпанса пурăнаççĕ вара çынсем пĕтĕм ĕмĕрĕ тăрăшшĕпе пĕр хăйсен «çапла пулсассăн та капла пулсассăн» тенĕ сăмахсемпе! Анчах, тепĕр енчен çак господасем капитализма пысăк вырăна хумаççĕ кăна мар, çитменнине вĕсем капитализмра пачах нимĕнле япала та курасшăн мар. Хăшпĕр «çитменлĕхсене» тӳрлетсен —вара вĕсем капитализм чухне те пĕртте начар мар пурăнма пултарĕччĕç-и, тен. Кăмăлăр пур-и Кривенко г-нăн çакăн пек заявленине итлеме:

«Капитализмлă производство тата промысласене капитализацилени вăл—пĕртте обрабатывающăй промышленность халăхран уйăрăлса тухма кăна пултаракан хапха мар. Паллах, вăл халăхран уйăрăлса кайма та пултарать, анчах халăх пурăнăçĕ ăшне кĕме те, ялхуçалăхĕпе добывающăй промышленность çумне çывăхрах тăма та пултарать. Ăна валли темиçе комбинаци те (май та) пур, ăна тума ытти хапхисем те, çавăн пекех кусем те пултараççĕ» (161 стр.). Кривенко г-нăн, г. Михайловскийпе танлаштарсан, хăшпĕр питĕ паха енĕсем пур. Сăмахран, шухăшсене нимĕн пытармасăр таса тӳррĕн калани. Г-н Михайловский япалине пырса тĕкĕнмесĕр ун патĕнче явкаланса çӳресе, яка та шухă пуплевсем страници-страниципе çырса тултарĕччĕ, унта ĕçлĕ те

тирпейлӗ г. Кривенко хӑй шухӑшӗн мӗнпур ӑссӑрлӑхне вулакан умне нимӗн шухӑшласа-пӑхса тӑмасӑр, пӗр вӑтанмасӑр пӗтӗмӗшпех кӑларса хурать. Курӑрсамӑр ӗнтӗ акӑ: «капитализм халӑх пурӑнӑҫӗ ӑшне кӗме пултарать» иккен. Урӑхла каласан, капитализм—ӗҫҫыннине производство хатӗрӗсенчен уйӑрмасӑрах пулма пултарать! Чӑн та, питӗ хитре вӗт; халӗ ӗнтӗ эпир, сахалтан та пулин, «халӑх тусӗсем» мӗншӗн тӑрӑшнине уҫҫӑнах пӗлсе тӑратпӑр. Вӗсем капитализмсӑр таварлӑ хуҫалӑхшӑн тӑраҫҫӗ,—экспроприацисӗр тата эксплуатацисӗр капитализмшӑн, пӗрех ырӑ помещиксемпе либераллӑ администраторсем пулӑшнипе мирлӗн ыйхӑласа пурӑнакан мещанла капитализмшӑн. Ҫапла вара вӗсем, ӑслӑн, Российӑна ырлӑх кӑтартма шут тытнӑ департаментри чиновник пек, кашкӑрӗсем те тутӑ, сурӑхӗсем те тӗрӗс пулма пултаракан йӗркесем шухӑшласа кӑларма пикенеҫҫӗ. Ҫак майсем мӗнлине пӗлес тесессӗн, пирӗн ҫав авторӑнах журналӑн 12-мӗш №-рӗнче пичетленӗ статьине («По поводу культурных одиночек») вуламалла пулать; ку статьяра г. Кривенко, хӑйне «экономикӑн практикӑллӑ ыйтӑвӗсене пурӑнӑҫа кӗртме» «чӗннӗ» ӗнтӗ, тесе шутласа пулас, ҫапла ҫырать: «Кун пек чухне промышленноҫӑн артельлӗ тата государствӑллӑ форми пулма пултаракан майсен мӗнпур меслечӗсем мар. Сӑмахран, ҫапла комбинаци пулма пултарать», тет. Вара малалла «Р. Богатство» редакцине пӗр техник пыни ҫинчен, вӑл хӑйпе пӗрле Дон облаҫне, вак (100 тенкӗрен ытла мар) акциллӗ акционерлӑ предприяти организацилесе, техника тӗлӗшӗнчен эксплуатацилесе тӑрас проект илсе пыни ҫинчен каласа кӑтартать. Проект авторне проекта ҫапларах май урӑхлатса тума хушнӑ пулнӑ: «акцисене уйрӑм ҫынсен аллине мар, ял обществисене памалла туса, ҫав вӑхӑтрах ялти халӑхӑн пӗр пайӗ—предприятисенче ӗҫлекеннисем, ӗҫукҫи илсе тӑмалла, вӗсем ҫӗрпе ҫыхӑнса тӑрассине вара ял обществисем гарантилемелле туса», урӑхлатма хушнӑ.

Чӑн та, епле администраторла гениллӗх! Епле чуна савӑнтармалла просто та ҫӑмӑллӑн капитализма халӑх пурӑнӑҫне кӗртсе, унӑн сиенлӗ енӗсене пӗтереҫҫӗ! Ӑна тӑвас тесен, ял пуянӗсене общество урлӑ акцисем* кӑна илтермелле тата «халӑхӑн пӗр пайӗн», ҫӗрпе ҫыхӑнса тӑмалла пулнӑскерӗн, ӗҫлесе тӑракан предприятисенчен вӗсене, «пуянсене» тупӑш илтерсе тӑмалла. Мӗнле «ҫыхӑну» пулмалла вӑл?—ҫыннине ҫӗрӗ ҫинчен тӑранса пурӑнма май паман ҫыхӑну (унсӑрӑн кам «ытти рабочисем чухлех илсе тӑракан ӗҫукҫишӗн» ӗҫлеме кайӗччӗ-ха?), анчах ҫынна пӗр вырӑна ҫыхса хумашкӑн, ӑна шӑпах вырӑнти капитализмлӑ предприятире чура пулса ӗҫлемешкӗн ҫителӗклӗ тата пӗр хуҫана

---

* Автор акцисем обществӑсен аллинче пулмалла тесе каланӑ пулсан та, эпӗ акцисене пуянсем илесси ҫинчен калатӑп, мӗншӗн тесен вӑл ҫапах та акцисене укҫалла илесси ҫинчен калать, укҫа вара - пуянсен кӑна пур. Ҫавӑнпа та, ҫӗре общество илни е арендӑлани ҫак ҫӗр пуянсен аллине пухӑнассине (ҫӗре монополизациленессине) пӗртте пӗтерме пултарас ҫук пекех, кунта та ӗҫе общество урлӑ туса пырӗҫ-и, ун урлӑ мар-и,—ҫӗршӗн пурпӗрех пуянсем кӑна тӳлеме пултарӗҫ. Унтан вара, тупӑшне (дивидентне)—кам укҫа тӳленӗ, вӑлах илсе тӑма

тепĕр хуçапа улăштарма май паман çыхăну пулмалла. Эпĕ хуçа çинчен, капиталист çинчен хăюллăнах калатăп, мĕншĕн тесен ĕççыннине *ĕçукçи* тӳлекен çынна урăхла ятпа калама май çук.

Çакăн чухлĕ пĕртте калаçса тăма кирлĕ мар пек, ăçтиçук çинче эпĕ çав тери нумай чарăнса тăнăшăн вулакан манпа кăмăлсăрланать те пуль ĕнтĕ. Анчах, чимĕр-ха. Ку вăл чăн та ăçтиçук пулсан та, ун йышши ăçтиçука тĕпчесе вĕренни кирлех те, усăллă та, мĕншĕн тесен вăл Россиăри обществăпа-экономикăн чăн-чăн отношенийĕсене палăртса тăрать, çавăнпа та вăл пирĕн патăмăрта питĕ вăйлăн сарăлнă обществăллă идейăсен шутне кĕрет; социал-демократсен вĕсене нумай вăхăт шута илмелле пулать-ха. Ĕç акă мĕнре: Россиăра производствăн крепостной, феодальнăй йĕркинчен капитализмлă йĕрке çине куçни ĕççыннисене çакăн пек пурăнмалла туса пынă (хăшпĕр таран халĕ те çапла туса пырать-ха): хресчен хăйне çĕрпе тăрантса пурăнайми пулнă пирки тата çĕрпе усă курнăшăн *помещика тӳлемелли повинноçсене* (*вăл вĕсене халĕ те тӳлесе тăрать-ха*) тӳлейми пулнă пирки, ирĕксĕрех «аякка кайса ĕçлемелле» пулнă; малтан, авалхи ырă вăхăтра, вăл епле те пулин промысла ĕçне (сăмахран, лав ĕçне кайнă), е хăй-халлĕн кăна ĕçлесе пурăннă, е хăй-халлĕн мар пулсан та промысласем ун чухне питех те начар аталаннă пирки, ĕçукçине вăл, хальхипе танлаштарсан, ытларах илсе тăнă. Çавăн пек пурнăç, хальхипе танлаштарсан, хресченсене кăштах вĕçне-вĕçĕн çитеркелесе пурăнма май панă, крепостной халăх çĕр пин ырă кăмăллă полицейместер аллинче тата çĕнĕрен çуралса пыракан буржуйсен, вырăс çĕрне пĕр çĕре пуçтарма тытăннăскерсен аллинче мирлĕн нушаланса пурăнкаланă.

Акă ĕнтĕ «халăх тусĕсем» çак строя, унăн начар, тĕттĕм енĕсене просто кăна сирсе пăрахса, идеализацилеççĕ, çав йĕркешĕн ĕмĕтленеççĕ,—«ĕмĕтленеççĕ» тетĕп, мĕншĕн тесен, чăннипе вăл строй пурăнăçра тахçантанпах çук ĕнтĕ, капитализм ăна тахçанах çĕмĕрсе тăкнă, çĕр ĕçĕпе пурăнакан хресченсене массăлăн экспроприацилеме тытăннă, ĕлĕкхи «ĕçлесе укça тупнинчен» ытлашши сĕнекен ĕç вăйне ним чарусăр эксплуатацилес йĕрке туса хунă.

Пирĕн мещанлăх рыцарĕсем шăпах ĕнтĕ хресченсем çĕрпе «çыхăнса тăнине» упраса хăварасшăн, анчах крепостной правăна —хресченсене çĕрпе çыхса тăма май паракан пĕртен-пĕр меслете, таварлă хуçалăхпа капитализм çĕмĕрсе хунă йĕркепе, вăл çыхăнăва тытса тăрас мая пĕтерне йĕркепе килĕшмеççĕ. Вĕсем, хресченсене çĕртен уйăрмасăр, рынок валли ĕçленĕ чухне конкуренци кăлармасăр, *капитал* çуратмасăр тата ăна халăх масси-

---

тивĕç—унсăрăн акци те акци пулмасть. Çавăнпа та эпĕ автор сĕннине çапла ăнланатăп: усламĕн пĕр-пĕр пайне «рабочисене çĕрпе çыхăнса тăмалла тăвас» ĕçе ярса тăмалла пулать, тенĕ пек ăнланатăп.—Çакăн пек вывод автор каланă сăмахсенченех тухса тăрать; анчах, апла пулни те, автор ун çинчен мар, пуянсем акцисемшĕн дивидентне илмесĕр укçа тӳлесе тăрасси çинчен калать пулсассăн, вара ун проекчĕ—пуррисем хăйсен пурлăхĕсене çуккисемпе пайласа уйăрас кăмăл кăна пулса тăрать. Ку ĕнтĕ леш, шăнасене пĕтерме вĕрентекен анекдотри пек меслет пулать: шăнасене пĕтерес тесен, шăнине тытмалла та пĕр-пĕр савăт-сапана хупмалла, шăни çавăнтах вилет вара.

сем пăхăнса тăмалла тумасăр ĕçлеттерсе укçа туптарасшăн. Вĕсем, социологири субъективлă метода тĕрĕс пăхăнса тăраканскерсем, лайăххине лерен те, кунтан та «илесшĕн»,—анчах чăннипе, паллах, ку ачалла кăмăл пурăнăçа шута хуман реакциллĕ тĕлленӳ патне кăна илсе пырать, çĕнĕ йĕркесен чăн-чăн прогрессивлă, революциллĕ енĕсене ăнланмасăр, вĕсемпе усă курма пĕлменни патне, тата çурмакрепостной çурмаирĕк ĕçĕн кивĕ «ырă» йĕркисене— хăрушă эксплоатаципе тискер чуралăхран ниепле те çăлăнса тухма май паман йĕркесене,—ĕмĕрлĕхех пымалла тăвакан меслетсене кăмăллани патне илсе пырать.

Çак, «халăх тусĕсене» реакционерсен шутне кĕртекен сăмахсем тĕп-тĕрĕссине кăтартса парас тесе, икĕ тĕслĕх илсе кăтартам.

Мускаври земство статистикинче эпир пĕр темле К. г-жан (Подольск уездĕнчи) хуçалăхĕ çинчен çырса кăтартнине вуласа пăхма пултаратпăр; вăл (хуçалăх, çырса кăтартни мар) Мускав статистикĕсене те, астăватăп пулсан В. В. г-на та тĕлĕнтерсе савăнтарнăччĕ (В. В. ун çинчен пĕр темле журнал статьинче çырнăччĕ, пулас).

К. г-жанăн çак паллă хуçалăхĕ В. Орлов г-нăн юратнă шухăшне: «хресчен çĕрĕçĕ тĕреклĕ тăнă çĕрте уйрăм çĕр хуçисен хуçалăхĕ те лайăх пырать» текен шухăшне «практикăра ĕнентерӳллĕн çирĕплетсе паракан факт» пулса тăрать, имĕш. Г-н Орлов çак г-жа именийĕ çинчен каласа панинчен акă мĕн курăнса тăрать: вăл хăй хуçалăхне вырăнти хресченсене ĕçлеттернипе тытса тăрать, иккен; хресченсем ун çĕрне хĕлле çăнăх т. ыт. япаласем те кивçен илнĕшĕн ĕçлесе тăнă; çав вăхăтрах хуçи хресченсемшĕн питĕ тăрăшса, вĕсене пулăшса пурăннă пулать, çавăнпа та халĕ вĕсен—пĕтĕм вулăсĕпе те чи тĕреклĕ пурăнакан хресченсен, тырри «çĕнĕ тырăччен кăшт кăна çитеймест имĕш (ĕлĕк хĕллехи Микулччен те çитмен)».

Çапла ыйту тухса тăрать: «ĕç çине çакăн пек пăхни», Н. Каблуков (т. V, стр. 175) тата В. Орлов (т. II, стр. 55—59 т. ыт.) господасем шухăшланă пек—«хресченпе çĕрхуçи интересĕсем хире-хирĕçле» пулнине пĕтерет-и? Паллах, çук, мĕншĕн тесен К. г-жа хăй хресченĕсене ĕçлеттернипе, вĕсен вăйĕпе пурăнать вĕт. Апла пулсан, эксплуатацие нимĕн чухлĕ те пĕтермен, пулать. Эксплуатациленекенсемпе ырă кăмăллă пулни хыçĕнче пытанса тăракан эксплуатацие курманшăн К. г-жана каçарма пулать, анчах экономист-статистика пĕртте каçарма май çук; кун пек ĕçшĕн савăннипе вăл пĕтĕмĕшпех Хĕвеланаçĕнчи Menschenfreunde* танлашса тăрать: лешсем те вĕт капиталист хăй рабочийĕпе ырă пулнăшăн хĕпĕртеççĕ, фабрикант рабочишĕн тăрăшса, вĕсене валли лавкасем уçни, хваттерсем т. ыт. туса пани çинчен каçса кайсах калаçаççĕ. Çавăн пек «фактсем пурринчен (апла пулсан, пулма та «пултарнинчен») хире-хирĕçле интерессем çук , тесе шухăшлама тытăнни—йывăçсем хыçĕнчен вăрмана курманни çех пулать. Ку вăл—пĕрремĕшĕ.

---

* этемлĕх тусĕсемпе. *Ред.*

Иккӗмӗшӗнчен вара, г. Орлов каласа панинчен эпир ҫакна куратпӑр: К. г-жа хресченӗсем «тырри-пуллисем питӗ лайӑх пулса пынӑ пирки (помещик вӗсене лайӑх вӑрлӑх панӑ пулнӑ) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнӗ», хуҫалӑхӗсене те «тӗреклӗ» тытса тӑраҫҫӗ, иккен. Ҫак «тӗреклӗ хресченсем» пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех мар, йӑлтах тӗреклӗ хресченсем пулса тӑнӑ, тейӗпӗр; тырри те вӗсен ҫӗнӗ тырӑччен «тенӗ пек» кӑна мар, «ытларахӑшӗн те» кӑна мар, пурин те тата пӗтӗмӗшпех ҫитсе пырать, тейӗпӗр. Ҫӗре ку хресченсен ҫителӗклӗ пулса тӑнӑ, тейӗпӗр, вылъӑх кӗтмелли ҫарансем те, кӗтӳ хӑваласа кӑларма кирлӗ вырӑн та, халӗ ҫукскерсем (епле тӗреклӗ иккен, хресченӗсем!), халӗ К. г-ран ӗҫпе тӳлесе татмалла арендӑна илнӗ кӗтӳ хӑваласа кӑлармалли вырӑнсемпе ҫарансем пур, тейӗпӗр. Чӑнахах та г. Орлов ун чухне те—урӑхла каласан, хресчен хуҫалӑхӗ чӑннипех тӗреклӗ пулас пулсассӑн та—ҫак хресченсем «К. г. именийӗнчи пур ӗҫсене те» хальхин пекех «тӑрӑшса, вӑхӑтра, хӑвӑрт» туса пырӗҫ, тесе шухӑшлать-шим? Е, тен, тӗреклӗ хресченсенчен пӗтӗм сӗткенне амӑшӗ пек юратса ӗмекен ырӑ улпут майрине тавтӑвас кӑмӑлӗ хресченсене, выльӑх кӗтмелли вырӑнсемпе ҫарансӑр чӑн та пурӑнма пултарайманскерсене,хӑйсен хальхи пурӑнӑҫӗ чӑтма ҫук начар пирки ӗҫлениничен те кая мар тӑрӑшса ӗҫлеттерме пултарӗ-ши!

Паллах, «халӑх тусӗсен» те шухӑшӗсем чӑннипе ҫакӑн пекех: мещанлӑхӑн чӑн идеологӗсем пулнӑ пирки, вӗсем эксплуатацие пӗтересшӗн мар, ҫемҫетесшӗн кӑна, кӗрешесшӗн мар вӗсем, килӗшесшӗн. Помещиксемпе капиталистсем хресченсемпе лайӑх, тивӗҫ кӑмӑллӑ пулччӑр кӑна, вара вӗсен сарлака идеалӗсем помещикпа капиталистшӑн «повинноҫӗсене» тултарса тӑракан «тӗреклӗ» хресченрен мала иртмеҫҫӗ; ҫакӑн енчен пӑхса ҫине тӑрсах ҫӗмӗреҫҫӗ те ӗнтӗ вӗсем хӗсӗк идеаллӑ социал-демократсене.

Тепӗр тӗслӗх. Г-н Южаков хӑйӗн «Нормы народного землевладения в России» ятлӑ чылаях паллӑ статьинче («Р. Мысль, 1885, № 9) «халӑх» аллинчи ҫӗр, урӑхла каласан, пирӗн либералсен терминологийӗпе — капитализмпа эксплуатацие пулма май паман ҫӗр виҫи мӗн пысӑкӗш пулмалли ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ. Халӗ ӗнтӗ эпир — г. Кривенко ӗҫе ҫав тери лайӑх ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн — ӗҫ ҫине г. Южаков та «капитализма халӑх пурнӑҫӗ ӑшне кӗртесси» енчен пӑхса ҫырнине пӗлсе тӑратпӑр. «Халӑх» аллинчи ҫӗр, чи сахалтан та, ҫакӑн чухлӗ пулмалла, тет вӑл: «хӑйсене тӑранма тата повинноҫсем тӳллеме» ҫителӗклӗ пулмалла*, ыттине «аякра ӗҫленипе» тупма пулать тесе шутлать вӑл... Тепӗр тӗрлӗ каласан, вӑл, хресчен ҫӗрпе сыхӑнма пӑрахмасӑр икӗ енчен те эксплуатаци тӳснипе, «ят ҫӗрӗ» тӗлӗшпе — поме-

* Ҫав расходпа хресчен бюджетӗнчи ытти расходсем хушшинчи шайлӑхсене кӑтартас тесе, каллех Острогожск уездӗнчи 24 бюджета аса илтерем: Пӗр ҫемьери вӑтам расход (продуктсемпе те, укҫапа та) — 495 т. 39 п. Вӗсенчен 109 т 10 пус выльӑх усрама каять, 135 т. 80 п. — ӳсентӑран апачӗ валли тата налогсем тӳлеме каять, юлашки 250 т. 49 п. вара—ытти расходсене саплама—ӳсентӑран мар апат валли, тумланма, инвентарь туянма, аренда укҫи тӳлеме т. ыт. те. Г-н Южаков выльӑх-чӗрлӗх тӑрантарас расхода ҫарансем, тата ытти ӑпӑр-тапӑр ҫӗрсем тытас расход ҫине кӗртсе ярать.

щик енчен, «аякка кайса ĕçлени» тĕлĕшпе — капиталист енчен эксплуатациленнĕ йĕркепе тўррĕнех килĕшнĕ. Вак производительсене çапла икĕ енчен те эксплуатацилесе тăракан йĕрке, çитменнине тата вĕсене пурпĕрех пусарса, тертлентерсе тăракан йĕрке, пусмăрта пурăнакан класс çĕнтерме пултарассине кăна мар, кĕрешме пултарассине те ĕненме пăрахтаракан пурăнăç условийĕсем, — çак вăтам ĕмĕрти пурăнăç условийĕсем ĕнтĕ «халăх тусĕсен» ăнланăвĕпе идеалĕсен чи юлашки чикки пулса тăрать. Çапла вара, капитализм Российăра реформа хыççăнхи пĕтĕм истори тăршшĕнче тем тери хăвăрт аталанса пырса, кивĕ Российăн çак тĕрекне,—патриархальнăй, çурмакрепостной хресченсене тымарĕпех тăпăлтарса кăлара пуçласассăн, — вĕсене ĕç шырас ĕмĕтпе тахçантанпах пурăннă вырăнсене пăрахтарса пĕтĕм Россия тăрăх çўремелле туса, вырăнти «ĕç паракан» чуралантарса тăнине пĕтерсе тата çак çĕлен çаратнин никĕсне анчах мар, хуть те мĕнле эксплуатацийĕн, класлă эксплуатацийĕн, никĕсĕ мĕнре пулса тăнине кăтартса парса, çапла вара вăтам ĕмĕрхи çурма феодальнăй обстановкăран тăпăлтарса кăларса вĕр-çĕнĕ, пĕтĕмĕшпех капитализмлă обстановкăна ларта пуçласассăн, — ытти хресчен халăхне, тертлентернипе выльăх пекех пусарса çитернĕ халăха, капитализм пĕрех май кăткăсланса пыракан обществăллă-политикăллă пурăнăç авăрĕ ăшне массăлăн турта кĕрте пуçласассăн, — ун чухне вара пирĕн рыцарьсем тĕрексем ишĕлсе çĕмĕрĕле пуçлани çинчен ĕсĕклесе, ахăрашса макăра пуçларĕç. Халĕ те-ха вĕсем çав ырă кивĕ вăхăтшăн ĕсĕклесе макăрма пăрахман, анчах халĕ ĕнтĕ пурăнăçăн çав çĕнĕ йĕркин революциллĕ енĕсене курмасăр иртес пулсан, капитализм çĕнĕ обществăллă вăй çуратса пынине, эксплуатацин кивĕ режимĕпе нимĕнпе те çыхăнса тăман, ăна хирĕç кĕрешме май паракан вăя çуратса пынине курмасăр иртес пулсан, суккăр пулмалла пек туйăнать.

Çавах та, «халăх тусĕсен» кучухнехи йĕркесене мĕнле те пулин майпа тĕпренех улăштарас кăмăлĕ пĕр чĕптĕм те палăрмасть. Вĕсем çак йĕркери тĕрлĕрен либераллă меслетсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшеççĕ, г. Кривенко вара çакăн йышши меслетсем шухăшласа кăларас тĕлĕшпе тăван çĕршыври помпадурăн чăнчăн административлă пултарулăхне палăртать.

«Пирĕн халăх промышленноçне» «тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе тĕпренех урăхлатма» кирли çинчен вăл çапла калать: «ку ыйтăва, пĕтĕмĕшпе каласан, уйрăмăн илсе тĕпчесе пăхмалла та, пур производствăсене те халăх пурнăçĕнче усă курма май пур ушкăнсем çине (sic!) тата вĕсемпе усă курнă чухне мĕнле те пулин чылай пысăк йывăрлăхсем тĕл пулакан ушкăнсем çине» пайламалла.

Çакăн пек ушкăнсем çине мĕнле уйăрмаллине пире çав г. Кривенко хăех кăтартса парать, вăл промысласене çапла пайлать: капитализациленменнисем, капитализациленсе иртнисем тата «хăйсен пурăнăçĕшĕн шултăра промышленноçпа тавлашма» пултаракансем.

«Капитализациленмен чухне—тет администратор—вак производство ирӗккӗнех пурӑнма пултарать»—хаксем улшӑнса тӑнӑ пирки вак производительсене буржуазипе пролетариат ҫине сийлесе пыракан рынокран та ирӗк пулма пултарать-и вара? вырӑнти рыноксем ӳссе, пӗр шултӑра рынока пӗрлешсе пынинчен те ирӗк-и вара? техника прогресӗнчен те ирӗк-и? Е, тен, ҫак техника прогресӗ—таварлӑ хуҫалӑх условинче—капитализмла мар пулма та пултарать-и? — Юлашкин чухне автор «производствӑна шултӑра формӑпа организацилеме» хушать: «Уҫҫӑнах паллӑ, кунта ӗнтӗ производствӑна шултӑра формӑпах организацилени кирлӗ, тӗп капиталпа оборотнӑй капитал, машинӑсем т. ыт. те кирлӗ пулать, е ку условисене мӗнпе те пулин урӑххипе улӑштармалла: йӳнӗ кредитпа, ытлашши посредниксене пӗтернипе, хуҫалӑхӑн артеллӗ формипе, предпринимательсен усламне пӗтернипе, таварсене нимӗнле чӑрмавсӑр сутмалла тунипе, йӳнӗрех двигательсем шухӑшласа кӑларнипе тата техникӑна урӑх майпа та лайӑхлатнипе, е, юлашкинчен, ытти тупӑшсем пама май пулсассӑн, ӗҫукҫине пӗртак чакарнипе танлаштармалла», тет вӑл!

Сӑмахӗсемпе — сарлака идеаллӑ, ӗҫӗсемпе — пӗр калӑплӑ либерализмлӑ «халӑх тусӗсене» сӑнласа кӑтартма ку пит те аван сӑмахсем. Пирӗн философ, куратӑр ӗнтӗ, предпринимательле тупӑшсӑр ӗҫлемелле тӑвассинчен тата шултӑра хуҫалӑх организацилессинчен калаҫма тытӑнать, унтан ытла та мар, кая та мар. Питӗ лайӑх: социал-демократсем те шӑпах ҫакӑншӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах «халӑх тусӗсем» ӑна мӗнле майпа пурӑнӑҫа кӗртесшӗн-ха? Шултӑра производствӑна предпринимательсемсӗр организацилес тесен, пӗрремӗшӗнчен, обществӑллӑ хуҫалӑх тавар тӑвас май организациленнине пӗтерсе, ун вырӑнне общинӑллӑ, коммунизмлӑ организаци тумалла вӗт-ха, ун чухне вара производство регуляторӗ, хальхин пек, рынок мар, производительсем хӑйсем, рабочисен обществи хӑй пулмалла, производство хатӗрӗсем уйрӑм ҫынсен мар, пӗтӗм общество харпӑрлӑхӗ пулса тӑмалла пулать. *Присвоенин* уйрӑм харпӑрлӑхлӑ *формине* ҫапла — общинӑллипе улӑштарас тесен, паллах, *чи малтан производство формине* урӑхлатса организацилемелле; ҫак вак производительсен производствин пӗр-пӗринчен уйрӑм, ӑрасна вак процесӗсене пӗрлештерсе *обществӑллӑ производствӑллӑ пӗр процесс* туса хумалла; пӗр сӑмахпа каласан, кӑна тумашкӑн—шӑпах капитализм хӑй хатӗрлесе пыракан материальнӑй условисем кирлӗ. Анчах «халӑх тусӗсем» капитализм ҫине пӗртте таянасшӑн мар вӗт-ха. Апла пулсан мӗнле ӗҫлесшӗн-ха вӗсем? Паллӑ мар. Таварлӑ хуҫалӑха пӗтересси ҫинчен асӑнмаҫҫӗ те вӗсем: вӗсен сарлака идеалӗсем обществӑллӑ производствӑн ҫак системи картинчен пиепле те тухаймаҫҫӗ, пулас. Унтан, предпринимательсем илекен „тупӑша“ пӗтерес тесен, предпринимательсене — «тупӑшне» шӑпах производство хатӗрӗсене монополиллӗ тытса тӑнӑ пирки илсе тӑраканскерсене — экспроприацилемелле пулать вӗт. Хамӑр ҫӗршыв тӗрекӗсене экспроприацилемешкӗн буржуази режимне

хирĕç халăхăн революциллĕ движенийе кирлĕ вĕт, анчах çакăн пек движение тума—çак режимпа нихăш енчен те çыхăнса тăман рабо-пролетариат кăна пултарать. Анчах «халăх тусĕсен» нимĕнле кĕрешӳ асĕнче те çук, вĕсем çак предпринимательсен хăйсен административлă органĕсенчен пуçне общество ĕçĕпе ĕçлекенсем епле те пулин урăххисем пулма пултарасси çинчен тата пулма кирли çинчен тĕлленмеççĕ те. Уççăнах паллă, «предпринимательсен тупăшне» хирĕç вĕсем пĕртте тĕплĕн кĕрешесшĕн мар: г. Кривенко ăна ăнсăртран анчах персе янă. Вăл çийĕнчех тӳрленет те: «предпринимательсен усламĕсĕр ĕçлеме май тăвасси» йышши япалана «мĕнле те пулин урăх япалапа» — кредитпа, таварсене сутса тăрас ĕçе организациленипе, техникăна аванлатнисемпе — «танлаштарса улăштарма» та пулать вĕт, тет. Апла пулсан, пĕтĕм ĕç питĕ лайăх майлашĕнче пулать: господа предпринимательсене çав тери тарăхтаракан япала выраннe, вĕсен «тупăш» илес таса правине пĕтересси вырăнне, — çав тери йăваш либераллă меслетсем, капитализма кĕремешкĕн чи лайăх хĕçпăшал паракан меслетсем, вак «халăхлă» буржуазине кăна вăйлатакан, тĕреклетекен, аталантаракан меслетсем тупăнса тăчĕç. «Халăх тусĕсем» çак вак буржуази интересĕсене кăна хӳтĕлесе тăни пирки нимĕнле иккĕленӳ те ан юлтăр тесе вара, г. Кривенко тата çапла тĕлĕнмелле лайăх ăнлантарса парать. Предпринимательсен тупăшне пĕтерес ĕçе тата... «ĕçукçине чакарнипе» те «танлаштарса улăштарма» юрать, иккен!!! Çиелтен пăхсан, ку ним тулăксăр япала пек кăна туйăнма пултарать. Анчах та çук. Ку вăл мещанлăх идейисене вĕçне çити тӳрĕ илсе пыни кăна. Автор шултăра капитал ваккипе кĕрешнĕ факта курать те, «халăхăн» чăн «тусĕ» пулнă май, паллах, вак... *капитал* хутне кĕрет. Çав вăхăтрах вăл вак капиталистсемшĕн кĕрешӳри чи вăйлă хатĕрсенчен пĕри—ĕçукçине чакарни пулса тăнине те илтнĕ иккен, — ку вăл Российăра та, ĕç кунне вăрăмлатнипе пĕр танах, темĕн чухлĕ производствăсенче тĕп-тĕрĕс асăрхаса палăртнă факт. Акă вара вăл, вак... *капиталистсене* хуть епле те пулин çăлма тăрăшса, «ĕçукçине, — ун вырăнне урăх усă пама май пулсассăн, — пăртак чакарма» сĕнет! Господа предпринимательсем, вĕсен «тупăшĕ» çинчен малтан темле тĕлĕнтермĕш пек сăмахсем калаçнă пулсан та, нимĕн пăшăрханмасăр пурăнма пултараççĕ. Вĕсем, ман шутпа, çак пит ăслă администратора, предпринимательсене *хирĕç* ĕçукçине чакарас проект шухăшласа кăларакансkерне, финанс министрĕ вырăнне те çăмăллăнах кĕртсе лартĕччĕç.

Ĕç мĕнле те пулин практикăллă ыйтусене пырса тивсессĕнех, «Р. Богатство» журналти ыра-либераллă администраторсенче тап-таса буржуй сăнĕ курăннине кăтартакан тепĕр тĕслĕх те илсе пама пулать. «Р. Богатствăн» 12-мĕш №-рĕнче «шалти пурнăç хроникинче» монополисем çинчен çырнă.

«Монополипе синдикат — çаксем ĕнтĕ аталаннă промышленность идеалĕсем» — тет автор. Малалла вара вăл çак учреждениесем пирĕн патăмăрта та, «капиталсен вăйлă конкуренцийĕ»

пирӗн ҫук пулсассӑн та курӑна пуҫланӑ пирки тӗлӗнет. «Сахӑр промышленноҫӗ те, нефть промышленноҫӗ те пирӗн пӗртте ытлашши вӑйлӑн аталанса ҫитмен-ха. Сахӑрпа краҫина пирӗн, ытти ҫӗршывсенчипе танлаштарсан, пӗр ҫын пуҫне питех те сахал илнине асра тытса шухӑшласан, ку продуктсене илсе тӑрасси пирӗн тин ҫеҫ пуҫланать тесе шутламалла. Ҫавӑнпа та промышленноҫӑн ҫак отраслисене аталантармалли майсем питӗ пысӑк пек-ха, вӑл питӗ нумай капитал ҫӑтма пултарнӑ пек туйӑнать».

Шӑпах ҫакӑнта ӗнтӗ — практикӑллӑ ыйту ҫинчен калаҫнӑ чухне — автор «Р. Богатство» журналӑн шалти рынок тӑвӑрланса пыни ҫинчен калакан юратнӑ идейине манса кайни питӗ паллӑ. Ҫак рынок умӗнче хӗсӗнсе пырас ҫулйӗр мар, малалла вӑйлӑн аталанса пырас ҫулйӗр выртнине унӑн ирӗксӗрех йышӑнма тивет. Ҫак вывод патне вӑл, пирӗн рынока Хӗвеланӑҫӗпе танлаштарни урлӑ пырать: унта вара потреблени пысӑкрах. Мӗншӗн? — Мӗншӗн тесен унта культура аталанӑвӗ ҫӳлерех тӑрать. — Анчах ҫак культурӑн материальнӑй никӗсӗсем — ҫынсене пӗр-пӗринпе час-часах тӗл пултаракан, уйрӑм вырӑнсем вӑтам ӗмӗрсенчи пек пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑнине ишекен капитализмлӑ техника аталанӑвӗнче мар пулсассӑн тата таварлӑ хуҫалӑхпа тавар улшӑнӑвӗ ӳснинче мар пулсассӑн, урӑх мӗнре пулаҫҫӗ-ха вӗсем? Сӑмахран, Францире, аслӑ революци умӗн, унӑн ҫурма-вӑтам ӗмӗрлӗ хресченӗсем икӗ пая — ялти буржуазипе пролетариат ҫине сийленсе пӗтмен вӑхӑтра, вӗсен культури пирӗннинчен ҫӳлте пулман мар-ши? Ҫапла вара автор вырӑс пурӑнӑҫне тинкererех сӑнаса пӑхнӑ пулсассӑн, вӑл, сӑмахран, ҫак факта: капитализм аталаннӑ вырӑнсенче хресчен халӑхӗн потребноҫӗсем пӗтӗмӗшпех — ҫӗрӗҫлӗ вырӑнсенчинчен самай ҫӳлерех тӑнине асӑрхамасӑр иртме пултарайман пулӗччӗ. Ҫак факта пирӗн кустарнӑй промысласене тӗпчекен ҫынсем пурте пӗр сасӑлӑн, — ҫак промысласем ҫав тери аталанса, вырӑнти пӗтӗм халӑх пурӑнӑҫне промысла сӑнӗ ҫапнӑ ҫӗрте, пур чухне те палӑртса йышӑнаҫҫӗ.*

«Халӑх тусӗсем» ун йышши «вак-тӗвек» япаласем ҫине ҫавӑрӑнса та пӑхмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ӗҫ кунта вӗсемшӗн «просто» культурӑран е пӗтӗмӗшпе илсен пурӑнӑҫ кӑткӑсланса пынинчен килет; ҫав культурӑн тата пурӑнӑҫ кӑткӑсланса пынин материальнӑй никӗсӗсем мӗнли ҫинчен ыйтса та пӑхмаҫҫӗ. — Анчах вӗсен хуть те пирӗн ялӑн экономикине сӑнаса пӑхсассӑн та, шӑпах хресченсем буржуазипе пролетариат ҫине сийленни шалти рынок туса пынине ирӗксӗрех йышӑнмалла пулӗччӗ.

Вӗсем, рынок ӳсни пӗртте буржуази ӳснине пӗлтермест-ха тесе шухӑшлаҫҫӗ, пулас. «Монополи пирӗн патра, пур производство та вӑйсӑр аталаннӑ ҫӗрте, ҫӗнӗ ӗҫе пуҫлас хастарлӑхпа пуҫарулӑх ҫук чухне, *ҫӗршыв вӑйӗсене* аталантарас тӗлӗшпе

* Тӗслӗхшӗн хуть Павловӑри кустарьсене таврари ялсенчи хресченсемпе танлаштарса пӑхма сӗнем. Григорьевпа Анненский сочиненийӗсене вулӑр. — Тӗслӗх вырӑнне каллех юри, хӑйне уйрӑм, имӗш «халӑх строй̆ӗ» пур яла илетӗп.

çĕнĕ чăрмав пулса тăрĕ», — тесе малалла тăсать хăй шухăшне, çÿлерех асăннă шалти пурнăç хроникерĕ. Табак монополийĕ çинчен каланă май, автор «вăл *халăх* укçи çаврăнăшĕнчен 154 милл. тенкĕ илĕ», тесе шутласа кăларать. Кунта ĕнтĕ—пирĕн хуçалăх йĕркин никĕсĕ таварлă хуçалăх пулса тăнине, ăна ертсе пыраканĕ пирĕн те, ытти çĕрти пекех, буржуази пулса тăнине тÿрех маннă. Çитменнине монополи буржуазине чăрмантарни çинчен калас вырăнне, автор «çĕршыв» çинчен калаçать, тавар çаврăнăшĕ çинчен, буржуалă çаврăнăш çинчен калас вырăнне, «халăхлă» çаврăнăш çинчен калаçать*. Çак ăнланусем хушшинчи уйрăмлăха, вăл тем тери пысăк пулсассăн та, буржуй нихăçан та уйăрса илме пултарас çук. Çак уйрăмлăх чăнахах та мĕн тери уççăн курăнса тăнине кăтартса парас тесе, эпĕ «халăх тусĕсемшĕн» авторитетлă журнала — «Отеч. Записки» ятлăскере—илсе кăтартам. Унăн 1872 çулхи 2-мĕш № рĕнче, «Плутократипе унăн никĕсĕсем»[19] ятлă статьяра, эпир çапла вулатпăр:

«Марло характеристики тăрăх, плутократийĕн тĕп палли вăл — государствăн либераллă формине юратни, е сахалтан та ирĕккĕн туянас принципа юратни пулса тăрать. Çак палла илсе, эпир, хуть пĕр 8—10 çул каярах мĕн пулни çинчен шухăшласа пăхсассăн, либерализм тĕлĕшпе эпир питĕ пысăк ăнаçлăхсем тунине курăпăр... Кирек мĕнле хаçата е журнала илсе пăхсан та, — вĕсем пурте ытла-и, сахал-и демократи принципне палăртса тăраççĕ, пурте халăх интересĕсемшĕн кĕрешеççĕ. Анчах демократиллĕ шухăшсемпе юнашар тата вĕсемпе витĕнсе те (çакна *астăвăр*) юри-и е юри мар-и, пĕрехмай плутократиллĕ туртăмсене пурăнăçа кĕртсе пыраççĕ».

Тĕслĕх вырăнне автор Питĕрпе Мускав купецĕсем финанс министрне çырса панă адреса илсе кăтартать; ку адресра вырăс буржуазийĕн çак питех те хисеплĕ сословийĕ министра, «вăл Российăн финанс пурăнăçне пĕртен-пĕр усăллă ĕçе — уйрăм хуçасен ĕçне май пур таран сармалла тунăшăн» тавтунă пулнă. Çавăнпа та статья авторĕ çапла вывод тăвать: «Плутократиллĕ элементсемпе туртăмсем пирĕн обществăра, пĕр иккеленмесĕр каламалла, пурах, çитменнине вĕсем çителĕклех», тет.

Куратăр-и — авалхи иртнĕ вăхăтра, сирĕн ĕçе туса пыракансем, ирĕке кăларакан аслă реформăсем хыççăнхи туйăмсем чĕпчĕррĕнех тăнă вăхăтра (г. Южаков шухăшласа кăларнă тăрăх, ку реформăсем «халăх» производствине аталанмашкăн лăпкă та тĕрĕс çулсем уçса памалла пулнă, анчах тĕрĕссипе плутократине кăна аталанмашкăн çулсем хатĕрленĕ) Российăри уйрăм хуçасен пуçарулăхĕ плутократиллĕ, урăхла каласан, буржуаллă характерлă пулнине хăйсемех йышăнмасăр тăма пултарайман.

Анчах Эсир мĕншĕн маннă-ха ăна? Мĕншĕн «халăхла» çаврăнăш çинчен тата «çĕнĕ ĕç пуçлас хастарлăхла пуçарулăх» аталаннă пирки «çĕршыв вăйĕсене» аталантарасси çинчен калаçнă май, çак

---

* «Р. Богатство» «халăхлă» («народнăй») тенĕ сăмаха буржуаллă тенĕ сăмаха хирĕç тăратса калама юратнă пирки, автора пушшех те айăпламалла.

аталану антагонизмлӑхӗ ҫинчен, ҫав хастарлӑхпа пуҫарулӑх ҫинчен асӑнмастӑр эсир? Монополисене тата ҫавӑн йышши ытти учрежденисене хирӗҫ калаҫма юрать, паллах, калаҫма кирлӗ те вӗсене хирӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсем паллах ӗҫсынни пурӑнӑҫне начарлатаҫҫӗ,— анчах ҫак мӗнпур вӑтам ӗмӗрхи тӑлӑсенчен пуҫне ӗҫсыннине тата пушшех те вӑйлӑ, вӗр-ҫӗнӗ, буржуаллӑ тӑлӑсем сӑнчӑрласа тӑни ҫинчен те манмалла мар. Монополисене пӗтерни, ним иккӗленме те ҫук, пӗтӗм «халӑха» усӑллӑ пулать, мӗншӗн тесен, ҫӗршыв экономиккин никӗсӗ буржуаллӑ хуҫалӑх пулса тӑнӑ хыҫҫӑн, ҫак вӑтам ӗмӗрхи йӗркесен юлашкисем капитализмлӑ инкексем ҫумне тата асаплӑрах инкексем кӑна—вӑтам ӗмӗрхисене—хушаҫҫӗ. Паллах, пӗтерме кирлех вӗсене—ҫитменнине мӗн чухлӗ хӑвӑртрах, мӗн чухлӗ нимӗн юлмиччен пӗтеретӗн, ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах пулать,—мӗншӗн тесен буржуаллӑ обществӑна киввинчен юлнӑ ҫурмакрепостной тӑлӑсенчен тасатни вара рабочи класс аллине ирӗклетсе, ӑна буржуазине хирӗҫ кӗрешме ҫӑмӑллатни пулать.

Акӑ ҫапла, япаласене хӑйсен ячӗпе каласа, калаҫмалла та: монополисене тата вӑтам ӗмӗрхи ытти чӑрмавсене те пӗтерни (вӗсен шучӗ Российӑра—пинӗ-пинӗпе) рабочи класа буржуаллӑ йӗркесене хирӗҫ кӗрешессине ҫӑмӑллатмашкӑн кирлӗ темелле, урӑх нимӗн те мар. Вӑтам ӗмӗрхи, крепостной учрежденисене хирӗҫ кӗрешес тӗлӗшпе пӗтӗм «халӑх» интересӗсем пӗрлешӗнсе тӑнӑ пирки—ҫав «халӑх» ӑшӗнчи буржуазипе пролетариат пӗр-пӗринпе нимпе килӗштерейми тарӑн антагонизмлӑ пулса тӑнине буржуйсем кӑна манма пултараҫҫӗ.

Тепӗр тесен, «халӑх тусӗсене» кунпа намӑслантарма пулӗ тесе шухӑшлани тӗлсӗр пулӗччӗ, мӗншӗн тесен яла мӗн кирли ҫинчен вӗсем, сӑмахран, ҫапла калаҫҫӗ:

«Темиҫе ҫул каярах хӑшпӗр хаҫатсем яла мӗнле профессисем тата мӗнле йышши интеллигентлӑ ҫынсем кирлине пӑхса тухнӑ чухне, кирлӗ ҫынсен списки питӗ вӑрӑм та тӗрлӗрен тата пӗтӗм пурӑнӑҫа тенӗ пекех ҫавӑрса илетчӗ,—тесе каласа кӑтартать г. Кривенко:—тухтӑрсемпе хӗрарӑм-врачсем хыҫҫӑн фельдшерсем, вӗсем хыҫҫӑн адвокатсем, адвокатсем хыҫҫӑн учительсем, библиотекӑсемпе кӗнеке сутти организацилекенсем, агрономсем, вӑрман ӗрчетекенсем тата ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекен тӗрлӗрен ытти ҫынсем чи тӗрлӗрен тӗслӗ специальнӑҫлӑ техниксем (ку область питӗ сарлака та, халлӗхе пачах пырса тӗкӗнменпе пӗрех), кредит учрежденийӗсемпе тавар склачӗсем туса, ертсе пыракансем т. ыт. те».

Хуть те ҫакӑн йышши, ӗҫлени тӳррӗнех экономика облаҫне пырса тивекен «интеллигентсем» (??) ҫинчен, тӗрлӗрен вӑрман ӗрчетекенсем, агрономсем, техниксем т. ыт. ҫинчен калаҫса пӑхар. Чӑнахах та, яла валли мӗн тери кирлӗ ҫак ҫынсем! Анчах та, **мӗнле** ял валли кирлӗ-ха?—паллах, ҫӗрхуҫисен ялӗ валли, аллисенче «перекетсем» пур тӗреклӗ хуҫалӑхлӑ мужиксен ялӗ валли, г. Кривенко «интеллигентсем» тесе хисепленӗ ҫак мӗнпур ремесленниксене ӗҫлеттерсе усӑ курнӑшӑн тӳлеме пултаракан ҫынсен ялӗ валли. *Ҫак* ял чӑнахах та—техниксемшӗн те,

кредитшӑн та, тавар склачӗсемшӗн те тахҫантанпах хыпса ҫунать ӗнтӗ—ун ҫинчен пӗтӗм экономикӑллӑ литература пӗлтерсе тӑрать. Анчах урӑх йышши, асӑннинчен темиҫе хут ытларах ял та пур вӗт, «халӑх тусӗсен» вӑл яла час-часах астусан та кансӗрлемӗччӗ, вӑл—тусӑнтарса ҫитернӗ, ҫарамаслатса хӑварнӑ, нимӗн юлми ҫаратса пӗтернӗ хресченсен ялӗ, «интеллигентсене» ӗҫленӗшӗн туллеме «перекетсем» кӑна мар, выҫӑ вилесрен тӑранса пурӑнмаллӑх тырӑ та ҫук ял. *Ҫак* яла ӗнтӗ эсир *тавар склачӗсемпе* пулӑшасшӑн!! Мӗн хурӗҫ вӗсем унта, тавар склачӗсене пирӗн пӗр лашаллӑ тата пачах лашасӑр пурӑнакан хресченсем? Хӑйсен тумтирӗсене-и?—вӗсем 1891-мӗш ҫултах[20] ӗнтӗ вӗсене ялсенчипе хулари кулаксем патне, сирӗн ырӑ-либераллӑ рецептсене пурнӑҫа кӗртес кӑмӑлӗсемпе ун чухнех хӑйсен килӗсенче, хупахӗсенче, лавкисенче чӑн-чӑнах «тавар склачӗсем» тӑва-тӑва лартнӑскерсем патне, заклада хывса пӗтернӗ. Тата вӗсемсӗр пуҫне ӗҫ «аллисем» тӑрса юлнӑ пулас. Анчах вӑл тавар валли Россия чиновникӗсем те халличен «тавар склачӗсем» шухӑшласа кӑларман-ха...

Ҫакӑн пек, «хресченсем» хушшинче техника прогресланса пынипе савӑнса хӗпӗртенипе пӗрлех, ҫав «хресченсенех» массӑлӑн экспроприациленине курасшӑн мар пулса, «демократсем» ҫакӑн пек вӗҫӗ-хӗррисӗр намӑссӑрланса кайнине тата уҫҫӑнрах кӑтартакан тӗслӗх тупма та хӗн. Сӑмахран, г. Карышев «Р. Богатство» журналӑн 2-мӗш №-рӗнче («Наброски» § XII), либералла кретин пекех хӗпӗртесе, хресчен хуҫалӑхне «лайӑхлатнисем» ҫинчен, «хресчен хуҫалӑхне лайӑхлатнӑ вӑрлӑх сурчӗсем—Америка сӗлли, ваза ятлӑ ыраш, клейдесдальски сӗлӗ т. ыт. те сарӑлни» ҫинчен каласа кӑтартать. «Хӑшпӗр тӗлте хресченсем вӑрлӑх валли уйрӑм пысӑкрах мар ҫӗр участкисем уйӑраҫҫӗ, вара вӗсене тӑрӑшса сухаласа сӳреҫҫӗ те, унта пӗрчӗнпӗрчӗн суйланӑ вӑрлӑха лартаҫҫӗ», тет. Автор «лайӑхлатнӑ ӗҫхатӗрӗсемпе машинӑсем тӗлӗшпе» нумай ҫӗнӗ япаласем йышӑннине, тӗрлӗрен тӗслӗ окучниксем, ҫӑмӑл плугсем, молотилкӑсем, веялкӑсем, сортировкӑсем туяннине палӑртать*. «Ҫӗре ҫемӗҫтермелли хатӗрсем тӗрлӗрен тӗслӗ пулса пынине»—фосфоритсем, ҫилӗм тислӗкӗ, кӑвакарчӑн тислӗкӗ т. ыт. пуррине та кӑтартса парать вӑл. Вара малалла: «фосфоритсене сутмашкӑн, ялсем тӑрӑх земски складсем уҫмалла тесе корреспондентсем ҫине тӑрсах ыйтаҫҫӗ», тет те г. Карышев, В. В. г-нӑн «Прогрессивные течения в крестьянском хозяйстве» ятлӑ статьинчен цитата илсе (г. Кривенко та ҫав статья ҫинех тӗллесе кӑтартать), ҫак чуна ҫӗклентерекен мӗнпур прогрессем пирки йӑлт ҫулӑмлансах каять:

«Ҫак эпир кӗскен ҫеҫ каласа пама пултарнӑ хыпарсем хастарлатаҫҫӗ те, салхулатаҫҫӗ те пире...—тет малалла автор.—Ха-

---

* Вулакана ҫак лайӑхлатнӑ ӗҫхатӗрӗсем Новоузенск уездӗнче кам-кам аллинче тӑнине астутарам: 37% (чухӑн) хресченсен аллинче, 28 пин килрен 10 пинӗшӗн аллинче—ӗҫхатӗрӗ 7, 5724-рен, урӑхла каласан 1/8%-чӗ! 5 пайӗнчен 4-шне вара пуянсем, мӗнпур килрен тӑваттӑмӗш пайӗ ҫеҫ пулса тӑраканскерсем, монополизациленӗ.

старлатаççĕ—мĕншĕн тесен çак чухăнланса парăма кĕрсе пĕтнĕ халăх,чылай пайĕ лашасăр тăрса юлнăскер, аллинчен ĕç пăрахмасть, аллине усса шанчăкне çухатмасть, пĕр ĕçе пăрахса урăххине тытăнмасть, унчченхи пекех çĕре тӳррĕн пăхăнса тăрать, хăйĕн пуласлăхĕ, вăйĕ, пуянлăхĕ—çĕрте, çĕрпе тивĕçлĕн усă курнинче пулса тăнине ăнланать вăл. (Паллах ĕнтĕ ара! Шăпах çак чухăнланса та лашасăрланса юлнă мужик фосфоритсем, сортировкăсем, молотилкăсем, клейдесдальски сĕлĕ вăрлăхĕсем туянса тăни хăйне-хăех паллă вĕт! О, sancta simplicitas!* Анчах кăна институтка мар, профессор, политикăллă экономи доктăрĕ çырать вĕт!! Çук, хуть те мĕн тăвăр, ĕçе пĕр святойла айванлăхпа кăна ăнлантарма çук кунта). Çĕрпе çапла тивĕçлĕн усă курас мелсене хĕрсе кайсах шырать вăл, ака-суха тăвас тĕлĕшпе çĕнĕ çулсемпе меслетсем, çĕнĕ вăрлăхсем, ĕçхатĕрĕсем, удобренисем тупма тăрăшать, çак тăрантарса пурăнакан аннемĕр-çĕре кайран хуçине—çиййĕнчех-и, кăшт каярах-и—çĕр хут ӳстерсе тавăрса пама пултаракан пур тĕслĕ майсене те шырать вăл...** Асăннă хыпарсем акă мĕншĕн салхулатаççĕ (тен эсир, «халăх тусĕ» кунта та пулин хресченсене массăллăн экспроприацилени çинчен, çакăнпа пĕрле вара тата çакăн пирки çĕр хăйсен хуçалăхĕсене тĕреклĕ тытакан мужиксен аллинче концентрациленни çинчен, вăл—капитал, *лайăхлатнă* хуçалăхăн никĕсĕ пулса тăни çинчен,—шăпах çак экспроприаци ĕнтĕ «ирĕк» те «йӳнĕ» «алăсене»—çак мĕнпур молотилкăсен, сортировкăсен, веялкăсен никĕсĕ çинче тăван çĕршыври «çĕнĕ ĕç пултарулăхĕ» валли ăнăçусем тăвакан «алăсене» рынока кăлара-кăлара ывăтакан экспроприаци çинчен «халăх тусĕ» çакăнта та пулин асăнĕ тесе шухăшлатăр пулĕ?—пĕртте тĕрĕс мар вăл): мĕншĕн тесен... шăпах хамăра вăратмалла пире. Ăçта вăл—эпир çак, хăй хуçалăхне çĕклеме тăрăшакан мужике, пулăшни? Пирĕншĕн наука, литература, музейсем, складсем, комиссионерсен кантурĕсем пур. (Чăнах та, господасем, «наукăпа» «комиссионерсен кантурĕсене» шăпах çапла юнашар лартнă та... «Халăх тусĕсене» социал-демократсемпе вăрçса çапăçнă чухне мар, мĕншĕн тесен ун пек чухне вĕсем хăйсем çине «ашшĕ идеалĕсенчен» юлнă ланчашкасенчен çĕлетнĕ мундир тăхăнаççĕ, вĕсене кулленхи тумтирĕсене тăхăннă чухне, кулленхи пурăнăç ыйтăвĕсене тĕпĕ-йĕрĕпе сӳтсе-явнă чухне, тĕпчесе пĕлме тăрăшмалла. Ун чухне вара эсир çак мещанлăх идеологĕ-

* о, святойла айванлăх! *Ред.*

** Çак «халăха», «ĕмĕтне çухатса аллине усманскере», «унчченхи пекех çĕре тӳррĕн пăхăнса тăраканскере» лайăхлатнă хуçалăх кайран çĕр хут ӳстерсе тавăрса парĕ тесе, эсир, хисеплĕ г. профессор, питĕ тĕрĕс калатăр. Анчах та эсир, эй политикăллă экономин аслă доктăрĕ, çакна асăрхамастăр-и, çак мĕнпур фосфоритсене т. ыт. япаласене туянас тесе «мужик» выçăхса пурăнакан кĕлĕмçĕсен массинчен аллинче *ытлашши* укçа пуррипе уйăрăлса тухма тивĕççине асăрхамастăр-и; укçа вара вăл—*обществăллă* ĕçĕн уйрăм çынсен аллине кĕрсе çакланакан продукчĕ вĕт-ха;—тата çак лайăхлатнă хуçалăх «парне» илсе тăни вăл *ют* ĕçе илсе харпăрлатни пулассине;—тата çак пуян парне—«тăрантарса пурăнакан аннемĕр-çĕре» хуçа хăй «аллине пĕр кантармасăр» тăрăшса ĕçленипе пулать тесе, буржуазийĕн чи ирсĕр хӳрешкисем кăна шухăшлама пултарнине курмастăр-и эсир?

сене вӗсен пӗтӗм тӗсӗ-шӑршипе сӑнама пултаратӑр). Ҫавӑн йышши мӗн те пулин пур-и мужик валли? Пуҫламӗшсем пур, паллах, анчах тем пирки питӗ вӑраххӑн аталанаҫҫӗ вӗсем. Мужик вӑл тӗслӗх курасшӑн,—анчах ӑҫта пирӗн сӑнав хирӗсем, кӑтартуллӑ, лайӑх тӗслӗхлӗ хуҫалӑхсем? Мужик пичетленӗ сӑмах шырать,—ӑҫта пирӗн ӑнланмалла чӗлхепе ҫырнӑ агрономи литератури?.. Мужик удобренисем, ӗҫхатӗрӗсем, вӑрлӑхсем шырать,—ӑҫта пирӗн пурне те сутса тӑракан земство склачӗсем, йышлӑ заготовка, тавар илессипе салатса тӑрассинчи меллӗ йӗркесем?.. Ӑҫта-ха ӗнтӗ эсир земствӑсенчи тата уйрӑмӑн ӗҫлекен деятельсем? Пырӑр та ӗҫлӗр, тахҫантанпах ӗнтӗ вӑхӑт ӗҫлеме, вара

Тавтапуҫах, сире чӗререн
Тейӗ вырӑс халӑхӗ!»

*Н. Карышев* (*«Р. Б—во», № 2, с. 19*).

Акӑ вӗсем, «халӑхӑн» вак буржуйӗсен тусӗсем, хӑйсен мещанла прогресӗсемпе ытарайми савӑнса килленекенскерсем!

«Хресченсем» ҫинчен, вӗсем хӑйсен ашчиккинченех темле пӗршухӑшлӑ та пӗрпӗтӗмӗшлӗ япала тесе шухӑшлани тӗлсӗр япала иккенне тата ҫак мӗнпур прогрессем буржуаллӑ прогрессем пулнине ӑнланас тесессӗн,—хамӑр ял экономикине тӗпчесе пӗлнисӗр пуҫне пирӗн экономикӑн ҫӗнӗ историйӗн куҫа курӑнса тӑракан фактне—хресченсен хуҫалӑхӗнче пулса пыракан прогрессемпе пӗрлех «хресченсене» питӗ пысӑккӑн экспроприациленине сӑнаса пӑхсан та ҫителӗклӗ пек туйӑнать! Анчах «халӑх тусӗсем» ҫаксене пурне те илтмеҫҫӗ. Вырӑссен ӗлӗкхи социальнӑ-революциллӗ народникӗсен лайӑх енӗсене ҫухатса пӗтерсе, вӗсен пысӑк йӑнӑшӗсенчен пӗрне—хресченсем хушшинчи классен антагонизмне ӑнланманнине хыттӑн ярса тытрӗҫ.

«70-мӗш ҫулсенчи народник хресченсем хушшинче класлӑ антагонизм пурри ҫинчен пӗртте, нимӗн чухлӗ те пӗлмен,—тесе питӗ тӗл калать Гурвич,—ҫак антагонизма вӑл—кулак е харампыр пулса тӑракан «эксплуататор» тата вӑл пусмӑрласа тӑнӑ, пӗтӗмпех коммунистла шухӑшлӑ хресчен хушшинчи отношенисенче кӑна курнӑ*. Пурте ҫапла иллюзипе пурӑннине хирӗҫ, скептикла Глеб Успенский кӑна пӗр пӗччен тӑрӑхланӑ пек кулкаласа тӑнӑ. Хресченсене питӗ лайӑх пӗлнӗ пирки тата хӑйӗн питӗ пысӑк артистла таланчӗпе япалана витӗрех, тӗпӗ-йӗрӗпех курса тӑнӑ пирки, вӑл ростовщикпе парӑмҫӑ хушшинче кӑна мар, ытти хресченсем хушшинче те индивидуализм пӗтӗмпех экономикӑллӑ отношенисен никӗсӗ пулса тӑнине курмасӑр иртме пултарайман». Унӑн «Равнение под одно» ятлӑ статьине «Р. М.» ятлӑ журналӑн 82-мӗш ҫулхи» 1 №-че вулӑр (асӑннӑ статья, журналӑн 106 стр.).

Анчах 60-мӗш тата 70-мӗш ҫулсенче—ял экономики ҫинчен, хальхипе танлаштарсан, тӗрӗс сведенисем питӗ сахал пулнӑ чухне, ял сийленни хальхин пек уҫҫӑн курӑнса ҫитеймен чух-

* «Ялти община ӑшӗнче антагонизмлӑ социальнӑй классем ҫуралса тухрӗҫ»—тет Гурвич тепӗр тӗлте (стр. 104). Гурвич сӑмахӗсене эпӗ ҫӳлерех илсе кӑтартнӑ фактсем ҫумне хушасшӑн кӑна каласа кӑтартатӑп.

çапла иллюзисемпе тĕлленме юранă тата çитменнине вĕсем пулма пултарнă пулсан,—халĕ вара ял çапла вăйланнине курас мар тесен, куçсене юри хупмалла пулать. Акă мĕн питех те характерлă: хресченсен хуçалăхĕнче пыракан прогрессивлă юхăмсем çинчен калаçни—шăпах юлашки вăхăтра, хресченсем чухăнланса пыни чи çўлти виçене çитнĕ чухне, пур енчен те илтĕнет. Г-н В. В. (вăл та «халăх тусĕ» пулнă пирки пирĕн нимĕн те иккĕленмелли çук) çак япала çинчен кĕнекипех çырса тултарнă. Çитменнине эсир ăна фактсене тĕрĕс мар çырнă тесе те ўпкелеме пултараймастăр. Шăлтах урăхла, факт тĕлĕшпе—хресченсем хушшинче техникăпа агрикультура ўссе пынă факт тĕлĕшпе пĕртте иккĕленме май çук; анчах та, шăлт çавăн пекех, хресченсене массăлăн экспроприациленĕ факт тĕлĕшпе те пĕртте иккĕленме май çук. Акă вара «халăх тусĕсем» «мужик» ака-суха тумашкăн епле хĕрсех çĕнĕ меслетсем шырани çине, хăйне тăрантарса пурăнакан амăш-çĕрне пуянлатма пулăшакан майсем шырани çине кăна пăхаççĕ, анчах медалĕн тепĕр енне—çав «мужикех» хăй çĕрĕнчен епле хĕрсе уйăрса пыни çине пăхма манаççĕ. Вĕсем, хăйсем, шăпах çак вăхăтра хресченсенчен уйăрăлакан çĕр капитал пулса пынă чухне*, шалти рынок аталанса пынă чухне пурăннине курасшăн мар пулса, пурăнăç çине тўррĕн пăхасшăн мар пулса, хăйсен пуçĕсене страуссем пек пытараççĕ. Эсир пирĕн общинăра пурăнакан хресченсем хушшинче çак икĕ хире-хирĕçле процессем *пуррине* çук туса кăтартма тăрăшса-пăхăр-ха, çак процессем пирĕн общество—буржуаллă общество пулнă пирки мар, урăхла пулнă тесе *ăнлантарма* тăрăшса пăхăр-ха!—Ăçта унта! Аллилуя юрласси тата ырă кăмăллă янтра сăмахсем çаптарса ларасси—акă вĕсен пĕтĕм «накин», пĕтĕм политикăллă «еçĕсен» пуçламăшĕпе вĕçĕ.

Кучухнехи йĕркесене çапла йăваш-либераллă саплăксем лартса айкашнине вара вĕсем философи таранах çĕклесе хăпартаççĕ. «Пĕчĕк чĕрĕ ĕç—пысăк ĕçсĕрлĕхрен нумай лайăх», тесе тарăн шухăшлăн калаçать г. Кривенко. Çĕнĕ те, ăслă та. Çитменнине, «пĕчĕк ĕç—пĕртте пĕчĕк тĕллев тени пулмасть»—тет вăл малалла. Ĕçе çапла «сарса», пĕчĕк ĕçрен «тĕрĕс, лайăх» ĕç пулса тăнине кăтартмашкăн, вăл çакăн йышши тĕслĕхсем илсе парать: пĕр улпут майри шкулсем тăвас тĕлĕшпе еçленине,—унтан адвокатсем хресченсем хушшинче ĕçлесе, чăкăлташ-куштансене пĕтерессине,—адвокатсем вырăнсене окружной судсен выездной сессийĕсене, айăплакансене хўтĕлес кăмăлпа, тухса çўресшĕн пулнине,—юлашкинчен вара, эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ ăна, кустарнăй складсем тăвассине: ĕçе (пысăк тĕллеве çити) сарни кунта—«земствăсен вăйĕсене пĕрлештерсе халăх чи нумай çўрекен вырăнсенче» складсем тăвассинче пулмалла.

---

* Шăпах тĕреклĕ хуçалăх тытакан хресченĕн шултăрарах хуçалăх тытмалла пулнă пирки, ку шултăра хуçалăхра кивĕ мелсемпе ĕçлесен ĕç кăларас çук пирки, «ака-суха тумашкăн çĕнĕ меслетсем» «хĕрсе» шырама тивет те;—шăпах, ака-суха тумалли çĕнĕ меслетсене конкуренци ирĕксĕрех шыраттарать, мĕншĕн тесен çĕрĕçĕ ытларан-ытла таварлă, буржуаллă пулса пырать.

Çаксем пурте, паллах, питӗ ырӑ, çӳлӗ кӑмӑллӑ, либераллӑ ӗçсем—«либераллӑ» ӗçсем, мӗншӗн тесен хуçалӑхӑн буржуаллӑ системине вӗсем пӗтӗм вӑтам ӗмӗрлӗх чӑрмавӗсенчен тасатӗç, унпа вара рабочисене çав системӑна хӑйне хирӗç кӗрешме çӑмӑллатӗç, анчах çакӑн пек меслетсем системӑна хӑйне, паллах, пырса тӗкӗнме кӑна мар, шӑлтах урӑхла, вӑйлатӗç кӑна—çитменнине вӑл ӗçсем çинчен эпир такçантанпах ӗнтӗ вырӑссен пур либераллӑ изданийӗсенче те вулатпӑр. Вӗсене хирӗç калаçса тӑма та кирлех марччӗ, анчах «Р. Б-во» журналти господасем ирӗксӗр калаçтараççӗ пире, мӗншӗн тесен либерализмӑн çак йӑваш пуçламӑшне» вӗсем, тӗслӗх шутне лартса, социал-демократсене хирӗç усӑ кура пуçларӗç, çитменнине социал-демократсене «аçӑрсен идеалӗсенчен» чакатӑр тенипе ӳпкелесе айӑплама пуçларӗç. Ун чухне вара эпир: социал-демократсене хирӗç çапла питӗ виçеллӗ те тирпейлӗ *либераллӑ* (урӑхла каласан, буржуазине пулӑшса) ӗçлеме сӗнни—вӑл сахалтан та кулӑшла, тесе каламасӑр иртме пултараймастпӑр. Аттесемпе вӗсен идеалӗсем çинчен вара çапла каламалла: вырӑс народникӗсен кивӗ теорийӗсем мӗн тери йӑнӑш, мӗн тери утопиллӗ пулнӑ пулсан та анчах «либерализмӑн çакӑн йышши йӑваш пуçламӑшӗсене» вӗсем, **мӗн пулсан та**, паллах, йышӑнмасӑр, хӑйсенчен пӗр иккӗленмесӗр сирсе тӑнӑ. Кавычкӑпа çырнӑ сӑмахсене Н. К. Михайловскийӗн «По поводу русского издания книги К. Маркса» ятлӑ заметкинчен («От. Зап.» 1872 çулхи, 4-мӗш №-чи)—питӗ те чӗрӗ, çивӗч, хӑюллӑ çырнӑ (вӑл халӗ çырнисемпе танлаштарсан), пирӗн çамрӑк либералсене кӳрентермелле мар тенӗ сӗнӗве хирӗç хӗрӳллӗн протеслесе çырнӑ заметкинчен илетӗп.

Анчах ку тахçанах, çав тери тахçан пулнӑ япала, «халӑх тусӗсем» вӗсене пурне те чылаях манма ӗлкӗрнӗ те, вара хӑйсен тактикипе вӗсем политикӑллӑ учреждениcене материализмлӑ критиклени çук чухне, ку чухнехи государствӑн класлӑ характерне ӑнланман чухне,—политикӑллӑ радикализмран политикӑллӑ оппортунизма çитме пӗр утӑм кӑна ярса пусмаллине уççӑнах кӑтартрӗç.

Çак оппортунизмӑн пӗр-ик тӗслӗхне илсе кӑтартар:

«Государство пурлӑхӗсен министерствинчен çӗрӗç министерстви туса хуни, пирӗн экономика аталанӑвӗ çине пысӑк влияни сарма пултарать, анчах—чиновниксене кӑштах, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна кӑна куçарса лартни пулса юлма та пултарать,—тесе пӗлтерет пире г. Южаков («Р. Б.» 10-мӗш №-рӗ).

Пӗтӗм ӗç, апла пулсан, кама чӗнсе илнинчен—халӑх тусӗсене е помещиксемпе капиталистсен интересӗсен представителӗсене «чӗнсе илнинчен» кӑна килет иккен. Интересӗсене хӑйсене, тивмесӗрех хӑварма юрать.

«Экономика тӗлӗшӗнчен вӑйсӑртараххине экономика тӗлӗшӗнчен вӑйлинчен сыхласа тӑрасси—вӑл государствӑн пӗрремӗш, чи кирлӗ задачи», тет малалла çавӑнтах çав г. Южаков, унтан ун сӑмахнех шалти пурӑнӑç хроникерӗ те «Р. Б-ӑн» 2-мӗш №-че

тепĕр хут каласа кăтартать. Çак филантропиллĕ тăнсăрлăха* вăл, хăйне тивĕçлĕ юлташĕсем пекех, Хĕвеланăç Европăри мещанлăхăн либераллă та радикаллă идеологĕсем пекех ăнланнă пирки нимĕнле иккĕленесси те ан пултăр тесе, малалла вăл çапла каласа хурать:

«Гладстон ландбиллисем, Бисмарк рабочисене страховани туни, фабрикăсенчи инспекци, хамăр патăмăрта хресчен банкĕ тăвас шухăш, çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе организацилени, кулаксене хирĕç йышăннă меслетсем, çаксем вĕсем пурте—шăпах экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăртарахскерсене хӳтĕлес ĕçе хутшăнас шутпа государство принципа пурăнăça кĕртме тăрăшни пулса тăрать те».

Ку ĕнтĕ ним пытармасăр уççăн каланă пирки лайăх. Автор кунта тӳрех: хăй, шăлт Гладстонпа Бисмарк господасем пекех, хальхи обществăллă отношенисен никĕсĕ çинче тăрасшăн пулни çинчен—шăлт çавсем пекех ку чухнехи обществăна хирĕç (буржуаллăскерне хирĕç—анчах ăна вăл, Хĕвеланăç Европăри Гладстонсемпе Бисмарксем майлисем ăнланман пекех, пĕртте ăнланмасть) кĕрешесшĕн мар, ăна саплăксем лартса юсаса тӳрлетесшĕн кăна пулни çинчен калать. Çак обстоятельство та вĕсен çак тĕп теориллĕ шухăшĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăрать: реформăсем туса ирттерекен хатĕр вырăнне вĕсем государствăна—çак ку чухнехи обществăран çуралса тухса, унта пуçпулса тăракан классен интересĕсене сыхласа тăракан органа, шутлаççĕ. Вĕсем тӳрех ăна пур классем çинче те тăракан, пурне те тума пултаракан япала вырăнне хураççĕ, вăл ĕççынни-сене «пулăшассине» кăна мар тата (эпир г. Кривенкоран илтнĕ пек) чăн-чăн тĕрĕс йĕркесем тăвассине те кĕтсе тăраççĕ. Тепĕр тесен, паллах, вĕсенчен, мещанлăхăн чăн идеологĕсенчен, урăххине нимĕн кĕтме те çук. Мещанлăхăн тĕп тата характерлă енĕсенчен пĕри, акă çакă пулса тăрать те вĕт: производство условийĕсем пирки пĕр-пĕринчен уйăрăлса, уйрăм тăракан, пĕр-пĕр вырăнпа тата пĕр-паллă эксплуататăрпа çыхăнса тăракан вак производитель, хăшпĕр чухне хăй, пролетарирен те кая мар асап тӳссе тăнă эксплуатаципе пусмăрлăхăн класлă характерне ăнланма пултараймасть, буржуаллă обществăра государство та класлă государство пулса тăнине ăнланма пултараймасть.**

---

* Тăнсăрлăх тетĕп, мĕншĕн тесен—«экономика тĕлĕшĕнчен вăйлин» вăйĕ, ыттинчен пуçне, политикăллă влаçа хăй аллинче тытса тăнинче пулса тăрать те. Унсăрăн вăл экономика тĕлĕшĕнчен пуçпулса тăраймĕччĕ.

** Çавăнпа «халăх тусĕсем» те: государствăн чи кирлĕ задачи—экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăррине хӳтĕлесе тăрасси пулать тенĕ чухне (ĕç, карчăкла йĕрĕнтерчĕк мораль тăрăх, çакăн пек *пулма тивĕç*) чи усал реакционерсем пулса тăраççĕ; тĕрĕссипе, пирĕн государство задачи — помещик-крепостниксемпе шултăра буржуазине кăна сыхласси пулнине тата «экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăррисем» хăйсене хуть те мĕнле хӳтĕлеме тăрсассăн та вĕсене чи тискеррĕн пусарса тăрасси пулнине пĕтĕм вырăс историйĕ тата шалти политика кăтартса парать. Çак вăл, паллах, унăн чи *кирлĕ* задачи, мĕншĕн тесен абсолютизмпа бюрократине витĕрех крепостникла-буржуаллă шăршă çапнă, мĕншĕн тесен тата экономика облаçĕнче буржуази пĕр-пĕччен пуçпулса, рабочи класа «юхан-шывран та лăпкăрах, ӳсен-курăкран та аяларах пусарса» тăрать.

Анчах та, хисеплӗ господасем, «халӑх тусӗсем», апла пулсан мӗншӗн-ха халичченех,—ҫав ирӗке кӑлармалли реформӑсем хыҫҫӑн вара пушшех те вӑйлӑн,—пирӗн правительство буржуазипе капитализма кӑна«пулӑшса, сыхласа, аталантарса тӑчӗ»? Ҫак абсолютлӑ, имӗш, классем ҫийӗнче тӑракан правительствӑн ҫав тери лайӑх мар ӗҫӗ—мӗншӗн-ха шӑпах ҫак шалти пурнӑҫра таварлӑ хуҫалӑх, суту-илӳ, тата промышленность аталанса пынипе паллӑ пулса тӑнӑ историри тапхӑрпа пӗр вӑхӑтра пулса пынӑ-ха? Малтанхи улшӑнусем ҫав тери тарӑн пулса пынӑ пирки правительство вӗсене те асӑрхаман, ҫитменнине вӗсене шутсӑр йышлӑ майсемпе кансӗрлесе пынӑ пулсассӑн та, ҫав «абсолютлӑ» правительствах, шалти пурӑнӑҫ урӑхла пулнӑ условисенче, урӑх класа «пулӑшса», «сыхласа», «аталантарса» тӑнӑ пулсассӑн та—мӗн пирки эсир, шалти пурӑнӑҫри ҫак юлашки улшӑнусем кайран пулнӑ, правительство политики вара унтан малтан пулнӑ япала тесе шухӑшлатӑр?

О, ун йышши ыйтусене «халӑх тусӗсем» хӑйсен умне нихӑҫан та лартмаҫҫӗ! Ку вӗт йӑлтах—материализмпа диалектика, «гегелевщина», «мистикӑпа метафизика». Вӗсем просто, ҫак правительствӑран йӑлӑнарах та ачашланарах ыйтсассӑн, вӑл пурне те кирлӗ пек аван тума пултарать тесе шухӑшлаҫҫӗ. Ачашлӑх тӗлӗшпе пулсан вара, «Р. Богатство» журнала тивӗҫлипех хисеплемелле: чӑн та, вырӑссен либераллӑ пичетӗнче те вӑл, хӑйне хӑй пӑртак та пулин никама пӑхӑнмасӑр тытма пӗлменни тӗлӗшпе, ыттисенчен малта тӑрать. Шухӑшлӑр-ха хӑвӑрах:

«Тӑвар налогне пӗтерниие, ят куланайне пӗтернине тата выкуп укҫине чакарнине» г. Южаков «халӑх хуҫалӑхне чылай ҫӑмӑллатни» пулать, тет. Ара, паллах ӗнтӗ!—Анчах, тӑвар налогне пӗтернипе пӗрлех ҫӗнӗ косвеннӑй налогсене купипех туса, киввисене ӳстерни пулмарӗ-и? ят куланайне пӗтернипе пӗрлех ӗлӗк государственнӑй хресченсем пулнисен тӳлевӗсене, вӗсене выкуп тӳлемелле тӑвас сӑлтавпа, ӳстерни пулмарӗ-и? выкуп тӳллевӗсене чакарнӑ хыҫҫӑн та (вӗсене чакарнӑ хыҫҫӑн государство хресченсене ҫак ӗҫрен пухса илнӗ усламне те пулин паман) тӳлевсем ҫӗр дохочӗпе тивӗҫлӗн шайлашӑнса тӑмаҫҫӗ мар-и, урӑхла каласан халӗ та крепостной оброк юлашкисем пӗтмен мар-и?—Нимӗнех те мар! Кунта вӗт «пӗрремӗш утӑмӗ», «принципӗ» кӑна паха, ун хыҫҫӑн вара... ун хыҫҫӑн тата та йӑлӑнса ыйтма пулать!

Анчах кусем пурте чечекӗсем кӑна-ха. Акӑ вара ҫырлисем те:

«80-мӗш ҫулсем халӑх йывӑрлӑхне ҫӑмӑллатрӗҫ (ку, асӑннӑ майсемпе пулать ӗнтӗ), ҫавӑнпа вара халӑха пӗтӗмпех юхӑнассинчен хӑтарчӗҫ», тет.

Ку сӑмахсем те, хӑйсен тарҫӑлла намӑссӑрлӑхӗ тӗлӗшӗнчен классикла сӑмахсем, вӗсене г. Михайловский ҫӳлерех пӗлтернипе —пролетариата пирӗн тумалла-ха тенипе кӑна танлаштарма пулать. Ҫакна май, Россия либералӗ эволюциленсе пынӑ истори ҫинчен Щедрин ҫав тери тӗл сӑнласа кӑ-

тартнине аса илмесӗр иртме май ҫук. Ҫав либерал хӑй начальвтвӑран «май пур тарӑн» рэформӑсем ыйтнинчен пуҫлать; унтан сара «ну, хуть мӗн те пулин» тесе йӑлӑнма тапратать, чи юлашкинчен вара «ултавпа ирсӗрлӗхе юрама тӑрӑшакан», ӗмӗр-ӗмӗрех улшӑнми позици ҫине куҫса тӑрать. Ара, нумай миллион халӑха тертлентернӗ выҫлӑх тӗлӗшпе малтан лавкаҫӑ пек хытӑ, кайран лавкаҫӑ пекех хӑравҫӑ пулнӑ правительство ҫинчен —ҫак правительство халӑха пӗтӗмпех юхӑнассинчен ҫӑлчӗ, тесе пичетре калаҫҫӗ пулсассӑн, «халӑх тусӗсем» ҫинчен те, вӗсем те ҫак ӗмӗр-ӗмӗрех улшӑнми позици ҫинче тӑраҫҫӗ тесе епле калас мар-ха!! Акӑ хресченсене тата хӑвӑртрах экспроприациленӗ ҫул темиҫе иртӗ, правительство ҫӗрӗҫ министерстви тунипе пӗрле пӗр-икӗ тӳрӗ налога пӗтерӗ те, миҫе те пулин ҫӗнӗ косвеннӑй налог хушса парӗ; унтан выҫлӑхпа 40 миллион халӑх тертлене пуҫлӗ,—унтан вара ҫак господасем хальхин пекех: куратӑр-и ӗнтӗ, выҫлӑхпа 50 миллион мар, 40 миллион кӑна аптӑрать тесе ҫыра пуҫлӗҫ; ку вӑл—правительство халӑх нушине ҫӑмӑллатса, халӑха пӗтӗмпех юхӑнассинчен ҫӑлнӑ пирки пулчӗ, правительство халӑх тусӗсем каланине итлесе ҫӗрӗҫ министерстви тунӑ пирки пулчӗ, тейӗҫ!

Тепӗр тӗслӗх:

«Р. Б-вӑн» 2-мӗш № че шалти пурӑнӑҫ хроникерӗ Россия «телейне пула» (sic!) кая юлнӑ ҫӗршыв, «хӑйӗн экономикин стройне килӗшӳ (солидарность) принципӗ* ҫинче никӗслеме кирлӗ элементсене сыхласа тӑрать» тесе калаҫкаланӑ хыҫҫӑн, ҫапла ҫырать: ҫавӑнпа та вӑл «пӗтӗм тӗнчери отношенисенче экономикӑри килӗшӳ принципне пурӑнӑҫа кӗртекен» пулма пултарать, ҫавӑ вара Российӑшӑн унӑн иккӗленме ҫук «политикӑллӑ вӑй-хӑватне ӳстерет»!!

Ҫакӑ Европа жандармӗ ӗнтӗ, шавах пур тӗрлӗ реакцин чи шанчӑклӑ тӗрекӗ, вырӑс халӑхне ҫав тери намӑса илсе ҫитернӗскер, ӑна, хӑй килӗнче те чура пек пусарнӑ пулин те, Хӗвеланӑҫӗнчи халӑхсене те пусармалли хатӗр туса хунӑскер,—ҫак жандарма экономикӑри килӗшӳ принципне пурӑнӑҫа кӗртекен туса хураҫҫӗ!

Ку ӗнтӗ пур виҫерен те иртсе каять! Господа «халӑх тусӗсем» пур либералсенчен те ирттереҫҫӗ. Вӗсем правительствӑран ыйтаҫҫӗ кӑна мар, ӑна ырласа мухтаҫҫӗ те кӑна мар, ҫак правительствӑна вӗсем йӑлӑнсах кӗлтӑваҫҫӗ, ӳксе пуҫҫапсах кӗлтӑваҫҫӗ, ҫав тери тӑрӑшса кӗлтӑваҫҫӗ—инҫетрен, вӗсен, шанчӑклӑ чурасен ҫамкисем шатӑртатнине илтсе тӑнипе, хӑрасах каятӑн.

Астӑватӑр-и эсир нимӗҫсем кама филистер тесе каланине?

Was ist der Philister?
Ein hohler Darm,

---

* Камсем хушшинчи килӗшӳ? помещикпе хресчен хушшинчи-и? тӗреклӗ мужикпе босяк хушшинчи-и? фабрикантпа рабочи хушшинчи-и? Ҫак классикла «килӗшӳ принципне» ӑнланас тесен, предпринимательпе рабочи хушшинчи килӗшӗве «ӗҫукҫине чакарни урлӑ» туса хунине астумалла.

Voll Furcht und Hoffnung,
Dass Gott erbarm.*

Ку определени пирӗн ӗҫсем валли юрасах каймасть. Тура... тура вӑл пирӗн пачах иккӗмӗш вырӑнта. Ун вырӑнне начальство пулсан—вара ӗҫ килӗшет. Вара ҫак определение «турӑ» тенӗ сӑмах вырӑнне «начальство» тенӗ сӑмах лартсан—ун чухне эпир Российӑри ырӑ-либераллӑ «халӑх тусӗсен» идейӑллӑ пуянлӑхӗ, нравственность шайлӑхӗ тата гражданла паттӑрлӑхӗ мӗнле пулнине тӗп-тӗрӗссӗн курӑпӑр.

Правительство ҫине ҫапла ӑссӑр, ним тӗлсӗр пӑхни ҫумне «халӑх тусӗсем» «интеллигенци» текен ҫынсем ҫине те ҫакӑнпа шайлӑнах пӑхнине хушса хураҫҫӗ. Г-н Кривенко ҫапла ҫырать: «Литературӑн»... «явленисене, обществӑшӑн мӗн тери паха пулса тӑнӑ тӑрӑх хакламалла, ырӑ тума тӑрӑшнӑ кашни активлӑ туртӑма ҫӗклентермелле. Вӑл (литература) учительсем, докторсем, техниксем ҫитменни ҫинчен пӗрехмай астутарса тӑнӑ та, тӑрать те, халӑх чирлени ҫинчен, чухӑнланса пыни ҫинчен (техниксем сахал!), хут пӗлменни ҫинчен, т. ыт. ҫинчен те ҫырать; ҫавӑнпа та ӗнтӗ симӗс ҫивиттиллӗ сӗтелсем хушшинче ларса, юратакан ҫынсем лартакан спектакльсенче выляса тата предводительсем патӗнче пулӑ шӑнӑрӗ таврашӗсенчен пӗҫернӗ кукӑльсем ҫисе йӑлӑхнӑ ҫынсем, хӑйсен кӑмӑлӗсене татса (шухӑшлӑр кӑна: симӗс ҫивитиллӗ сӗтелсене, спектакльсене, кукӑльсене пӑрахса вӗт!), тата темӗн чухлӗ чӑрмавсене пӑхмасӑр ӗҫе тухакан ҫынсем килеҫҫӗ пулсассӑн, вӗсене хапӑлласса йышӑнмалла».

Икӗ страница каярах, вӑл опыт пухса ӑсланнӑ служака пек ӗҫчен сӑн-сӑпатлӑн—«ҫӗнӗ положени тӑрӑх земски начальникӗн, е хула пуҫлӑхӗн, е земски управа председателӗпе членӗсен вырӑнне ӗҫлеме каймалла-и, каймалла мар-и?—тесе иккӗленсе тӑракан ҫынсене хаяррӑн ятлать. Граждансен потребноҫӗпе обязанноҫӗсем мӗнлине лайӑх пӗлсе тӑракан обществӑра (итлӗр, господасем, чӑн та ку Российӑри паллӑ помпадурсен, мӗнле те пулин Барановсен е Косичсен сӑмахӗ тӗшне тӑрать вӗт!) ун пек иккӗленсе тӑни те, ӗҫ ҫине ҫапла пӑхни те пулма пултараймӗччӗ, мӗншӗн тесен ун пек общество кирек мӗнле реформӑна та, унӑн пурӑнӑҫа юрӑхлӑ енӗсем пулсан, хӑйне кирлӗ пек урӑхлатса йышӑннӑ пулӗччӗ, урӑхла каласан, хӑйне кирлӗ енӗсене аталантарса, вӗсемпе усӑ курӗччӗ; кирлӗ мар енӗсене вара вилӗ буква туса хурӗччӗ; реформа пачах та пурӑнӑҫа килӗшми пулас пулсан вара, вӑл пӗтӗмӗшпех ют япала пулса юлӗччӗ», тет.

Чорт пӗлет, мӗнне! Темле ҫурпуслӑх оппортунизм хӑйӗнпе хӑй ҫав тери савӑнса калаҫать! Литература задачи вӑл—усал марксистсем ҫинчен салонсенче калаҫнӑ суя сӑмахсене пухасси, халӑха пӗтӗмпех юхӑнассинчен ҫӑлассӑн правительствӑна тав тӑвасси, симӗс ҫивиттиллӗ сӗтелсем хушшинче ларса йӑлӑхнӑ ҫын-

* —Мӗн вӑл филистер? Пуш-пушӑ пыршӑ, хӑравҫӑлӑхпа тата турӑ ырлӑхӗ ҫине шаннипе тулнӑскер (Г. Гейне) *Ред.*

сене саламласси, «публикăна»—земски начальчик вырăнĕ пек ĕçсенчен те пăрăнмалла мар тесе вĕрентесси пулса тăрать, иккен.. Ара, мĕн вулатăп çак эпĕ? «Неделя»[21] е «Новое время» хаçатсене-и?—Çук, «Русское Богатство» вăл. Российăри чи малта пыракан демократсен органĕ...

Çакăн йышши господасем ĕнтĕ «ашшĕсен идеалĕсем» çинчен калаçаççĕ, вĕсем, шăпах вĕсем ĕнтĕ, Франция пĕтĕм Европа тăрăх социализм идейисене сарса тăнă вăхăтсен, çав идейăсене йышăннă пирки Российăра Герценпа Чернышевскийăн теорийĕсемпе вĕрентĕвĕсем çуралса тухнă вăхăтсен традицийĕсене сыхласа тăратпăр тесе хапсăнаççĕ. Ку ĕнтĕ пачах ниме юрăхсăр япала; «Русское Богатство» ытлашши кулăшла пулман пулсассăн, çавăн йышши журналта çавăн пек калаçнисем ахăлтаттарсах култарман кăна пулсассăн, ун йышши сăмахсем чăтма çук тарăхтарса çилентернĕ пулĕччĕç. Ара, эсир вăл идеалсене варалаттăр вĕт! Чăнахах та вырăссен пирвайхи социалисчĕсен, Каутский çав тери тĕл каласа палăртнă саманари:

— «Ун чухне кашни социалист поэт пулнă та, кашни поэт социалист пулнă», тенĕ саманари социалистсен идеалĕсем мĕнле пулнă-ха.

— *Вырăс пурăнăçĕн хăйне уйрăм укладне, общинăллă стройне ĕненни*; çакăнтан вара—*хресченсен социализмлă революцийĕ пулассине ĕненни*—акă вĕсене мĕн хавхалантарса тăнă, правительствăна хирĕç геройла кĕрешме вуншар та çĕршер пин халăха çĕклесе тăнă. Çавăнпа та социал-демократсене, вĕсем çак хăй вăхăтĕнчи чи лайăх çынсен историллĕ тем пысăкĕш усăллă ĕçне хаклама пĕлмен тесе, вĕсене питĕ тарăн хисеплесе астуса тăма пĕлмен тесе, пĕртте ÿпкелеме пултараймастăр эсир. Анчах эпĕ сиртен: вăл ĕненÿ ăçта ĕнтĕ халĕ? — тесе ыйтатăп. — Çук вăл ĕненÿ, акă мĕн тери çук: г. В. В. пĕлтĕр община халăха килĕшсе ĕçлеме вĕрентет, вăл альтруизмлă туйăмсен вучахĕ пулса тăрать т. ыт. те тесе калаçкалама тытăнсанах, г. Михайловский те пулин намăсланса, В. В. г-на вăтаннă пек, «пирĕн община альтруизмпа çыхăнса тăнине кăтартакан *тĕпчевсем* çук», тесе ятла пуçларĕ. Чăн та, ун пек тĕпчевсем çуках ĕнтĕ. Анчах, пырăр та пăхăр акă:—çынсем нимĕнле тĕпчевсемсĕрех, çитменнине чунтан-вартан ĕненнĕ вăхăт та пулнă.

Мĕнле-ха апла? мĕншĕн? мĕн пирки?...

— «кашни социалист поэт пулнă та, кашни поэт — социалист пулнă».

Çийĕнчен тата тÿрĕ тĕпчевçĕсем пурте, ял сийленсе пынипе, пĕр енчен пролетарисен массине, тепĕр енчен ытти пĕтĕм халăха хăйсен ури айĕнче тытса тăракан «кулаксен» ушкăнне çуратса пынипе пурте килĕшеççĕ,—тесе хушса хурать, çав г. Михайловскиех. Каллех те унăн сăмахĕ тĕрĕс: ял чăнах та сийленсе пырать. Вăл сахал-ха, ял тахçантанпах пĕтĕмĕшпех сийленĕ те ĕнтĕ. Унпа пĕрле вырăс хресченсен кивĕ социализмĕ те сийленнĕ; пĕр енчев, хăй вырăнне рабочисен социализмне панă, тепĕр енчен вăл—хăйĕн лайăх енне çухатса, мещансен ирсĕр

радикализмĕ пулса тăнă. Кун пек улшăннине пăсăлса кайни темесĕр урăхла калама çук. Хресчен пурăнăçĕ хăйне уйрăм укладлă пулни çинчен, пирĕн аталану çулйĕрĕсем пачах хăйне-евĕрлĕ пуласси çинчен калакан вĕренӳрен темле шĕп-шĕвĕ эклектизм çуралса тухнă, вăл—пирĕн экономикăллă аталанăвăн никĕсĕ таварлă хуçалăх пулса тăнине, таварлă хуçалăх ӳссе капитализм пулса тăнине йышăнмасăр тăма пултараймасть ĕнтĕ; анчах вăл—пирĕн производствăллă отношенисем буржуаллине, çак строй вăхăтĕнче классен кĕрешĕвĕ пурпĕрех пулмаллине кăна курасшăн мар. *Хресченсене кучухнехи общество никĕсĕсене хирĕç* социализмлă революци тума *çĕклес* шутпа тунă политикăллă программăран* *кучухнехи общество никĕсĕсене упраса тăнă вăхăтра* хресченсен пурăнăçне саплăксем лартса «лайăхлатас» шутпа тунă программа çуралса тухнă.

Тĕрĕссипе каласан, çак мĕнпур малта çырнисем, социал-демократсене «çĕмĕрме» тытăннă чухне, «Русское Богатство» журналти господасенчен мĕнле йышши «критика» кĕтме май пуррине кăтартса пама пултарать ĕнтĕ. Вырăс пурăнăçне социал-демократсем мĕнле ăнланнине тӳррĕн те тĕрĕс çырса кăтартма тăрăшни (пуринчен ытла ыйтăвăн экономикăллă енне çутатма тăрăшнă пулсан, кунта та хăйсен пĕтĕм «полемики» тăршшĕнче калаçнă пекех пĕтĕмĕшле сăмахсемпе, хăшпĕр чухне эзоп чĕлхипе калаçнă пулсан, цензура тĕлĕшĕнчен кун пек тума май пулĕччĕ) тата çав ăнланăвăн тĕп шухăшĕсене хирĕç калама, унăн практикăллă вывочĕсем тĕрĕссине хирĕç калама тăрăшни пĕртте çук. Кун вырăнне вĕсем—абстрактлă схемăсем çинчен, вĕсене ĕненни çинчен, кашни çĕршыв вăл е ку... фаза урлă иртсе кайма тивĕççине ĕненни çинчен тата ытти ерунда çинчен те (вĕсемпе эпир г. Михайловский çырăвĕсем тăрăх çителĕклĕ паллашрăмăр ĕнтĕ) пуш-пушă сăмах çаптарса нимĕн каламасăр иртсе кайма тăрăшарах параççĕ. Çакăнпа пĕрлех, шухăша тӳррĕнех пăснисем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран, г. Кривенко çапла калать: Маркс «пирĕншĕн, кăмăлăмăр пулсан (?!! Çапла ĕнтĕ, Маркс вĕрентни тăрăх, обществăллă-экономикăллă отношенисем эволюциленсе пыни çынсен ирĕкĕпе ăстăнĕнчен килет, пулать?? Мĕн ара ку—вĕçĕ-хĕррисĕр айванлăх-и, е нимпе танлаштарайми намăссăрлăх-и?!) тата кирлĕ пек ĕçлесен, капитализмлă ăнсăртлăхсенчен хăтăлса, урăх, тĕрĕсрех çулпа (sic!!!) кайма май пуррине йышăннă», тет.

Кун пек ăçтиçука ĕнтĕ пирĕн рыцарь тӳррĕнехултавла хăтланнипе кăна калама пултарнă. Г-н Кривенко К. Марксăн паллă «çырăвĕнчен» («Юрид Вест.», 88 ç., 10-мĕш№) çак тĕле:—Россия «капитализмлă строй асапĕсене тӳсмесĕрех иртме» пултарать, тесе шухăшлакан Чернышевские, Маркс хăй питех те хисеплени

---

* Тĕрĕссипе, пирĕн пĕтĕм революциллĕ программăсем,—бакунистсемпе бунтарьсенчен пуçласа народниксемпе народоволецсене çитиех, ăшчикĕпе çакăн пек программăсем пулнă; вĕсен те, хресченсем пулас земски собора социалистсене ыттисенчен чылай ытларах ярĕç тесе ĕненни пĕртте юлашки вырăн йышăнса тăман вĕт.

çинчен калакан тĕле çырса илет те (Марксăн: «вăл (Чернышевский) хăй шухăшне юлашки решени май каласа пĕлтерет», тенĕ сăмахĕсем хыççăн) кавычкăсем лартса, урăхла каласан, Маркс сăмахĕсене тĕрĕс çырса илме пăрахса, хăйĕнчен çапла хушса хурать: «Эпĕ те çак шухăшсемпе *килĕшетĕп*, тет Маркс», тесе çырса хурать» (курсивĕ Кривенко г-нăн; 186 стр., 12-мĕш№).

Марксăн вара чăннипе çапла каланă: «Çавăнпа та манăн хисеплĕ критикĕн сахалтан та, эпĕ çак «вырăссен аслă ученăйĕпе критикне» хисепленинчен,—эпĕ çак ыйту тĕлĕшпе унăн шухăшĕпе килĕшетĕп текен заключени тума сăлтав пулнă пекех, манăн вырăссен «беллетрисчĕпе» тата панслависчĕпе[22] тавлашса калаçнинчен,—эпĕ çак ыйту тĕлĕшпе унăн шухăшĕсене йышăнмастăп, текен урăхла вывод тума сăлтав пулнă». («Ю. В.», 88 ç., 10-мĕш№, стр. 271.)

Çапла ĕнтĕ, Маркс кунта çапла калать: г. Михайловский ун çинчен (Маркс çинчен), вăл—Россия хăйне уйрăм май аталанма пултарасси çинчен калакан идейăна хирĕç пыракан çын тесе шухăшлама пултарайман, мĕншĕн тесен вăл çак идейăшăн тăракан çынсене те хисепленĕ, тет;— г. Кривенко вара:—çак хăйне уйрăм май аталанасси çинчен калакан шухăша Маркс «йышăннă» тесе, пачах урăхла ăнлантарать. Куçа кĕретĕн суйни. Марксăн çак илсе кăтартнă сăмахĕсем г. Кривенко ыйту çине ответ парассинчен пăрăннине уççăнах кăтартаççĕ: «г. Михайловский, вырăссен пĕтĕм ĕçĕсем çинчен эпĕ мĕнле шухăшлани тĕлĕшпе вывод тăвас тесен, манăн икĕ хире-хирĕçле сăмахсенчен хуть хăшне те илме пултарнă, урăхла каласан, кунпа та, тепринпе те хăй выводне сăлтавлама пултарайман», тет Маркс. Вара ку сăмахĕсене тĕрлĕрен май ăнланмалла ан пултăр тесе, Маркс çав «çырăвĕнчех», унăн теорийĕпе Россия тĕлĕшпе мĕнле усă курма май пурри çине тӳррĕнех ответ парать. Ку ответ Маркс ыйту çине тивĕçлипе ответ парассинчен, ыйтăва татса пама пултаракан пĕртен-пĕр вырăс сведенийĕсене тĕпчессинчен пăрăннине уйрăмах уççăн кăтартать: «Россия, Хĕвеланăç Европăри нацисем пекех капитализмлă наци пулма тăрăшать пулсан,—тесе ответлет вăл,—юлашки çулсем хушшинче вара ку тĕлĕшпе вăл хăйне нумай сиен турĕ,—вăл ку тĕллев патне, малтан хăйĕн хресченсен чылай йышлă пайне пролетарисем туса хумасăр çитме пултараймасть».

Ку ĕнтĕ йăлтах уççăн курăнмалла пек; ыйту шăпах çапла тăнă: Россия капитализмлă наци пулма тăрăшать-и, унăн хресченĕсем юхăнса пыни—капитализмлă йĕркесем, капитализмлă пролетариат пулса пынă процесс пур-и, çук-и; Маркс çапла калать вара: пулма тăрăшать «пулсассăн», ăна тăвас тесен хресченсен чылай йышлă пайне пролетарисем туса хумалла, тет. Тепĕр тĕрлĕ каласан, Маркс теорийĕ вăл—пĕр-пĕр çĕршывсен хуçалăх йĕркисем эволюциленсе пынине тĕпчесе ăнлантарнинче пулса тăрать; вăл теорипе Россия тĕлĕшĕпе **«усă курни»** вара—**материализмлă** метод тата **теориллĕ** политикăллă экономи хатĕрленĕ меслетсемпе усă курса, вырăссен производствăллă отношенийĕ-

сене тата вёсен эволюцине **тӗпчесе пӗлни** кӑна пулма пултарать*.

Çӗнӗ методологиллӗ тата политико-экономиллӗ теорие туса хатӗрлени вӑл обществӑллӑ наука çав тери пысӑккӑн малалла кайнине, социализм малалла çав тери пысӑккӑн ярса пуснине пӗлтернӗ, çавӑнпа та «Капитал» ятлӑ кӗнеке тухнӑ хыççӑнах вырӑс социалисчӗсемшӗн «капитализм кунçулӗ Российӑра мӗнле пуласси» çинчен тӑракан ыйту—тӗп теориллӗ ыйту пулса тӑнӑ; çак ыйту тавра чи хӗрӳллӗн сӳтсе-явнисем пулнӑ, программӑн чи кирлӗ положенийӗсене çак ыйтӑва май татса панӑ. Тата çакӑ питӗ паллӑ: Российӑра капитализм аталанса пынине ӗненекен, тата çак ыйтӑва вырӑссен экономикӑллӑ пурӑнӑçне тӗпчесе пӗлнӗ сведенисем çине таянса татса паракан социалистсен уйрӑм ушкӑнӗ пулса тӑнӑ хыççӑн (10 çул каярах) вӗсене никам та, çав пӗтӗмӗшле методологиллӗ тата теориллӗ никӗссем çинех тӑрса, çав сведенисенех урӑхла май ӑнлантарса, тӳррӗн, тивӗçлипе критиклекен пулман.

«Халӑх тусӗсем» те, марксистсене хирӗç пысӑк походах туса, çавӑн пекех хӑйсен шухӑшне фактсене тӗпченӗ тӑрӑх сӑлтавламаççӗ. Пӗрремӗш статьяра, эпир куртӑмӑр ӗнтӗ, вӗсем пуш фразасем каланипех иртсе каяççӗ. Çакӑнпа пӗрлех тата г. Михайловский, марксистсем хушшинче пӗршухӑшлӑх çук, вӗсем пӗр-пӗринпе калаçса татӑлман, тесе хӑйӗн çивӗч ӑсӗпе мухтанмасӑр иртме пултараймасть. Вара «пирӗн паллӑ» Н. К. Михайловский, хӑйӗн «чӑн» тата «чӑн мар» марксистсем çинчен каланӑ çивӗч сӑмахӗ пирки хӗпӗртенипе, каçса кайсах кулать. Марксистсем хушшинче пӗршухӑшлӑх çукки, вӑл тӗрӗс. Анчах ку факта г. Михайловский, пӗрремӗшӗнчен, тӗрӗс мар çутатса парать, иккӗмӗшӗнчен вара, вӑл факт вырӑс социал-демократийӗн вӑйсӑрлӑхне мар, шӑпах ун вӑйне, вӑл пурӑнма пултарассине кӑтартса парать. Ӗç акӑ мӗнре: юлашки вӑхӑт уйрӑмах, социалистсем социал-демократла шухӑшсем патне тӗрлӗрен çулйӗрпе пынипе палӑрса тӑрать; çавӑнпа та: Россия вӑл крепостной укладран ӳссе тухнӑ буржуаллӑ общество пулса тӑрать, унӑн политикӑллӑ форми—класлӑ государство, ӗççыннине эксплуатацилени пӗтермелли пӗртен-пӗр çул вӑл—пролетариатӑн класлӑ кӗрешӗвӗ пулса тӑрать, тенӗ чи пысӑк тӗп положенипе иккӗленмесӗрех килӗшсе,—вӗсем нумай уйрӑм вак ыйтусем тӑрӑх—вырӑс пурӑнӑçӗнчи вӑл е ку явленисене сӑлтавлас меслетсем тӗлӗшпе те, вӗсене туллин ӑнлантарса парас тӗлӗшпе те пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑраççӗ. Çавӑнпа та эпӗ г. Михайловскине, хам шухӑша малалла каличченех, çакӑн пек сӑмахсемпе савӑнтарма пултаратӑп: социал-демократсем хушшинче, сӑмахран, çак кӗске заметкӑсенче тапратнӑ ыйтусем пирки те—хресчен реформи пирки, хресчен çӗрӗçӗпе кустарнӑй промысласен экономики пир-

* Тепӗр хут калатӑп: «Коммунистсен Манифесчӗ», «Нищета философии» тата «Капитал» ятлӑ кӗнекесене кам вуланӑ, вӗсене пурне те çак вывод паллӑ мар пулма пултараймасть, пӗр г. Михайловские кӑна çакна хӑйне уйрӑмӑн ӑнлантарса памалла пулчӗ.

ки, аренда т. ыт. пирки те, халь тин кăтартса панă, пур социал-демократсемшĕн пĕр пулса тăракан тĕп положенисенче те тĕрлĕрен шухăшсем пур. Çакăн йышши «аслă чăнлăхсене»: хресчен реформи Россия валли тĕрĕс аталанас лăпкă çулсем уçса пама *пултарнă* пулĕччĕ,—государство капиталистсен интересĕсен представителĕсене мар, «халăх тусĕсене» чĕнме *пултарнă* пулĕччĕ,—община çĕр ĕçне, унпа пĕрле обрабатывающи промышленноçа та, пĕрлештерме *пултарнă* пулĕччĕ, кустарь çав промышленноçран шултăра производство туса хума *пултарĕччĕ,—халăх аренди халăх* хуçалăхне пулăшса тăрĕччĕ текен «чăнлăхсене» йышăннипе лăпланакан çынсен пĕршухăшлăхĕ вырăнне,—çапла куççулне юхтаракан ырă кăмăллă пĕршухăшлăх вырăнне—Российăн, паллă производствăллă отношенисен системин пурăнăçри, *чăн-чăн* экономикăллă организацине тĕпчесе ăнланма тăрăшакан çынсен, унăн экономики *чăннипе* епле эволюциленсе пынине, унăн политикăллă тата мĕнпур ытти надстройкисене тĕпчесе ăнланма тăрăшакан çынсен разногласийĕ пулса тăчĕ.

Çакăн пек ĕç вара—ĕçлекенсене тĕрлĕрен енчен, политика тĕлĕшпе пĕр шухăшлă пулса ĕçлессине иккĕленми палăртакан положени патне илсе пырса, çавăнпа вара хăйне йышăнакансене пурне те **социал-демократ** ятне илме право парса обязанность хуракан шухăш патне илсе пырса,—питĕ нумай уйрăм ыйтусем тăрăх (вĕсене тĕрлĕрен май татса параççĕ) хирĕçле шухăшсем валли вырăн питĕ нумай пулсан, çакă вара паллах, вырăс социал-демократийĕн вăйне тата вăл пурăнса аталанма пултарассине кăна кăтартса тăрать.*

Çакăнпа пĕрлех ку ĕç условийĕсем çав тери начар, вĕсенчен начартарах условисене шухăшласа илме те май çук: уйрăм ĕçсене пĕрлештерсе тăракан орган çук та, пулма та пултараймасть; уйрăм çынсен хушшинче çыхăну тытасси пирĕн полицилле условисенче питĕ йывăр. Çавăнпа та, социал-демократсем вак-тĕвек ыйтусем пирки пĕр-пĕринпе тивĕçлĕн калаçса татăлса пĕр шухăша килейменнине, хăшпĕр чухне пĕр-пĕрне хирĕç калаçнине ăнланма питĕ çăмăл...

Тĕрĕс мар-им, çакă чăн та епле кулăшла-çке?

Г-н Кривенко социал-демократсене хирĕç «тавлашнинче», вăл темле «неомарксистсем» çинчен калаçни тĕлĕнтерме пултарать. Хăшпĕр вулакан: социал-демократсем хушшинче раскол йышши япала пулнă пулас, ĕлĕкхи социал-демократсенчен «неомарксист-

* Сăлтавĕ кунта çăмăл, вăл—çак ыйтусене халиччен *нимĕнле майлă та татса паман* пирки. Чăн та, сăмахран, аренда çинчен тăракан ыйтăва—«халăх аренди халăх хуçалăхне пулăшать тенипе кăна, е помещик çĕрĕсене хресчен инвентарĕпе ĕçлесе тăракан йĕркене çапла сăнласа кăтартнипе: «хресчен помещикрен вăйлăрах пулни курăнчĕ», «помещик хăйĕн никама пăхăнманлăхне тĕреклĕ пурăнакан хресчене уса тăвасшăн пĕтерчĕ»; «хресчен помещик аллинчен шултăра производствăна тăпăлтарса илчĕ»; «çĕрĕç культурин формишĕн пыракан кĕрешӳре халăх çĕнтерсе пырать», тесе кăтартнисемпе кăна аренда ыйтуне татнă тесе калама юрамасть-çке-ха ĕнтĕ. Ку вăл—«пирĕн паллă» г. В. В. хăйĕн «Судьбы капитализма» ятлă кĕнекинче çапла либераллă пуш халап çапать.

сем» уйăрăлса тухнă тесе шухăшлама пултарать.—Нимĕн те ун йышши çук. Никам та, ниçта та, нихăçан та вырăс социал-демократсен теорийĕпе программине халăх умĕнче марксизмшăн критиклесе, урăх марксизма хӳтĕлесе тухса калаçман. Ĕç акă мĕнре: Кривенкопа Михайловский г-сем марксистсем çинчен салонсенчи тĕрлĕрен суя сăмахсене итлесе тултарнă та, хăйсен либераллă пушă ăшчиккине марксизмпа хупласа пытаракан тĕрлĕ либералсем çине пăхса киленнĕ те, вара çакăн пек багажпа, хăйсене тивĕç çивĕч ăслăн та виçеллĕн марксистсене «критиклеме» тапратнă. Çавăнпа та çак «критикăран» пĕр вĕçĕмсĕр тĕлĕнтермĕш, е ирсĕр хăтланнисем те пулса тăнинчен ним тĕлĕнмелли те çук.

«Вĕсне çитиех пĕр çулпа пырас тесен, ку ыйту çине («капитализмлă промышленноçа аталантарма тăрăшмалла мар-ши» текен ыйту çине) «тăрăшмалла» тесе ответ памалла, вара хресченсен çĕрне укçалла илсе пухассинчен те, лавкасемпе хупахсем уçассинчен те именсе тăмалла мар, думăра йышлă трактир хуçисем ăнăçлăхсем тунишĕн савăнмалла, хресченсен тыррине илекен тата йышлăрах скупщиксене пулăшса тăмалла»,—тесе çырать г. Кривенко.

Чăн та, ку пĕтĕмĕшпех кулăшла. Çакăн йышши «халăх тусĕсене» —Российăра ĕççыннисене эксплуатацилени пур çĕрте те хăйĕн ăшчикĕпе капитализмлă эксплуатаци пулса тăрать, хуçалăхĕсене тĕреклĕ тытса тăракан ялти мужиксене тата скупщиксене политикăллă-экономикăллă çав-çав паллăсем тăрăх капитализм представителĕсен шутне кĕртмелле, ку паллăсем вĕсем—хресченсем сийленни буржуаллă характерлă пулса пынине кăтартаççĕ, тесе каласа пăхăр-ха,—вăл çавăнтах кăшкăрса çуйăхма пикенет, ăна ĕненме май çук, суя тесе калать, Хĕвеланăç Европăри формулăсемпе абстрактлă схемăсене суккăрланса йышăнни çинчен ахăрашма тытăнать (çакăнпа пĕрлех хăй «суя» сăлтавланин чăн-чăн содержанине пĕр тĕкĕнмесĕр иртме тăрăшать). Анчах та, хаяр марксистсем хăйсемпе пĕрле илсе килекен «хăрушлăхсене» сăнласа кăтартас пулсан вара,—ун чухне хисеплĕ наукăпа таса идеалсене аяккалла тĕксе хăварма та юрать, ун чухне вара хресчен тыррипе хресчен çĕрĕсене илсе пухакан скупщиксене—чăнахах та, ют çын япалисемпе усă курма çăмăлах «килĕшекен» çынсем кăна мар, капитализмăн чăн-чăн представителĕсем тесе йышăнма та юрать.

Çак «халăх тусне»: вырăс буржуазийĕ, производство хатĕрĕсене пĕр хай аллинче çеç концентрацилесе тăнă пирки, халăх ĕçне халĕ пур çĕрте те хăй аллинче тытса тăрать кăна мар ĕнтĕ, çитменнине тата правительствăна те хĕссе тăрса, унăн политикине ирĕксĕрех буржуаллă характерлă туса, палăртса тăрать тесе, ăнлантарса пама тăрăшса пăхăр-ха,—вăл пачах урса кайса, пирĕн правительство пурне те тума пултарни çинчен, «халăх тусĕсем» вырăнне хăй ăнланайман пирки тата телейсĕр ăнсăртлăх пирки буржуази шавах капитализм интересĕсен представителĕсене «чĕнни» çинчен, капитализма буржуази юри аталантарса пыни çинчен кăшкăраша пуçлать... Сисмен-хутран вара хăйсенех—

думӑри трактир хуҫисене, урӑхла каласан, ҫак правительствӑн тӗрлӗ элеменчӗсенчен пӗрине, классем тулашӗнче тӑрать тенине, шӑпах капитализм представителӗсен шутне кӗртсе йышӑнмалла пулать. Анчах та, господасем, чӑн та вара пирӗн Российӑра капитализм интересӗсене пӗр «дума» кӑна тата пӗр «трактир хуҫисем» кӑна кӑтартса тӑраҫҫӗ ши?..

Ирсӗр хӑтланнисем ҫинчен калас пулсан вара, вӗсене эпир г. Михайловский ҫырнисенче ытлашшипех ҫителӗклӗ куртӑмӑр, халӗ тата г. Кривенко ҫырнисенче те каллех тӗл пулатпӑр, хӑй курайман социал-демократизма пӗтересшӗн пулса, вӑл, сӑмахран, ҫапла каласа кӑтартать: «хӑшпӗрисем заводсене (пуринчен ытла техникӑллӑ ӗҫре е конторӑра лайӑх вырӑнсем пулнӑ чухне) хӑйсем ӗҫлеме кайнине, пӗртен-пӗр—капитализм аталануне васкатас идейӑпа кӑна сӑлтавлаҫҫӗ», тет. Паллах, кун йышши пачах та йӗркесӗр япаласене хирӗҫ тавӑрма та кирлӗ мар. Кунта точка кӑна лартма пулать.

Малалла та, господасем, ҫав майлах ӗҫлӗр, хӑюллӑн ӗҫлӗр! Император правительстви—тин ҫеҫ сиртен илтнӗ тӑрӑх, халӑха пӗтӗмӗшпех юхӑнассинчен ҫӑлас шутпа, тӗрлӗрен майсем (пӑсӑкскерсем пулин те) йышӑннӑскер, сире, ирсӗр хӑтланнипе айванлӑхӑра тӑрӑ шыв ҫине кӑларса намӑслантарассинчен ҫӑлма, тӗрлӗ майсем, пӗртте пӑсӑк мар майсем ӗнтӗ йышӑнатех. «Культурлӑ общество», пулӑ шӑнӑрӗ таврашӗнчен пӗҫернӗ кукӑль ҫинипе симӗс сӗтел хушшине ларас хушӑра, кӗҫӗн шӑллӗ ҫинчен ӗлӗкхи пекех ухатан калаҫса, ун пурӑнӑҫне «лайӑхлатас» пирки тӗрлӗ либераллӑ проектсем шухӑшла-шухӑшла каларӗ; вӑл общество представителӗсем, хӑйсем земски начальниксен вырӑнне е хресчен кӗсъине асӑрхаса тӑракан мӗнле те пулин урӑх вырӑнна йышӑнса, вӗсем гражданcен потребноҫӗсемпе обязанноҫӗсене пурӑнӑҫа кирлӗ пек тивӗҫлӗн кӗртсе пыни ҫинчен кӑмӑллӑнах сиртен илтсе пӗлӗҫ. Ӗҫлӗрех малалла. Сире канлӗ пурӑнӑҫ кӑна мар пулӗ, ырлӗҫ те мухтӗҫ те сире... Буренин господасен чӗлхисемпе.

* * *

Заключени тӑвас май, вулакансен ӑсне пӗринне кӑна мар килнӗ ыйту ҫине ответ пани ытлашши пулман пек туйӑнать. Ҫакӑн йышши господасемпе ҫав тери нумай калаҫса тӑма кирлӗ пулнӑ-ши? Ҫак, цензура хӳтӗлесе тӑракан, хӑйсем полемика тенӗ либераллӑ пылчӑка хирӗҫ тивӗҫлӗ ответ пама кирлӗ пулнӑ-ши?

Мана—кирлӗ пулнӑ пек туйӑнать, анчах вӗсемшӗн мар, вырӑс социалистсем хӑйсене валли усӑллӑ урок илме пултараҫҫӗ, илмелле те тенӗ шутпа. Ку поход демократизмпа социализм иккӗшӗ пӗрле татса уйӑрайми ҫирӗп ҫыхӑнса тӑнӑ вӑхӑт (сӑмахран, Чернышевский саманинчи пекки) Российӑри обществӑллӑ аталанушӑн ӗмӗрлӗхех каяла тавӑрайми пӗтнине чи уҫҫӑн, чи ӗненмелле кӑтартса пачӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫакӑ, вырӑс социалисчӗсем хушшинче хӑшпӗр тӗлте халиччен тытӑнса тӑрса, вӗсен теорийӗсемшӗн те, практикишӗн те питӗ сиенлӗ пулса тӑракан идея валли—Российӑра, имӗш, демократсемпе социалистсен

идейисем хушшинче качествӑллӑ тарӑн уйрӑмлӑх ҫук текенскер валли пачах ниепле никӗс те ҫук.

Йӑлтах урӑхла: ку идейӑсем хушшинче вӗҫӗ-хӗррисӗр тарӑн ҫыран выртать, ҫавӑнпа та вырӑс социалисчӗсен ҫавна демократсен идейисенчен **мӗн пулсан та пӗтӗмпех, вӗҫне ҫитиех уйӑрӑлмалла пулнине, уйӑрӑлни питех те кирлине** тахҫанах ӑнланмалла пулнӑ.

Сӑнаса пӑхӑр-ха, чӑн та, кам пулнӑ вӑл, ҫак вырӑс демократӗ, ҫав идейӑсене ҫуратнӑ вӑхӑтра, тата халӗ мӗн пулса тӑнӑ. «Халӑх тусӗсем» пире ҫавӑн пек параллель тумашкӑн ҫителӗклӗ материал параҫҫӗ.

Ку тӗлӗшрен г. Кривенко г. Струвене хирӗҫ хӑтланса илни питех те интереснӑ. Г-н Струве нимӗҫсен пӗр изданийӗнче г. Ник.—онӑн утопизмне хирӗҫ ҫырнӑ пулнӑ (унӑн—«К вопросу о капиталистическом развитии России» ятлӑ заметки Sozialpolitisches Centralblatt,[23] III, ятлӑ журналӑн 1-мӗш №-че 1893 ҫ. октябрӗн 2-мӗшӗнче пичетленнӗ). Г-н Кривенко г. Струвене ак ҫакӑншӑн тапӑнать: лешӗ общинӑшӑн тата ят ҫӗрӗшӗн тӑракан ҫынсен идейисене «нацилле социализм» шутне (ун сӑмахӗ тӑрӑх—«чистиех утопиллӗ ӑшчиклӗскер» шутне) кӗртет пулать. Ҫапла, имӗш социализмшӑн тӑнӑшӑн ҫав тери хӑрушшӑн айӑплани, хисеплӗ автора уртарсах ярать:

«Общинӑшӑн тата ят ҫӗрӗшӗн тӑракансем (Герценран, Чернышевскирен тата народниксенчен пуҫне) чӑнахах та урӑх никам та пулман-им,—тесе кӑшкӑрса пӑрахать вӑл.—Хресченсем ҫинчен положени ҫыракансем вара, общинӑна тата хресченсем хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен хӑйсен вӑйӗпе хӑйсем пурӑнассине реформа никӗсне хураканскерсем, пирӗн историе тата кучухнехи йӑлана тӗпчесе, ҫак никӗссемшӗн тӑракансем вара тата ҫак никӗссемшӗнех тӑракан пирӗн тӗплӗ те йӗркеллӗ пичет пӗтӗмӗшпех тенӗ пек,—чӑн та ҫаксем пурте «нациллӗ социализм» текен ултав айне пулнӑ-им вара?»

Лӑпланӑрах, хисеплӗ г. «халӑх тусӗ»! Эсир, сире социализмшӑн тӑрать тесе хӑрушшӑн айӑпласран ҫав тери хӑраса ӳксе, Струве г-нӑн «пӗчӗк статьине» тимлӗн вулама тӑрӑшман иккен. Чӑн та ара, «общинӑшӑн тата ят ҫӗрӗшӗн» тӑракансене социализмшӑн айӑплани—мӗн тери тивӗҫсӗр кӳрентерни пулӗччӗ! Ҫырлахсамӑр ара, мӗн социализмӗ пултӑр ӗнтӗ унта? Социализм тесе ӗҫҫыннине эксплуатациленине хирӗҫ протеслесе кӗрешнине, ҫак эксплуатацие нимӗн юлми пӗтересшӗн кӗрешнине калаҫҫӗ вӗт, «ят ҫӗрӗшӗн тӑни вара—хресченсене хӑйсен аллинче пулнӑ пӗтӗм ҫӗрне выкуп укҫи тӳлесе илтересшӗн тӑнине пӗлтерет. Выкупшӑн мар, реформӑччен хресченсен аллинче пулнӑ пӗтӗм ҫӗре хресченсенче хӑйсенчех ним тӳлевсӗрех хӑварасшӑн тӑрас пулсассӑн та,—ун чухне те-ха социализмӑн тӗсӗ те пулас ҫук-ха кунта, меншӗн тесен шӑпах ҫакӑ, ҫӗр хресченсен аллинче харпӑрлӑх пулса тӑни (феодаллӑ тапхӑр тӑршшӗнче пулса пынӑскер) Хӗвеланӑҫӗнче пур ҫӗрте те, пирӗн Российӑри пе-

кех,*—буржуаллă обществăн никĕсĕ пулнă. «Общинăшăн тăни»—урăхла каласан, çĕр яланхи пекех валеçĕнсе тăрас ĕçе полици хутшăнассине хирĕç протеслени,—мĕн социализмĕ пултăр ĕнтĕ кунта, çак община ăшĕнче ĕççыннине эксплуатацилени питех те лайăх çуралса аталанма пултарнине пурте пĕлсе тăраççĕ пулсан? Ку ĕнтĕ «социализм» тенĕ сăмаха майĕ çук тăсса сарни пулать вĕт: тен, г. Победоносцева та социалистсен шутне кĕртмелле пулĕ!

Г-н Струве пĕртте çав тери хăрушă тивĕççĕрлĕх тумасть. Вăл *народниксен* «нациллĕ социализмĕ утопиллĕ» пулни çинчен калать, народниксен шутне вăл кама кĕртни вара, Плехановăн «Наши разногласия» ятлă кĕнекине народниксене хирĕç тавлашни пулать тенинчен те курăнать. Нимĕн иккĕленмелли те çук. Плеханов социалистсене хирĕç, вырăссен «серьезнăй та йĕркеллĕ» пичечĕпе нихăш енчен те пĕр мар çынсене хирĕç тавлашнă. Çавăнпа та, г. Кривенкон народниксем çинчен каланине хăй çине илме нимĕнле право та пулман. Вăл хăй тытса пыракан çулйĕр çинчен г. Струве мĕнле шухăшланине питех те пĕлесшĕн пулнă пулсассăн вара,—тĕлĕнетĕп эпĕ: мĕншĕн вăл г. Струве статьинчи çак тĕле асăрхаса, *«Р. Богатство» валли куçарса паман* пулать-ха:

«Капитализм малалла аталанса пынăçемĕн, тин çеç кăтартса панă миросозерцани (народникла) хăй никĕсне çухатса пымалла»,—тет автор.—Вăл, е килĕшӳсем шыракан тата килĕшӳсем тума кăна юрăхлă реформăсен чылай шупка çулйĕрĕ пулса тăрĕ**, ун пек пулма пултарассине шанма май паракан пуçламăшсем тахçантанпах пур ĕнтĕ, е вăл чăннипех аталанасси пурпĕрех пулмаллине йышăнса, çавăнтан пурпĕрех тухса тăракан теориллĕ тата практикăллă выводне тăвĕ,—тепĕр тĕрлĕ каласан, утопиллĕ пулма пăрахĕ».

Килĕшӳсем кăна тума пултаракан çулйĕре çуратса тăракан вырăнсем пирĕн ăçтине г. Кривенко ăнланса илеймест пулсассăн, эпĕ ăна «Русское Богатство» çине, çак журналăн теориллĕ воззренийĕсем çине—Россия капитализмлă аталанса пынине ĕненнине народниксен вĕрентĕвĕн ланчашкисемпе çыпăçтарса пĕрлештерме тăрăшаканскерсем çине тата вак производительсен хуçалăхне капитализмлă йĕркесен хальхи никĕсĕ çинче тăрса лайăхлатса çĕклес шутпа йышăннă политикăллă программи çине çавăрăнса пăхма сĕнетĕп***.

* Çавна кăтартаканни вăл—хресченсем сийленсе пыни.

** Ziemlich blasse kompromissfähige und kompromisssüchtige Reformrichtung—вырăсла кăна: культурнический оппортунизм тесе те калама юрать пулас.

*** Г-н Кривенко г. Струвене хирĕç çапăçма хăтланни пур енчен те ытла та мĕскĕн пек туйăнать. Ку—хирĕç мĕн те пулин тĕплĕн калама тăрăшса темле ача пек вăйсăр айкашни тата ача пекех çилленни кăна. Сăмахран, г. Струве г. Ник.—он «утопист», тет. Çакăнпа пĕрлех, вăл ăна мĕншĕн çапла каланине те пачах уççăн кăтартса парать: 1) мĕншĕн тесен вăл «Российăн чăн-чăн аталануне» тĕпчесе хисепе илесшĕн мар, 2) мĕншĕн тесен вăл, пирĕн государствăн класслă характерне ăнланмасăр, «общество» тата «государство» çинчен калаçма тăрăшать, тет. Мĕн калама пултарать-ха çакна хирĕç г. Кривенко? Пирĕн аталану чăнахах капитализмлине йышăнмасăр тăма пулта-

Народничество мещанла оппортунизм пулса тăни—çакă вăл пирĕн обществăллă пурăнăçăн юлашки вăхăтри чи паллă, характерлă явленийĕсенчен пĕри.

Чăн та, эпир «Р. Б-во» программин ăшчиккине илсе пăхсассăн, çак мĕнпур çĕнĕ çĕре куçарассисемпе аренда ĕçĕсене йĕркелессисене, çак мĕнпур йӳнĕ кредитсене, музейсене, складсене, техникăна лайăхлатассисене, артельсене тата ака-сухана пĕрлешсе тăвассине пурне те илсессĕн,—вара эпир çак программа пĕтĕм «серьезнăй та йĕркеллĕ пичетре», урăхла каласан, крепостниксен органĕсен е рептилисен шутне кĕмен пĕтĕм либераллă пичетре, чăнахах та питĕ вăйлăн саралнине уççăнах курăпăр. Çак мĕнпур ĕçсем питех те кирли çинчен, усăлли çинчен, «сиенсĕрри» çинчен калакан идея пĕтĕм интеллигенци хушшине питĕ тарăн тымар ярса тем тери вăйлăн саралнă: ăна эпир провинцири листоксемпе хаçатсенче те, земствăсен пур тĕпчевĕсенче, сборникĕсенче, çырса пĕлтернисенче т. ыт. те, т. ыт. те тĕл пулма пултаратпăр. Паллах, народничество тесе çакна шутлас пулсассăн,—ăнăçлăх пурри тата вăл пит пысăкки курăнать.

Анчах ку вăл (сăмаха кивĕ, хăнăхнă ăнланупа калас пулсан) пĕртте народничество мар вĕт, народничествăна ирсĕрлентерсе кăна, пирĕн либерализма хирĕç çивĕччĕн оппозициллĕ пулнă социально-революциллĕ народничествăна—çак либерализмпа хутшăнса тăракан, вак буржуази интересĕсене кăна палăртса тăракан культурникле оппортунизм туса хунипе çак ăнăçлăхсем тата идея çапла тем тери вăйлăн сарăлни пулма пултарнă вĕт.

Юлашки сăмахсем тĕрĕссине ĕненес тесессĕн, хресченсемпе кустарьсем сийленсе пыни çинчен калакан çӳлте асăннă картинăсене аса илни те çитет,—ку картинăсем вара пĕртте мĕнле те пулин уйрăм е çĕнĕ фактсене кăтартмаççĕ, вĕсем просто—хайхи «харампырсен» тата «батраксен» «шкулне» (вĕсем пирĕн ялта пуррине пире хирĕç тăракан çынсем те йышăнаççĕ) политикăллă-экономикăллă чĕлхепе каласа кăтартма тăрăшни кăна пулса тăраççĕ. Паллах, «народникле» меслетсем вак буржуазине кăна вăйлатма пултараççĕ; е тата (артельсем, ака-сухана пĕрлешсе тă-

рать-и вăл? вăл аталану мĕнле те пулин урăхла, пирĕн государство—класлă мар, тесе калать-и вăл? Çук, вăл пуринчен ытла—ку ыйтусенчен пачах аякран иртсе кайма тата хăех шухăшласа кăларнă темле «шаблонсене» хирĕç кулăшла çиленсе вăрçма юратать. Тата тепĕр тĕслĕх. Класс кĕрешӳне ăнланманнишĕн айăпланисĕр пуçне, г. Струве г. Ник.—она хăйĕн «таса экономикăллă фактсен» облаçĕнчи теорийĕнче пысăк йăнăшсем тунишĕн те ӳпкелет. Ыттипе пĕрлех вăл çакна кăтартса парать: çĕрĕçĕпе пурăнман халăх пирĕн ытлашши нумаях марри çинчен каланă май, г. Ник.—он «Россия капитализмлă аталанни шăпах çак уйрăмлăха—80%-па (Российăри ялти халăх хисепĕ) 44% (Америкăри ял халăхĕн хисепĕ) хушшинчи уйрăмлăха пĕтерсе пырассине, унăн историллĕ ролĕ шăпах ĕнтĕ çакă пулнине ăнлапмасть, тет. Г-н Кривенко, пĕрремĕшĕнчен, ку вырăнта, просто капитализмăн ялта пурăнакан халăх йышне чакарса пырас тенденцийĕ çинчен каланă пулсассăн та, «пирĕн» (?) хресченсене çĕрсĕр тăратса хăварас задача çинчен каланă тесе суйса кăтартать тата, иккĕмĕшĕнчен, кирли çинчен (ял халăхĕн йышне чакармасăр аталанакан капитализм пулма пултарни çинчен) пĕр сăмах та каламасăр, «начетчиксем» çинчен тĕрлĕрен ăçтиçук лăпăртатма пуçлать т. ыт. II-мĕш Приложенине вула (çак изданийĕн 161 стр. *Ред.*).

васси) чи пĕчĕк, вăхăтлăх, тĕп сăлтавĕсене тĕкĕнмен меслет пулса тăма, мĕскĕн опытсем кăна пулса юлма пултараççĕ; вĕсене Европăри либераллă буржуази шăпах çак простой сăлтав пирки, «шкулне» хăйне вĕсем нимĕн чухлĕ те тĕкĕнсе тапратма пултарайман пирки пур çĕрте те çав тери ачашласа ĕрчетсе сарма тăрăшать те ĕнтĕ. Çак сăлтав пиркиех Ермоловпа Витте господасем те ун йышши прогрессене пĕртте хирĕç кĕрешмеççĕ. Пачах урăхла. Кăмăл тăвăрсам, господасем! Вĕсем сире «опытсем тума» укçа та парĕç—«интеллигенцие» революциллĕ ĕçрен (антагонизма уйрăмах палăртса кăтартассинчен, ун çинчен пролетариата ăнлантарса парассинчен, çак антагонизма политикăллă тӳррĕмех кĕрешес çулйĕр çине илсе тухма тăрăшассинчен) антагонизма çавăн майлă саплăксем лартса юсасси енне, килĕштерсе пĕрлештересси енне пăрса яма кăна май пултăр. Кăмăл тăвăрсам!

Народничествăна çапла улшăнтарса çитернĕ процесс çинчен кăштах чарăнса тăрар. Хăй çуралса тухнă чухнех, малтанласа, ку теори чылаях йĕркеллĕ пулнă; халăх пурăнăçĕ хăйне май уйрăм укладлă тесе шухăшланă пирки, вăл «общинăллă» хресченĕн коммунизмлă сисĕмĕсем пуррине ĕненнĕ, çавăнпа та хресченсем социализмшăн тӳррĕнех кĕрешекенсем пулса тăраççĕ тесе шутланă,—анчах ăна, пĕр енчен, теори тĕлĕшĕнчен тĕпчесе пĕлни, вырăс пурăнăçĕнчи фактсемпе çирĕплетсе пани çитмен, тепĕр енчен тата—хресченĕн çакăн пек пахалăх пур текен шухăш çинче никĕсленсе тăракан политикăллă программăна пурăнăçа кĕртсе пырас опыт çителĕклĕ пулман.

Çавăнпа та çак теори аталанăвĕ çакă икĕ çулйĕрпе, теори енĕпе тата практика енĕпе кайнă та. Теориллĕ ĕç, пуринчен ытла çĕре алăра *тытса тăни* коммунизма çуратма пултарать тесе шухăшланă формине тĕпчесе пĕлес енĕпе пынă; ку ĕç вара нумай фактсене тĕрлĕрен енчен çутатакан питĕ пуян материал пухса панă. Анчах та ку материал, пуринчен ытла çĕре мĕнле йĕркепе алăра *тытса тăнин* формине çутатаканскер, тĕпчекенсенчен ял *экономикине* йăлтах хупласа хунă. Çак япала ак çак сăлтавсем пирки пушшех те çăмăллăнах пулнă: пĕрремĕшĕнчен, тĕпчекенсен, обществăллă наукăри метод тĕлĕшĕпе, производствăллă отношенисене уйăрса илсе, вĕсене уйрăмăн тĕпчесе вĕренме кирлине ăнлантарса паракан метод тĕлĕшпе çирĕп теори пулман пирки; иккĕмĕшĕнчен вара, фактсене кăтартакан материал, хресченсен хальхи чи çывăх нушисене тата хресченсен хуçалăхне пусăрăнтарса тăракан чи çывăх инкексене тӳррĕнех, уççăнах çутатса тăпă. Çавăнпа та тĕпчекенсем пуринчен малтан хресченсен çак инкекĕсене, çĕрсем сахаллине, тӳлевĕсем пысăккине, правасăрлăхне, пусмăрланнине тата хăюсăрланнине тĕпче пуçланă. Çакна пурне те çав тери пуян материал тăрăх, çав тери тĕпĕ-йĕрĕпех тĕпчесе, çутатса, ăнлантарса панă пулнă, çавăнпа, паллах, пирĕн государство класлă государство пулсассăн унăн политикине пуçпулса тăракан класcен интересĕсене кура мар, «халăх нушисене» чăнахах пĕтерес кăмăлпа илсе пынă пулсассăн,—вăл (государство) çак инкексене пĕтерме кирлине темиçе пин хут курса пĕлнĕ пулĕччĕ. Айван

тĕпчевçĕсем, обществăпа государствăна «урăхла ĕнентерме» май пур тесе шухăшлаканскерсем, хăйсем пухнă фактсен вак-тĕвекĕсенче шăлтах путса ларса, пĕр япалана—ялăн политикăллăэкономикăллă структурине асăрхайман, çак чи çывăх инкексен пусмăрĕ айне пулнă хуçалăхăн тĕп сăнне асăрхайман. Результачĕ, паллах, çапла пулса танă: çĕр сахаллипе тата ытти пирки тетертленсе пурăнакан хуçалăх интересĕсене хӳтĕлени вăл—çав хуçалăха хăй аллинче тытса тăракан класа,—общинă *ăшĕнчи* обществăллă-экономикăллă отношенисем çакăн пек пулнă чухне, çĕршыв хуçалăхĕн системи çакăн пек пулнă чухне, пĕр хăй анчах тытăнса тăма тата аталанма пултарнă класа хӳтĕлени кăна пулса тăнă.

Эксплуатацине пĕтерес ĕçре никĕс тата тĕрек пулса тăрас йĕркене тĕпчес енĕпе тунă теориллĕ ĕç, вак буржуази интересĕсене, урахла каласан, эксплуататăрлă йĕркесене шăпах хăй çинче тытса тăракан класăн интересĕсене палăртакан программа тăвасси патне илсе пынă!

Çав вăхăтрах практикăллă революциллĕ ĕç те пачах кĕтмен еннелле аталанса пынă. Мужикĕн коммунизмлă инстинкчĕсене ĕненсе тăни, паллах, социалистсене политикăна аяккалла сирсе «халăх хушшине» каймалла туса хунă. Çак программăна пурнăça кĕртес ĕçе питĕ хастар та талантлă ĕçлекенсен масси тытăннă, вара вĕсене, мужикĕн коммунизмлă инстинкчĕсем пурри çинчен шухăшлани—айванла шухăш кăна пулнине, хăйсен практики тăрах сăнаса пĕлмелле пулнă. Çавах та вĕсем, ĕç мужикре мар, правительствăра тесе йышăннă та, пĕтĕмĕшпех правительствăна хирĕç кĕрешес енĕпе ĕçле пуçланă, ку кĕрешĕве пĕр интеллигентсем кăна тата хăшпĕр чухне вĕсене çывăх тăнă *рабочисем* туса пынă, малтанласа çак кĕрешĕве социализм ячĕпе туса пынă, ку кĕрешӳре вĕсем—халăх социализмлă пурăнăç валли хатĕр, влаçа хăйсен аллине туртса илнипех политикăллă революци кăна мар, социальнăй революци те тума пулать текен теори çине таянса тăнă. Юлашки вăхăтра ку теори хăйĕн хакне пачах çухатать пулас, народоволецсем правительствăна хирĕç кĕрешни ĕнтĕ—радикалсем политикăллă ирĕклĕхшĕн кĕрешни пулса пырать.

Апла пулсан, тепĕр енчен те, çак ĕç хăйĕн пуçламăшĕпе танлаштарсан, пачах хире-хирĕçле результатсем патне илсе пынă; тепĕр енчен те—радикаллă буржуаллă демократи интересĕсене кăна палăртса тăракан программа пулса тăнă. Тĕрĕссипе каласан, ку процесс пулса пĕтмен-ха, анчах вăл йăлтах палăрса çитнĕ пулас ĕнтĕ. Народничество çапла аталанасси йăлтах законлă тата пурпĕрех пулмалла пулнă, мĕншĕн тесен вĕрентӳ никĕсĕнче—хресченсен хуçалăхĕ хăйне уйрăм укладлă (общинăллăскер) пулни çинчен калакан шăлтах мифла шухăш выртнă: пурнăçпа тĕл пулсассăнах миф тĕтĕм пек саланса кайнă та, хресченле социализмран—вак буржуаллă хресченсен интересне радикаллă-демократла палăртса хӳтĕлени пулса тăнă.

Демократ епле эволюциленсе пыни çинчен тĕслĕхсем илсе кăтартам:

«Пĕтĕм этемлĕх çынни (всечеловек) пулас вырăнне пĕтĕм Российĕпе паллă ниме юрăхсăр çын—лайăх туйăмсем сĕмленнипе çех тулса, пурăнăçра вара хăйне шеллемесĕр чăн-чăн пысăк ĕç тума та, мĕнле те пулин çирĕп япала туса хума та пултарайман çын пулас марччĕ тесе тăрăшмалла»,—тесе çырать г. Кривенко. Моралĕ питĕ лайăхскер; ăна мĕн тĕлĕшпе каланине сăнаса пăхар. «Çак юлашки шухăш тĕлĕшпе, эпĕ çакăн йышши тарăхтаракан факта пĕлетĕп,—тет малалла г. Кривенко:—Российăн кăнтăр енче чи лайăх ĕмĕтсемпе тата кĕçĕн шăлнĕне юратнипе çулăмланнă çамрăксем пурăнатчĕç, мужике вĕсем пур енчен те хисеплесе чыслатчĕç; ăна чутах чи малти вырăна лартмастчĕç, унпала пĕр кашăкпа çиетчĕç, варенисемпе те печенисемпе хăналатчĕç; япала мĕн илсессĕн, ăна ыттисенчен ытларах тӳлетчĕç, укçа—кивçен те «на чай» та, ахаль те нимсĕрех—паратчĕç, Европăри йĕркесемпе Европăри ассоциацисем çинчен кала-кала кăтартатчĕç т. ыт. те. Çав вырăнтах Шмидт ятлă пĕр çамрăк нимĕç—управляющий, е, тĕрĕсрех, просто пахчаç, нимĕнле гуманитарлă идейăсăр этем, чăн-чăн нимĕç чунĕ—ансăр та формальнăйскер (sic??!!)», пурăнатчĕ т. ыт. те. Вара, çак вырăнта çапла 3—4 çул пурăннă хыççăн, вĕсем саланнă. Унтан тата 20 çула яхăн иртнĕ те, автор çак вырăна тепĕр хут курма пырса, çакна пĕлнĕ: «г. Шмидт» (усăллă ĕçленĕшĕн пахчаç Шмидтран г. Шмидт ятлă пулса тăнăскер) хресченсене виноград ĕрчетес ĕçе вĕрентнĕ, ку ĕç вĕсене халĕ «пĕртак тупăш», çулсерен 75—100-шер тенкĕ парать, çавăнпа хресченсем ăна халичченех «ырă ятпа асăнаççĕ», анчах «мужикпе ырă кăмăллă кăна пулса, ăна валли нимĕнле кирлĕ ĕç те (!) туман господасене аса та илмеççĕ».

Шутласа пăхсассăн, çак каласа кăтартнă событисем 1869—70-çулсенче пулнă пек тухать, урăхла каласан, шăпах вырăс социалист-народникĕсем «Европăри йĕркесен» чи пысăк та чи малта тăракан уйрăмлăхне—Интернационала—Российăри пурăнăçа йышăнса кĕртме тăрăшнă вăхăт тĕлнелле пулать.

Паллах, г. Кривенко каласа кăтартни ытла та çивĕччĕн шухăшлаттарать, çавăнпа та вăл тӳрлетсе хумаваскать:

«Кунпа эпĕ, паллах, Шмидт çав господасенчен лайăхрах теместĕп,—тет вăл малалла—вăл мĕне пула çак вырăнта тата халăх хушшинче те, ытти начар енĕсем пулсассăн та, çавах та хăйĕн хыççăн палăрмаллăрах йĕр хăварни çинчен калатăп. (Лайăхрах теместĕп, палăрăмаллăрах йĕр хăварнă тетĕп—мĕнле ерунда ку?!) Темле питĕ пысăк ĕç тунă та теместĕп эпĕ, пачах урăхла, вăл тунине—чи пĕчĕк ĕç тĕслĕхĕ вырăнне, ытти ĕç май çех тунă, ăна хăйне нимĕне те тăман, анчах çапах та пурăнăçшăн питĕ кирлĕ пулнă ĕç вырăнне кăна хурса калатăп».

Тӳрлетсе пани, куратăр, питĕ иккĕлентерет, анчах ĕç тупсămĕ иккĕлентерни нче мар, акă мĕнре: автор, пĕр ĕç ăнăçсăр пулнине, тепри—ăнăçлă пулнине хирĕç тăратать пулин те, çак икĕ

йышши ĕç пĕр-пĕринчен пачах тĕрлĕ çулйĕрпе пынине асăрхамасть те, пулас. Çак сăмахсен пĕтĕм тупсăмĕ—кучухнехи демократăн сăн-сăпатне палăртас тĕлĕшпе калава çав тери кирлĕ тăвакан тупсăмĕ, шăпах çакăнта.

Çак çамрăксем, мужике «Европăри йĕркесемпе Европăри ассоциацисем» çинчен кала-кала кăтартса, паллах, ăна обществăллă пурăнăç формисене çĕнетсе улăштарас ĕçе çĕклеме хутшăнтарасшăн пулнă, пулмалла (тен, манăн çак заключени кучухне йăнăш та пулĕ, анчах вăл законлă пулнипе пурте килĕшĕç тесе шухăшлатăп эпĕ, мĕншĕн тесен вăл г. Кривенко каласа кăтартнинчен пурпĕрех тухса тăрать), ăна кучухнехи обществăна хирĕç,—тĕрлĕрен либераллă прогрессем пирки пурте савăнса хĕпĕртенипе пĕрлех, ĕçхалăхне çав тери чăтма çук киревсĕр пусмăрласа эксплуатацилениине çуратса тăракан обществăна хирĕç, социальнăй революци тума çĕклесшĕн пулнă. «Г. Шмидт» вара, чăн хуçа пулнă май, ытти хуçасене хăйсен хуçалăх ĕçĕсене лайăхрах тума кăна пулăшнă—урăх ним те мар. Ара епле майпа ĕнтĕ çак икĕ ĕçе, пачах хире-хирĕçле пыраканскерсене, танлаштарса, пĕр-пĕрин çумне тăратма юрать-ха? Вăл кам та пулин, калăпăр çак хуралтăна ишме тăрăшакан çынăн ăнăçсăр ĕçне çак хуралтăна çирĕплетме тăрăшакан çын ăнăçлăхĕпе танлаштарнипе танах пулать вĕт-ха ĕнтĕ! Кăшт та пулин килешӳллĕ танлаштару тăвас тесессĕн, çак халăх хушшине каякан çамрăксем хресченсене революци тумашкăн çĕклеме тăрăшни мĕншĕн çав тери ăнăçсăр пулнине сăнаса пăхмалла пулнă; ку ăнăçсăрлăх:—хреченсем, чăннипе, хăйсене уйрăм клас мар пулин те, мĕншĕн тесен вĕсен хушшинче хăйсенче буржуазипе пролетариат класĕсем чăмăртанса пыраççĕ, çапах та шăпах «хресченсем»—ĕçлесе тата эксплуатацилендсе пурăнакан халăхсен представителĕ пулса тăраççĕ, тесе çамрăксем йăнăш шухăшланă пирки мар-и (ку вăл— иллюзи, ăна крепостной право пĕтес чухнехи саманана пула палăрнипе ăнлантарса пама пулать-и тен, ун чухне хресченсем чăнахах та класс, анчах та крепостнически обществăн класĕ пулса тăнă),—пĕр сăмахпа каласан, кивĕ социализмла теорисене тата вĕсене социал-демократсем критиклениине тĕпчесе пăхмалла пулнă. Г-н Кривенко вара, çакăн вырăнне: «господин Шмидт» ĕçĕ—«паллах пурăнăçра кирлĕ ĕç», тесе ĕнентерме мĕнпур вăйĕпе тăрăшать. Çырлахăр ĕнтĕ, хисеплĕ г. «халăх тусĕ», мĕн пирки уçса хунă алăка çĕмĕрсе кĕме тăрăшатăр-ха çак эсир? ун пирки кам иккеленет-ха? Виноград пахчи туса, унран 75—100-шер тенкĕ тупăш илесси—чăн та пурăнăçа унтан кирлĕреххи мĕн пулма пултартăр-ха?*.

Вара автор çапла ăнлантарма тытăнать: пĕр хуçа хăй патĕнче виноград пахчи тусассăн,—вăл вара пĕр-пĕччен уйрăм ĕçлени

* Çак «пурнăçа кирлĕ» ĕçе, эсир *лешсене*, мужике Европăри ассоциацисем çинчен каласа кăтартакан çамрăксене, сĕнсе пăхасчĕ! Епле кĕтсе илĕччĕç вĕсем сире, епле хирĕç тавăрăтчĕç сире! Вĕсен идейисенчен эсир, халĕ материализмпа диалектикăран хăранă пекех, вилĕмрен хăранă пек хăра пуçлăтăр!

пулать, темиçе хуçа тусассăн вара—вăл пĕрлешсе, ĕçе сарса, пĕчĕк ĕçрен тĕрĕс, чăн-чăн ĕç туса яни пулать; *сăмахран*, А. Н. Энгельгардт фосфоритсемпе хăй кăна усă курман, вăл фосфорит тупас ĕçе ыттисем патĕнче те сарса янă пек.—

Чăн мар-им, мĕн тери хитре демократ ку.

Тепĕр тĕслĕх хресчен реформи çинчен калаçнинчен илер. Мĕнле пăхнă-ха вăл реформа çине çӳлерех асăннă вăхăтра, демократизмпа социализм уйăрăлман чухнехи самантра пурăннă демократ, Чернышевский? Хăй шухăшĕсене уççăн калама пултарайман пирки, вăл *ним те чĕнмен,* çапах та, аякран палăрткаласа пурăнăçа кĕртме хатĕрленĕ реформăна вăл çапла характеристика панă:

«*Сăмахран: эпĕ, сирĕн валли апат пĕçерме хатĕрленĕ çимĕç запасĕсене упраса тăрас тĕлĕшпе тĕрлĕрен майсем йышăнма кăмăл тунă, тейĕпĕр. Паллах ĕнтĕ, эпĕ ку ĕçе пуринчен ытла сире юратнă пирки тăватăп пулсассăн, вара: апат хатĕрлемелли çимĕç вăл—сирĕн тата унтан хатĕрленĕ апат сирĕн сывлăхăршăн усăллă пулать, тесе шухăшланă пирки тăрăшнă пулатăп. Анчах эпĕ: çимĕç запасĕсем пачах та сирĕн мар пулнине тата унран хатĕрленĕ апатшăн сире укçа тӳллеттернине, апачĕ хăй тӳленĕ укçа тĕшне* т ă м а с т ь *к ă н а мар* (*кăна* реформăччен çырнă. Гг. Южаковсем вара *халĕ те* унăн тĕп принципĕ—хресченсене нушаран кăларасси, тесе ĕнентерме тăрăшаççĕ!!), *ç и й ĕ н ч е н т а т а к у у к ç а н а э с и р х ă в ă р а п и т ĕ х ĕ с м е с ĕ р т ӳ л л е м е т е п у л т а р а й м а н н и н е пĕлсессĕн, манăн туйăмсем мĕнле пуласси çинчен шухăшласа пăхăр-ха ĕнтĕ эсир. Çак çав тери тĕлĕнтермĕш япаласене курсассăн, мĕнле шухăшсем килсе кĕреççĕ ман пуçăма?.. Мĕн тери ухмах пулнă эпĕ, ăнăçлăхĕ валли условисем çителĕклĕ пулман ĕçшĕн чăрманнă! Харпăрлăх çак алăсене кĕрсе лекессине, çитменнине усăллă условисемпе лекессине çителĕклĕ пĕлсе çитмесĕрех,—айванран пуçне кам унчен малтанах, харпăрлăха çав паллă алăра тытса усрассишĕн чăрманма пултарĕ?.. Пĕттĕрех тепре тесен пĕтĕм апат-çимĕçĕ, юратнă çыннăма* с и е н ç е х т ă в а к а н с к е р! П ĕ т т ĕ р е х т е п ĕ р т е с е н с и р е ю х ă н т а р с а с и е н к ă н а т ă в а к а н п ĕ т ĕ м ĕ ç ĕ - м а с и!».

Чернышевский хăйĕн вăхăтĕнчи пурăнăçа, хресченсем мĕншĕн укçа тӳленине, вырăссен обществăллă класĕсем антагонизмлă пулса тăнине питĕ тарăн та питĕ лайăх ăнланнине уççăн кăтартса тăракан вырăнсене эпĕ уйрăмах палăртса парагăп. Çитменнине, çавăн йышши пĕтĕмĕшпех революциллĕ идейăсене вăл цензурă асăрхаса тăракан пичет урлă каласа кăтартма пĕлнине те уйрăмах палăртмалла. Вăрттăн пичетленсе тухнă произведенийĕсенче те вăл çавнах, анчах нимĕн кукăр-макăрсемсĕр çырнă, «Пролог к прологу» ятлă кĕнекинче Волгин (ун шухăшĕсем туса Чернышевский хăй шухăшĕсене çырнă) çапла каласа кăтартать:

*«Антив хресченсене ирĕке кăларас ĕçе помещиксен партийĕ аллине паччăр. Уйрăмлăхĕ пысăк мар»** тет, вара—хăйĕнпе каласакан çын: пĕртте апла мар, уйрăмлăхĕ тем тери пысăк, мĕншĕн тесен помещиксен партийĕ хресченсене çĕр парасса хирĕç тăрать тенĕ сăмахĕсене хирĕç вăл татăклăнах çапла ответ парать:

*«Çук, тем тери пысăк мар, çав тери пĕчĕккĕ. Тем тери пысăк пулĕччĕ вăл, хресченсем çĕрне выкуп тÿлевĕсĕр илес пулсассăн. Çынран япалине илнипе япалине çынни аллинчех хăварни хушшинче уйрăм пурах, анчах япалишĕн укçа тÿлеттерсен—вăл пур-пĕрех пулать. Помещиксен партийĕн планĕ прогрессистсен планĕнчен, простăрах, кĕскерех пулнипе уйăрăлса тăрать. Çавăнпа та вăл лешинчен лайăхрах та. Аппаланса тăни сахалтарах, хресченсемшĕн те çăмăлрах пулать пулас. Хресченсенчен камăн укçи пур, вăл хăйне валли çĕр илетех. Камăн укçи çук—апла пулсан ăна илмете хушмалла мар. Вăл вĕсенне хуçалăхне кăна тусăнтарать. Выкуп тÿллесе илни вăл—укçалла сутăн илниех».*

Хресчен реформине туса ирттернĕ самана вăхăтĕнчех (ун çинчен Хĕвеланăçĕнче те çителĕклĕ çырса çутатман чухнех) вăл тĕпрен буржуаллă пулассине çав тери уççăн ăнланас тесен—вырăс «обществипе» «государствинче» ун чухнех ĕнтĕ—ĕçхалăхне татăклăнах тăшманлă пулса тăракан тата хресченсене эксплуатацилесе тусăнтарассине малтанах ним иккĕленмелле мар палăртса хунă обществăллă классем пуçпулса тăнине ăнланас тесен,—шăпах Чернышевскийĕн гениллĕхĕ кирлĕ пулнă çав. Унпа пĕрлех Чернышевский: пирĕн антагонизмлă обществăллă отношенисене витсе тăракан правительство пурри тем тери хăрушă усал пулнине, вăл ĕççыннисен пурăнăçне пушшех те начарлатса тăнине те ăнланнă.

*«Тĕрĕссипе каласан, антив ирĕке çĕрсĕр кăларччăр»,*—тет малалла Волгин. (Урăхла каласан, крепостник-помещиксем пирĕн çав тери вăйлă пулсассăн, антив вĕсем, крепостниксен интересĕсене икĕпитлĕ абсолютлă правительство килĕшĕвĕсем айне витсе пытариччен, хăйсен интересĕсене уççăн, тÿррĕн вĕçне çитиех каласа парса тухччăр).

*«Ыйтăва çакăн пек лартнă пирки ĕнтĕ эпĕ, хресченсене ирĕке кăларĕç-и, çук-и, уншăн та ытлашши пăшăрханма сăлтав çук пулĕ, тетĕп; унтан та ытларах—камсем ирĕке кăларĕç вĕсене—либералсем е помещиксем-и, çакăншăн пулсан вара пушшех те. Ман шухăшпа пурĕпĕрех. Помещиксем пулсан, аванрах та».*

«Письмо без адреса» ятлă статьинчен: *«Хресченсене ирĕке кăларасси çинчен калаçаççĕ... Вăй ăçта ун йышши ĕç тума? Çук-ха вăйсем. Ĕç кăларма вăй çук пулсассăн, вăл ĕçе тытăнма та юрамасть. Куратăр-и ара ĕç ăçталла пынине: ирĕке кăлар-*

* Цитатăна Плехановăн «Социал-демократра» пичетленĕ «Н. Г. Чернышевский» ятлă статьинчен çырса илетĕп.[24]

*ма тытăнĕç. Мĕн пулĕ—хăвăрах шутласа пăхăр, мĕн пулать тума пултарайман ĕçе тума тытăнсассăн. Ĕçе пăсса пăрахатăн та—ирсĕрлĕх пулса тăрать».*

Вырăссен крепостникле-бюрократизмла государстви хресченсене ирĕке кăларма, урăхла каласан, крепостниксене сирпĕтсе антарма вăй çитерес çуккине, вăл «ирсĕрлĕх» кăна туса хума, либералсен интересĕпе помещиксен интересĕсем хушшинче мĕскĕн килĕшӳ кăна тума пултарнине (выкуп тӳлени—укçалла илниех), хресченсене çителĕклĕ те ирĕк пурăнăç мĕлкипе улталакан, чăннипе вĕсене тусăнтарса, пуçĕпех помещиксен аллине паракан килĕшӳ кăна тума пултарнине, Чернышевский лайăх ăнланнă. Çавăнпа та вăл реформăна ылханса протестленĕ, ăна ăнăçсăрлăх суннă, правительство либералсемпе помещиксем хушшинче эквилибрист пек тăлланса пĕттĕр те, крах пултăр, вăл вара Российăна классем уççăн кĕрешес çул çине илсе тухĕччĕ тесе ĕмĕтленнĕ.

Пирĕн кучухнехи «демократсем» вара *халĕ*—Чернышевский малашнехине генилле витĕр курса тăни факт пулса тăнă хыççăн, 30 çул тăршшĕ тăсăлнă истори экономикăллă тата политикăллă пур тĕрлĕ иллюзисене те ним шеллемесĕр çĕмĕрсе тăкнă хыççăн—реформа туса ирттернине мухтаса юрлаççĕ, реформа «халăх» производствине аталантарать тесе шутлаççĕ, ĕççыннине хирĕçле обществăллă классенчен пăрăнса *иртсе кайма* пултаракан темле урăх çулйĕр пулма пултарать тенĕ шухăша реформăпа çирĕплетме тăрăшаççĕ. Тепĕр хут калатăп: хресченсен реформи çине мĕнле пăхни вăл—пирĕн демократсем çав тери буржуалланса кайнине чи уççăн кăтартса параканни. Ку господасем нимĕне те вĕренеймен, манма вара вĕсем питех те, питех те нумай япалана маннă.

Танлаштарса пăхма 1872 ç. пичетленнĕ «От. Записки» журнала илетĕп. Çӳлерех епĕ, «Плутократия и ее основы» ятлă статьяран, «ирĕке кăларакан аслă» реформа иртнĕ хыççăнхи малтанхи вунăçуллăхрах вырăс обществи (плутократиллĕ интерессене витсе тăракан) либерализм тĕлĕшĕпе мĕнле ăнăçлăхсем тунине çырса илсе кăтартнăччĕ.

«Малтантарах реформа пирки ĕсĕклесе, кивĕ пурăнăçа шеллесе йĕрекен çынсем час-часах тĕл пулкалатчĕç пулсан, халĕ ĕнтĕ ун йышши çынсем çук,—тесе çырать малалла çав авторах, çав статьярах.—Çĕнĕ йĕркесем пурин кăмăлне те кайнă, пурте савăнса лăпкăн пăхаççĕ»,—тет; унтан вара малалла, литература «хăй те», плутократиллĕ интерессемпе ĕмĕтсене «демократи пĕркенчĕкĕпе витĕнсе» хӳтĕлесе, «плутократи органĕ пулса пынине» кăтартать. Тинкеререх шухăшласа пăхăр-ха çак сăмахсем çинчен. Автор, реформа хыççăнхи çĕнĕ йĕркесене пула «пурин» кăмăлĕсем те тулнă пирки, çак çĕнĕ йĕркесем уççăнах курăнмалла антагонизмлă, буржуаллă пулсан та, «пурте» («обществăпа» «интеллигенци» представителĕсем, паллах, ĕççыннисем мар) хавас та лăпкă пирки кăмăлсăрланать; мĕншĕн тесен либерализм вăл «туянас ирĕке» çех (свобода приобретения), çитменнине, паллах,

ĕçхалăх массисен шучĕпе тата вĕсене сиенлесе туянассине кăна витсе тăнине халăх асăрхамасть. Çавăнпа протестлет те вăл. Шăпах çак, социалистшăн характерлă протест, унăн сăмахĕнче паха та. Çакна асăрхăр: демократизмпа витĕнсе тăракан плутократизма хирĕç çапла протеслени вăл журналăн пĕтĕмĕшле теорине хирĕç пырать: вĕсем хресчен реформинче хăть те мĕнле буржуаллă йĕрсем, элементсем, интерессем пуррине пачах йышăнмаççĕ вĕт, вырăс интеллигенцийĕпе вырăс государствин класлă характерне те йышăнмаççĕ, Р о с с и й ă р а капитализм аталанмалăх никĕс пуррине те йышăнмаççĕ—çитменнине çавах та капитализмпа буржуаллăха туймасăр иртме пултараймаççĕ. Çапла вара, «От. Записки» журнал, вырăс обществин антагонизмлăхне туйса тăрса, буржуаллă либерализмпа демократизма хирĕç мĕн таран кĕрешнĕ, çав таран вăл—пирĕн мĕнпур малтанхи социалистсемпе пĕрле пĕр ĕç туса тăнă, вĕсем çак антагонизмлăха ăнланма пĕлмен пулин те, çапах та ăна курса тăнă тата çак антагонизмлăха çуратса тăракан общество организацине хăйне хирĕç кĕрешесшĕн те пулнă;—çав таран «От. Записки» журнал (паллах, пролетариатăн класс интересĕсем енчен пăхсан) прогрессивлă пулнă. «Халăх тусĕсем» çак антагонизмлăх çинчен манса кайнă, «демократизм пĕркенчĕкĕ айĕнче пирĕн патăмăрта та, святой Русьре те, тап-таса буржуйсем пытанса тăнине пĕртте сисми пулнă; çавăнпа та вĕсем халĕ (пролетариат тĕлĕшĕпе) реакциллĕ пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен антагонизма вĕсем шăла-шăла лартаççĕ, кĕрешӳ çинчен мар, культура тĕлĕшĕпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калаçаççĕ.

Анчах, чăнахах та вара, господасем, Российăри çутçамкаллă либерал, 60-мĕш çулсенчи плутократийĕн демократла представителĕ, унăн çамкине гражданла хуйхă сăнĕ çапнăшăнах 90-мĕш çулсенче буржуази идеологĕ пулма пăрахнă-шим вара?

Чăнахах та вара, пысăккăн «туянас ирĕк», шултăра кредит, шултăра капитал туянас ирĕк, техникăна пысăккăн лайăхлатас ирĕк,—çак обществăллă-экономикăллă отношенисем, вĕсене вак кредит, вак капитал туянас ирĕкпе, техникăна пĕчĕккĕн лайăхлатас ирĕкпе улăштарнă пирки улшăнмасăр тăнă чухне либераллă пулма, урăхла каласан, буржуаллă пулма пăрахать-шим вара?

Тепĕр хут калатăп: вĕсем хăйсен идейисене татăклăнах улăштарнă пирки е пирĕн йĕркесем татăклăнах улшăннă пирки урăхла шухăшлама пуçланă, тесе калама çук. Çук, просто маннă кăна вĕсем.

Хăйсен предшественникĕсен теорийĕсем ниме юрăхсăр пулнă пулсан та, вĕсем пурăнăç çине айванла утопиллĕ пăхнă пулсан та, вĕсене прогрессивлă туса тăнă çак пĕртен-пĕр палла та çухатса, «халăх тусĕсем» çак пĕтĕм вăхăт тăрăшĕнче пачах нимĕне те вĕренсе çитеймен. Чăннипе вара, вырăс пурăнăçне политикăллă-экономикăллă тĕпчесе пĕлмен пулсан та, Российăн пĕр çак 30 çул хушшинчи политикăллă историйĕ те вĕсене нумай япалана вĕрентмелле пулнă.

Ун чухне, «60-мĕш çулсен» саманинче, крепостниксен вăйне амантнă пулнă: вĕсене, чăн та, пĕтĕмĕшпех мар пулин те, çав

тери вăйлăн çĕмĕрнĕ пирки, вĕсен ирĕксĕрех чакмалла пулнă. Либералсем вара, урăхла, пуçĕсене çĕкленĕ. Прогресс çинчен, наука çинчен, ырăлăх çинчен, тĕрĕсмарлăха хирĕç кĕрешесси çинчен, халăх интересĕсем çинчен, халăх совеçĕ çинчен, халăх вăйĕсем çинчен т. ыт., т. ыт. çинчен те либераллă фразăсем тăкăна пуçланă—шăпах çак фразăсене халĕ те, уйрăмах салху минутсенче, пирĕн радикаллă хуйхăракансем, хăйсен салонĕсенче, пирĕн либераллă фразерсем хăйсен юбилейлă уявĕсенче апат çинĕ чухне тата хăйсен журналĕсемпе хаçат страницисем çинче, хăса-хăса тултараççĕ. Либералсем çав тери вăйлă пулнă пирки, «çĕнĕ йĕркесене» йăлтах мар пулин те, çапах та чылай таран хăйсене кирлĕ пек туса хунă пулнă. Русьре ун чухне те «уççăн пулса пыракан класс кĕрешĕвĕн йăлтăрка çутти» пулман пулсан та, çавах та хальхинчен çутăрах пулнă, çавăнпа та ĕçхалăх класĕн çакăн йышши идеологĕсем те, класс кĕрешĕвĕ çинчен нимĕн чухлĕ пĕлменскерсем те, хальхи ирсĕр вăхăта *ăнлантариччен* лайăхрах пуласлăх çинчен тĕлленме юратнăскерсем,—вĕсем те пулин либерализм хыçĕнче плутократи пытанса тăнине, çак çĕнĕ йĕркесем—буржуаллă йĕркесем пулнине курмасăр тăма пултарайман. Шăпах ĕнтĕ, шухăша паян кунхи питех те кирлĕ ыйтусем енне пăрса яма тăрăшман, çĕнĕ йĕркесене чылай таса (танлаштарсан) сăнлăн курма кансĕрлемен крепостниксене сцена çинчен сирсе яни, çав йĕркесене курса пĕлме май панă та. Анчах та пирĕн ун чухнехи демократсем, плутократиллĕ либерализма айăплама пĕлсе, çавах та ăна наука кăтартнă тăрăх тĕпчесе ăнланма пĕлеймен, пирĕн обществăллă хуçалăх капитализмлă организациленсе тăнă чухне вăл кирлĕ пулнине ăнланма пĕлеймен, пурăнăçăн çак çĕнĕ уклачĕ киввипе, крепостникла укладпа танлаштарсан прогрессивлă пулнине ăнланайман, вăл çуратса аталантаракан пролетариатăн революциллĕ рольне те ăнланма пĕлеймен—çавăнпа та вĕсем çак «ирĕкпе» гуманность» йĕркисем çине «тулхăрнă» кăна, буржуаллăха вăл темле ăнсăртран çех пулнă япала тесе шутланă, «халăх строй ĕнче» тата мĕнле те пулин урăхла обществăллă отношенисем тухса тăрассине кĕтсе тăнă.

Акă вара, истори вĕсене çак урăх обществăллă отношенисене кăтартса пачĕ. Крепостниксем, вĕсен интересĕсене пула çав тери хăрушшăн пăснă реформа пĕтĕмĕшпех тĕп тăвайман крепостниксем (пĕр сехетлĕхе) чĕрĕлсе вăй илчĕç те, çак пирĕн ытти обществăллă отношенисем, буржуаллă отношенисемсĕр пуçне, мĕнле пулнине уççăнах кăтартрĕç, çав тери чараксăр, ĕненме çук ăссăр, тискер реакци формипе кăтартрĕç, ăна пула вара пирĕн демократсем, хăйсен буржуаллăха туйма пĕлекен, анчах ăнланса илме пĕлмен айванла демократизмне урăхлатса социал-демократизм туса малалла каяс вырăнне, хăраса ӳкрĕç те, чĕркуçлансах ларчĕç,—унтан каялла, либералсем патне чака пуçларĕç те, халĕ ĕнтĕ хăйсен нăйкăшнипе... апла мар иккен, эпĕ вĕсен теорийĕпе тата программипе тесе каласшăнччĕ,—«пĕтĕм серьезнăй та йĕркеллĕ пичет» килĕшет, тесе мăнкăмăлланаççĕ. Урок питĕ пысăк, вăйлă пулнă пек туйăнмалла ĕнтĕ, мĕншĕн тесен

ĕлĕкхи социалистсем халăх пурăнăçĕн хăйне уйрăм уклачĕ çинчен, халăхăн социализмла инстинкчĕсем çинчен, капитализмпа буржуази ăнсăртран çех пулни çинчен тĕлленсе шухăшланă иллюзисем ытлашшипех уççăн курăна пуçларĕç; кун хыççăн пурăнăç çине тӳррĕнех пăхса, буржуаллă тата пĕтсе пыракан крепостникле отношенисенчен пуçне Роççийăра урăх нимĕнле обществăллă-экономикăллă отношенисем те пулманнине тата çуккине, çавăнпа социализм патне те рабочи движенинчен пуçне урăх нимĕнле çул та пулма пултарайманнине уççăнах йышăнма та юранă пек ĕнтĕ. Анчах ку демократсем нимĕне те вĕренеймен, çавăнпа вара мещанла социализмăн айванла иллюзийĕсем вырăнне мещанла прогрессен практикăллă тĕрĕслĕхĕ пулса тăнă.

Хальхи вăхăтра, çакă мещанлăх идеологĕсем ĕççынни интересĕсен представителĕсем пулма тăрăшнă чухне, вĕсен теорийĕсем тӳррĕмĕнех реакциллĕ. Вĕсем—ĕçе, пĕтĕмĕшле, пуриншĕн те юрăхлă «çĕклес», лайăхлатас т. ыт. меслетсемпе пулăшма пулĕ, пурне те килĕштерсе пĕрлештерме май пулĕ, тесе шухăшланипе—вырăссен кучухнехи обществăлла-экономикăллă отношенисенчи антагонизма шăлса лартаççĕ. Вĕсем—реакциллĕ, мĕншĕн тесен пирĕн государствăна, темле, классем çинче тăракан пек, çавăнпа та эксплуатациленекен халăха чунтан-вартан, çителĕклĕ пулăшу пама юрăхлă та, пултарать те пек, туса кăтартаççĕ.

Вĕсем, юлашкинчен, çакăн пирки те реакцилĕ, мĕншĕн тесен вĕсем, ĕççыннисен ирĕке тухас тесен хăйсен кĕрешме кирлине, çитменнине пĕтĕм хастарлăхпа кĕрешмеллине пĕртте ăнланмаççĕ. «Халăх тусĕсен», сăмахран, вĕсем хăйсем те, пĕтĕм ĕçе тума пултарнă пек тухать. Рабочисем канлĕ пулма пултараççĕ. Авă «Р. Б-во» редакцине техник та пынă ĕнтĕ, çитменнине «капитализма халăх пурнăçне кĕртес» тĕлĕшпе, вĕсем тĕрлĕрен «комбинацисенчен» пĕрне кăштах кăна хатĕрлесе çитермен ĕнтĕ. Социалистсен пур тĕрлĕ мещанла идейăсемпе теорисенчен те татăклăнах та пĕтĕмĕшпех уйăрăлмалла—акă çакă походран туса илме тивĕç усăллă тĕп урок.

Çакна асăрхама сĕнетĕп: эпĕ «халăх тусĕсенчен» тата вĕсен идейисенчен уйăрăласси çинчен мар, мещанла идейăсенчен уйăрălма кирли çинчен калатăп, мĕншĕн тесен нихăçан та пĕрле çыхăнса тăман япаларан ниепле уйăрăлма та май çук. «Халăх тусĕсем» вĕсем—çакăн йышши мещанла-социализмлă идейăсен пĕр çулйĕрĕн представителĕсенчен пĕрисем кăна. Çапах та эпĕ çак поход пирки каланисенчен пур тĕрлĕ мещанла-социализмлă идейăсенчен те, вырăссен *пур йышши* ĕлĕкхи хресченле социализмĕнчен те пĕтĕмĕшпех уйрăлмалла, тесе вывод тăватăп пулсассăн, эпĕ ăна кивĕ идейăсен представителĕсен, марксизм ӳсninчен хăраса ӳкнĕскерсен, марксизма хирĕç çак похода тухса, мещанла идейăсене ирĕксĕрех уйрăмах туллин те уççăн каласа палăртмалла пулнă пирки тăвагăп. Çак идейăсене кучухнехи социализмпа, вырăс пурăнăçĕ çинчен чăннипе калакан кучухнехи сведенисемпе танлаштарса пăхсан, эпир, çак идейăсем мĕн тери вăйсăрланса, шĕвелсе юлнине, хăйсен тулли теориллĕ никĕсне пĕ-

тĕмпех çухатса, мĕн тери мĕскĕн эклектизма çити, яланах тĕл пулакан культурникле-оппортунистла программăна çити анса ларнине тĕлĕнмелле уççăн куратпăр. Ку вăл—пĕтĕмĕшпе социализмăн кивĕ идейисен айăпĕ мар, çак господасен айăпĕ кăна, анчах вĕсене никам та социалистсен шутне кĕртмест те вĕт, тĕме пултараççĕ; анчах ун пек хирĕç калани пĕртте тивĕçлĕ, килĕшӳллĕ пек туйăнмасть мана. Эпĕ пур çĕрте те кивĕ идейăсем пурпĕрех çапла пăсăлса пĕтессине кăтартма тăрăшрăм, пур çĕрте те çак господасене уйрăмăн епле те пулин сахалтарах критиклеме, пуринчен ытла—вырăссен кивĕ социализмăн пĕтĕмĕшле тĕп положенийĕсем мĕнле пулнине кăтартма тăрăшрăм. Вара социалистсем çапах та, çак положенисене эпĕ тĕрĕс мар е тĕллех мар е вĕçне çити каласа пĕтерейменсĕр çырнă тесе шухăшлаççĕ пулсан, эпĕ вĕсене хирĕç: кăмăл тăвăрах, господасем, çырса кăтартăрсам хăвăр,вĕсене кирлĕ пек вĕçне çитиех каласа пĕлтерĕр!—тесе тархаслама кăна пултаратăп.

Чăн та, социалистсемпе полемика туса ирттерме май пулнăшăн, никам та социал-демократсенчен ытла савăнмĕччĕ.

Чăнах та вара эсир: пире çавăн йышши господасен «полемикине» хирĕç ответ пама питĕ кăмăллă тесе тата вĕсен енчен тӳррĕнех, çине тăрса, çивĕччĕн хĕтĕртни пулман пулсан, эпир вăл ĕçе тытăннă пулăттăмăр, тесе шухăшлатăр-и?

Чăнах та вара эсир: пирĕн çак казеннăй-либераллă фразăсемпе мещан моралĕ пĕрлешнĕ ирсĕр купана вулас тесе, нумай хут вуласа тухас тесе, вуласа ăнланас тесе, хамăра-хамăр ирĕксĕрлетмелле пулмасть тесе шухăшлатăр-и?

Анчах, çакăн йышши идейăсене сăлтавласа каласа кăтартас ĕçе халĕ çавăн йышши господасем кăна тытăнаççĕ пулсан, эпир айăплă мар вĕт-ха унта. Çакна та асăрхама сĕнетĕп: эпĕ *социализмăн* мещанла идейисенчен уйăрălма кирли çинчен калатăп. Сăнаса тухнă вакбуржуаллă теорисем, социализмлă теорисен ячĕпе тухнă пирки, вĕсем пурпĕрех реакциллĕ пулса тăраççĕ.

Анчах та эпир—чăннипе кунта социализмăн тĕсĕ те çуккине, урăхла каласан, çак пĕтĕм теорисем ĕççыннине эксплуатацилени-не чăнахах та ăнлантарманнине, çавăнпа та вĕсем ăна ирĕке кăларас тĕлĕшпе пĕртте пулăшма пултарайманнине, чăннипе ку теорисем вак буржуази интересĕсене палăртса пурăнаçа кĕртсе тăнине ăнланса илсессĕн,—вара эпир вĕсем çине урăхла пăхмалла пулатпăр, вара çак ыйтăва: *вак буржуази тĕлĕшĕпе тата унăн программисем тĕлĕшĕпе рабочи класăн мĕнле çулйĕр тытса пымалла?*—текен ыйтăва лартмалла пулатпăр. Вара ку ыйтăва хирĕç çак класăн иккĕленчĕклĕ характерне асра тытмасăр ответ пама май çук (пирĕн Российăра вак буржуазипе шултăра буржуази хушшинче антагонизм сахалтарах аталаннă пирки çак иккĕленӳ пушшех те вăйлă). Пĕтĕмĕшле-демократиллĕ требованисем кăларса лартнă пирки, урăхла каласан, вăтам ĕмĕр саманипе крепостникле йĕркен хуть те мĕнле юлашкисене хирĕç кĕрешнĕ пирки, вăл—прогрессивлă; пĕтĕм çĕршыв буржуаллă йĕрке еннелле аталанса пынине чарса, ăна каялла тавăрма тăрăшса,

хăйĕн вак буржуази вырăнне упраса хăварасшăн кĕрешнĕ пирки, вăл—реакциллĕ. Ун йышши реакциллĕ требованисем, сăмахран, ят çĕрĕсене алăран кăларма юрамасть текен йышшисем, тата хресченсене опека йĕркинче тытса тăрас тĕлĕшпе шухăшласа кăларнă ытти нумай ăçтиçук проектсем те,—пуринчен ытла ĕçсыннисене хӳтĕлес ырă сăлтав хыçĕнче пытанса тăраççĕ; анчах тĕрĕссипе вĕсем, паллах, ун пурăнăçне начарлатаççĕ кăна, çав вăхăтрах вĕсене ирĕке тухасшăн кĕрешме те кансĕрлесе тăраççĕ. Вакбуржуаллă программăн çак икĕ енне яланах уйăрса илмелле тата çак теорисем хăш енчен те пулин социализмлă характерлă пулнине йышăнмасăр, вĕсен реакциллĕ енĕсене хирĕç кĕрешсе, вĕсен демократиллĕ пайне пĕртте манмалла мар. Марксистсем мещанла теорисене пачах йышăнмакни мĕнле майпа вĕсен программинчи демократизма пĕтермест кăна мар, пачах урăхла, еплле ăна пушшех те çине тăрса палăртма хушнине тĕслĕх илсе ăнлантарса парам. Çӳлерех виçĕ тĕп положени, мещанла социализм представителĕсем хăйсен теорийĕсене яланах сăлтавлама юратнă положенисене—çĕр сахаллине, тӳллевсем пысăккине, администраци пусмăрне кăтартса панăччĕ.

Çак усал япаласене пĕтерме тăрăшнă требованисенче социализм тĕсĕ те çук, мĕншĕн тесен вĕсем экспроприаципе эксплуатацие ним чухлĕ те ăнлантарса памаççĕ, вĕсене пĕтерни те—капитал ĕç вăйне пусмăрласа тăнине ним чухлĕ те пырса тивес çук. Анчах та вĕсене пĕтерни—çак пусмăрлăха хăйне пушшех те йывăрлатса тăракан вăтам ĕмĕрхи ланчашкисенчен тасатĕ, рабочисене капитала хирĕç тӳррĕн кĕрешме çăмăллатĕ, çавăнпа та рабочисем, вăл требовани демократиллĕ требованисен шутĕнче тăнă пирки, ăна пурăнăçа кĕртме чи вăйлăн пулăшĕ. Тӳллевсемпе налогсем—вăл, пĕтĕмĕшле калас пулсан, вак буржуйсем кăна питех те пысăк вырăна лартма пултаракан ыйту, анчах та пирĕн хресчен тӳллевĕсем вĕсем нумай тĕлĕшрен крепостной йĕркерен тăсăлса пыракан япаласем пулса тăраççĕ; сăмахран: выкуп тӳлевĕсем çавăн йышши, вĕсене халех нимĕн иккĕленсе тăмасăр пĕтермелле; хресченсемпе мещансем кăна тӳлесе тăнă, «благороднăйсем» тӳлемен налогсем те çавăн йышшиех. Çак, вăтам ĕмĕрхи отношенисенчен юлнă, экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен аталанма чарса тăракан япаласене пĕтермелли требованисене пурнăçа кĕртме социал-демократсем яланах пулăшĕç. Çĕр сахалли çинчен те çавнах каламалла. Ун çинчен кăшкăрни вăл—буржуаллă кăшкăрашу пулнине кăтартса парас тесе, эпĕ ун çинчен çӳлерех нумай чарăнса тăтăм. Çапах та, çакăн пирки нимĕн иккĕленме çук: сăмахран, хресчен реформи вăл, хресченсен çĕрне тата-тата илнипе хресченсене уççăнах помещиксен уссишĕн çаратса хăварчĕ, çак тем тери пысăк реакциле вăйа тӳррĕн те (хресченсен çĕрне касса илнипе), аяккинчен те (ят çĕрĕсене чеен уйăрнипе) пысăк усă кăтартрĕ. Çавăнпа та—туртса илнĕ çĕрсене хресченсене халех каялла тавăрса парассишĕн, помещиксем тытса тăракан çĕрсене—крепостникле учрежденисемпе традицисен çак тĕрекне пĕтĕмĕшпех экспроприацилесшĕн социал-демо-

кратсем чи вăйлăн та çине тăрсах тăрăшĕç. Çак юлашки пунктра, çĕре национализацилессипе пĕр пулса тăраканскерĕнче, социализмăн пĕрчи те çук, мĕншĕн тесен пирĕн патăмăрта чăмăртанма тытăннă фермерла отношенисем ун чухне хăвăртрах та кăпăшрах кăна чечекленсе кайĕччĕç, анчах демократилĕх тĕлĕшĕнчен, благороднăй помещиксене пĕтĕмĕшпех çĕнтерсе пĕтерме пулăшакан пĕртен-пĕр меслет пулнă пирки, вăл тем тери кирлĕ. Юлашкинчен вара, хресченсен правăсăрлăхĕ çинчен, ăна хресченсене экспроприацилесе тата эксплуатацилесе тăракан сăлтав пек туса, паллах, Южаковсемпе В. В. г-сем кăна калаçма пултараççĕ, анчах администраци хресченсене пусмăрласа тăни, ним иккĕленмесĕрех паллă кăна мар, çитменнине вăл ахаль пусмăрлăх кăна та мар, вăл—хресченсене «ирсĕр хура халăх», тесе йĕрĕнсе тӳррĕнех мăшкăллани; администраци шучĕпе хресченсем благороднăй помещиксене пăхăнса тăмасăр пурăнма та пултарас çук пек, пурне те тивекен граждан прависене (сăмахран, çĕнĕ çĕре куçас правăна*) хресченсене уйрăмах ырă тăвас тесе кăна пама пулать пек, хуть те мĕнле помпадур та вĕсене, ĕçлев çуртне хупнă çынсене хушнă пек, хуть те мĕн тума та хушма пултармалла пек. Çавăнпа та, хресченсене каллех тулли граждан правиллĕ тăвас, дворянсен пур привиллегийĕсене те пĕтĕмпех пĕтерсе, хресченсене чăрмантаракан бюрократла опекăна пĕтерсе, ăна самоуправлени правине памалла тăвас требованисем çумне социал-демократсем пĕр иккĕленмесĕр хутшăнаççĕ.

Çавăнпа та, пĕтĕмĕшпе калас пулсан, вырăс коммунисчĕсен, марксизм çулйĕрĕпе пыракансен, хăйсене кирек камран та ытларах *социал-демократсем* тесе чĕнмелле те, хăйсен ĕçĕнче нихăçан та *демократизм* питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине манмалла мар**.

Российăра (Хĕвеланăç Европăпа танлаштарсан) вăтам ĕмĕрхи, *çурмакрепостной* учрежденисен юлашкисем çав тери вĕçĕмсĕр вăйлă-ха, вĕсем политикăллă шухăш аталанассине пур сословисемпе классенче те чарса тăрса, пролетариатпа пĕтĕм халăх çинче пысăк йывăрлăхсем пулса тăраççĕ,—çавăнпа та пур тĕрлĕ крепостной учрежденисене те хирĕç, абсолютизма, сословнăçе, бюрократизма хирĕç кĕрешни рабочисемшĕн питех те кирлĕ пулса тăнине астутарса тăмасан юрамасть. Çак учрежденисем епле хăрушă реакциллĕ вăй пулса тăнине, вĕсем капитал ĕç вăйне пусарса тă-

* Куçта г. Ермолов, хальхи çĕрĕç министрĕ, хăйĕн «Неурожай и народное бедствие» ятлă кĕнекинче, чăн-чăн крепостникĕн роççейле намăссăрлăхĕпе çĕнĕ çĕре куçассине хирĕç çырни çинчен асăнмасăр иртме май çук. Государство интересĕсем енчен пăхсан, çĕнĕ çĕре куçнине усăллă тесе шутлама май çук пулать, мĕншĕн тесен Европăри Российăра помещиксем ирĕк ĕçлекенсемсĕр нушаланаççĕ иккен.—Чăн та, хресченсем хăйсен ĕçĕпе харампыр-помещиксене тата вĕсен «çӳлĕ вырăнта ларакан» хӳрешкисене тăрантарса пурăнассинчен пусçне, урăх мĕншĕн пурăнаççĕ-ха?

** Ку питĕ кирлĕ пункт. Плеханов, пирĕн революционерсен «икĕ тăшман: пĕтĕмĕшпех кăкласа пĕтереймен кивĕ тĕшмĕшлĕхсем, пĕр енчен, тата çĕнĕ программăна ансăр ăнланни, тепĕр енчен»,—тесе питĕ тĕрĕс калать. III Приложение вула (çак изданийĕн 177—182 *стр. Ред.*).

нине мĕн тери пушшех те вăйлатса янине, ĕççыннисене вĕсем мĕн тери мăшкăл туса пусмăрланине, капитала епле вăтам ĕмĕрхи формăсенче чарса тăнине, ĕç вăйне эксплуатацилес тĕлĕшпе çĕнĕ, индустриллĕ формăсенчен кая юлмасăр, çак эксплуатаци çумне тата ирĕке тухасшăн пыракан кĕрешĕвĕн хăрушă йывăрлăхĕсене хушса, чарса тăнине,—çаксене, пурне те рабочисене тĕпĕ-йĕрĕпех ăнлантарса памалла. Реакцийĕн çак тĕрекĕсене* çĕмĕрсе пĕтермесĕр, буржуазие хирĕç ниепле те ăнăçлăн кĕрешме май çуккине рабочисен пĕлмелле, мĕншĕн тесен вăл тĕрексем пур чухне, вырăссен ял пролетариачĕ нихăçан та асап тўссе тинкерен тухнă çын йĕркинчен, ăс-тăнлă та çине тăрсах протестлесе кĕрешме мар, шанчăкне çухатса вăйсăрланма çеç пултаракан этем шутĕнчен тухас çук; анчах та рабочи класа кĕрешўре çĕнтермешкĕн, ял пролетариачĕ пулăшса тăни—питĕ кирлĕ услови. Çавăнпа та абсолютизма хирĕç тата реакциллĕ сословисемпе учрежденисене хирĕç радикаллă демократипе юнашар тăрса кĕрешесси вăл—рабочи класăн тўррĕм обязанноçĕ, çакна социалдемократсем ăнлантарса тăмалла та ĕнтĕ ăна; çав вăхăтрах ăна акă çакна та пĕр минут асран ямасăр ăнлантарса тăмалла: çак мĕнпур учрежденисене хирĕç кĕрешни вăл—рабочи класа буржуазине хирĕç кĕрешме çăмăллатакан хатĕр вырăнне кăна кирлĕ пулнине; пĕтĕм-демократиллĕ требованисене пурнăçа кĕртни вăл—рабочи класс валли çĕнтерў çулне тасатса уçас шутпа кăна—ĕççыннисен тĕп тăшманне—ăшчикĕпе йăлтах демократиллĕ учреждение *капитала* çĕнтересси патне илсе пыракан çула тасатса уçас шутпа кăна кирлĕ пулнине ăнлантарса тăмалла; капитал вара вăл пирĕн Российăра, рабочисене пусарса лартасшăн тата рабочисен движенийĕ çуралса тухассине вăйлăрах чарса тăрасшăн тăрăшса, çăмăллăнах хăй демократизмне пăрахма, реакционерсемпе çăмăллăнах союз туса пĕрлешме пултарать.

Социал-демократсем абсолютизм çине, политика ирĕклĕхĕ çине мĕнле пăхнине, çавăн пекех тата политика ирĕклĕхне çĕнтерсе илес тĕллевпе революционерсен пур фракцийĕсене те «пĕрлештерме», «союз тума» тăрăшакан, юлашки вăхăтра уйрăмах вăй-

---

* Уйрăмах реакциллĕ вăйлă учреждени вăл—пирĕн çĕршыври *бюрократи* пулса тăрать. Россия государствине (чăннипе) de facto çав тытса тăрать те ĕнтĕ, анчах пирĕн революционерсем халиччен ун çине çителĕклĕ асăрхаса пăхайман. Çак бюрократи, пуринчен ытла разночинецсене йышăннипе ўссе пыраканскер, хăй çуралса тухнă вырăнĕ тĕлĕшĕнчен те, ĕçĕн тĕллевĕпе характерĕ тĕлĕшĕнчен те питех те буржуаллă, анчах абсолютизм тата благороднăй помещиксем политика тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк привиллегисемпе усă курса тăни—ăна уйрăмах сиенлĕ туса тăрасçĕ. Вăл—çиле май пĕр чарăнми çавăрăнса тăракан флюгер, помещиксемпе буржуйсен интересĕсене шайлаштарса тăрас ĕçе хăйĕн чи пысăк задачи, тесе шутлаканскер. Вăл—хăйĕн крепостникле кăмăлĕсемпе тата çыхăнăвĕсемпе усă курса, рабочисемпе хресченсене улталаса тăракан иудушка, «экономика тĕлĕшĕнчен вăйсăррине хўтĕлес» ятпа тата ăна «улакпа ростовщикрен сыхлас май «опекăра» тытса тăрас ятпа, вăл—ĕççыннисене «ирсĕр хура халăх» вырăнне антарса лартакан, вĕсене пуçĕпех крепостник-помещик аллине паракан, çавăнпа та вара буржуазирен пушшех те хўтĕленеймин тăвакан меслетсем йышăнса иртерет. Вăл—питĕ хăрушă икĕпитлĕ япала; вăл реакцин Хĕвеланăçĕнчи мастерĕсен опычĕ тăрăх вĕрен е çитнĕ те, хăйĕн аракчеевла ĕмĕчĕсене халăх юратнă пек туса каланă сăмахĕсемпе питĕ чеен витсе пырать.

ланнă юхăм çине мĕнле пăхнине—çак çÿлте каласа панисем çителĕклĕ кăтартса парăлартаççĕ, пулас.[26]

Ку—питех те хăйне майлă та характерлă юхăм.

Вăл акă мĕнпе хăйне майлă: «союз» тума çав-çав ыйтусем тĕлĕшĕпе килĕшекен пĕр-пĕр программăсем тăрăх ĕçлекен пĕр-пĕр ушкăн е ушкăнсем мар сĕнеççĕ. Кун пек пулсассăн, союз тăвас ыйту вăл—кашни уйрăм сĕнÿ тунă чухнехи ыйту, пĕрлешекен ушкăнсен представителĕсем йышăнакан конкретлă ыйту пулĕччĕ. Ун чухне вара «пĕрлештерме тăрăшакан» уйрăм юхăм пулма та пултараймĕччĕ. Анчах та ку сĕнÿ пурах тата ăна ахаль кăна киввинчен татăлса юлнă, çĕннинчен нимĕн патне те çыпăçайман çынсем сĕнеççĕ: абсолютизма хирĕç кĕрешекенсем халиччен таянса тăнă теори ишĕлет, хăйĕнпе пĕрле вăл кĕрешÿ валли кирлĕ килĕшÿллĕхпе организацилĕхшĕн тăрăшассине те çĕмĕрсе пырать пулас. Акă вара «пĕрлештерсе» «союз» тума тăрăшакан господасем, çак теорие—абсолютизма хирĕç протестленипе политикăллă ирĕклĕх ыйтни патне çитерсе лартса, ытти мĕнпур социализмлă тата социализмлă мар ыйтусенчен пăрăнса иртсе кайса тума нимрен те çăмăлтарах тесе шухăшлаççĕ пулас. Паллах, çапла айванла улталанса йăнăшни вăл, çавăн пек пĕрлешме хăтланнă чух малтанхи утăмсенчех пурпĕрех хăйне-хăй пăрахăçа кăларать.

Анчах çак «пĕрлештерекен» юхăм вара çакăн пирки паллă: вăл—кĕрешÿллĕ, революциллĕ народничествăран политикăллă-радикаллă демократизм пулса кайнă процесăн (эпĕ ăна çÿлерех паллă тума тăрăшрăм) юлашки сыпăкĕсенчен пĕрне палăртса тăрать. Мĕнпур социал-демократла мар ушкăнсем асăннă ялав айĕнче таччăн чăмăртанса пĕрлешесси вăл—*демократиллĕ* требованисен çирĕп программине—вырăссен пурăнăçĕ хăйне уйрăм çулйĕрпе аталанса пырасси çинчен калакан кивĕ тĕшмĕшлĕхсенчен пĕтĕмĕшпех тасалнă программа туса хатĕрлесен кăна пулма пултарать. Çакăн йышши демократиллĕ парти тăвассине социал-демократсем, паллах, малалла пыракан усăллă утăм тесе шутлаççĕ, çавăнпа та вĕсен народничествăна хирĕç пыракан ĕçĕ çакна тума пулăшмалла, пур тĕрлĕ тĕшмĕшлĕхсемпе мифсене те кăклаcа пĕтерме, социалистсене марксизм ялавĕ айне пухса пĕрлештерме, ытти ушкăнсене демократиллĕ парти туса хума пулăшмалла.

Социал-демократсен—рабочисене хăйне уйрăм рабочи партие организацилени кирлĕ тесе шутлакансен, çак партипе те, паллах, «пĕрлешесси» пулма путараймĕччĕ—анчах рабочисем реакциллĕ учрежденисене хирĕç демократсем хуть те мĕнле кĕрешнине те чи вăйлăн пулăшса тăрĕччĕç.

Народничество вакбуржуаллă радикализмăн çакăн йышши куллен-кунах тĕл пулакан теорийĕ пулса кайни,—ун çинчен «халăх тусĕсем» чи уççăн пĕлтерсе тăраççĕ,—вăл пире рабочисене абсолютизма хирĕç кĕрешес идейăна, çав вăхăтрах пирĕн обществăллă отношенисем антагонизмлă пулса тăнине, çавăн пирки политикăллă ирĕклĕхшĕн буржуази идеологĕсем те тăнине кă-

тартса памасӑр, вырӑс рабочийӗн историллӗ рольне, вӑл пӗтӗм ӗҫхалӑхне ирӗке кӑларасшӑн кӗрешекен пулса тӑнине кӑтартса памасӑр ӑнлантаракансем мӗн тери пысӑк йӑнӑш тунине, кӑтартать.

Социал-демократсене, вӗсем Маркс теорийӗпе пӗр хӑйсем кӑна усӑ курма тӑрӑшаççӗ, чӑннипе вара, имӗш, унӑн экономикӑллӑ теорине пур социалистсем те йышӑнаççӗ тесе ӳпкелешсе айӑплама юратаççӗ. Анчах та, Российӑра пирӗн ӗçсыннине эксплуатациленине, пӗтӗмӗшпе илсен, пур çӗрте те пачах обществӑллӑ хуçалӑха буржуаллӑ организациленипе мар, ун вырӑнне, сӑмахран—çӗр сахаллипе, тӳлевсем пысӑккипе, администраци пусмӑрӗпе ӑнлантараççӗ пулсан,—рабочисене стоимость форми çинчен, буржуаллӑ йӗркесен тупсӑмӗ çинчен тата пролетариатӑн революциллӗ ролӗ çинчен ӑнлантарса пани мӗне кирлӗ пултӑрха вара апла?

Мӗне кирлӗ пултӑр рабочисене класс кӗрешӗвӗн теорине ӑнлантарса пани, ку теори унӑн хӑйӗн (пирӗн капитализма правительство юри туса хунӑ), фабрикӑсенчи рабочисен аталанса çитнӗ класне кӗмен «халӑх» масси çинчен каламасӑр та ӗнтӗ, фабрикант патне мӗнле отношенисем пулмаллине те ӑнлантарса параймасть пулсассӑн?

Коммунизм патне илсе пыракан çула пирӗн капитализмран пуçне тата вӑл туса хатӗрлекен пролетариатран пуçне урӑх тӗлте шыраççӗ пулсан, вара Марксӑн экономикӑллӑ теорине тата çав теорирен тухса тӑракан, пролетариатӑн капитализм урлӑ коммунизма организацилекен революциллӗ ролӗ çинчен калакан выводне — епле майпа йышӑнма май пултӑр-ха?

Уççӑнах паллӑ, ун пек условисенче рабочине политикӑллӑ ирӗклӗхшӗн кӗрешме чӗнни — ӑна малта пыракан буржуази валли хӑй аллипе кӑвар туртма хушнипе танах пулать, мӗншӗн тесен политикӑллӑ ирӗклӗх пуринчен малтан буржуази интересӗсемшӗн усӑллӑ пулассине (ак çакӑ характернӑ: ӑна народниксемпе народоволецсем те йышӑнмасӑр тӑман), рабочисен пурнăçне вӑл çӑмӑллатма мар, *çак буржуазине хӑйне хирӗç* кӗрешме çӑмӑллатакан условисем кӑна... çавна кӑна туса парассине, йышӑнмасӑр тӑма пӗртте май çук. Эпӗ кӑна социалистсене хирӗç, социал-демократсен теорине йышӑнмасӑрах, опыт тӑрӑх революциллӗ элементсене рабочисен хушшинче кӑна тума май пуррине пӗлсе çитсе, рабочисем хушшинче агитацилесе ӗçлеме пикеннӗ социалистсене хирӗç калатӑп. Кун пек социалистсем хӑйсен теорине практикӑна хирӗç тӑрataççӗ те, рабочисене хӑйсен тӳррӗм задачисенчен — ***социализмла рабочи парти организацилессинчен*** пӑрса ярса, питӗ пысӑк йӑнӑш тӑваççӗ*.

---

* Рабочисене абсолютизма хирӗç кӗрешме çӗклемелле текен вывод патне икӗ çулпа пыма пулать: *е* рабочи çине, вӑл социализмла стройшӑн кӗрешекен пӗртен-пӗр вӑй пулса тӑнине йышӑнса пӑхмалла, ун чухне вара политикӑллӑ ирӗк вӑл — рабочие кӗрешме çӑмӑллатакан условисенчен пӗри пулнине йышӑнмалла пулать. Ӗç çине социал-демократсем çапла пӑхаççӗ те. *Е* ун çине

Ку йăнăш, паллах, буржуаллă обществăн класлă антагонизмĕсем крепостной йĕркесемпе пусăрăнса тăнă пирки пĕртте аталанман чухне çуралса тухнă; ун чухне крепостной йĕркесен пусмăрлăхĕ пĕтĕм интеллигенцие пĕрлештерсе протест тата кĕрешӳ кăларса тăнă, çакăн пирки вара — пирĕн интеллигенци уйрăмах демократизмли çинчен, либералсемпе социалистсен идейисем хушшинче тарăн уйрăмлăх çукки çинчен калакан иллюзи пула-пула тăнă. Ёлĕкрех Российăра капитализмă аталанма никĕс çук текен çынсем те, халĕ — экономикăллă аталану çав тери малалла кайнă пирки, эпир шăпах капитализмлă аталанса пырас çул çине тăнине йышăннă чухне, ку тĕлĕшпе нимĕнле иллюзисем те пулма пултараймаççĕ. «Интеллигенци» составĕ, материальнăй хаклăхсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен общество составĕ пекех, уççăн палăрса пырать: общество составĕнче пĕтĕм ĕçе капиталист тытса тăрать пулсан, малтанхинче вара — карьеристсен тата буржуази тара тытнă çыннисен хăвăртран хăвăртрах ӳссе пыракан ушкăнĕ, — кăмăлне тултарнă, канăçлă, хуть те мĕнле тĕлленӳсене те парăнман, хăй мĕн тăвас тенине лайăх пĕлекен «интеллигенци» тон парса тăрать. Пирĕн радикалсемпе либералсем çак факта йышăнмаççĕ кăна мар, пачах урăхла, ăна тăрăшсах палăртаççĕ, вăл лайăх маррине кăтартма тăрăшса, ăна айăплаcа, ăна çĕмĕрсе тăкма, намăслантарма... пĕтерсех лартма тăрăшса мекĕрленеççĕ. Буржуаллă интеллигенцие — вăл буржуаллă пулнăшăн çапла айванла хăтланса *намăслантарма* тăрăшни, ку ĕнтĕ шăпах — мещанла экономистсем пирĕн буржуазине («аслă пиччĕшĕсен» опычĕ çине кăтартса) халăха тусанасси патне, массăсене кĕлмĕçлĕх, ĕççĕрлĕх, выçлăх патне илсе пырать тесе хăратма тăрăшни пекех кулăшла; буржуазипе унăн идеологĕсене çапла суд туни — çăрттана суд туса шыва пăрахма йышăннă пекех туйăнать. Çак чикĕ хыçĕнчен вара либераллă тата радикаллă «интеллигенци» пуçланса каять; вăл, прогресс, наука, чăнлăх, халăх, т. ыт. çинчен те вĕçĕмсĕр сăмах тăкать; вăл харкашу, кăмăл пусăрăнни, кичемлĕх, салхуланни пулман чухнехи, пур чĕресем те демократизм çулăмĕпе çунса тăнă чухнехи 60-мĕш çулсем çинчен йĕме юратать.

Хăйсене тивĕçлĕ айванлăха пула, ку господасем, ун чухнехи килĕшӳллĕх вăл — ун чухнехи калле таварăнма пултарайман материальнăй условисенчен килнинениепле те ăнланса илесшĕн мар: крепостной право пурне те пĕр пек хĕссе тăнă — чылай укçа пухса ырлăх кăна курса пурăнасшăн пулнă крепостной бурмистра та, хуçалăхне тĕреклĕ тытакан мужике те, тĕрлĕ тӳлевсем пуçтарнă пирки тата хуçалăха хутшăнса хуçалăхран пĕрех

---

просто, вăл кучухнехи йĕркесенчен пуринчен ытла асапланса тертленекен çын пулнă шутпа, унăн çухатасси ĕнтĕ нимĕн те çук, çавăнпа вăл абсолютизма хирĕç пуринчен те татăклăнрах кĕрешме пултаракан çын çине пăхнă пек пăхмалла. Анчах çакă вăл — рабочие буржуаллă радикалсен хӳри вĕçĕнче, пĕтĕм «халăх» абсолютизма хирĕç кĕрешме пĕр пулса тăнă пирки, буржуазипе пролетариат хушшинчи антагонизма курасшăн мар пулнă буржуаллă радикалсен хыçĕнче сĕтĕрĕнтерсе пыртарни пулать те ĕнтĕ.

май уйăрса тăнăшăн улпута курайман мужике те, дворовăй-пролетарие те, купец аллине чуралăха сутса янă, чухăнланса юлнă мужике те; унран купец-фабрикант та, рабочий те, кустарь те, пĕчĕк маçтăр та асап тӳссе пурăннă. Çак мĕнпур çынсем хушшинче, вĕсем пур те крепостничествăна хирĕç тăнă пирки кăна çыхăну пулнă тя: çак килĕшӳрен иртсен вара хуçалăхла чи хаяр антагонизм пуçланнă. Пурăнăç чăннипе кĕрешме хушнă чухне, вăл кашнинех, буржуазийĕн *ирĕккĕн е ирĕк* мар пулăшаканĕ пуласшăн маррисене, пролетариат енне тăма хушнă чухне, çакă çав тери аталанса кайнă антагонизма, халичченех курмасăр тăрас пулсан, килĕшӳ вăхăтне каялла тавăрасшăн макăрашас пулсан, хăна-ху тутлă тĕлленӳсемпе, чăн та, мĕн тери йăпатмалла-ха!

Эсир «халăх интересĕсем» çинчен каланă илемлĕ сăмахсене ĕненмесĕр, тарăнрах чакаланса пăхма шут тытсан—вара хăвăр умăрта тĕрлĕрен айăпсăр прогрессемпе хăйсен (вĕсен чĕлхипе калас пулсан — «халăхăн») хуçалăхне пулăшасси, ура çине тăратасси, лайăхлатасси çинчен ĕмĕтленекен вак буржуазийĕн, çак производствăллă отношенисем çинче тăнă чухне, çак мĕнпур прогрессем массăсене тарăнран-тарăн пролетаризацилесе кăна пырассине пĕртте ăнланма пултарайман вак буржуазийĕн таптаса идеологĕсене курăр. «Халăх тусĕсене», вĕсем пирĕн интеллигенцин класлă характерне ăнлантарса çитерес тĕлĕшпе нумай пулăшнăшăн, çавăнпа вара—пирĕн вак производительсен вак-буржуаллăхĕ çинчен калакан марксистсен теорине пушшех çирĕплетнĕшĕн тавтумасăр хăварма юрамасть; вĕсем, вырăс социалисчĕсене çав тери нумай вăхăт иккĕлентерсе тăнă кивĕ иллюзисемпе мифсене пĕтерес ĕçе хуть мĕн пулсан та васкатма тивĕçех. «Халăх тусĕсем» çак теорисене çав тери тыткаласа, сĕĕтркелесе, вараласа пĕтернĕ пирки, вăл теорисене ĕненсе пурăннă вырăс социалисчĕсен умне халĕ хуть епле пулсан та çакăн пек ыйту тухса тăрать—е çак теорисене çĕнĕрен пăхса тухмалла, е вĕсене пачах ывăтса ямалла; хăйсемпе хăйсем савăнса, пĕтĕм тĕнче тăрăх — хресчен хушшинчи пуянсем лайăхлатнă ĕçхатĕрĕсем илни çинчен urbi et orbi* пĕлтерекен, серьезнăй пек пулса, симĕс çивиттиллĕ сĕтелсем хушшинче ларса йăлăхнă çынсене хапăлласа йышăнмалла тесе ĕнентерекен господасене пĕр-пĕччен усă курма парса хăвармалла. Çав ăнланупа ĕнтĕ вĕсем «халăх стройĕ» çинчен тата «интеллигенци» çинчен серьезнă кăна мар, çитменнине тата сарлака идеалсем çинчен, пурнăç ыйтăвĕсене идеал тĕлĕшĕнчен лартасси çинчен темле ĕмĕтлĕ çав тери пысăк фразăсемпе калаçаççĕ!

Социалистла интеллигенци, иллюзисене тĕп туса пĕтерсе, таянмалли тĕреке Россия мĕнле аталанма пултарассинче мар, вăл мĕнле аталанса пынинче, обществăллă-экономикăллă отношенисем мĕнле пулма пултарассинче мар, вĕсем чăннипе мĕнле пулнинче шырама пуçласан тин çеç хăй ăнаçлă ĕçлесси çине шанма пултарать. Çавăн чухне унăн **теориллĕ** ĕçĕ вара — *Российăра экономикăллă антагонизмăн пур формисене те, вĕ-*

---

*—пĕтĕм тĕнчене. *Ред.*

*сен çыхăнăвĕсене тата вĕсем умлăн-хыçлăн епле аталанса пынине конкретлăн тĕпчесе* вĕренес çулйĕрпе ямалла пулать. Унăн *çак антагонизма, политикăллă историпе, право йĕркисен уйрăмлăхĕсемпе, çирĕпленсе юлнă теорилле тĕшмĕшлĕхсемпе витĕнсе тăракан тĕлсенче пур çĕрте те уçса кăтартмалла. Вăл пирĕн пурăнăçăн, производствăллă отношенисен паллă системи пулса тăраканскерĕн, тулли картинине сăнласа памалла, çак система чухне ĕççыннисене пурпĕрех эксплуатацилесе, экспроприацилесе тăрассине кăтартмалла, çак йĕркесенчен тухмалли çулйĕре экономикăллă аталану тĕл кăтартса панă пек кăтартса памалла.*

Çакă, вырăс историйĕпе пурăнăçне пур енчен те тĕпĕ-йĕрĕпех тĕпчесе никĕсленĕ теорийĕн, пролетариата кирлĕ ыйтусем çине ответ памалла, вара наука тĕлĕшĕнчен вăл тĕп-тĕрĕсех пулсассăн, пролетариатăн протестлекен шухăшĕ хуть мĕнле вăранни те, çак шухăша пурпĕрех социал-демократизм çулĕ çине илсе тухать. Çак теорие тăвас ĕç малалла пынăçемĕн, социал-демократизм хăвăртрах ӳссе пырĕ, мĕншĕн тесен кучухнехи йĕркесене чи чеен сыхласа тăракансем те пролетариатăн шухăшĕ вăранассине кансĕрлеме вăй çитерес çук; вăйĕсене çитерес çук, мĕншĕн тесен ку йĕркесем пурпĕрех, хăть те мĕн пулсан та, производительсене вăйлăрах та вăйлăрах экспроприацилессине çуратса пыраççĕ, пролетариата тата унăн резервлă çарне ытларан-ытла ӳстерсе пыраç çĕ,— çитменнине ку — общество пуянлăхĕ прогресланса пынипе, производительнăй вăйсем тем териех ӳснипе, капитализм ĕç вăйне пĕрлештерсе пынипе пĕрле пулса пырать. Çакăн йышши теорие тупса çитерме мĕн тери нумай ĕç тăвасси юлнă пулсассăн та, социалистсем ку ĕçе туса çитерессине кăтартакан шанчăк вăл — вĕсем хушшинче пĕртенпĕр наукăллă метод, кирек хăш программăра та пурăнăçри чăнчăн процеса тĕрĕс çырса хуни пулма хушакан метод—материализм сарăлса пыни пулса тăрать; вăл шанчăк—çав идейăсене йышăннă социал-демократсен ăнăçлăхĕ пулса тăрать; ку ăнăçлăх вара пирĕн либералсемпе демократсене çав тери канăçсăрлатса янă, ун пирки вара, пĕр марксист калан тăрăх, вĕсен хулăн журналĕсем кичемлĕхне йăлтах çухатнă.

Социал-демократсен теориллĕ ĕçĕ питех те кирлĕ, паха, пысăк пулнине çапла уйрăмах асăрхаттарса палăртнипе эпĕ пĕртте, вăл ĕçе *практикăллă** ĕçрен мала лартмалла, е унтан та сахалтарах — иккĕмĕш ĕçе малтанхине туса пĕтериччен тытăнмалла мар, тесе каласшăн мар. «Социологири субъективлă метода» пуççапса тăракансем е утопиллĕ социализма ĕненекенсем кăна çап-

* Пачах урăхла. Пĕрремĕш вырăна, ак çак сăлтавсем пирки, епле пулсан та яланах пропагандăпа агитацийĕн практикăллă ĕçĕ тухса тăрать: пĕрремĕшĕнчен, теориллĕ ĕç вăл-иккĕмĕш ĕçе кăларса тăратакан ыйтусем çине ответсем кăна парать. Иккĕмĕшĕнчен вара, социал-демократсен ытлашши час-часах, ирĕксĕрех, хăйсенчен килмен обстоятельствăсем пирки, практикăллă ĕçлеме май пур чух, кашни самантах ытлашши хакламалла ан пултăр тесе пĕр теориллĕ ĕçпех чарăнса тăмалла килет.

ла заключени тума пултарĕччĕç. Паллах ентĕ, социалистсен задачи вăл — çĕршыв «аталанăвĕн (чăн пурăнăçри çулĕсенчен пуçне) урăх çулĕсене» шырасси пулать тесе шутлаççĕ пулсан, ун чухне хăех паллă, практикăллă ĕçе — гениллĕ философсем çак «урăх çулсене» шыраса тупса кăтартса парсан тин тума май пулса тăрать; е урăхла та, çак çулсене тупса кăтартса панă пултăр — теориллĕ ĕç пĕтет те, «çĕршывӑмăра» çак «çĕнĕрен шыраса тупнă» «урăх çулпа» яма тивĕç çынсен ĕçĕ пуçланса каять. Пролетариат хăйĕн çак обществӑллă-экономикăллă аталанăвĕн *чăн-чăн* çулĕ çинче тăракан чăн-чăн тăшманĕсене хирĕç чăн-чăн кĕрешнĕ вăхăтра, социалистсен задачи пролетариатăн идейăллă руководителĕ пулса тăрасси чухне, ĕç пачах урăхла пулса тăрать. Кун пек условисенче вара теориллĕ тата практикăллă ĕç пĕрлешсе, пĕр ĕç пулса каяççĕ, ăна Германири социал-демократи ветеранĕ Либкнехт çак сăмахсемпе çав тери тĕл характеристика панă:

Studieren, Propagandieren, Organiseren*.

Теори тĕлĕшĕнчен çӳлерех каланă пек ĕçлемесĕр идейăллă руководитель пулма май çук, çакăн пекех вăл ĕçе кирлĕ çулпа илсе пымасăр, çак теори результачĕсене рабочисем хушшинче пропагандăласа сармасăр, вĕсене организацилеме пулăшмасăр руководитель пулма май çук.

Задачăна çакăн пек лартни социалистсен ушкăнĕсене çавтери час-час тертлентерекен çитменлĕхсенчен, — догматизмпа сектаторствăран сыхласа тăрать.

Вĕрентĕвĕн чи аслă пĕртен-пĕр виçи обществăллă-экономикăллă аталанăвăн чăн процесĕпе килĕшсе шайлашăнни пулса тăнă чух, догматизм пулма пултараймасть; задача — пролетариата организациленме пулăшасси пулса тăнă чухне, апла пулсан, «интеллигенци» ролĕ хăйне уйрăм интеллигентлă руководительсене кирлĕ мар тăвасси пулса юлнă чухне, сектаторство пулма пултараймасть.

Çавăнпа та ĕнтĕ, марксистсем хушшинче тĕрлĕ теорилĕ ыйтусем тăрăх разногласисем пур пулсан та, вĕсен политикăллă ĕç меслечĕсем, хăйсен ушкăнĕ пуçланнăранпа халиччен ех, малтанхисемех пулса юлаççĕ.

Социал-демократсен политикăллă ĕçĕ Российăри рабочисен движенине аталантарса организацилеме пулăшасси, ăна хальхи пек ертсе пыракан идейăсăр, сапаланчăкăн протестсем, «пăлхавсем» стачкăсем тума хăтланнă лару-тăруран кăларса вырăссен *пĕтĕм* рабочи *класĕн* организациленнĕ кĕрешĕвĕ туса ярасси пулса тăрать; çак кĕрешӳ буржуаллă йĕркене хирĕçле пырса экспроприаторсене экспроприацилеме, ĕççыннине пусмăрлани çинче тытăнса тăракан обществăллă йĕркесене пĕтерме тăрăшмалла. Çак ĕçĕн никĕсĕнче, вырăс рабочийĕ вăл — Российăри ĕçлекен, эксплуатациленсе пурăнакан халăхăн пĕртен-пĕр тата ти-

---

* — тĕпчесе вĕренес, пропагандăлас, организацилес. *Ред.*

вĕçлĕ представителĕ пулнине марксистсем ĕненсе тăни пулать*.

Тивĕçлĕ тетĕп, мĕншĕн тесен Российăра ĕççыннине эксплуатацилени, крепостной хуçалăхăн пĕтсе пыракан юлашкийĕсене шутламасан, *пур çĕрте те хăйĕн ăшчикĕпе капитализмлă* эксплуатаци пулса *тăрать*; анчах, производительсен, массине эксплуатацилени — вĕтĕ, вакланса пĕтнĕ, аталанса çитмен; çав вăхăтрах фабрикăсемпе заводсенчи пролетариата эксплуатацилени—шултăра, пĕрлешĕннĕ, концентрациленнĕ. Малтанхи чухне—çак эксплуатацие вăтам ĕмĕрхи формăсем, тĕрлĕрен политикăллă, юридически тата йăла ланчашкисем, тĕрлĕрен чее меслетсем, ултавсем хупласа илнĕ; вĕсем вара ĕççыннине тата унăн идеологине ĕççыннине пусарса тăракан йĕркесен ăшчиккине курма, çав йĕркесенчен ăçталла тата мĕнле майпа тухмалли çулйĕре курма кансĕрлесе тăраççĕ. Юлашки чухне, пачах урăхла: кунта эксплуатаци йăлтах аталанса çитнĕ те ĕнтĕ, çавăнпа тап-таса сăнлăн, ĕçе пăтраштарса тăракан вак-тĕвексемсĕр палăрса тăрать. Рабочи хăйне *капитал* пусмăрласа тăнине, буржуази *класне* хирĕç кĕрешмелле пулнине курмасăр тăма пултараймасть ĕнтĕ. Рабочисен çак кĕрешĕвĕ вара, хăйсен экономикăлла чи çывăх нушисене витсе, материальнăй пурăнăçне лайăхлатас енĕпе пыракан кĕрешĕвĕ рабочисене епле пулсан та организациленме хушать; çак кĕрешӳ епле пулсассăн та — уйрăм çынна хирĕç мар, ***класа*** хирĕç, — фабрикăсемпе заводсенче кăна мар, пур çĕрте те, пур тĕлте те ĕççыннине пусмăрласа хĕсекен класа хирĕç пыракан вăрçă пулса тăрать. Акă мĕн пирки фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекен рабочи вăл — пĕтĕм эксплуатациленсе пурăнакан халăхăн малта пыракан представителĕсенчен ытла мар; çавăнпа та организациленсе, вĕçне çити çирĕппĕн пыракан кĕрешӳре вăл хăйĕн представитель рольне пурăнăçа кĕрттĕр тесен, — пĕртте мĕнле те пулин «перспективăсемпе» каçса кайни кирлĕ мар; ăна тума *хăйĕн положенине просто ăнлантарса пани* кăна, хăйне пусмăрласа тăракан системăн политикăллă-экономикăллă стройне ăнлантарни, çак система чухне класлă антагонизм пурĕпĕрех пулма кирлине ăнлантарса пани кăна кирлĕ. Фабрикăпа заводсенче ĕçлекен рабочи капитализмлă отношенисен пĕтĕмĕшле системинче çакăн пек вырăн йышăнса тăни, ăна рабочи класа ирĕке кăларассишĕн пĕртен-пĕр кĕрешекен туса хурать, мĕншĕн тесен капитализм аталанса çитнĕ чи çӳлĕ пусăм, машинăллă шултăра индустри кăна çак кĕрешӳ валли кирлĕ материальнăй условисемпе социальнăй вăйсем туса хурать. Ытти пур тĕлте те, капитализм аталанăвĕн аялти формисем чухне, ку материальнăй условисем çук: производство пиншер чи вак-тĕвек хуçалăхсем çине пайланса тăрать (ку хуçалăхсем—çĕре общинăсем чи танлаштарнă формăсемпе тытса тăнă чух та вакланса пĕтнĕ *хуçалăхсем* пулма пăрахмаççĕ), эксплуатациленe-

* Российăра пулас çын, вăл — мужик, тесе шухăшланă хресченле социализм представителĕсем, народниксем (сăмаха чи анлă пĕлтерĕшĕпе калас пулсан). Российăра пулас çын, вăл — рабочий, тесе шухăшлаççĕ социал-демократсем. Çапла каласа панă марксистсен шухăшне пĕр алçырăвĕнче.

кен хӑй аллинче пуринчен ытларах пӗчӗкҫеҫҫӗ хуҫалӑх тытса тӑрать-ха, ҫак майпа вара вӑл шӑпах хӑй кӗрешме тивӗҫ буржуаллӑ система ҫумне ҫыхӑнса ларать; ҫакӑ вара капитализма ҫӗнтерсе антарма пултаракан социальнӑй вӑйсене аталанма чарса кансӗрлесе тӑрать. Вак-тӗвекӗн пайланнӑ, пӗчченшер, вакшар эксплуатаци ӗҫҫыннисене пӗр вырӑна ҫыхса лартать, вӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрать, хӑйсен класлӑ пӗрешкел интересӗсене ӑнланса илме памасть, пусмӑрлӑх сӑлтавӗ — вӑл е ку уйрӑм ҫын мар, — пӗтӗм хуҫалӑх системи пулса тӑнине ӑнланса, пӗр-пӗринпе пӗрлешме май памасть. Шултӑра капитализм, пачах урӑхла, рабочи кивӗ обществӑпа, пӗр вырӑнпа тата пӗр-пӗр эксплуататӑрпа пур тӗрлӗ ҫыхӑнса тӑрассине те йӑлтах пӗтерет, ӑна пӗрлештерет, шухӑшлаттарать, ӑна организациленнӗ кӗрешӳ пуҫлама май паракан условисене кӑларса тӑратать. Рабочисен класне пӗрех май асра тытса, пӗтӗм ӗҫне вӗсен интересне пӑхӑнтарса тӑваҫҫӗ те ӗнтӗ социал-демократсем. Унӑн малта пыракан представителӗсем наукӑллӑ социализм идейисене, вырӑс рабочийӗн историллӗ ролӗ ҫинчен калакан идейӑна ӑнланса ҫитсессӗн, ҫак идейӑсем анлӑ сарӑлсассӑн тата рабочисем хушшинче рабочисен хальхи сапаланчӑкӑн пулса пыракан экономикӑллӑ вӑрҫине ӑс-тӑнлӑ класлӑ кӗрешӳ туса хуракан ҫирӗп организацисем пулса ҫитсессӗн, — ун чухне вара вырӑс ***рабочийӗ***, пӗтӗм демократиллӗ элементсен пуҫӗнче тӑрса ҫӗкленсе, абсолютизма йӑвантарса пӑрахӗ те, ***вырӑс пролетариатне*** (***пӗтӗм ҫӗршывсенчи*** пролетариатпа ҫумлӑн) уҫӑ ***политикӑллӑ кӗрешӗвӗн тӳп-тӳрӗ ҫулӗпе ҫӗнтерӳллӗ коммунистла революци тума ертсе кайӗ.***

Вӗҫӗ.

1894.

---

АВТОР
III-МĔШ
ВЫПУСК ÇУМНЕ
ХУШСА ПАНĂ
ПРИЛОЖЕНИСЕМ

| Кил хуçисен разрячĕсем тата вĕсен шучĕ | | Чун хисепĕ арçынни-хĕрарăмĕ пĕрле 1 | Ĕçлекен арçынсен хисепĕ 2 | Тарçăсем: Тарçă тытакан килсем 3 | Тарçăсем: Тарçăсен хисепĕ (арçынни-хĕрарăмĕ пĕрле) 4 |
|---|---|---|---|---|---|
| Пуян пурăнакан 6 килхуçи. | Сумма . . . . . . . . . . . . . . | 47 | 11 | 6 | 8 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . . . | 7,33 | 1,3 | — | — |
| Вăтам пурăнакан 11 килхуçи. | Сумма . . . . . . . . . . . . . . | 92 | 26 | 2 | 2 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . . . | 8,36 | 2,4 | — | — |
| Чухăн пурăнакан 7 килхуçи. | Сумма . . . . . . . . . . . . . . | 37 | 10 | 2 | 2 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . . . | 5,28 | 1,4 | — | — |
| Мĕн пурĕ 24 килхуçи. | Сумма . . . . . . . . . . . . . . | 176 | 47 | 10 | 12 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . . . | 7,33 | 1,9 | — | — |
| Чухăннисен шутне кĕнĕ 2 тарçă. | Сумма . . . . . . . . . . . . . . | 9 | 2 | — | — |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . . . | 4,5 | 1 | — | — |

| ЯТ ÇĔРĔ тесе-тинпа | АРЕНДА | | Сухаланă çĕр мĕн пурĕ | Çурт-йĕр хисепĕ | Промышленность заведенийĕсен хисепĕ | Çĕр ĕçлемелли хатĕрсен хисепĕ | ВЫЛЬĂХ (пуçпа) | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Килĕ | Тесетин | | | | | Ĕç выльăхĕ | Шултăра выльăх тăрăх шутласан мĕн пурĕ |
| 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 |
| 132,6 | 6 | 52,8 | 123,4 | 52 | 4 | 224 | 35 | 81 |
| 22,1 | — | 8,8 | 20,6 | 8,6 | — | 37,3 | 5,8 | 13,5 |
| 101,2 | 10 | 85,5 | 140,2 | 70 | — | 338 | 40 | 89,1 |
| 9,2 | — | 7,7 | 12,7 | 6,4 | — | 30,7 | 3,6 | 8,1 |
| 57,8 | 4 | 19,8 | 49,8 | 31 | — | 108 | 7 | 15,3 |
| 8,5 | — | 2,8 | 7,1 | 4,4 | — | 15,4 | 1 | 2,2 |
| 291,6 | 20 | 158,1 | 313,4 | 153 | 4 | 670 | 82 | 185,4 |
| 12,1 | — | 6,6 | 13 | 6,4 | — | 27,9 | 3,4 | 7,7 |
| 14,4 | — | — | 6,8 | 6 | — | 11 | — | 1,1 |
| 7,2 | — | — | 3,4 | 3 | — | 5,5 | — | 0,5 |

| КИЛ ХУҪИСЕН РАЗ-РЯЧĔСЕМ ТАТА ВĔСЕН ШУЧĔ | | ХАКĔ ТЕНКĔПЕ ШУТЛАСАН | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Ҫурт-йĕрсем 14 | Ытти куҫма пултарайман пурлăхсем 15 | Инвентарь 16 | Килти савăт сапа 17 | Тумтир 18 | Выльăхпа хурт-хăмăр 19 | МĔН ПУРĔ 20 |
| Пуян пурăнакан 6 килхуҫи | Сумма . . . | 2696 | 2237 | 670,8 | 453 | 1294,2 | 3076,5 | 10427,5 |
| | 1 хуҫалăх пуҫне вăтамран . . | 449,33 | 372,83 | 111,80 | 75,5 | 215,7 | 512,75 | 1737,91 |
| Вăтам пурăнакан 11 килхуҫи | Сумма . . . | 2362 | 318 | 532,9 | 435,9 | 2094,2 | 2907,7 | 8650,7 |
| | 1 хуҫалăх пуҫне вăтамран . . | 214,73 | 28,91 | 48,44 | 39,63 | 190,38 | 264,33 | 786,42 |
| Чухăн пурăнакан 7 килхуҫи | Сумма . . . | 835 | 90 | 112,3 | 254 | 647,1 | 605,3 | 2543,7 |
| | 1 хуҫалăх пуҫне вăтамран . . | 119,28 | 12,85 | 16,04 | 36,29 | 92,45 | 86,47 | 363,38 |
| МĔНПУРĔ 24 килхуҫи | Сумма . . . | 5893 | 2645 | 1316 | 1142,9 | 4035,5 | 6589,5 | 21621,9 |
| | 1 хуҫалăх пуҫне вăтамран . . | 245,55 | 110,21 | 54,83 | 47,62 | 168,14 | 274,56 | 900,91 |
| Чухăнсен шутне кĕнĕ 2 тарçă | Сумма . . . | 155 | 25 | 6,4 | 76,8 | 129,3 | 9,1 | 401,6 |
| | 1 хуҫалăх пуҫне вăтамран . | 77,5 | 12,5 | 3,2 | 38,4 | 64,65 | 4,55 | 200,8 |

| Кивçен илнĕ недоимкăсем (тенкĕпе) | ДОХОДА ВАЛЕÇНИ | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | Çĕрĕçĕнчен | | Выльăх-чĕрлĕх усраннинчен | Хурт-хăмăр тытнипе с/д пахчи ĕрчетнинчен | Промысласенчен | Заведенисенчен | Тĕрлĕ доходсем | Мĕн пурĕ (тенкĕпе) |
| | Мĕн пурĕ | Вăл шутран тырă акнинчен | | | | | | |
| 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 |
| 80 | 61,2<br>3861,7<br>1774,4 | 2598,2<br>1774,4 | 15,4%<br>972,6<br>396,5 | 4,3%<br>271 | 6,5%<br>412 | 5%<br>320 | 7,6%<br>482,2 | 100%<br>6319,5<br>3656,1 |
| 13,3 | 643,6 | — | 162,1 | 45,2 | 68,6 | 53,3 | 80,4 | 1053,2<br>609,3 |
| 357 | 60,7%<br>3163,8<br>899,9 | 2203,8<br>899,9 | 16,1%<br>837,5<br>423,2 | 0,7%<br>36,1 | 18,8%<br>979,3 | — | 3,7%<br>195,5 | 100%<br>5212,2<br>2534 |
| 32,4 | 287,7 | — | 76,1 | 3,2 | 89 | — | 17,8 | 473,8<br>230 |
| 233,6 | 48,7%<br>689,9<br>175,25 | 502,08<br>175,24 | 22,9%<br>324,2<br>216,6 | 1,9<br>27 | 23,8%<br>336,8 | — | 2,7%<br>39 | 100%<br>1416,9<br>794,64 |
| 33,4 | 98,5 | — | 46,3 | 3,3 | 48,1 | — | 5,5 | 202,4<br>113,5 |
| 670,6 | 59,6%<br>7715,4<br>2849,54 | 5304,8<br>2849,54 | 16,5%<br>2134,3<br>1036,3 | 2,6%<br>334,1 | 13,3%<br>1728,1 | 2,5%<br>320 | 5,5%<br>716,7 | 100%<br>12948,6<br>6984,74 |
| 27,9 | 321,5 | — | 88,9 | 13,9 | 72 | 13,3 | 29,9 | 539,5<br>291,03 |
| 50 | 59,5<br>3 | — | 5,7<br>4,8 | — | 128,8 | — | 4 | 198<br>140,6 |
| 25 | 29,75 | — | 2,85 | — | 64,4 | — | 2 | 99<br>70,3 |

| Кил хуçисен разрячĕсем тата вĕсен шучĕ | | Расходсене | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | Апат-çимĕç | | | | |
| | | | | | Вăл шутра | | |
| | | Мĕн пурĕ | Ӳсен-тăран япаласенчен туни | Ытти апат | сĕт-çу, аш-какай т. ыт. те | Тăвар, ерех, чей | Тумсем тата килти ытти нушасем валли |
| | | 30 | 31 | 32 | 33 | 34 | 35 |
| Пуян пурăнакан 6 килхуçи | Сумма . . . | 29,2%<br>1500,6<br>218,7 | 823,8 | 676,8 | 561,3<br>103,2 | 115,5 | 8,2%<br>423,8 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . | 250,1 | — | — | — | — | 70,63 |
| Вăтам пурăнакан 11 килхуçи | Сумма . . . | 37,6%<br>1951,9<br>257,7 | 1337,3<br>33,4 | 614,6 | 534,3<br>144 | 80,3 | 10,6%<br>548,1<br>49,5 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . | 177,45 | — | — | — | — | 49,83 |
| Чухăн пурăнакан 7 килхуçи | Сумма . . . | 42,1%<br>660,8<br>253,46 | 487,7<br>160,96 | 173,1 | 134,4<br>53,8 | 38,7 | 14,6%<br>229,6<br>26,8 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . | 94,4 | — | — | — | — | 32,8 |
| МĔН ПУРĔ 24 килхуçи | Сумма . . . | 34,6%<br>4113,3<br>729,86 | 2648,8 | 1464,5 | 1230 | 234,5 | 10,1%<br>1201,5<br>134,9 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . | 171,39 | 110,37 | 61,02 | 51,25 | 9,77 | 50,06 |
| Чухăнсен шутне кĕнĕ 2 тарçă | Сумма . . . | 81,7<br>50,7 | 72,1<br>42,5 | 9,6 | 6,1<br>4,7 | 3,5 | 14,9<br>4,6 |
| | 1 хуçалăх пуçне вăтамран . . | 40,85 | — | — | — | — | 7,45 |

| ПАЙЛАНИ | | | | | | | | Таса доход<br>+<br>дефицит<br>— |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Выльăх-чĕрлĕх усрасси | Чĕрĕ тата чĕрĕмар инвентарь туянасси | Тарçă-семпе кĕтÿçĕ тытасси | Аренда | Куланай-сем | Пупсене | Тĕрлĕ расход-сем | Мĕнпурĕ миçе тенкĕ | |
| 36 | 37 | 38 | 39 | 40 | 41 | 42 | 43 | 44 |
| 24,9%<br>1276,6 | 9,4%<br>484,5 | 13,5%<br>691,7 | 6,5%<br>332 | 4,9%<br>253,5 | 1,1%<br>56 | 2,3%<br>116,5 | 100%<br>5135,2<br>2211,5 | +1184,3 |
| 212,76 | 80,75 | 115,29 | 55,33 | 42,25 | 9,33 | 19,42 | 855,86<br>368,6 | + 197,34 |
| 21,2%<br>1098,2 | 5%<br>256 | 0,9%<br>47,6 | 6,8%<br>351,7 | 4,9%<br>254,9 | 1,3%<br>69,9 | 11,7%<br>609,4 | 100%<br>5187,7<br>1896,7 | + 24,5 |
| 99,84 | 23,27 | 4,33 | 31,97 | 23,17 | 6,35 | 55,4 | 471,6<br>172,5 | + 2,19 |
| 15,6%<br>243,7 | 7,1%<br>110,6 | 1,6%<br>24,3 | 6%<br>94,5 | 6,5%<br>101,8 | 1,8%<br>28 | 4,7%<br>73,2 | 100%<br>1566,5<br>712,66 | —149,6 |
| 31,81 | 15,8 | 3,47 | 13,5 | 14,54 | 4 | 10,46 | 223,78<br>101,8 | —21,38 |
| 22,2%<br>2618,5 | 7,1%<br>851,1 | 6,4%<br>763,6 | 6,5%<br>778,2 | 5,1%<br>610,2 | 1,3%<br>153,9 | 6,7%<br>799,1 | 100%<br>11889,4<br>4820,86 | +1059,2 |
| 109,1 | 35,46 | 31,82 | 32,43 | 25,43 | 6,41 | 33,29 | 495,39<br>200,87 | + 44,11 |
| 8 | 53,2 | 0,4 | — | 22,6 | 2,8 | 3,3 | 186,9<br>137,6 | + 11,1 |
| 4 | 26,6 | 0,2 | — | 11,3 | 1,4 | 1,65 | 93,45<br>68,8 | + 5,55 |

# II-МĔШ ПРИЛОЖЕНИ

Г. Струве Ник.—она критикленĕ чухне, «Маркс классен кĕрешĕвĕпе государство ҫинчен вĕрентни вырăс политико-экономĕшĕн пачах ют», текен положение тĕп вырăна лартать, вăл питĕ тĕрĕс те. Струве г-нăн ҫак пысăк мар (4 столбец ҫине пичетленĕ) пĕртен-пĕр статьи тăрăхах унăн пĕтĕм шухăшĕсен системи ҫинчен сӳтсе-явма, эпĕ г. Кривенко пек хăюллă мар (унăн ытти статьисене эпĕ пĕлместĕп); ҫавăн пекех вăл каланă пур положенисемпе те мар килĕшни ҫинчен каламасăр та пултараймастăп эпĕ, ҫавăнпа та унăн пĕтĕм статьине хӳтĕлеме пултараймастăп, вăл каланă, паллă, тĕп положенисене кăна хӳтĕлетĕп. Анчах, мĕнле пулсан та, ҫӳлерех асăннă обстоятельствăна вăл питĕ тĕрĕс хакласа панă: чăн та, капитализмлă обществăра пулса пыракан класс кĕрешӳне ăнланманни вăл—г. Ник.—онăн *тĕп йăнăшĕ*. Ҫак пĕр йăнăшне тӳрлетсессĕнех те ĕнтĕ, унăн теориллĕ тĕпчев ĕҫĕсемпе положенийĕсенчен те социал-демократла выводсем тумалла пулса тăнă пулĕччĕ. Чăн та, классен кĕрешĕвĕ ҫинчен манса кайни, г. Ник.—он марксизма пĕртте ăнланманнине пĕлтерсе тăрать; вăл хăйне-хăй Маркс принципĕсене ҫав тери хытă пăхăнса тăракан ҫын пек кăтартма тăрăшни пирки вара, ăна ҫак йăнăшшăн пушшех те хытă айăпламалла пулать. Маркса хăть кăшт та пулин пĕлекен ҫынсенчен пĕр ҫын та пулин, классен кĕрешĕвĕ ҫинчен вĕрентни унăн пĕтĕм шухăшĕсен системинче тĕп вырăнта тăнине йышăнмасăр тăма пултарĕ-ши вара?

Паллах, г. Ник.—он Маркс теорине, ҫак пункта кăларса пăрахса, йышăнма пултарнă, сăмахран, ку пункт вырăссен пурăнăҫĕпе те, историйĕпе те килĕшсе тăман пирки,—анчах ун чухне, пĕрремĕшĕнчен, Маркс теорийĕ пирĕн йĕркесене ăнлантарса парать, тесе калама май пулаймĕччĕ, вара ҫитменнине ҫак теорипе капитализм ҫинчен те калаҫма май пулаймĕччĕ, мĕншĕн тесен унчухне вара теорие урăхлатса, урăхла капитализм ҫинчен, антагонизмлă отношенисемпе классен кĕрешĕвĕ пулма пултарайман капитализм ҫинчен ăнлану шухăшласа кăлармалла пулĕччĕ. Мĕн пулсассăн та, авторăн, ҫакна асăрхаттарса хăварса, мĕншĕн вăл—

марксизм çинчен А-не каласа, Б-не каласшăн мар пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарса памалла пулнă. Г-н Ник.—он çакăн йышши нимĕнле ĕç те туса пăхасшăн пулман.

Çавăнпа та вара г. Струве: классен кĕрешӳне ăнланманни г. Ник.—она *утопист* туса хурать тесе, питĕ тĕрĕс вывод тунă, мĕншĕн тесен капитализмлă обществăра классен кĕрешӳне курасшăн пулман çын, çак обществăри обществăллă-политикăллă пурнăçăн чăн-чăн содержанине курмасăр юлать те, хăй шухăшласа кăларнă планĕсене пурнăçа кĕртес тесен, ирĕксĕрех айванла ĕмĕтсен хушшинче кăна вĕçсе çӳремелле пулса тăрать. Çакна ăнланман пиркиех вăл тата *реакционер* пулса тăрать, мĕншĕн тесен, «обществăна» тата «государствăна» йăлăнни, урăхла каласан, буржуазийĕн идеологĕсемпе политикĕсене йăлăнни социалистсене тĕрĕс çултан пăрса çех яма, пролетариатăн чи усал тăшманĕсене союзниксен вырăнне хурса шутлаттарма пултарать, рабочисене хăйсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе лайăхрах организациленсе, вăйлăрах, ăнланулларах кĕрешме пулăшас вырăнне, çак кĕрешĕве кансĕрлеме çех пулăшать.—

Г-н Струве статьи çинчен пĕрре калаçма тытăннă чухне, кунта г. Ник.—онăн «Р. Богатство» журналăн 6-мĕш №-че пичетленсе тухнă ответне те пырса тивмесĕр иртме çук.*

Фабрикăсемпе заводсенчи рабочисен йышĕ вăрахăн ӳснине, пĕтĕм халăх хисепĕ ӳснинчен юларах ӳссе пынине палăртакан сведенисене илсе кăтартса, г. Ник.—он çапла шухăшласа калаçать: «пирĕн патăмăрта капитализм хăйĕн «историллĕ миссине» пурăнăçа кĕртеймест кăна мар, çитменнине тата хăй малалла аталанса пырассине те хăех чарса тăрать. Акă, тепĕр тесен, мĕн пирки «хăйĕн çĕршывĕ валли Хĕвеланăç Европа аталанса пынă тата халĕ те аталанса пыракан çулран, урăхла аталану çулйĕрĕ «шыракан çынсем пин хут тĕрĕс тăваççĕ». (Çитменнине кăна, Россия çав капитализм çӳлĕпех аталанса пынине йышăнакан çын çырать вĕт-ха тата!). Çак «историллĕ миссие» пурăнăçа кĕртменнине г. Ник.—он çакăнта курать: «общинăшăн тăшманла хуçалăх юхăмĕ (урăхла каласан: капитализм) унăн пурнăçĕн никĕснех çĕмĕрет, анчах, Хĕвеланăç Европăшăн питĕ характерлă пулнă пек тата Çурçĕр Америкăра та уйрăмах вăйлăн палăрма тытăннă пек, вăл хуçалăха çавăн таранах пысăккăн пĕрлештерни пĕртте палăрмасть», тет.

Тепĕр тĕрлĕ каласан, эпир кунта социал-демократсене, паллă г. В. В. шухăшласа кăларнă казенный сăлтавпа айăпланине куратпăр. Вăл та вĕт капитализм çине—департаментри, «капитализма халăх пурнăçне кĕртесси» çинчен калакан государство

* Г-н Ник.—он хăйĕн «Р. Богатство» журналта пичетленнĕ ытти статьисемпе те, ăна халиччен шутлама май пулнă пекех, мещанла радикализмран инçех тăманнине çине тăрсах ĕнентерме тăрăшать пулас; хресченсен буржуазийĕ ӳссе пынинче (6-мĕш №, 118 стр.—«хресченсем» хушшинче лайăхлатнă ĕçхатĕрĕсем, фосфоритсем, т. ыт. те сарăлаççĕ тенĕ *etc*) вăл «*хресченсем* хăйсем те»(массăлăн экспроприациленекенсем?) «хальхи йывăр пурăнăçран тухма кирлине ăнланнине кăтартакан паллăсене курма пултарать», тесе каласшăн курăнать.

ыйтуне татса паракан чиновник енчен пăхса: «миссине» пурăнăçа кĕртет пулсан—кĕртме юрать, пурăнăçа кĕртмест пулсан—«ан кĕрт», тет. Çапла питĕ çивĕч ăслăн калаçнинчен пуçне, г. В. В.—г. Ник.—он та çаплах,—капитализмăн «миссине» хăйне те чăтма çук киревсĕр, тĕрĕс мар та ансăр ăнланать; çитменнине тата çак господасем, паллах, хăйсем ансăр ăнланнине пĕр чăрманмасăр, каллех социал-демократсем çине йăвантараççĕ: аван-ха вĕсене легальнăй пичете кĕртмеççĕ, вĕсем çинчен, вилнĕ сынсем çинчен суйнă пекех суйма пулать вĕт!

Капитализмăн прогрессивлă, революциллĕ ĕçне Маркс çакăнта курнă: капитализм вăл, ĕçе пĕрлештерсе, çав вăхăтрах тата çак процесăн хăйĕн механизмне пулах «рабочи класа вĕрентет, пĕрлештерет тата организацилет», ăна кĕрешме вĕрентет, унăн «тарăхуне» организацилет, ăна экспроприаторсене экспроприацилеме, политикăллă влаçа туртса илме тата производство хатĕрĕсене «сахал йышлă узурпаторсен» аллинчен туртса илсе, вĕсене пĕтĕм общество аллине пама организацилет» («Капитал», 650).

Акă—Маркс формулировки.

Паллах, «фабрикăсемпе заводсенчи рабочисен хисепĕ» çинчен кунта сăмах та çук: сăмах производство хатĕрĕсене пĕр çĕре пĕтĕçтерсе ĕçе пĕрлештересси çинчен пырать. Уççăнах курăнать: ку виçесен «фабрикăсемпе заводсенче рабочисен хисепĕпе» пĕр пекки ним те çук.

Анчах, Маркса хăйсене еверлĕ ăнлантарса паракансем пирĕн, унăн çак сăмахсене шăпах акă епле урăхлатса ăнлантарнă: капитализм чухне ĕçе пĕрлештерни вăл—фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем пĕр çуртра ĕçлени пулать, çавăнпа та вара, имĕш, капитализм мĕн таран прогрессивлă ĕçленине фабрикăсемпе заводсенчи рабочисен йышĕпе виçмелле!!! Фабрикăсемпе заводсенчи рабочисен йышĕ ӳсет—апла пулсан, капитализм хăйĕн прогрессивлă ĕçне лайăх тăвать; рабочисен йышĕ чакать пулсан —вăл «хăйĕн истори хушнă ĕçне начар тăвать» (г. Ник.—онăн статьинчи 103 стр.), вара «интеллигенцийĕн» «хăйĕн çĕршывĕ валли урăх çулйĕрсем шырамалла» пулать, иккен.

Акă вара Российăри интеллигенци «урăх çулйĕрсем» шырама пикенет. Вăл вĕсене пĕрремĕш теçĕтке çул кăна мар ĕнтĕ шыраса тупма тăрăшать, унпа пĕрлех тата, пĕтĕм вăйĕпе, çакна та ĕнентерсе пама тăрăшать:* капитализм вăл—аталанăвăн «тĕрĕс мар» çулйĕрĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕççĕрлĕхпе кризиссем патне ил-

---

*) Çав доказательствăсем вĕсем капитализмăн иккĕленме çук тата пурпĕрех унпа пĕрле пыраканнисем: халăх юхăнни, кĕлмĕçленни, выçăхни тĕрĕс пулманшăн мар сая каяççĕ, вĕсене сывлăша çеç янă пирки ахалех сая кайса пĕтеççĕ. «Общество»—вăл демократи ялавĕпе витĕнсессĕн те плутократи интересĕсене пурăнăçа кĕртсе пырать, вара паллах, плутократи капитализма хирĕç тухас çук. «Правительство...—ун çинчен хамăр тăшманăн г. Н. К. Михайловскийĕн, пĕр отзывне илсе кăтартам: пирĕн правительство программине эпир мĕн таран сахал пĕлсессĕн те,—вăл пĕррехинче çапла çырсаччĕ,—çапах та ăна, «ĕçре пĕрлештересси» вĕсен программине кĕрес çуккине ĕненес таран пĕлетпĕр ĕнтĕ эпир.

се пырать. Акă 1880-мĕш çулта эпир кризис умĕнче тăрсатăмăр; 1893-мĕш çулта та çавах: çавăнпа та ĕнтĕ ку çултан пăрăнса тухма вăхăт, мĕншĕн тесен, ку çулпах пырсан, пире начар пуласси уççăнах курăнать.

Вырăс буржуазийĕ вара çаврăнса та пăхмасть, «итлет те çиет»: юмахри пек усламсем илме май çук пулçа çитсен чăн та «начар» ĕнтĕ; çавăнпа та ĕнтĕ вăл, либералсемпе радикалсем майлă юрласа, капиталсем ĕççĕр тăрса юлса йӳнелнĕ пирки çĕнĕ чугун çулсем тума пушшех тăрăшса пикенет. Начар çав «пире», мĕншĕн тесен «эпир кивĕ вырăнсенче халăха ним юлми çаратса пĕтернĕ ĕнтĕ, çавăнпа та пирĕн ирĕксĕрех, суту-илӳ капиталĕ пекех пуйтарма пултарайман индустри капиталĕ патне куçма тивет: апла пулсан вара «эпир» Европăри Российăн хĕвелтухăçĕнчипе çурçĕрти енĕсене каятпăр, унта «малтанласа капитал пухас» майсем пĕтмен-ха, çавăнпа та унта, çĕршер процент услам илме пулать, хресченсем буржуаллă сийленни те пулса пĕтмен-ха. Интеллигенци çакна йăлтах курса тăрать, çавăнпа та пĕр ывăнми «эпир» каллех акă крах патне пыратпăр тесе хăратать. Чăн та çĕнĕ крах килет. Вак капиталистсен массисене шултрисем çĕмĕрсе тăкаççĕ, хресченсен массисен çĕрĕçĕнчен кăларса пăрахаççĕ, çĕрĕçĕ вара ытларан та ытла буржуази аллине лексе пырать; кĕлмĕçлĕх, ĕççĕрлĕх, выçăпа вилни вĕçĕ-хĕррисĕр ӳссе каять,—вара «интеллигенци» лăпкă кăмăллăн хăйĕн пророкла пĕлсе калана сăмахĕсем çине тĕллесе кăтартать те, çул-йĕрсем тĕрĕсмарри пирки тата тепĕр хут пăшăрханса кулянать, пирĕн капитализм—тулашри рыноксем çук пирки çирĕп мар, тесе ĕнентерет.

Вырăс буржуазийĕ вара, çавăрăнса та пăхмасть, «итлет те çиет». «Интеллигенци» çĕнĕ çулсем шыранă хушăра, вăл хăйĕн колонийĕсене тем тери пысăк чугун çулсем хыва пуçлать, вĕсенче хăйне валли рынок тума тытăнать, çамрăк çĕршыва буржуаллă йеркесен ырлăхне илсе пырать, унта та промышленноçпа çĕрĕç бужуазине пушшех хăвăрт ӳстерсе çитĕнтерет, производительсен массине ĕмĕрех выçă, ĕççĕр нушаланакан çынсен ретне кĕртсе пăрахать.

Социалистсем малашне те—çулсем тĕрĕс марри пирки ӳпкелешнипех чарăнса тăрса... фабрикăсемпе заводсенчи рабочисен йышĕ ӳрахăн ӳссе пынă пирки... капитализм çирĕп мар, тесе ĕнентерĕç-ши!!?

Çак ача-пăчалла идея* çинчен каласма пуçличчен малтан,

* Ара, капитализм ĕçĕ прогрессивлă пулнине палăртас тесе, ĕçе мĕн тери пĕрлештерсе çитернине илес вырăнне, халăх ĕçĕн отраслин аталанăвĕн çав тери улшăнса тăракан сведенийĕсене илеççĕ пулсан, çакна, чăн та, мĕнел ача-пăчалла идея, тесе каламалла мар-ха ĕнтĕ! Производствăн капитализмлă меслечĕ чухне рабочисен йышĕ пĕрмаях улшăнса тăнине, урăхла пулма та пултарайманнине, вăл—кризиссем, резервлă çар пысăккăшĕ, ĕçе мĕн тери эксплуатацилесе тăни, çынна мĕн тери вăй хуртарса ĕçлеттерни, т. ыт çавăн йышши иккĕмĕш вырăнта тăракан темĕн чухлĕ факторсенчен килнине пурте пĕлеççĕ вĕт.

г. Струве статьинчи критикленекен вырӑна г. Ник.—он питӗ тӗрӗс мар каласа кӑтартнине асӑнмасӑр иртме май ҫук. Унӑн статьинче шӑпах ҫапла каланӑ:

«Автор (урӑхла каласан г. Ник.—он), ӗҫлес тӗлӗшпе вырӑссемпе американецсем хушшинче мӗнле уйрӑмлӑх пурри ҫине тӗллесе кӑтартать пулин те, хуҫалӑх ӗҫӗнчи (erwerbsthätigen) пӗтӗм халӑхран ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсен хисепӗ Российӑри 80%, Пӗрлешӳллӗ Штатсенче вара—44% кӑна шутланать, ҫавӑн чухнех вӑл ҫакна пӗртте асӑрхамасть: Россия капитализмла аталанса пыни шӑпах ҫак 80-па—44 хушшинчи уйрӑмлӑха пӗчӗклетсе пымалла та ӗнтӗ; унӑн историллӗ миссийӗ ҫакӑ пулать те ӗнтӗ, темелле»:

«Миссия» тенӗ *сӑмаха* кунта питӗ вырӑнсӑр каланӑ тесе шутлама пулать, анчах г. Струвен шухӑшӗ мӗнли уҫҫӑнах курӑнать: Россия капитализмла аталанса пыни (ку аталану чӑн та капитализмла иккенне г. Ник.—он хӑй те йышӑнать) ялта пурӑнакан халӑх йышне сахаллатса пырассине г. Ник.—он асӑрхамасӑр юлнӑ, чӑннипе вара ку вӑл—капитализмӑн пӗтӗмӗшлӗ законӗ. Ҫапла ӗнтӗ, ҫак хирӗҫлесе каланӑ сӑмаха суяна кӑларас тесен, г. Ник.—онӑн е 1) хӑй вӑл капитализмӑн ҫак тенденцине манманнине кӑтартса памалла пулнӑ, е 2) капитализмӑн ҫак тенденци ҫуккине кӑтартмалла пулнӑ.

Анчах г. Ник.—он ҫакӑн пек тӑвас вырӑнне, пирӗн фабрикӑсенчи рабочисен йышӗ ҫинчен (унӑн хисепӗ тӑрӑх—халӑхӑн 1% ҫинчен) калакан сведенисене тӗпчеме тытӑнать. Ара, г. Струве фабрикӑри рабочисем ҫинчен калать-им-ха? ара, Российӑри халӑхӑн 20% процентчӗ, Америкӑри халӑхӑн 56% вӑл—фабрикӑри рабочисем-и-ха? «Фабрикӑри рабочисем» тени, тата «ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлемен халӑх» тени—пӗр пек ӑнланусемех-и вара? Российӑра та ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекен халӑх пайӗ чакса пырать тенине хирӗҫ тӑма пулать-и вара?

Ҫапла тӳрлетнӗ хыҫҫӑн—эпӗ ӑна г-н Кривенко ҫак журналтах кунччен малтан та пӗрре суйса кӑтартнӑ пирки пушшех те кирлӗ тесе шутлатӑп,—Ник.—онӑн пирӗн капитализм хӑйӗн миссине пурӑнӑҫа лайӑх кӗртсе пыраймасть тесе калакан идейи ҫине куҫӑпӑр.

Пӗрремӗшӗнчен, «Очерксен»[26] авторӗ пек, фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисен хисепне капитализмла производствӑри рабочисен хисепӗпе, вӗсем пӗрех, тесе пӑтраштарни—пачах ӑссӑр. Ку вӑл Российӑри мещанла экономистсен йӑнӑшне, капитализма тӳрех машинӑллӑ шултӑра индустрирен пуҫлакансен йӑнӑшне, тепӗр хут туни (*е тата ытлашшипех туни*) пулать. Ара, купецсем валли, вӗсен материалӗсенченех, ӗҫукҫишӗн ӗҫлесе пурӑнакан темиҫе миллион вырӑс кустарӗсем—капитализмла производствӑра ӗҫлемеҫҫӗ-им апла? Ара, ҫӗрӗҫӗнчи тарҫӑсемпе кунӑн кӗрешсе ӗҫлекенсем хӑйсен хуҫисенчен ӗҫукҫи илмеҫҫӗ-им, ытлашши стоимость парса тӑмаҫҫӗ-им? Ара (реформа хыҫҫӑн хӑвӑрт аталанса

пыракан) строительнăй промышленноçра ĕçлекен рабочисем—капитализмлă эксплуатацие тÿссе пурăнмаççĕ-им апла? т. ыт. те. *

Иккĕмĕшĕнчен, фабрикăра ĕçлекен рабочисен хисепне (1.400.000) пĕтĕм халăх йышĕпе танлаштарса, çак отношение процентпа шутласа кăтартни те ăссăр япала. Ку вăл тÿрех ĕнтĕ пĕртте танлаштарма çук пысăкăшсене: ĕçлеме пултаракан халăха ĕçлейменнипе, материальнăй хаклăхсем тăвакансене «идеологиллĕ состоянисемпе» т. ыт. те танлаштарни пулать. Фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем кашнийĕ хăйсен çемьинчи мĕн чухлĕ те пулин ĕçлеймен членĕсене тăрантса пурăнмаççĕ-им вара? Фабрикăри рабочисем, хăйсен хуçисемпе пĕр кĕтÿ суту-илÿçĕсемсĕр пуçне тата салтаксене, чиновниксене, т. ыт. господасене те купи-купипе тăрантарса пурăнмаççĕ-им вара?—эсир вара çаксене пурне те çĕрĕçĕпе пурăнакан халăх çумне хушатăр та çак пăтта фабрикăпа заводра ĕçлекенсене хирĕç тăрататăр. Унтан тата, Российăра пулă тытакан тата ытти çавăн йышши промысласем çук-им вара?—вĕсене те вĕт каллех, çĕрĕçĕпе хутăштарса, фаб-

---

* Эпĕ кунта г. Ник.—онăн—«капитализмăн пĕрлештерес пахалăхĕ» çинчен фабрикăри рабочисен йышĕ тăрăх хакласа парас *меслетне* кăна критиклетĕп. Аллăм айĕнче г. Ник.—он усă курнă сведенисем çук пирки, цифрăсене тĕпчеме пултараймастăп эпĕ. Анчах, çапах та, ку сведенисене г. Ник—он тĕрĕс суйласа илейменнине палăртмасăр иртме май çук. Вăл малтан сведенисене 1865-мĕш çулшăн—Военно-статистически Сборникрен, 1894-мĕш çулшăн 1890 çулхи фабрикăсемпе заводсен указателĕнчен илет. Рабочисен хисепĕ (сăрт-ту промышленноçĕнчи рабочисемсĕр пуçне) 829.573 тата 875.764 çын пулать. Усĕм 5,5%—пĕтĕм халăх йышĕ ÿснинчен (91 те 61,42 м. çын—ÿсĕм 48,1%) нумай сахал. *Тепĕр страницăра* вара вăл урăх сведенисене илет: 1865-мĕш çулшăн та, 1890-мĕш çулшăн та—1893 çулта пичетленсе тухнă «Указательрен». Ку сведенисем тăрăх вара рабочисен хисепĕ—392.718 тата 716.792 çын пулать; ÿсĕм 82%. Анчах ку шут вăл—акциз тÿлекен промышленноçри рабочисемсĕр пуçне; кунта вара рабочисен хисепĕ 1865-мĕш çулта—186.053 çын, 1890-мĕш çулта—144.332 çын пулнă. (104 стр.) Çак юлашки цифрăсене малтанхисем çумне хушсан, сăрт-ту промышленноçĕнчи рабочисемсĕр пуçне ытти пĕтĕм рабочисен хисепне пĕлетпĕр; 1865-мĕш çулта вăл хисеп—578.771 çын, 1890 çулта—861.124 çын пулнă. Ÿсĕм—48,7%, çав вăхăтрах халăх йышĕ 48,1% чухлĕ ÿснĕ. Çапла ĕнтĕ пиллĕк страница тăрăшĕнчех автор тĕрлĕрен цифрăсем илсе кăтартать те пĕрисем тăрăх ÿсĕм 5%, теприсем тăрăх—48% пулса тухать! Вара çакăн йышши, пĕрне-пĕри хирĕçлекен сведенисем тăрăх вăл пирĕн капитализм çирĕп марри çинчен вывод тăвать!!

Унтан тата, мĕншĕн-ха автор, рабочисен хисепĕ тĕлĕшĕпе хăй «Очерксенче» илсе кăтартнă сведенисене (XI-мĕшпе XII-мĕш таблицăсене) илмен? Вĕсем тăрăх эпир рабочисен хисепĕ *виçĕ çул* хушшинче (1886—1889-мĕш çулсенче) 12—13% таран ÿснине, урăхла каласан, халăх йышĕ ÿсниччен нумай ытларах ÿссе пынине куратпăр. Тен, автор, вăл питĕ кĕске вăхăт, тейĕ. Анчах, ун вырăнне ку сведенисем—пĕр майлă, вĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарма пулать тата вĕсене ытларах ĕненме пулать вĕт; ку 1-мĕшĕнчен. 2-мĕшĕнчен вара, вăхăчĕ кĕске пулин те, фабрикăпа завод промышленноçĕ ÿсни çинчен калаçнă чухне, автор хăй те çак сведенисемпех усă курман-им вара?

Паллах, халăх ĕçĕн пĕр отрасли çинчен кăна калакан сведенисем, вăл отраслĕн çав тери улшăнса тăракан виçине—рабочисен йышне суйласа илсессĕн, çирĕп мар пулаççĕ; урăхла пулма та пултараймасть. Шухăшлăр-ха ĕнтĕ: çакăн йышши сведенисем тăрăх, пирĕн капитализм—ăна хирĕç çине тăрса тата вĕçне çитиех харсăр кĕрешмесĕрех, хăйне-хăйех ишĕлсе анса, тусан пулса каяссине шанса тăрас пулсан, çакăн йышши сведенисене—халăх ĕçĕн пур отраслисенче те капитализм ним иккеленме çук аталанса пырса пуçпулса тăнине хирĕç тăратас пулсан,—мĕн тери вĕçĕмсĕр айванла ĕмĕтленекен пулмалла-ха ĕнтĕ!

рикăпа завод промышленноçне хирĕç тăратни ăссăр хăтланни пулать. Эсир Российăри халăх йышĕ çинчен, ăна мĕнле ĕçпе пурăнни тăрăх пайласа пĕлесшĕн пулсан, ун чухне вара сирĕн çапла тумаллаччĕ: пĕрремĕшĕнчĕн, материальнăй хаклăхсем тăвакан халăх йышне уйăрса кăлармаллаччĕ (апла пулсан, пĕтĕм халăх хисепĕнчен, пĕр енчен—ĕçлеме пултарайман çынсене, тепĕр енчен—салтаксене, чиновниксене, пупсене т. ыт. те кăларса пăрахмалла), иккĕмĕшĕнчен вара, ăна халăх ĕçĕн тĕрлĕ отраслисем тăрăх пайлама тăрăшмаллаччĕ. Ку ĕçе тума сведенисем çук пулсассăн вара, фабрикăпа завод промышленноçĕнче халăх йышĕн 1 процентчĕ çех (??!!) ĕçлет, тесе сўпĕлтетес вырăнне, ун пек шут тăвас ĕçе* тытăнмалла та пулман.

---

* Ник.—он хăйĕн «Очеркĕсенче» çакăн пек хисеплесе шутлама тапаçланса та пăхнă, анчах ĕçĕ питĕ ăнăçсăр пулса тухнă. 302-мĕш страницăра эпир çапла вулатпăр:

«Юлашки вăхăтра Европăри Российăн 50 кĕпĕрни тăрăх ирĕк ĕçлекен пур рабочисен хисепне те шутласа кăларма тăрăшса пăхнă (*С. А. Короленко.* Вольнонаемный труд. Спб. 1892). Ялхуçалăх департаменчĕ тĕпчесе сăнанă тăрăх, Европăри Российăн 50 кĕпĕрнинче ялта пурăнакан пĕтĕм халăх йышĕ, ĕçлеме пултаракансем, 35.712 пин çын шутланать, çав вăхăтрах ялхуçалăхĕнче, обрабатывающи, добывающи, турттаракан тата ытти промышленноçра та ĕçлекен пурĕ 30.124 пин çын рабочи кăна кирлĕ. Çапла вара, пачах кирлĕ мар, ытлашши рабочисен йышĕ акăш-макăш нумай, 5.588 пин çын пулса тухать, вĕсене йышăннă норма тăрăх çемьисемпе пĕрле шутлас пулсан, ниепле те 15 милл. çынран кая пулмасть». (Çакăн çинченех тепĕр хут 341-мĕш страницăра çырнă).

Çак «тĕпчев ĕçне» сăнаса пăхас пулсан, эпир унта—помещиксем ирĕккĕн тара тытнă ĕçпе усă курнине «тĕпченине» кăна куратпăр, унтан çак тĕпчев ĕçĕ çумне тата г. С. Короленко Европăри Россия обзорне «ялхуçалăхĕпе промышленность енчен» пăхса хушнă. Çак обзорта Европăри Российăри рабочи халăха, мĕнле ĕçпе пурăнни тăрăх (никĕсе пĕр-пĕр «тĕпчев ĕçне» мар, алăри кивĕ сведенисене хурса) пайласа тухма тăрăшнă. Г-н С. А. Короленкон çакăн пек результатсем пулса тăнă: Европăри Российăри 50 кĕпĕрнере рабочисем пурĕ 35.712.000 çын. Вĕсенчен ĕçлеççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| çĕрĕçĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . . | 27.435,4 пин çын | |
| специальнăй ўсен-тăрансем ўстерсе . . . . | 1.466,4 » | пурĕ 30.124 пин çын |
| фабрикăсемпе заводсенче, тата сăрт ту промышленноçĕнче . . . . . . . . . . . . . | 1.222,7 » | |
| еврейсем . . . . . . . . . . . . . . . . . | 1.400,4 » | |
| вăрман промыслисенче . . . . . . . . . . | 2.000 пин çынна яхăн | |
| выльăх ĕрчетес ĕçре . . . . . . . . . . . | 1.000 пин çын | |
| чугун çул çинче . . . . . . . . . . . . . | 200 » | |
| пулă тытас ĕçре . . . . . . . . . . . . . | 200 » | |
| вырăнти тата аякка кайса ĕçлемелли промысласемпе, ухатапа, тискер кайăк тытас ĕçпе, т. ыт. промысласемпе те . . . . . . . . . | 782,2 » | |
| Мĕн пурĕ . . . . . | 35.712,1 пин çын. | |

Çапла ĕнтĕ, г. Короленко (лайăх-и, начар-и) *пур* рабочисене те мĕн ĕçленĕ тăрăх пайласа тухнă, анчах г. Ник.—он вара хăй ирĕккĕн малтанхи виçĕ ушкăнри çынсене уйăрса илнĕ те, 5.588 пин рабочи «пачах ытлашши» (??) пулни çинчен сўпĕлтетсе тăрать!

Ку ăнăçсăрлăхран пуçне, г. Короленко шутлани питĕ тĕрĕс маррине те палăртмасăр иртме çук: çĕрĕçĕнчи рабочисен йышне вăл пĕтĕм Россия валли пĕр норма тăрăх шутласа кăна кăларнă, производствăра ĕçлемен халăха ыттисен хушшинчен уйăрса кăтартман (г. Короленко, начальство еврейсене курай-

Виççĕмĕшĕнчен, капитализмăн «ĕçе пĕрлештерекен пахалăхĕ» вăл — фабрикăри рабочисене пĕрлештерниче кăна палăрнине ăçтан тупса кăларнă-ха эсир? Ку ĕнтĕ Марксăн: капитализм прогрессивлă, революциллĕ ĕçĕ çинчен калакан теорине чи пысăккăн, чи киревсĕр пăсни пулать. Хăвăр марксизм çинчен шухăшланине, эсир «Отеч. Записки» журнал ĕçе пĕрлештересси çинчен çырнă статьисенчен йышăнса илсе каламастăр-и? Эсир те, вăл ĕç—пĕр çуртра ĕçлени кăна пулать теместĕр-и тата?

Анчах, çук. Ник.—она кун пирки ӳпкелеме çук, пулас, мĕншĕн тесен, «Р. Богатство» журналăн 6-мĕш №-че пичетленĕ статьян 2-мĕш страницинче вăл, капитализм ĕçе пĕрлештернине тĕрĕс характеристика парать те, унăн икĕ палăрăмне те: 1) пĕтĕм обществăшăн ĕçленине тата 2) пĕрле ĕçлесе тунă продукта туянас ĕмĕтпе уйрăм ĕçлекенсем пĕрлешнине те палăртать. Анчах, ку вăл апла пулсан, капитализм «миссийĕ» çинчен мĕн пирки фабрикăри рабочисен хисепĕ тăрăх калаçмалла пулнă-ха, тĕрĕссипе ку «мисси» вăл, капитализм пур енчен те аталанса пынипе, ĕç пĕтĕмĕшле пĕрлешсе пынипе, пĕтĕмĕшпе пролетариат пулса пынипе пурăнăçа кĕрсе пырать вĕт; çак пĕтĕм пролетариат тĕлĕшĕпе вара, фабрикăсемпе заводсенчи пролетариат вăл — унăн малти речĕ, авангарчĕ çех пулать вĕт. Пролетариатăн революциллĕ юхăмĕ вăл, паллах, çак рабочисен йышĕ мĕн чухлĕ пулнинчен те, вĕсем мĕн тери концентрациленнинчен те, вĕсем мĕн тери аталанса çитнинчен те т. ыт. те килет ĕнтĕ, ун пирки нимĕн тавлашмалли çук, анчах çак мĕн пурĕ вăл—*капитализмăн «ĕçе пĕрлештерекен пахалăхĕ» фабрикăсемпе заводсенчи рабочисен йышĕнчен килет* теме нимĕнле право та памасть. Ку вăл Маркс идейине чăтма çук ансăрлатни пулать.

Тĕслĕх илсе кăтартам. Фридрих Энгельс хăйĕн «Zur Wohnungsfrage»* ятлă брошюринче Германири промышленность çинчен калать те, Германирен пуçне урăх пĕр çĕршывра та, — вăл Хĕвеланăç Европа çинчен кăна калать, — тара кĕрĕшсе ĕçлекен рабочисем, хăйсен аллинче сад пахчи е уйра пĕр татăк çĕр тытса тăракансем, унтинчен ытла çуккине кăтартса парать. «*Ялти кустарнăй промышленнность, садсем ĕрчетес ĕçпе тата ялхуçалăхĕпе пĕрле çыхăнса тăраканскер, Германири çамрăк шултăра промышленноçăн сарлака никĕсĕ пулса тăрать*», тет вăл. Нимĕç вак хресченĕсен нушисем ӳссе пынăçем, çак кустарнăй промышленность та (Российăри пекех—тейĕпĕр эпир хамăртан) вăйлăран-вăйлă ӳссе пырать, анчах çакăнпа пĕрлех, промышленность ялхуçалăхĕпе ***пĕрлешни*** вăл—кустарьсен ***пурăнăçне ла-***

---

маннине пăхăнса, *еврейсене* те... производствăра ĕçлемен халăх шутне кĕртнĕ! Производствăра ĕçлемен рабочисен йышĕ 1,1 миллионран ытла пулмалла: вĕсен шутĕнче сутăçсем, ыйткалакансем, бродягăсем, преступниксем т. ыт. те), кустарьсен хисепĕ чăтма çук сахал (юлашки уйрăмра—вырăнти тата аякка кайса ĕçлемелли промысласем), т. ыт. те. Ун пек шутласа кăларнине кăтартса памани лайăхрах пулĕччĕ.

* «Жилищный вопрос». Ун чухне Энгельсăн çак произведенине вырăсла куçарман пулнă. Цитатăсене Вл. Ильич хăй куçарнă. *Ред.*

***йăхлатакан*** услови мар, пачах урăхла—вĕсене пушшех ***пусмăрлама*** май паракан услови пулса тăрать. Унăн, пĕр вырăнпа çыхăнса пурăннă пирки, ĕçленĕшĕн хуть те мĕнле хак тӳленипе те килĕшмелле пулать, çавăнпа та капиталиста хăй ĕçлесе тунă ытлашши стоимоçне кăна мар, ĕçукçинчен те пысăк пайне парса тăрать (ку вăл шултăра промышленноçăн килти системи тем тери вăйлă сарăлнă Российăра та çавах). «*Ку вăл ĕçĕн пĕр енĕ*, анчах *унăн тепĕр енĕ те пур*,—тет малалла Энгельс...—*Кустарнăй промышленность сарăлса пынăçем хресченсем, пĕр тĕлте пурăнаканнисем хыççăн тепĕр тĕлтисем, кучухнехи саманари промышленноçлă движенине хутшăнса пыраççĕ. Кустарнăй промышленность пулăшнипе çĕрĕçлĕ вырăнсене çапла революцилентерни Германири промышленноçлă революцие, Англире тата Францире пулнинчен, чылай ытларах вырăна сарать... Çакă вăл, Англипе Францие тĕлме хирĕçех, Германире рабочисен революциллĕ движенийĕ мĕншĕн хула центрĕсенче кăна сарăлас вырăнне пĕтĕм çĕршыв тăрăх çав тери вăйлă сарăлнине ăнлантарса парать те. Çак движени лăпкăн, çирĕппĕн, пĕр чарăнми ӳссе пынине те вăлах ăнлантарса парать. Германире хăйне-хăех паллă, столицăра тата ытти пысăк хуласенче çĕнтерӳллĕ восстани—вак хуласенчен нумайтарахăшĕ тата ял облаçĕсенчен нумайтарах пайĕ переворот тума пиçсе çитсессĕн тин пулма пултарать*».

Акă курăр ĕнтĕ: «капитализмăн ĕçе пĕрлештерекен пахалăхĕ» кăна мар, рабочисен революциллĕ движени ăнăçлăхĕ те, фабрикăсенчи рабочисен йышĕнчен кăна мар... *кустарьсен* йышĕнчен те килет иккен! Пирĕн самобытниксем вырăссен кустарнăй промыслисенчи чи ытларах пайĕ тап-таса капитализмлă организациленнине хисепе илмесĕр, ăна, темле «халăх» промышленность шутне кĕртсе, капитализма хирĕç тăратаççĕ те, «тӳррĕнех капитализмăн хăй аллинче тăракан халăх проценчĕ» çинчен фабрикăсенче ĕçлекен рабочисен хисепĕ тăрăх кăна калаçаççĕ! Ку ĕнтĕ г. Кривенкон çакăн йышши сăмахĕсене аса илтерет: марксистсем пĕтĕмĕшĕпех фабрикăсенчи рабочисем енне çавăрăнса тăрасшăн, анчах вĕсен йышĕ пурĕ те миллион кăна (100 мил. халăхран) çавăнпа та ку вăл—пурăнăçăн пĕр пĕчĕк кĕтесси кăна; çавăнпа пĕр уншăн çеç ĕçлени те вăл—сословиллĕ учрежденисенче тата çынсемшĕн ырă ĕç тăвакан учрежденисенче кăна ĕçленĕ майлах пулса тăрать, («Р. Б-вăн» 12-мĕш №-рĕ). Фабрикăсемпе заводсем вĕсем—сословиллĕ учрежденисем тата çынсемшĕн ырă ĕç тăвакан учрежденисем пекех, пурăнăçăн пĕчĕкçĕ кĕтесси анчах иккен!! Эй, гениллĕ г. Кривенко! Продуктсене пĕтĕм общество валли—шăпах çав сословиллĕ учрежденисем туса тăраççĕ пулас апла? Ĕççыннине эксплуататцилесе пурăннипе экспроприациленине шăпах çав сословиллĕ учрежденисенчи йĕркесем ăнлантарса параççĕ пулас апла? Пролетариатăн, рабочисене ирĕке кăларас ялавне çĕклеме пултаракан, малти ретри представителĕсене шăпах çав сословиллĕ учрежденисенче шырамалла пулать пулĕ апла?

Çакăн йышши сăмахсене буржуаллă пĕчĕк философсен çăварĕнчен илтсен тĕлĕнмелле пулмĕччĕ, анчах çакăн пек япалана г. Ник.—онран илтнĕ хыççăн темле ирĕксĕрех тарăхатăн.

«Капиталăн» 393-мĕш страницинче Маркс Англири халăх составĕ çинчен калакан сведенисене илсе кăтартать. Англире тата Валлисра 1861-мĕш çулта пурĕ 20 милл. çын пулнă. Фабрикăпа завод промышленноçĕн тĕп отраслисенчи рабочисен йышĕ 1.605.440 çын шутланнă*. Çав вăхăтрах прислугăсен хисепĕ 1.208.648 çын пулнă; кĕнекен 2-мĕш изданийĕ çумне асăрхаттарнинче, Маркс çак юлашки класс уйрăмах хăвăрт ӳссе пыни çине кăтартса парать. Шухăшласа пăхăр-ха ĕнтĕ, Англире, калăпăр, «капитализмăн ĕçе пĕрлештерекен пахалăхĕ» çинчен сӳтсе явас шутпа, çак 1,6 миллиона 20 çине пайлакан «марксистсем» тупăннă тейĕпĕр!!! Вара 8% кăна пулса тухать—*вуникĸĕмĕш пайĕнчен те сахалтарах*!!! Халăхăн вуниккĕмĕш пайне те пĕрлештерейменпулсан, капитализм «миссийĕ» çинчен епле калаçма май пултăр-ха ĕнтĕ! Çитменнине тата «килти чурасен» класĕ хăвăртрах ӳсет, ку вăл—«халăх ĕçне» кăлăхах сая яни пулать, вăл «эпир», англичансем, «тĕрĕс мар çулпа» пынине кăна палăртса тăрать! Çавăнпа та ĕнтĕ, «пирĕн» «хамăр çĕршывăмăр валли» урăхла, капитализмлă мар, «аталану çулĕсем шырамалла» пулни уççăнах курăнмасть-им вара?!

Г-н Ник.—он аргументацийĕнче тата тепĕр пункт юлчĕ: пирĕн капитализмăн пĕрлештерекен пахалăхĕ, «Хĕвеланăç Европăшăн çав тери характерлă тата *Çурçĕр Америкăра уйрăмах вăйлăн палăрса тăракан пахалăхĕ*» çук тенĕ чух, паллах, рабочисен революциллĕ движенине асра тытать пулас. Çапла вара, пирĕн капитализм хăйпе пĕрле рабочисен революциллĕ движенине çуратман пирки, пирĕн урăх çулйĕр шырамалла, пулса тухать. Анчах ку довода г. Михайловский г. Ник.—онран маларах каланă, пулас. Маркс, пролетариат ӳссе çитнĕ вăхăтра ĕçленĕ, тесе вĕрентнĕ вăл марксистсене. Вара марксистсенчен, пĕри, ăна: чухăнлăхра эсир чухăнлăх çеç куратăр тесе астутарнине хирĕç, вăл: ку сăмаха эсир, ытти чухнехи пекех, пĕтĕмпех Марксран илсе калатăр тесе тавăрнă. Анчах эпир, имĕш, «Нищета философинчи» кун çинчен калакан тĕле вуласа тухсассăн, вара—вăл пирĕн ĕçсемшĕн пачах юрăхсăррине, пирĕн чухăнлăх вăл—чăн та чухăнлăх кăна, иккенне, уççăнах курăттăмăр, тенĕ. Анчах «Нищета философии» кĕнеке тăрăх эпир, чăннипе, нимĕн те курас çук-ха. Маркс унта кивĕ шкулти коммунистсем çинчен: вĕсем чухăнлăхра—кивĕ обществăна ишсе сирпĕтсе антаракан революциллĕ енне курмасăр, чухăнлăхра чухăнлăх анчах кураççĕ,

---

* 642.607 çын пир-авăр промышленноçĕнче тата чăлхапа чĕнтĕр çыхакан производствăра ĕçленĕ (пирĕн патăмăрта «хĕрарăм сутăççем» чăлхапа чĕнтĕр промыслинче ĕçлекен темиçе теçетке пин хĕрарăма, хăйсемшĕн ĕçлеттерсе, ĕненме май çук хаяр эксплуатацилесе пурăнаççĕ. Хăшпĕр чухне ĕçукçи вĕсен кунне *3 пус* тарана (sic)! çитет; Ара вĕсем те, г. Ник.—он, тӳррĕмех «капитализм аллинче мар-и?), унтан 565.835 çын кăмрăкпа металл кăларакан шахтăсенче, тата 396.998 çын—металл тăвакан ытти пур производствăсемпе мануфактурăсенче ĕçлеççĕ.

тесе калать. Çак сăмахсем пирĕн ĕçсем валли юрăхсăр тесе, г-н Михайловский пирĕн рабочисен революциллĕ движени «паларманни» пирки калать пулас. Çапла шухăшласа калаçнисем пирки çакна палăртмалла: пĕрремĕшĕнчен, фактсемпе чи çиелтен паллашнă пулсан кăна, Маркс вăл пролетариат аталанса çитнĕ вăхăтра ĕçленĕ тесе шухăшлама пулать. Коммунистсен программине Маркс 1848 çулчченех-ха туса хатĕрленĕ. Ун чухне Германире рабочисен мĕнле революциллĕ движени* пулнă-ха? Ун чухне политикăллă ирĕклĕх те пулин пулман-ха, çавăнпа та коммунистсем ун чухне (халĕ пирĕн патăмăрти пекех) вăрттăн кружоксенче кăна ĕçленĕ. Рабочисен социал-демократла движенийĕ вара, капитализмăн пĕрлештерекен революциллĕ рольне пурне те уççăнах кăтартса панăскер, тата икĕ теçетке çул каярах, наукăллă социализм вĕрентĕвĕ йăлтах çитĕнсе çитнĕ хыççăн, шултăра индустри тата вăйлăрах саралнă хыççăн, çак вĕрентĕве рабочисем хушшинче саракан нумай талантлă, вăйлă çынсем тупăннă хыççăн тин тапранса кайнă. Пирĕн философсем, историри фактсене тĕрĕс мар çутатса кăтартса, рабочисен революциллĕ движенине организациллĕ тата ăнланулла тăвас тесе социалистсем темĕн чухлĕ вăй хунине манса кайса, унсăр пуçне тата вĕсем Маркс çумне ним ăссăр фатализмла шухăш сыпăçтараççĕ. Унăн шухăшĕ тăрăх, имĕш, рабочисем хăйсемех, никам пулăшмасăрах организациленсе пĕрлешеççĕ, пулать, çавăнпа та вара, имĕш, эпир капитализма курса, рабочисен революциллĕ движенине курмастпăр пулсан, вăл—эпир рабочисем хушшинче начар пропагандăласа, вĕсене çапла организацилес тĕлĕшпе начар ĕçленĕ пирки мар иккен, капитализм хăйĕн миссине пурăнăçа кĕртеймен пирки пулать, имĕш. Пирĕн хăйсем халлĕнлĕ философсен çак мещанла хăраса калана сăмахĕсене суяна кăларма тăрăшни те ытлашши: вĕсене пур çĕршывсенчи социал-демократсен пĕтĕм ĕçĕ суяна кăларать, вĕсене хуть те хăш марксистăн та публика умĕнче тухса калана сăмахĕ суяна кăларать. Социал-демократи вăл—рабочисен революциллĕ движенине социализмпа пĕрлештерни пулать тесе питĕ тĕрĕс калать Каутский. Çавăнпа та, капитализмăн прогрессивлă ĕçĕ пирĕн патăмăртата «палăртăр» тесен пирĕн социалистсен хăйсен ĕçне пĕтĕм вăй хурса тытăнмалла; вĕсен вырăс историйĕпе вырăс пурăнăçне марксизмла мĕнле ăнланмаллине тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе пĕлмелле, классен кĕрешĕвĕпе эксплуатацийĕн пур формисене те конкретлăрах йĕрлесе тухмалла, мĕншĕн тесен Российăра вĕсем уйрăмах арпашăнса пĕтсе, ытти япаласемпе витĕнсе тăраççĕ. Кунсăр пуçне тата вĕсен рабочисем хушшинче çак теорие сармалла, ăна рабочисем патне илсе çитермелле, рабочисене çак теорие ăнланма пулăшмалла тата пирĕн условисемшĕн *социал-демократизма сарма, рабочисене политикăллă вăя пĕтĕçтерме*, организацин чи юрăхлă

* Рабочи клас йышĕ ун чухне мĕн тери сахал пулнине Маркс тата *27 çул иртсессĕн*, 1875-мĕш çулта, çапла çырнинчен ăнланма пулать: «ĕçлекен халăх Германире пуринчен ытла пролетарисем мар, хресченсем пулса тăраççĕ».[27] «пролетариат ÿссе çитнĕ вăхăтра ĕçленĕ (??)» тени акă мĕне пĕлтерет!

формине туса хатӗрлемелле. Ҫаванпа та вырӑс социал-демократӗсем нихӑҫан та, рабочи класс идеологӗсен ҫак ӗҫне туса ҫитерне те ӗнтӗ, туса пӗтерне ӗнтӗ, тесе каламан кӑна мар (ку ӗҫ хӑҫан пӗтесси курӑнмасть те-ха), пачах урӑхла, ку ӗҫе вӗсем тин ҫеҫ тума тытӑннине, мӗнле те пулин ҫирӗп организаци туса ҫитерес тесессӗн, халӗ те-ха темӗн тӗрлех нумай ҫынсем питӗ тӑрӑшса ӗҫлени кирлӗ пулнине яланах палӑртнӑ.

Маркс теорине ҫапла питӗ начар тата чӑтма ҫук ансӑр ӑнланнинчен пуҫне, пирӗн капитализмӑн прогрессивлӑ ӗҫӗ ҫук тенӗ йӑлӑхтармӑш шухӑш тата мифла «халӑх стройӗ» ҫинчен калакан ӑссӑр шухӑш ҫинче те тытӑнса тӑрать пулас.

Хӑй ҫинчен нумай каластарнӑ «общинӑра», «хресчен», ҫаппа-ҫарамас ҫынпа пуян ҫын ҫине, пролетариатпа капиталӑн (уйрӑмах суту-илӳ капиталӗн) представителӗсем ҫине пайланса пынӑ чухне,—ун чухне кунта вӑтам ӗмӗрхи, тин ҫеҫ ҫуралакан капитализма курасшӑн мар, вара ялӑн политикӑллӑ-экономикӑллӑ структуринчен пӑрӑнса иртеҫҫӗ те, «ҫӗршывӑмӑр валли урӑх ҫулсем» шыранӑ май, хресченсем *ҫӗр тытса тӑнин* форми улшӑнни ҫинчен сӳпӗлтетсе калаҫаҫҫӗ; ҫитменнине вӗсем, пирӗн «ҫӗре чи тан валеҫсе тӑракан общинӑра» та хресченсем пӗртте шӑлт буржуаллӑ, вӑйлӑн сийленсе пыман пек, хресченсем ҫӗр *тытса тӑракан* ҫак формӑсене экономикӑллӑ организаци формисемпе (чӑтма ҫук) пӑтраштарса пӗтереҫҫӗ. Анчах ҫак капитализм, аталанса пынӑҫем ялти, вӑтам ӗмӗрхи капитализмӑн ансӑр формисенчен ӳссе иртсе, ҫӗрӗн крепостной влаҫне ҫӗмӗрсе, тахҫанах ӗнтӗ тап-таса, ҫаратса пӗтернӗ выҫӑ хресчене хӑйӗн ҫӗрне общество аллине, савӑнакан кулаксем хушшинче танлаштарса уйӑрмашкӑн пӑрахса хӑварса, хӑйне аякка, пӗтӗм Россия тӑрӑх — тем чухлӗ вӑхӑт ӗҫсӗр иртте рсе ҫӳреме, паян помещик патне, ыран—чугун ҫул хывакан подрядчик патне, унтан—хулари хура ӗҫе е пуян хресчен патне, тата ытти ҫӗре те тарҫа кӗрӗшсе ӗҫлеме хушать; ҫак «хресчен», хӑй хуҫисене пӗтӗм Россия тӑрӑх улӑштарса ҫӳренӗ май, хӑйне пурте ӑҫта пынӑ унта ним намӑсланмасӑр ҫаратнине курать, хӑйӗнпе пӗрле хӑйӗн пек ытти ҫаппа-ҫарамас тӑрса юлнӑ ҫынсене те ҫаратнине курать, мӗн пулсан та «улпут» кӑна мар, ӗҫ вӑй туянма укҫи пур пулсан, вара ӑна «хӑйӗн тӑван мужикӗ» те ҫаратма пултарнине курать, правительство пур ҫӗрте те ун хуҫисемшӗн тӑрӑшнине, рабочисен правине хӗснине, рабочисем хӑйсен чи элементарлӑ прависене хуть те мӗнле хӳтӗлеме тӑрӑшсан та, вӗсене шавах пӑлхав шучӗпе пусарма тӑрӑшнине курать, вырӑс рабочийӗн ӗҫӗ пӗрех май йывӑрланнӑҫем йывӑрланса пынине, пуянлӑхпа капӑрлӑх хӑвӑртран хӑвӑртрах ӳссе пынине курать,—ҫав вӑхӑтрах рабочи пурӑнӑҫӗ начарланнӑҫем начарланса, экспроприаци вӑйланнӑҫем вӑйланса, ӗҫсӗрлӗх норма шутне кӗрсе пынине курать,—ҫакӑн чухне вара пирӗн, марксизма критиклекен ҫынсем ҫӗршывӑмӑр валли урӑх ҫулсем шырама пикенеҫҫӗ, ҫакӑн чухне вӗсем ак ҫак тем тери ӑслӑ ыйтӑва татса пама тӑрӑшаҫҫӗ: фабрикӑра ӗҫлекен рабочисен йышӗ питӗ вӑрахӑн ӳснине курса тӑнӑ ҫӗртех, капитализм про-

грессивлă ĕçлет тесе йышăнма пултаратпăр-и эпир, пирĕн капитализм «хăйĕн историллĕ миссине пурăнăçа начар, питĕ, питĕ начар кĕртсе пырать» пулсан, çĕршывăн çулĕ тĕрĕс маррине йышăнса, пирĕн ăна пăрахăç тумалла мар-и.

Чуна çав тери çĕклентерекен, пысăк ырă ĕç мар-им ĕнтĕ, ку чăн та?

Çитменнине çак усал марксистсем:—ĕççыннине Российăра пур çĕрте те капитализмла эксплуатацилесе тăнă чухнех, çĕршывăмăр валли урăх çулсем шырани вăл—пурăнăçран утописем хушшине тарса пытанни пулать тесе калаççĕ пулсан, хăйĕн миссине пирĕн капитализм мар, вырăс социалисчĕсем пурăнăçа начар кĕртсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем вырăс обществин антагонизмлă класĕсем экономика тĕлĕшĕнчен ĕмĕртенпех кĕрешсе пурăннине лăплантарĕ тесе ĕмĕтленни вăл—маниловщина пулса тăнине, çак кĕрешĕве ăнланулла тата организациллĕ тума тăрăшмаллине, çавăнпа та çакна тăвас тесен, социал-демократсен ĕçне тытăнмаллине пĕртте ăнланмаççĕ тесе шутлаççĕ пулсан,—мĕн тери ансăр доктринерсем вĕсем.

---

Заключени тунă май, г. Ник.—он г. Струвене хирĕç çав «Р. Б.-вăн» 6-мĕш №-чех тата тепĕр тĕрлĕ хăтланса илнине те палăртмасăр иртме май çук.

«Г-н Струве полемикин хăшпĕр хăйне евĕрлĕхне кăтартмасăр иртме май çук,—тет г. Ник—он.—Вăл нимĕçсен серьезнăй журналĕнче нимĕç публики валли çырса пичетленĕ, анчах, апла пулсан та, пачах килĕшӳсĕр меслетсемпе усă курнă. Нимĕç публики кăна мар, вырăс публики те ӳссе, «çитĕннĕ çын шутне кĕнĕ», çавăнпа ăна хăйĕн статьине кĕртсе тултарнă «жупелсемпе» хăратма ниепле май та çук. «Утопия», «реакциллĕ программа» тата ытти çавăн йышши сăмахсем унăн статьин кашни столбецĕнчех тĕл пулаççĕ. Анчах та, аюх, г. Струве мĕн тери тăрăшать пулин те, ку «хăрушă сăмахсем» халĕ ĕнтĕ пĕртте хăратаймаççĕ» (128 стр.).

Сăнаса пăхăр-ха, çак Ник.—онпа Струве господасен полемикинче «килĕшӳсĕр меслетсем» пур-и, çук-и; пур пулсан—хăшĕ усă курать-ха вĕсемпе.

Струве г-на вăл серьезнăй статьяра публикăна «жупелсемпе» тата хăрушă сăмахсемпе тытнăшăн юрăхсăр меслетсемпе усă курать тесе айăплаççĕ.

«Жупелсемпе» тата «хăрушă сăмахсемпе» усă курни вăл—çителĕклĕ уççăн та паллăн сăлтавламасăрах, çыракан çын хăй шухăшĕ пирки пурпĕрех калама тивĕçлĕ пулнăшăн мар, вăл просто вăрçса, хăратса тăкас кăмăлпа кăна хăйне хирĕç тăракана пач ырламасăр характеристика панине пĕлтерет.

Çак юлашки палăрăм кăна ĕнтĕ ырламасăр çивчĕ каланă эпитетсене «жупел» туса хурать пулмалла. Акă г. Слонимский, г. Ник.—он çинчен хытă ятлаçса каласаччĕ, анчах ун чухне вăл хăйĕн,—кучухнехи йĕркесен буржуалăхне пĕртте ăнланма пул-

тарайман яланхи либерал шухăшĕсене уççăн та паллăн каланă пирки, хăйĕн çав тери тĕлĕнмелле сăлтавĕсене пачах татăклăн каласа кăтартнă пирки,—çакăн пирки ăна хуть те мĕнле айăплама юрать пулсан та, «килĕшӳсĕр меслетсемпе» усă курнă тесе çеç айăплама юрамасть. Г-н. Ник.—он та г. Слонимский çинчен çавах питĕ çивĕччĕн каласа хурсаччĕ, ăна вĕрентес шутпа сăмах май, Марксăн «пирĕн патăмăрта та тĕрĕсе тухнă» сăмахне илсе каласаччĕ (ку вăл г. Ник.—онăн Маркс тĕрĕссине йышăнни пулать), кустарнăй вак производствăна тата хресченсем вак çĕр татăкĕсем тытса пурăннине г. Слонимский пек хӳтĕлени вăл — *реакциллĕ* тата *утопиллĕ* япала тесеччĕ, вăл «ансăр», «*айванла шухăшласа*» калаçать тесе айăпланăччĕ т. ыт. те. Пăхăр ĕнтĕ, г. Ник.—он та, г. Струве пекех, хăй статьинче çавăн йышши (курсивпа çырса палăртнă) эпитетсем «каласа тултарнă пулнă», анчах кунта эпир — вăл пĕртте «килĕшӳсĕр меслетсемпе» усă курнă тесе калама пултараймастпăр, мĕншĕн тесен кусене пурне те—сăлтавланă, вĕсем пурте автор шухăшĕсен паллă системинчен килсе тухаççĕ; вăл шухăшсем тĕрĕс мар пулсассăн та, çапах та, вĕсене йышăннă противника, вăл айванла ансăр шухăшлакан, реакциллĕ утопист тесе каланинчен пуçне урăхла хаклама юрамасть.

Халĕ ĕнтĕ г. Струве статьинче ĕçсем мĕнле тăнине пăхар. Вăл г. Ник.—она утопизмшăн, реакциллĕ программа çеx кăларма пултаракан утопизмшăн тата айванлăхшăн айăпласа, çакăнпа пĕрлех тата хăй мĕн пирки çакăн пек шухăшлама пуçланине те уççăнах кăтартса парать. Пĕрремĕшĕ: «производствăна пĕрлештересшĕн» пулса, г. Ник.—он «обществăна (sic) тата государствăна йăлăнса тархаслать». Ку вăл, «Маркс классен кĕрешĕвĕ çинчен тата государство çинчен вĕрентни вырăс политико-экономĕшĕн пачах ют пулнине ĕнентерсе парать». Пирĕн государство вăл—«пуçпулса тăракан классен представителĕ». —Иккĕмĕшĕ: «*пурăнăçри чăн-чăн* капитализма хирĕç *пуçран шухăшласа кăларнă* хуçалăх стройне, пĕр пире *кирлĕ* пулнă пирки анчах çуралса тухмалласкерне, тăратсассăн, тепĕр тĕрлĕ каласан, производствăна капитализмсăр пуçнех пĕрлештересшĕн пулсан, ку вара вăл—ыйтăва историпе килĕшӳсĕр, айванла шухăшласа ăнланнине кăна палăртса тăрать. Капитализм аталаннăçем, натуральнăй хуçалăха пĕтернĕ хыççăн, ялта пурăнакан халăх йышне сахаллатнă хыççăн, кучухнехи государство пирĕн хальхи пек патриархальнăй тĕксĕмлĕхрен тухса (эпир Россия çинчен калатпăр) уççăнах пыракан класс кĕрешĕвĕн йăлтăрка çуттине тухĕ, ун чухне вара производствăна пĕрлештерме урăх вăйсемпе фактăрсем шырамалла пулĕ».

Мĕн вара, ку çителĕклĕ уççăн та çителĕклĕ палăртса каланă сăлтав мар-и ĕнтĕ? Г-н Струве автор шухăшĕсене тĕрĕс кăтартса панине хирĕç тавлашма пулать-и-ха ĕнтĕ? Г-н Ник.—он чăннипех капитализмлă обществăра пулса пыракан класс кĕрешӳне шута илнĕ пулать-и-ха вара? Çук. Вăл обществăпа государство çинчен, çак кĕрешӳ çинчен манса кайса, ăна вĕсенчен кăларса пăрахса,

калаçать. Вăл, сăмахран, государство, ĕçе община урлă пĕрлештерес вырăнне, капитализма пулăшса тăнă, тет, т. ыт. те. Государство апла та, капла та тума пултарнă, вăл, апла пулсан, *классен тулашĕнче* тăрать тесе шухăшлани уççăнах курăнать. Çапла ĕнтĕ, г. Струвене — вăл «жупелсемпе» усă курать тесе айăплани — *чăтма* çук тĕрĕс марри уççăнах курăнмасть-и-мĕн? Пирĕн государство вăл — класлă государство тесе шухăшлакан çын хуть те кама та, — ĕçе пĕрлештерес тесе, урăхла каласан, пуçпулса тăракан классене пĕтерес тесе, çак государствăна йăлăнса тархаслакан çынна айванла тата реакциллĕ утопист тенинчен урăхла калама пултарайманни уççăнах курăнмасть-и-мĕн? Вăл та сахал-ха. Хăйсен противникне «жупелсемпе» усă курать тесе айăпланипе пĕрлех тата, унăн çак отзывĕ мĕнле шухăшĕçсенчен килсе тухнине, — вĕсене уççăн каласа кăтартнă пулин те, — *пытарса* хăвараççĕ пулсан, çитменнине тата ăна цензура тĕрĕслесе тăракан журналта, çак шухăшсем пырса кĕме пултарайман журналта айăпласçĕ пулсан, — ку ĕнтĕ «пачах килĕшÿсĕр меслет» тесе шухăшламалла пулмасть-и-ха вара?

Малалла каяр. Г-н Струве иккĕмĕш сăлтавне те малтанхинчен кая мар уççăн формулăласа панă. Ĕçе капитализмран пуçне, община урлă пĕрлештерни вăл — пуçран шухăшласа кăларнă йĕрке пулать те ĕнтĕ; ун пирки ним иккĕленмелли те çук, мĕншĕн тесен пурăнăçра ун пек йĕрке пачах çук. Ку пурăнăçа г. Ник-он хăй çапла сăнласа кăтартать: 1861-мĕш çулччен производство единицисем — «çемье» тата «община» пулнă, («Очерксем», 106—107 стр.) Çакă «вак, сапаланчăк, хăйпе хăй çех пурăнакан производство чылай пысăккăн аталанма пултарайман, çавăнпа та вăл чи кивĕ, чи сахал тухăçлă пулнипе паллă пулса тăрать те ĕнтĕ». Малалла вара ку производство çапла улшăнса пынă: «обществăри ĕç пĕрех май тарăнран тарăн пайланса пынă». Çапла вара, капитализм малтанхи производствăллă единицăсен ансăр чиккисене çĕмĕрнĕ те ĕçе пĕтĕм обществăра пĕрлештернĕ. *Пирĕн капитализм ĕçе çапла пĕрлештернине г. Ник. — он та йышăнать.* Çавăнпа та, ĕçе пĕрлештерес тĕллевпе вăл, *ĕçе пĕрлештерме ĕлкĕрнĕ* капитализм çине мар, община çине таянма шутланă пирки (тĕрĕссипе калас пулсан, *çак общинăна çĕмĕрни ĕçе* ***малтанхи хут пĕтĕм обществăра*** *пĕрлештерме май панă та ĕнтĕ*) вăл реакциллĕ утопист пулса тăрать те. Акă — г. Струве шухăшĕ епле. Ăна тĕрĕс е тĕрĕс мар тесе шухăшлама пулать ĕнтĕ, анчах г. Струве хăй шăпах çапла шухăшланă пирки ĕнтĕ г. Ник. — она çивĕччĕн ятланине йышăнмасан юрамасть, çавăнпа «жупелсем» çинчен калаçни те пачах вырăнсăр.

Ку та сахал-ха. Г. Струве хăй — ĕçе пĕрлештересшĕн пулни çинчен, ăна капитализм урлă тăвасшăн пулни çинчен, ăна тăвас тесен вăл «уççăн пыракан класс кĕрешĕвĕн йăлтăркка çуттинче» курăнакан вăйсем çине таянасшăн пулни çинчен тÿррĕнех каланă пулин те, — г. Ник. — он хăйĕн противникĕ çинчен: вăл хресченсене çĕрсĕр тăратса хăварасшăн («хресченсене çĕрсĕр тăратса хăварнине прогрессивлă программа шутлас пулсан... вара «Очерксен»

авторӗ вӑл—консерватор пулать») тесе калать пулсан,—ку сӑмахсене вара, вӗсем чӑнлӑха пачах хире-хирӗҫле пыраҫҫӗ темесен май та ҫук. Ҫитменнине тата, г. Струве цензура тӗрӗслесе тӑракан пичетре, класс кӗрешӗвӗн йӑлтӑркка ҫуттинче курӑнакан вӑйсем ҫинчен калаҫма пултарас ҫуккине аса илсен, апла пулсан, г. Ник.—она хирӗҫле пыраканӑн ҫӑварне хупланӑ пулать,—кун пек чухне вара г. Ник.—он меслечӗ—пачах «килӗшӳсӗр меслет» пулнине хирӗҫ тавлашма май та ҫук пулас.

---

## III-МĔШ ПРИЛОЖЕНИ

Марксизма ансăр ăнланни çинчен каланă чухне, эпĕ марксистсене хăйсене асра тытса калатăп. Кун пирки çакна каламасăр иртме çук: марксизм çинчен пирĕн либералсемпе радикалсем легальнăй пичет страницисем çинче каласа кăтартма тытăнсан, ăна вĕсем чи киревсĕр пăсса ансăрлатаççĕ. Мĕнле каласа кăтартни ĕнтĕ вăл! Шухăшлăр кăна, çак революциллĕ вĕрентĕве Россия цензурин Прокруст вырăнĕ çине шăнăçтарса выртарас тесен, мĕн тери пăсса пăрахмалла пулать ăна! Çитменнине пирĕн публицистсем çакăн йышши операцие çăмăл чĕрепех туса ирттереççĕ: вĕсем каласа панă тăрăх, марксизм, собственник ĕçĕ çинче тытăнса тăракан индивидуальнăй харпăрлăх капитализмлă йĕрке чухне епле меслетпе диалектикăллă аталанса çитĕнет те, кайран епле хăйĕн отрицанийĕ пулса тăрса, пĕрлешет тесе вĕрентнипе танах пулса тарать. Çапла вара, марксизмăн социологиллĕ методĕн пĕтĕм хăйне евĕрлĕхĕнчен асăрхамасăр иртсе каяççĕ те, классен кĕрешĕвĕ çинчен вĕрентнинчен иртсе каяççĕ те, тата тĕпчев ĕçĕ умне тӳррĕмĕнех лартнă тĕллевреи—пролетариата, пур тĕрлĕ антагонизмсемпе эксплуатацие те пĕтерме пулăшас ĕмĕтпе, вĕсем пур тĕрлĕ формисене те тĕпчесе пĕлес тĕллевреи те—иртсе каяççĕ те, серьезнăй сăн-питпе: марксизмăн пĕтĕм содержанийĕ—çак «схема» пулать тесе шухăшлаççĕ. Çавăнпа та вара марксизм вырăнне çав тери ансăр та шупка япала пулса тăнинчен, вара пирĕн радикалсем вырăссен мĕскĕн марксисчĕсемшĕн хурланса йĕре пуçланинчен те ним тĕлĕнмелли те çук. Мĕнле пултăр-ха тата! Вырăс абсолютизмĕпе вырăс реакцийĕ вăхăтĕнче марксизм çинчен пĕтĕмĕшпех, тĕп-тĕрĕс, туп-туллин, унтан тухакан выводсене вĕçне çитиех каласа кăтартмалла май пулсан, вĕсем абсолютизмпа реакци те пулмĕччĕç! Çитменнине тата пирĕн либералсемпе радикалсем марксизма (нимĕç литератури тăрăх та пулин) тивĕçлипех пĕлнĕ пулсассăн, вĕсем цензура тĕрĕслесе тăракан пичетре ăна çав тери пăсса уксах-чăлахлатма вăтанса тăнă пулĕччĕç. Теори çинчен каласа кăтартма май çук пулсан—ан та чĕнĕр, е, чылай пысăк пайне каласа кăтартаймастпăр тесе, чи кирли-

не сиктерсе хăваратпăр тесе, асăрхаттарса хăварăр; анчах татăк-кĕсĕккĕсене çех каласа кăтартса, мĕншĕн ансăрлăх çинчен кăшкăрашмалла?

Ара, çакăн пек хăтлансан кăна, Российăра çех пулма пултаракан, çакăн йышши кулăш япаласем патне те çитме пулать вĕт: марксистсем шутне кунта—классен кĕрешӳне пачах ăнланман çынсене, капитализмлă обществăра пулма тивĕç антагонизма тата çак антагонизм епле аталанса пынине те пĕртте ăнланман çынсене, пролетариатăн революциллĕ ролĕ çинчен пĕртте пĕлмен çынсене кĕртеççĕ; унтан та ытларах, шăлт буржуаллă проектсем йышăнма сĕнекен çынсене те пулин, вĕсен çырăвĕсенче «укçаллă хуçалăх» çинчен, вăл «кирли» çинчен тата ытти çавăн йышши сăмахсем кăна тĕлпулччăр, вĕсене те пурĕпĕр марксистсен шутне кĕртеççĕ; вара çак сăмахсем чăннипех марксистла пулнине йышăнас тесен, Михайловскийĕн пĕтĕм тарăн та çивĕч ăсĕ кирлĕ.

Маркс вара хăйĕн теорийĕн пĕтĕм хакне, ку теори «хăйĕн пĕтĕм ăшчиккипе—критикăллă* та революциллĕ теори» пулса тăнинче курнă. Çак юлашки пахалăх *марксизмра* чăнахах та пĕтĕмĕшпех те пурпĕрех пур, мĕншĕн тесен ку теори хăйĕн умне тӳрех çакăн пек задача лартать: кучухнехи обществăри антагонизмпа эксплуатацийĕн пур формисене те *уçса кăтартас,* вĕсен эволюцине сăнаса тухас, пурăна-киле вĕсем пĕтме тивĕçлине, пурĕпĕрех вĕсем урăх формăллă пулса тăма тивĕçлине кăтартса парса, *çапла вара хăть те мĕнле эксплуатацие те май пур таран хăвăртрах тата май пур таран çăмăлтарах пĕтерес тĕлешпе пролетариата пулăшас* задача лартать. Мĕнпур çĕршывсенчи социалистсене çак теори патне çĕнтерейми илĕртсе туртса тăракан вăй çакă пулса тăрать: вăл теори чăн-чăн, тата чи аслă наукăлăха (обществăллă наукăн юлашки сăмахĕ пулса) революцилĕхпе пĕрлештерсе тăрать, çитменнине вĕсене ăнсăртран кăна мар, теори никĕсне хывакан çын хăй ученăйăн тата революционерăн пахалăхне пĕрлештернĕ пирки те кăна мар, аслă наукăллăхпа революциллĕхе теори хăйĕн ăшĕнче тата ним уйăрăлми пĕрлештерсе тăрать. Чăн та ара, теори задачи вырăнне, наука тĕллевĕ вырăнне кунта тӳрех пусмăрланакан класа экономика тĕлĕшĕнчен чăнахах кĕрешнĕ чухне пулăшас задача лартнă.

*«Эпир тĕнчене: чарăн кĕрешме—санăн пĕтĕм кĕрешӳ юрăхсăр япала, теместпĕр. Эпир ăна кĕрешĕвĕн чăн лозунгне кăна кăтартса паратпăр».*

---

* Çакна астăвăр: Маркс кунта материализмлă критика çинчен калать, çавна кăна вăл наукăллă критика тесе шутлать, урăхла каласан, вăл кунта политикăпа юридически, социальнăй, йăла т. ыт. фактсене те экономикăпа, производствăллă отношенисен системипе тата пур антагонизмлă обществăллă отношенисен никĕсĕ çинче те пурĕпĕрех çуралса тухакан классен интересĕсемпе те танлаштарса пăхакан критика çинчен калать. Вырăссен обществăллă отношнийĕсем—антагонизмлă отношенисем пулни тĕлĕшпе иккĕленсе тăракан çынсем çук та пулас. Анчах вĕсене никам та *çакăн йышши* критика никĕсĕ тăвас тесе тытăнса пăхман.

Çапла ĕнтĕ, Маркс каланă тăрăх, наукăн тӳррĕм задачи вăл—кĕрешĕвĕн чăн лозунгне парасси пулса тăрать, урăхла каласан-çак кĕрешĕве—объективлăн, производствăллă отношенисен паллă системинчен çуралса тухакан продукт пек кăтартса пама пĕлес, си, çак кĕрешӳ кирлине, унăн содержанине, вăл епле условисенче тата мĕнле çулсемпе аталанса пынине *ăнланма* пĕлесси пулса тăрать. Кĕрешĕвĕн пĕтĕмĕшле характерне, унăн пĕтĕмĕшле тĕллевне—пур тĕрлĕ эксплуатаципе пур тĕрлĕ пусмăрлăха та пĕтĕмĕшпех ĕмĕрлĕхех пĕтермелле тăвас тĕллевне асран ямасăр, кашни уйрăм вăхăтра положение тĕрĕс палăртса йышăнма пĕлес тесен, кĕрешĕвĕн кашни уйрăм формине тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе пĕлмесĕр, вăл пĕр формăран тепĕр формăна куçнă чухне унăн кашни утăмне асăрхаса пымасăр, çак «кĕрешӳ лозунгне» ниепле те пама май çук.

«Пирĕн паллă» Н. К. Михайловский хăйĕн «критикинче» каласа кăтартса, ăна хирĕç çапăçнă хайхи нимĕн тĕссĕр пуш-пушă сăмахне Марксăн çак «критикăллă тата революциллĕ» теорийĕпе танлаштарса пăхăр-ха ĕнтĕ,—вара эсир—мĕнле-ха вăл апла, чăн та, хăйсене хăйсем «ĕççыннисен класĕн идеологĕсем» тесе шутлакансем, çав вăхăтрах—пирĕн публицистсем, Маркс теорийĕнчен мĕнпур пурăнăçлă япаласене кăларса пăрахса, çак вĕрентӳрен туса хунă «тип-тикĕс çаврашка япалапа» çех кăмăлĕсене тултаракан çынсем пулма пултарччĕр-ха тесе, шăлт тĕлĕнсех кайăр.

Çак теорийĕн требованийĕсене, пирĕн народниксен, ĕççыннисен идеологĕсем пулма тăрăшнă кăмăлпах çырнă литературипе, е пирĕн пĕтĕм экономикăллă йĕркесен, тата, уйрăмăнах, хресченсен историйĕпе хальхи пурăнăçне тĕпчеме тăрăшакан литературипе танлаштарса пăхăр-ха,—вара эсир: мĕнле-ха, чăн та, социалистсем çакăн йышши теорипе,—тĕрлĕ хĕн-хур курнисене çех тĕпчесе сăнласа кăтартса, çак хĕн-хурсем пирки мораль кăна вулакан теорипе мĕнле кăмăлĕсене тултарма пултарнинчен шăлт тĕлĕнсех кайăр. Крепостной правăна вĕсем, хуçалăх организацийĕн—çавăн йышши эксплуатацие, çавăн йышши антагонизмлă классене, çавăн йышши политикăллă, юридически т. ыт. йĕркесене те çуратса тăнă пĕр паллă форми пек мар,—просто помещиксем ним законсăр хăтланса, хресченсене усал кăтартса пурăннă пек кăна сăнласа кăтартаççĕ. Хресчен реформине—хуçалăхăн паллă формисемпе экономикăри паллă классем пĕр-пĕринпе хирĕçнĕ пек мар,—начальство, кăмăлĕ мĕн тери ырă пулсан та, йăнăшнипе «тĕрĕс мар çулйĕр» «йышăннă» меслет пек, сăнласа кăтартаççĕ. Реформа хыççăнхи Российăна—антагонизмлă производствăллă отношенисен, çав-çав çулпа аталанса пыракан паллă системи пек мар, тĕрĕс çулран пăрăнса кайнă пирки ĕççыннисене хĕн-хур кăтартнă пек, сăнласа кăтартаççĕ.

Хальхи вăхăтра, тепĕр тесен, ку теорие ĕненме пăрахасси тĕлĕшпе ним иккĕленмелли те çук, çавăнпа та ĕнтĕ вырăс социалисчĕсем, пĕлӳсен хальхи шайлăхĕнче, марксизмран пуçне урăх революциллĕ теори пулма пултарайманнине мĕн тери хă-

вăрт ăнланса илĕç, хăйсен пĕтĕм вăйĕсене—çак теорипе Российмра теори тĕлĕшĕнчен те, практика тĕлĕшĕнчен те усă курас ĕçе мĕн тери хăвăртрах яма пултарĕç,—революциллĕ ĕç те çав таранах тĕрĕсрех те хăвăртрах ăнăçлăхсем тăвĕ.

---

Господа «халăх тусĕсем», тĕрĕс те чăн-чăн промышленность «тăвас» тесе т. ыт. те интеллигентсене «халăха» культурлатас тĕлĕшпе ĕçлеме чĕннипе, кучухнехи «вырăссен чухăн шухăшне» мĕн тери ирсĕрлетсе пăснине уççăнах сăнласа кăтартса парас тесе,—народоволецсен чи çывăх, тӳрĕ ăрăвĕсен—«народоправецсен», пиртен пĕтĕмĕшпех урăхла шухăшлакан çынсен, отзывне илсе кăтартам. «Насущный вопрос» ятлă брошюрăна пăхăр. 1894 ç., Народное Право Партийĕн изданийĕ. [28]

«Россия ниепле майпа та, пысăк ирĕклĕх пулас пулсан та, хăйĕн экономикăллă организацийĕнчен, ĕççыннисене производствăра хăйсен вăйĕпе ĕçлесе пурăнмалли май туса параканскерсенчен (!) уйăрăлмалла мар» тесе калакан йышши, «пире политикăллă реформăсем мар, системăпа план тăрăх тунă экономикăллă реформăсем кирлĕ» текен йышши народниксене питĕ лайăх отпор панă хыççăн, народоправецсем малалла çапла калаççĕ:

«Эпир буржуазие хӳтĕлекенсем мар, унтан та ытла—вĕсен идеалĕсене пуççапса пурăнакан çынсем мар, анчах çавах та усал кунçул халăха ак çак япаласене суйласа илмелле тăвас пулсан: буржуази тапăнассинчен хыттăн сыхласа тăракан земски начальниксем хӳтĕленипе «план тăрăх» туса иртterекен «экономикăллă реформăсене» е политикăллă ирĕклĕх çинче тытăнса тăракан, урăхла каласан, халăх хăй интересĕсене организацилесе хӳтĕлеме *тулли услови туса паракан* буржуазие суйласа илмелле тăвас пулсан,—пирĕн шухăшпа халăх, çав условисене суйласа илсе, пысăк усă илĕччĕ. Халĕ пирĕн халăхран, унăн хăйхаллĕн пек курăнакан экономикăллă организацине туртса илессипе хăратакан «политикăллă реформăсем» çук,—ун вырăнне вара—пурĕш те пур çĕрте те буржуаллă тесе шутлакан, халăх ĕçне чи тискер эксплуатациленипе палăртса тăракан политика пур. Пирĕн халĕ анлă ирĕклĕх те, ансăрри те çук, ун вырăнне вара сословисен интересĕсене хӳтĕлесе пулăшни пурах; вĕсем çинчен конституциллĕ çĕршывсенчи çĕрулпучĕсемпе капиталистсем шухăшлама та пăрахнă ĕнтĕ. Халĕ пирĕн «буржуаллă парламентаризм» çук, обществăна управленин ĕçĕ патне яхăнне та ямаççĕ,—ун вырăнне вара хăйсене валли теçетин пуçне 100 тенкĕ пит йӳн кредит ыйтасси патне çитекен «пирĕн тӳрĕ дворянсен» представителĕсемпе пĕрле, хăйсен интересĕсене хӳтĕлес ĕмĕтпе Китай стени хĕвсе лартма хушакан господа Найденовсем, Морозовсем, Казисем тата Беловсем пур. Вĕсене комиссисенче ĕçлеме чĕнеççĕ, вĕсем каланине пуçĕсене тайса итлеççĕ, çĕршывăн экономикăллă пурнăçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсене татса парас ĕçре вĕсен сасси тĕп вырăн йышăнса тăрать. Çав вăхăтрах халăха кам тата ăçта хӳтĕлесе калаçать-ха? Çав земски начальниксем мар-и? Ялхуçалăхĕн-

чи рабочисен ротине çавăн валли организацилеме проектламаççĕ-и? Вологдари губернатор хăйĕн циркулярĕнче каланă пек, халăха ят çĕрĕ пĕртен-пĕр куланайсем тÿллеме тата повинноçсене тултарса тăма кăна панă тесе, кĕççепитленессе çитиех халĕ уççăн каланă мар-и? Чăннипе çав губернатор, самодержави е, тĕрĕсрех каласан, бюрократизмлă абсолютизм хăйĕн политикипе пурнăçа мĕн кĕртсе пырать, çавна кăна формулăласа, хыттăн каласа кăтартнă».

Интересĕсене хÿтĕлес тенĕ «халăх» тата ĕç интересĕсене хÿтĕлекен шанчăклă орган халĕ те пур тесе шутланă «общество» çинчен народоправецсен шухăшĕсем тем тери тĕтреллĕ пулсан та, çавах, кирек мĕнле пулсан та, «Народное Право» партине организацилени вăл—«çĕршыв валли урăх çулсем шырас» иллюзисемпе тĕлленÿсене яланлăхах пĕтересси патне, чăнчăн çулсене ним хăрамасăр йышăнса, революцилле кĕрешÿ валли кирлĕ элементсене çавсем çинче шырасси патнепĕр утăм малалла туни пулнине йышăнмасăр иртме çук. Кунта демократиллĕ парти тума тăрăшни уççăнах курăнать. «Тăрăшни» çинчен кăна калатăп, мĕншĕн тесен народоправецсем хăйсен тĕп шухăшне, шел пулсан та, пурăнăçа вĕçне çитиех çирĕп кĕртсе пымаççĕ. Вĕсем халĕ те социалистсемпе пĕрлешсе союз тăвасси çинчен калаçаççĕ, анчах хăйсем: рабочисене простой политикăллă радикализма кăна явăçтарни вăл—рабочи-интеллигентсене рабочисен массинчен уйăрни кăна пулнине, вăл—рабочисен революциллĕ движенине вăйсăрлатни пулнине пĕртте ăнланмаççĕ, мĕншĕн тесен ку движени—рабочи класс интересĕсене пурăнăçа туллин тата пур енчен те кĕртсе пырсан кăна, капитала хирĕç экономика тĕлĕшĕнчен кĕрешнипе кăна,—вăл кĕрешÿ капитал тарçисене хирĕç политикăллă кĕрешессипе пĕр уйăрăлми пĕрлешсе каять,—вăйлă пулма пултарать. Вĕсем, уйрăм интерессен* представителĕсене уйрăм организацилесен тата паллă вăхăтсенче вăл е ку парти пĕрлешсе ĕçлесен кăна революциллĕ элементсене чи лайăх «пĕрлештерме» чылаях лайăхраххине ăнланасшăн мар. Вĕсем халĕ те-ха хăйсен партине — «социальнă-революциллĕ» парти тесе чĕнеççĕ («Народное Право» партийĕн 1894 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче кăларнă Манифестне пăхăр), хăйсем çав вăхăтрах политикăллă реформăсем тăвасшăн анчах кĕрешеççĕ, пирĕн «ылханулла», социализмлă ыйтусенчен питĕ тăрăшса тĕкĕнмесĕр иртсе каяççĕ. Иллюзисене хирĕç кĕрешме çав тери хĕрÿллĕн чĕнекен партийĕн хăйĕн «манифесчĕн» малтанхи сăмахĕсемпех ыттисене иллюзие кĕртсе ямалла пулман: *конституционализмран*

---

* Интеллигенци хăватсем тума пултарассине ĕненвине хирĕç вĕсем хăйсемех протестлеççĕ, хăйсемех вĕсем кĕрешĕве халăха хăйне явăçтарма кирли çинчен калаççĕ. Анчах кăна тăвас тесен, çак кĕрешĕве пурăнăçри паллă интерессемпе çыхăнтармалла вĕт, апла пулсан, пурăнăçри уйрăм интерессене уйăрма пĕлсе, вĕсене кĕрешĕве уйрăмăн явăçтармалла вĕт... Анчах çак уйрăм интерессене, пĕр интеллигентсем кăна ăнланакан çара политикăллă требованисемпе хупласа пытарсассăн, ку каллех каялла çаврăнни пулмасть-ши, интеллигенци вăйсăррине тин çеç йышăннă хыççăн, каллех çав пĕр интеллигенци кĕрешнипе кăна лăпланса тăни пулмасть-ши?

пуçне урăх нимĕн те çук çĕрте, *социализм* çинчен пĕртте калаçма кирлĕ пулман. Анчах çапах та, тепĕр хут калатăп, народоправецсене, вĕсем народоволецсенчен тухнине асра тытмасăр, хаклама юрамасть. Çавăнпа та, социализмпа нихăш енчен те çыхăнман кĕрешĕве, пĕртен-пĕр политикăллă кĕрешĕве вĕсем, каллех пĕртен-пĕр политикăллă кăна программăпа çирĕплетсе никĕслеççĕ пулсассăн, вĕсем пĕр утăм малалла тунине йышăнмасăр иртме çук. Социал-демократсем пĕтĕм чĕререн народоправецсене, ĕçĕсем ăнăçлă пулма сунаççĕ, вĕсен партине ӳссе аталанма сунаççĕ, обществăри çак экономикăллă йĕркесен* никĕсĕ çинче тăракан тата *пурăнăçри* интересĕсем *демократизмпа* чăнахах питĕ таччăн çыхăнса тăракан элементсемпе тачăрах пĕрлешме сунаççĕ.

«Халăх тусĕсен» килĕшӳллĕ, хăравçă, туйăмлă-ĕмĕтлĕ народничестви, ун çине пĕр харăсах икĕ енчен те тапăнсассăн: политикăллă радикалсем—бюрократине ĕненме пултарнăшăн, политикăллă кĕрешӳ мĕн пулсассăн та кирлĕ пулнине ăнланманшăн;—социал-демократсем—«халăх тусĕсем» социализмпа нихăш енчен те çыхăнса тăмаççĕ пулин те, ĕççыннине мĕн пирки пусмăрланине тата классен кĕрешĕвĕн характерне те пĕртте ăнланмаççĕ пулин те, социалистсен ячĕпе тухма хăтланнăшăн пĕр харăсах тапăнсассăн, вăл нумай вăхăт тытăнса тăма пултарас çук.

* (урăхла каласан капитализмлă йĕркесен никĕсĕ çинче)—çак йĕркесене пурпĕрех йышăнмасăр, вĕсене хирĕç ним шеллемесĕр кĕрешес никĕс çинче мар.

# АСӐРХАТТАРНИСЕМ

1 *„Русское богатство“*—уйӑхра пӗрре тухса тӑракан журнал, 90-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнчен народниксен марксизма хирӗҫ кӗрешмелли тӗп органӗ пулнӑ.—7

2 Цитатӑна К. Марксӑн „К критике политической экономии“ ятлӑ кӗнекин умсӑмахӗнчен илнӗ.—12

3 „Contrat Sozial“ (*„Общественный договор“*)—Францири XVIII-мӗш ӗмӗрти паллӑ просветителӗн Ж. Ж. Руссон тӗп произведенийӗ, вӑл унта государство ҫынсем пӗр-пӗрине килӗшӳ тунӑ никӗс ҫинче пулса кайнӑ тесе ӗнентерет. Хӑйӗн никӗсӗпех ҫак теори йӑнӑш пулнӑ пулин те (ҫак теори общество классемлӗ пулнине, государство класлӑ характерлӑ пулнине шутламасӑр, чӑннипе буржуаллӑ обществӑллӑ „йӗркене“ мухтаса ӗмӗр-ӗмӗрех пулмалла япала пек туса кӑтартнӑ), вӑл Францири 1789-мӗш ҫулхи буржуаллӑ революци вӑхӑтӗнче революциллӗ пулнӑ, мӗншӗн тесен вӑл монархие турӑ тунӑ, ҫавӑнпа ӗмӗр-ӗмӗрех пулмалла текен теорие хирӗҫ пынӑ.—12

4 *К. Маркс Н. Михайловский ҫинчен „Отечественные записки“ редакторӗ патне янӑ ҫырӑва* 1887-мӗш ҫул вӗҫӗнче, Н. Михайловскийӑн: „Карл Маркс перед судом г. Ю. Жуковского“ ятлӑ статьи тухнӑ май ҫырнӑ. „Вестник народной воли“ 1886 ҫулхи 5-мӗш №-че, „Юридический вестник“ 1888-мӗш ҫулхи 10-мӗш №-че пичетленӗ.—19

5 Маркспа Энгельсӑн Ленин асӑннӑ сочиненийӗ пуҫласа СССР-че 1933-мӗш ҫулта „Немецкая идеология“ ятпа пичетленсе тухнӑ. —19

6 Ленин сочиненийӗсен 1 т. 13-мӗш асӑрхаттарӑвӗнче ҫапла кӑтартса панӑ: 1894-мӗш ҫулхи гектографпа пичетлесе кӑларнӑ изданинче, Ленин асӑрхаттарнисене 75 стр., 79-мӗш страницӑри пекех, текстрах кӑтартнӑ, анчах скобкӑсемпе уйӑрнӑ: „тен, ӑна автор туман, переписчиксем тунӑ пуль“. Анчах вулама лайӑх пултӑр тесе, Ленин сочиненийӗсен редакцийӗ ҫак асӑрхаттарусене сноскӑсемпе кӑтартма юрать пулӗ тесе шухӑшларӗ. —28

7 „*Новое время*"—1876-мĕш çултан пуçласа Петербургра тухса тăнă монархилле хаçат, царизмăн аслă çыннисен дворянла-бюрократла органĕ; вăл оппозицилле палăрăмсене, пуринчен ытла революцилле движение хĕсĕрленĕ. Çак хаçатăн 1894-мĕш çулхи февралĕн 4-мĕшĕнчи номерĕнче В. Буренин Н. Михайловские хирĕç фельетон пичетлесе кăларнă, анчах ăна марксистсене хирĕç тавлашнăшăн мухтанă.—29

8 „*Вестник Европы*"—1866-мĕш çулта М. Стасюлевич организациленĕ уйăхра пĕрре тухса тăракан журнал, либеральнăй буржуази шухăшĕсене палăртса тăнă. 90-мĕш çулсенче журнал вырăс марксисчĕсене хирĕç кĕрешнĕ.—36

9 Заметка авторĕ—Петербургри университет профессорĕ И. И. Кауфман Заметкăна И. К. тесе алă пусса кĕртнĕ, Маркс ăна унăн методне лайăх çырса кăтартнă заметкăсенчен пĕри тесе хак панă. („Капитал" 1 том çумне хыçала хушса панине пăхăр).—36

10 „*Отечественные записки*"—обществăллă-литературăллă журнал. 1818-мĕш ç. организациленĕ. 1838-мĕш çулта Краевский аллине куçнă, вăл вара унăн ĕçне Белинские хутшăнтарнă. 1868-мĕш çултанпа журнала ертсе пырасси Некрасов, Елисеев, Салтыков-Щедрин аллине куçнă. 1884-мĕш çулта радикалла юхăмшăн патша правительстви журнала хупнă.—44

11 Сăмах Михайловскийăн 1872-мĕш çулта апрель уйăхĕнче „Отечественные записки" журналра пичетленнĕ „По поводу русского издания книги К. Маркса" ятлă статьи тата çав журналрах 1877-мĕш çулта пичетленнĕ: „К. Маркс перед судом Ю. Жуковского" статьи çинчен пырать.—50

12 „*Русская мысль*"—либералла-народникла интеллигенцин 1880-мĕш çултан пуçласа уйăхра пĕрре тухса тăракан журналĕ. 1884-мĕш çулта „Отечественные записки" журнала хупнă хыççăн, Михайловскийăн тата „Отечественные записки" журналти ытти çынсен статьисене пичетлеме пуçланă. 1905-мĕш çулхи революци хыççăн „Русская мысль" кадетсен партин сылтăм çуначĕн органĕ пулса тăнă.—54

13 Кунта „*социалист-революционерсем*" тенĕ сăмаха Ленин пур революцилле социалистсене, социал-демократсене те кĕртсе палăртас шухăшпа каланă. Эсерсен кулакла партийĕ, социалист-революционер тенĕ ятпа витĕнсе тăраканскер, ун чухне (1894 ç.) пулман-ха.—63

14 „*Издательсенчен*"—„Мĕн вăл халăх тусĕсем?.." ятлă кĕнекен пĕрремĕш выпускăн ***пĕрремĕш*** издани тĕлĕшпе юлашкинчен калани (1894 ç. апрель е май.)-66

15 Текстра асăннă „*хатĕрленекен 2-мĕш тата 3-мĕш изданисем*"—2-мĕшпе 3-мĕш выпусксем пулас.—66

16 „*Çак издани тĕлĕшпе калани*",—пĕрремĕш выпускăн ***иккĕмĕш*** издани пирки юлашкинчен калани.—67

17 „*Юридический вестник*"—уйăхра пĕрре тухса тăракан журнал, 1867-мĕш çултанпа 1892-мĕш çулччен Мускавра тухса тăнă. Унăн редакторĕсем С. А. Муромцев тата М. М. Ковалевский пулнă. Политикăпа экономика отделне редакцилессипе Н. Зибер хутшăнса ĕçленĕ.—72

18 Сăмах 1885-мĕш çулта „Русская мысль" журналра ноябрь уйăхĕнче Зиберăн: „Д. Рикардо и К. Маркс в их общественно-экономических исследованиях"

ятлă кĕнеки тĕлĕшпе алă пусмасăр тухнă рецензи çинчен пырать. СПБ 1885 ç.—81

19 Статья авторĕ Г. З. Елисеев—„Современник“ тата „Отечественные записки“ журналсене ертсе пыракансенчен пĕри.—109

20 1891—1892 çулсенче Российăн чылай пайĕнче сарăлнă выçлăха шута илсе каланă, вăл выçлăха пула пит нумай çын пĕтнĕ. „1891-мĕш çултанпа,—тет Ленин,—çынсем вилнин хисепĕ тĕлĕшпе выçлăхсем пит пысăк пула пуçларĕç“ (Сочинения, т. V, стр. 56).—111

21 „*Неделя*“—сылтăм народниксен органĕ, П. Гайдебуров редакциленипе тухса тăнă. Марксистсене хирĕç статьясем пичетленĕ.

22 А. И. Герцена шута илсе каланă.—122

23 „Sozialpolitisches Centralblatt“ („Центральный социально-политический листок“)—Германия социал-демократин сылтăм çуначĕн органĕ.—127

24 „*Социал-демократ*— литературăпа политикăллă журнал, 1890—1892-мĕш çулсенче ютçĕршывра „Освобождение труда“ группа кăларса тăнă. Мĕнпурĕ 4 кĕнеке тухнă. Плехановăн „Н. Г. Чернышевский“ ятлă статьине „Социал-демократăн“ 1-мĕш №-че пичетленĕ.—135

25 „*Народное право*“ партине—вакбуржуаллă интеллигенцин партине шута илсе каланă. Народоправецсем социализмшăн кĕрешме кирлине йышăнман, самодержавие хирĕç кĕрешме мĕнпур оппозициллĕ тата революциллĕ вăйсене пурпĕрех пĕрлештерессине хăйсен задачи вырăнне хунă. 1894-мĕш çулхи апрель уйăхĕнче патша правительстви аркатса тăкнă. Народоправецсене Ленин „Задачи русских социал-демократов“ ятлă брошюрăра критикленĕ (Соч. т. II). Народоправецсенчен нумайăшĕ кайран эсерсен партине кĕнĕ.-144

26 Николай—онăн (Даниельсонăн ) „Очерки нашего пореформенного общественного хозяйства“ (СПБ., 1893 ç.) ятлă произведенийĕ çинчен сăмах пырать.—164

27 Цитатăна К. Марксăн „Критика Готской программы“ ятлă кĕнекинчен илнĕ (III гл).—170

28 „Насущный вопрос“ ятлă кĕнекен авторĕ—А. Богданович, вăл „Народное право“ партие çывăх тăнă, кайранрах „Мир божий“ ятлă журналти критик. -179

# ЯТСЕНЕ КӐТАРТСА ПАНИ

*Анненский Н. Ф.* (1843—1912)—90 тата 900-мӗш ҫулсенчи паллӑ народник, вырӑссен земски статистикине организацилессинче паллӑ вырӑн йышӑннӑ. „Русское богатство“ журнал редакцин составне кӗнӗ, „Отечественные записки“ журналра хутшӑнса ӗҫленӗ.

*Баранов Н. М.*—1883-мӗш ҫултан пуҫласа 1887-мӗш ҫулччен Чулхула губернаторӗ пулнӑ. 1892-мӗш ҫулхи выҫлӑх тӗлӗшпе ухмахла ӗҫсем тунипе палла тухнӑ. В. Г. Короленко питленине пула, унӑн ятне мӑшкӑласа асӑнма пуҫланӑ.

*Беловсем*—Мускаври суту-илӳпе промышленнӑй фирма.

*Бисмарк О.* (1815—1898)—Германия канцлерӗ, хаяр реакционер, XIX-мӗш ӗмӗрӗн 60-мӗш ҫулӗсенче юнкерла-помещикле Пруссие пуҫ туса, Германири вак государствӑсене „юнпа та хӗҫпе“ пӗрлештернӗ. „Ҫоциалистсене хирӗҫ хаяр законсене“ пуҫарса яраканни.

*Блос В.* (1849—1927)—нимӗҫ историкӗ, социал-демократ, реформист. Унӑн паллӑрах произведенийӗсем: „История германской революции 1848 г.“, „Французская революция 1789. г.

*Богдановский А.* —„Северный вестник“ журналӑн 1892-мӗш ҫулхи 5 № пичетленӗ „Общество и закон о переселениях“ ятлӑ статьян авторӗ.

*Буренин В. П.* (1841—1926)—„Новое время“ ятлӑ монархилле хаҫатӑн сотрудникӗ (7-мӗш асӑрхаттарӑва пӑхӑр), ҫав вӑхӑтри чи сутӑнчӑкла та принципсӑр журналистсенчен пӗри; литературӑн, обществӑллӑ шухӑшӑн малта пыракан мӗнпур юхӑмӗсене хирӗҫ чи ирсӗр меслетсемпе (элексемпе, влаҫа пӗлтернисемпе) кӗрешнӗ.

*В. В.—В. П. Воронцов* (1847—1918)—80—90-мӗш ҫулсенчи либеральнӑй народниксен чи паллӑ теоретикӗсенчен пӗри. Марксизма хирӗҫ кӗрешнӗ. Плеханов тата пуринчен ытла Ленин ун шухӑшӗсене пӗтермеллех критикленӗ.

*Васильчиков А. И.* (1818—1881)—князь, ялхуҫалӑх тата ҫӗр тытса тӑрас йӗркесем тӗлӗшпе чылай произведенисен авторӗ. „Пирӗн общественӑллӑ тытӑмӑн ӗмӗрхи ҫулӗсем", урӑхла каласан общинӑсемпе ҫӗр тытса тӑрас йӗркене упраса усрассишӗн тӑнӑ.

*Витте С. Ю.* (1849—1915)—вырӑссен паллӑ государство деятелӗ, Александр III тата Николай II министрӗ. 1905-мӗш ҫулта уступкӑсем туни тата Государственнӑй Думӑна пухни урлӑ революцие пӗтерес планпа тухнӑ. 1905-мӗш ҫулхи октябрӗн 17-мӗшӗнчи манифест авторӗ.

*Волгин*—Н. Г. Чернышевскийӑн „Пролог пролога" ятлӑ паллӑ романӗн геройӗ.

*Гальвани Луиджи* (1737—1798)—Италири анатом тата физиолог, чӗрчун организмӗнче электричество пурри ҫинчен пуҫласа пӗлнӗ.

*Гегель* (1770—1831)—нимӗҫсен паллӑ философӗ-идеалисчӗ, нимӗҫсен классикла философин, диалектикӑн тӗп паллисене формулӑланӑскерӗн, чи паллӑ представителӗ.

*Герцен А. И.* (1812—1870)—вырӑссен паллӑ демократӗ, публицист, политикӑллӑ деятель. Патша правительстви ӑна хӗсӗрленӗ. Ютҫӗршывра тухса тӑнӑ „Колокол" редакторӗ. „Памяти Герцена" ятлӑ статьяра Ленин вӑл журнал вырӑссен ирӗке тухассишӗн пыракан движенинче пысӑк роль йышӑнса тӑрать, тесе хак парать.

*Гладстон* (1809—1898)—Англири XIX-мӗш ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринчи чи паллӑ либеральнӑй министр.

*Григорьев В. Н.* (1852—1925)—паллӑ земски статистик.

*Гурвич И. А.* (1860—1924)—вырӑссен пирвайхи марксистсенчен пӗри, экономика тӗлӗшпе, пуринчен ытла вырӑс ялӗ ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе чылай произведенисем ҫырнӑ. Кайрантарах ревизионист.

*Дарвин Чарльз* (1809—1882)—Англири аслӑ естествоиспытатель. Эволюци наукӑллӑ теорине пуҫарса яракан, „Происхождение видов" (1895 ҫ.) ятлӑ пит чаплӑ кӗнекен авторӗ; вӑл хӑйӗн генилле открытийӗсемпе биологи историнче (дарвинизм) эпоха пуҫарса ячӗ те, тӗне пӗтмеллех амантрӗ.

*Дементьев Е. М.*—санитари врачӗ, статистик. Вӑл статистика тӗлӗшпе кӑтартса панисем, народниксен—Российӑра ҫӗрпе ҫыхӑну тытма пӑрахнӑ фабрикӑри рабочисен класӗ ҫук, текен шухӑшне хирӗҫленӗ. Унӑн тӗп сочиненийӗ—„Русская фабрика, что она дает населению и что она у него берет" ятлӑ

*Дюринг Е.* (1833—1921)—нимӗҫсен философӗ тата экономисчӗ, час-часах идеализмпа пӑтрашса кайнӑ вульгарнӑй материалист. Марокспа Энгельсӑн материализмлӑ диалектикине хирӗҫ кӗрешнӗ. Энгельс хӑйӗн „Анти-Дюринг" ятлӑ кӗнекинче Дюрингӑн буржуаллӑ философилле тата политикӑпа экономикӑллӑ шухӑшӗсене пӗтерсе хумаллах критиклет.

*Ермолов А. С.* (1846—1917)—1892-мӗш ҫултанпа 1905-мӗш ҫулччен ҫӗрӗҫӗн тата государство пурлӑхӗн министрӗ. Ялти крепостникла йӗркесене хӳтӗлесе темиҫе пӗчӗк кӗнеке ҫырнӑ.

*Жуковский Ю. Г.* (1822—1907)—вырӑссен буржуаллӑ экономисчӗ, юрист. „Вестник Европы" журналӑн 1877-мӗш ҫулхи сентябрьти номерӗнче Маркс

„Капиталне“ хирӗҫ ҫав тери хаяр статья ҫырнӑ, вара народник Н. Михайловскийӑн та „К. Маркс перед судом Г. Ю. Жуковского“ ятлӑ ответлӑ статьяпа тухмалла пулнӑ. Жуковские хирӗҫ ҫавӑн пекех Н. Зибер та „Несколько замечаний по поводу статьи Г. Ю. Жуковского“ ятлӑ статья ҫырнӑ.

*Зибер Н. И.* (1884—1888)—Киев университетӗнчи профессор, Марксӑн экономикӑллӑ вӗрентӳне ӑнлантарса паракан чылай статьясен авторӗ. Анчах та Зибершӑн Маркс вӗрентӗвӗн революциллӗ-критикӑллӑ енӗ ют пулнӑ.

*Исаев А. А.* (1851—1924)—вырӑс экономисчӗ, статистик, политикӑлла экономипе чылай произведенисем ҫырнӑ, Мускав губернинчи кустарьла промысласене тӗпчесе пӗлессипе хӑтланнӑ; политикӑллӑ экономин буржуалла классикла шкулӗ майлӑ тӑнӑ.

*Каблуков Н. А.* (1849—1919)—народниксем майлӑ экономист, статистик. Чылай произведенийӗсенче ҫӗрӗҫӗнче вак хуҫалӑх единицисем усӑллӑрах тесе ӗнентернӗ. Ленин ун шухӑшӗсене „Развитие капитализма в России“ ятлӑ статьяра критиклет.

*Кази М. И.* (1835—1896)—финанспа промышленность тӗлӗшпе ӗҫлекен, Чулхула ярмаркине организацилекен.

*Кареев Н. И.* (1850—1931)—буржуаллӑ историк-идеалист, народникла тата либералла пичетре хутшӑнса ӗҫленӗ, кайранрах кадет партийӗн ЦК членӗ пулнӑ.

*Карышев Н. А.* (1855—1905)—экономист, статистик, аренда отношенийӗсен ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе чылай произведенисем ҫырнӑ, народникла шухӑшсене сарнӑ.

*Каутский Карл* (1854—1938)—Германири социал-демократин тата II Интернационалӑн идеологӗсенчен пӗри. Хӑйӗн малтанхи произведенийӗсенче, вӗсне ҫитиех тӳрех мар пулин те, марксист пек пулнӑ. „Центрист“—вӑртӑн, ҫавӑнпа рабочи движенийӗн чи хӑрушӑ, оппортунист пулнӑ. Большевиксемпе меньшевиксем кӗрешнӗ чух, вӑл меньшевиксене пулӑшнӑ. 1914—1918-мӗш ҫулсенчи империализмлӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче—социал-шовинист, хӑйӗн социал-шовинизмне икӗ питлӗ пулса интернационалистла фразӑсемпе витсе пытаракан социал-шовинист. „Каутский хӑй марксизма пӑсса кӑтартас тӗлӗшпе питех те чее те ӑста икӗ питлӗ ҫын пулнине палӑртса пачӗ“ (Ленин). Октябрьти социализмлӑ революци хыҫҫӑн Каутский совет влаҫӗн тӑшманӗ пулнӑ.

*Клопшток* (1724—1803)—нимӗҫсен суйклассикла юхӑм хыҫҫӑн пыракан поэчӗ.

*Косич А. А.*—Саратоври 1887—1891 ҫҫ. губернатор.

*Кривенко С. Н.* (1847—1907)—либеральнӑй народник-публицист, народниксен пичетне активлӑн хутшӑнса ӗҫленӗскер. Вырӑс марксистсене хирӗҫ тухса каланӑ. В. И. Ленин ун шухӑшӗсене пит хаяр критикленӗ.

*Лессинг Готгольд—Эфраим* (1729—1781)—нимӗҫсен паллӑ писателӗ (критик, драматург, философ), Германири тата Европӑри XVIII-мӗш ӗмӗрти ҫутӗҫ деятелӗсенчен пӗри.

*Либкнехт Вильгельм* (1826—1900)—Германири социал-демократине тăвакансенчен тата ун çулпуçĕсенчен пĕри, Маркспа Энгельс майлă тăнăскер. Ласаль, Фольмар т. ыт. оппортунизмне хирĕç, чăн та, яланах татăклăн мар пулин те, кĕрешнĕ. „Социалистсене хирĕç пит хаяр законсем" кăларнă тапхăрта Бебельпе пĕрле Бисмарка хирĕç кĕрешнĕ. Партин центральнăй органĕн «Vorwarts» („Вперед)" хаçатăн редакторĕ пулнă.

*Марло* (*К. Винкельбах*) (1810—1865)—нимĕç экономисчĕ, вакбуржуалла социалист.

*Мейер Г.* (1839—1899)—нимĕçсен буржуаллă экономисчĕ, Родбертус хыççăн пыракан.

*Михайловский Н. К.* (1842—1904)—80—90-мĕш çулсенчи либеральнăй народничествăн чи паллă идеологĕ, „Отечественные записки" журнала ертсе пыракансенчен пĕри. „Русское богатство" редакторĕ. Марксизма хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ. Михайловский шухăшĕсен, пĕтĕмĕшпе народничествăн шухăшĕсен пĕтĕм системине Плеханов 80-мĕш çулсенчех критикленĕ. Анчах народничествăна идея тĕлĕшĕнчен çĕмĕрсе тăкассине Ленин пурнăçа кĕртнĕ.

*Морган Льюис Генри* (1818—1881)—Америкăри чи паллă ученăй--первобытнăй общество тĕлĕшпе ĕçлекен энограф, археолог, историк. Унăн тĕпчевĕсемпе, первобытнăй общество çинчен пĕлес тĕлĕшпе переворот тунăскерсемпе, Энгельс „Происхождение семьи, частной собственности и государства" ятла кĕнекинче критикăлла усă курнă.

*Морозов Т. С.*—Мускаври промышленник, Орехово-Зуевăри мануфактура хуçи.

*Найденовсем*—Мускаври промышленниксем.

*Николай—он* (*Н. Ф. Даниельсон*) (1844—1918)—экономист, 80—90-мĕш çулсен чи либеральнăй народничествăн чи паллă представителĕсенчен пĕри, народничествăна экономика тĕлĕшĕнчен никĕслесе пама хăтланса пăхнă. Маркс „Капиталĕн" пĕрремĕш томне, Г. Лопатин вырăсла куçарма тытăннăскерне, куçарса пĕтернĕ, çавăн пирки Маркспа Энгельс тата Николай—он пĕр-пĕрин хушшинче çыру çӳретнĕ.

*Орлов В. И.* (1848—1885)—земски статистик, хресченсен хуçалăхĕсем çинчен чылай тĕпчевсем тунă автор. Ун произведенийĕсенчи даннăйсемпе Маркс усă курнă, ăна пысăк хак панă; унăн даннăйĕсемпе „Развитие капитализма в России" ятлă кĕнекере Ленин та усă курнă.

*Плеханов Г. В.* (1856—1918)—марксизм идейисен чи паллă пропагандисчĕ, Российăри пĕрремĕш марксистла группăна—„Освобождение труда" группăна пуçарса яраканĕ. Плеханов „пуçласа народниксен йăнăш шухăшĕсене марксистла критикленĕ", вăл „80-мĕш çулсенчех народникла шухăшсен системине тĕпрен çапса салатнă пулнă" (ВКП(б) историйĕ. Кĕске курс). Анчах та Плеханов хресченсен революциллĕ рольне хак паман, вăл хресченсем мар, либеральнăй буржуази революцине хăшпĕр пулăшу пама пултарать, тесе шутланнă. Çак йăнăшсем, Плеханова РСДРП II съезчĕ (1903) хыççăн меньшевиксем енне куçасси патне илсе çитернĕ, вăл меньшевизм çулпуçĕсенчен пĕри пулса тăнă. Империализмлă вăрçă вăхăтĕнче (1914—1918 ç.ç·

Плеханов оборонец, социал-патриот пулнӑ; царизма сирпӗтсе антарнӑ хыҫҫӑн буржуаллӑ Вӑхӑтлӑх правительствӑна хӳтӗлессишӗн, империализмлӑ вӑрҫа малалла та тӑвассишӗн тӑнӑ. Октябрьти революцие йышӑнман.

*Победоносцев К. П.* (1827—1907)—синод обер-прокурорӗ, дворянсен 80—90-мӗш ҫулсенчи реакцине хавхалантаракан, ирсӗрлӗхпе черносотенство тӗрекӗ.

*Прудон* (1809—1865)— Францири экономист, анархист, вак буржуази идеологӗ; Марксӑн тата марксизмӑн тӑшманӗ. Прудон шухӑшӗсене Маркс «Нищета философии" (1847) ятлӑ кӗнекере пит тӗплӗн критикленӗ.

*Руге Арнольд*(1802—1880)—Германири радикал, сулахай гегельянец, кайранрах Бисмарк политики майлӑ тӑнӑ.

*Руссо Жан-Жак* (1712—1778)—Францири философ, Францири 1789-мӗш ҫулхи буржуаллӑ революци умӗн революциллӗ буржуазин идеологӗсенчен пӗри, управленире демократиллӗ формӑшӑн тӑракан. Хӑйӗн „Общественнӑй договор" ятлӑ кӗнекинче, общество ҫынсем хушшинче килӗшнӗ тӑрӑх пуҫланса кайнӑ текен шухӑша сарнӑ. Францири 1789-мӗш ҫулхи буржуаллӑ революцин деятелӗсем—якобинецсем Руссон теорилле шухӑшӗсем ҫине таянса тӑнӑ.

*Салтыков-Щедрин М. Е.* (1826—1889) —вырӑссен аслӑ сатирикӗ, вӑл—реакцине тата малалла кайма тӑрӑшманнине хирӗҫ кӗрешнӗ, дворянла монархин йӑлисемпе пурнӑҫне питленӗ. Художествӑллӑ литературӑра пуҫласа капитализмла чи малтанхи накопленин „геройӗсен — Колупаевсемпе Разуваев кулаксен сӑнарне кӑтартса панӑ". „Отечественные записки" журналӑн редакторӗсенчен пӗри пулнӑ.

*Скворцов А. И.* (1848—1914)—буржуаллӑ экономист, „легальнӑй марксистсем" хушшинче чапа тухнӑ чылай экономикӑллӑ произведенисен авторӗ.

*Слонимский Л. З.* (1850—1918)—публицист, „Вестник Европы" ятлӑ либеральнӑй журнал сотрудникӗ, 90-мӗш ҫулсенче марксистсене хирӗҫ яланхи либеральнӑ-буржуаллӑ майпа тавлашнӑ.

*Спенсер Герберт*—(1820—1903)—Англири буржуалла социолог, эволюционист общество явленисем ҫине организмсем аталанакан законсене куҫарма хӑтланнӑ. Социализм тӑшманӗ пулнӑ.

*Струве П. Б.* (1870 ҫ. ҫуралнӑ)—легальнӑй марксист, кайранрах черносотенӑй националист, 1920-мӗш ҫулта Врангель министрӗ; белоэмигрант. „Возрождение" ятлӑ православилле-монархилле хаҫат редакторӗ.

*Успенский Г. И.* (1843—1902)—вырӑссен реформа хыҫҫӑнхи эпохӑн йӑлине кӑтартса паракан паллӑ писатель.

*Харизоменов С. А.* (1854—1900)—земски статистик, кустарлӑ промысласене сӑнаса тӗпчес тӗлӗшпе чылай произведенисем ҫырса панӑ. 70-мӗш ҫулсенче „Земля и воля" обществӑн паллӑ членӗ пулнӑ. Ленин „Развитие капитализма в России" ятлӑ кӗнекинче Харизоменов даннӑйӗсемпе час-часах усӑ курать.

*Чернышевский Н. Г.* (1828—1889)—„вырӑссен аслӑ ученӑйӗ тата критикӗ

(Маркс), вăл буржуаллă политикăллă экономи банкрота тухнине пит ăста çутатса панă, революцилле демократ, социалист. 60-мĕш çулсенче революциллĕ движенин çулпуçĕ, 70-мĕш тата 80-мĕш çулсенчи революциллĕ движение хавхалантаракансенчен пĕри. „Чернышевский—вырăссен пĕртен-пĕр чăннипе аслă писателĕ, вăл 50-мĕш çулсенчен пуçласа 88-мĕш çула çитичченех пĕтĕмĕшле философилле материализмăн шайĕнче тăма пултарнă..,“ (Ленин). 1862-мĕш çулта арестлесе, Чернышевские 14 çул каторгăра ĕçлемелле тата ĕмĕрĕпех Çĕпĕрте ссылкăра пурăнмалла тунă, унтан вăл 1883-мĕш çулта çеç таврăннă. Российăра революциллĕ движени аталанасси çине Чернышевский питех те пысăк влияни тунă.

*Щедрин—Салтыков-Щедрин М. Е.* пăхăр.

*Щербина Ф. А.* (1849-ç. çуралнă)—статистик, хресчен хуçалăхĕ çинчен чылай произведенисем çырнă автор, вĕсенче вăл „халăх производствине“ тата общинăна мухтанă, эмигрант.

*Энгельгардт А. Н.* (1832—1893)—народникла шухăшлă публицист. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче хăйĕн рациональнăй хуçалăхне тăвас задача лартнă, анчах унăн, народникла шухăшсене хирĕçех, батраксен ĕçĕпе усă курмалла пулнă. Çав хуçалăх çинчен Ленинăн „Развитие капитализма в России“ кĕнекине пăхăр.

*Южаков С. Н.* (1849—1910)—народникла шухăшлă публицист, „Отечественные записки“ журналра ĕçленĕ, „Русское богатство“ журналăн редакторĕсенчен пĕри пулнă. Ленинăн „Мĕн вăл халăх тусĕсем“..? кĕнекин II выпускĕ (халиччен ăна тупайман-ха), „Гимназические хозяйства“ (Сочиненисем, I т.), „Перлы народнического прожектерства“ (Сочиненисем, II т.) статьйисем Южаков шухăшĕсене тĕпчеççĕ.

# СОДЕРЖАНИ

I ВЫПУСК . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Издательсенчен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66
Çак издани пирки . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 67
III ВЫПУСК . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 69
III ВЫПУСК çумне автор хушса панă приложенисем . . . . . . . . . 153
II Приложени . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 160
III Приложени . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 176
*Асăрхаттарнисем* . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 182
*Ятсене кăтартса пани* . . . . . . . . . . . . . 185

В. И. ЛЕНИН

ЧТО ТАКОЕ „ДРУЗЬЯ НАРОДА" И КАК ОНИ ВОЮЮТ ПРОТИВ СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТОВ?

Чувашское государственное издательство 1941 г.

Переводчик Н. К. ДАНИЛОВ. Редактор перевода Н. И. КОЛЮЩКИН

Подписано к печати 24/II-1941 г. НТ 2575. Заказ № 559. Тираж 3000

Формат бум. 60×92 1/16. Объем 12 печатных листов. кол. знаков в 1 п/л. 51000

Отпечатано в типографии № 1 Управление издательств и полиграфии при СНК ЧССР. г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Цена 2 руб.

В. И. ЛЕНИН

ЧТО ТАКОЕ
„ДРУЗЬЯ НАРОДА"
И КАК ОНИ ВОЮЮТ
ПРОТИВ
СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТОВ

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941